К84.09(=Чув)
М52
Ч-42253

МИХАИЛ МЕРЧЕН



# ПĔР ТУМЛАМ КУÇÇУЛЬ

Национальная библиотека ЧР
4-042263

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

К 84.09(=Чув)
М52
Обязат...

# Михаил Мерчен



# ПĔР ТУМЛАМ КУÇÇУЛЬ

РОМАН

УДК 821.512.111
ББК 84(2Рос=Чув)6-4
М 52

М 52 **Мерчен М.**
**Пĕр тумлам куççуль. Роман. — Шупашкар: «Çĕнĕ Вăхăт», 2009. — 208 с.**

Автор шухăшĕпе нумай-нумай-нумай çул каялла çутă тĕнчере пĕр чĕрĕ чун та пулман. Çил пулнă, уйăх-хĕвел-çăлтăрсем пулнă, тусан пулнă. Вĕçсĕр уçлăхра тусан пĕрчисем кăра çилпе явăнса-явăнса пурĕ пĕрле хыттăн пăчăртаннă та — çĕр чăмăрĕ пулса тăнă. Каçсерен çутă уйăх çутатнă ăна, кăнтăрла ăшă хĕвел ăшăтнă, савăнăçлă çăлтăрсем именчĕклĕн куç хĕссе юрату туйăмне вăратнă. Çав ачаш юрату туйăмĕн лăпкавĕнче янкăр таса сенкерлĕхпе уçă сывлăш шăркаланса çĕр сĕтекне ĕмекен, чăрсăр çиле парăнтаракан пĕрремĕш чĕрĕ чун — тĕлĕнмелле илемлĕ фиалка тĕвĕленнĕ. Кайран çĕр пичĕ ешерсе пынă май пĕрремĕш улмуççи шăтса тухса пĕтĕм тавралăха пылак панулмипе илĕртнĕ — вара пылакпа илем пĕтĕçленсе тĕрлĕрен чĕрчунсем ĕрчеме тытăннă. Эпир куракан, эпир паян пурăнакан чĕрĕ пурнăç юратуран пуçланса кайнă.

Ку кĕнеке — пĕтĕмпех юрату çинчен. Унăн черченлĕхĕпе хĕрӳлĕхĕ тата унăн питех те ăнланма йывăр кăткăслăхĕ çинчен. Автор шухăш-кăмăлĕ çирĕп: тирпей пурăнни кăна çынна илем кӳрет.

И-42263
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

© Мерчен М., 2009

ПРОВЕРЕНО
20 10 Проверено
2 СЕН 2017



*Чунпа та, юнпа та чăваш эп,*
*Сенкер йăмрасемлĕ,*
*кăвар чечексемлĕ*
*Анаткас çынни!*
*Пин çул пурăнатăп вилсен те, –*
*Пылак çырла пулĕ,*
*аваллăха юлĕ*
*эпĕ çырни.*

*Михаил МЕРЧЕН.*

***Укçа –***
***пуянсем валли,***
***Хастарлăх –***
***çамрăксем валли.***
***Юрату... –***
***пурне те валли.***

***Автор.***

***Тепӗр хут пулма пултарайман шап-шурӑ чечеке ларнӑ ӗлккен пурнӑç таппинче йӑнӑшма ӗлкӗреймен тин кӑна çуралнӑ ачанни пек тап-таса чӗреллӗ çамрӑксене халаллатӑп.***

**ХАКЛӐ ВУЛАКАНӐМ!**
*Чуна хурлӑх пуссан,*
*Хӗн килсен чӗрене –*
*Ку чире пыл пулса*
*Сиплӗ çак кӗнеке.*
*Укçа пӗтрӗ – вула,*
*Ӗмӗт сӳнчӗ – вула.*
*Нихӑçан та сана*
*Тунсӑх пусмӗ вара.*

**МИХАИЛ МЕРЧЕН.**

# ПĔР ТУМЛАМ КУÇÇУЛЬ
## Роман

### ПĔРРЕМĔШ ПАЙĔ

Нимĕнпе танлаштарми пĕртен-пĕр
ырлăх пур çĕр çинче.
Уншăн çуралма, ăнтăлма, пурăнма тăрать.
Вăл – юрату.

**Автор.**

Ăравасăр хĕрӳллĕ юратнă вĕсем,
Хавха тӳпинчен ӳкесрен хăрамасăр.
Савăнса пурăнма çуралаççĕ çынсем –
Мĕн-ма-ши телейĕн каçалăкĕ ансăр?..

**Автор.**

### ПРОЛОГ

Тул çутăлать – кун пуçланать... Çынсем, кайăксем, тĕрлĕрен чĕрчунсем куçĕсене уçаççĕ. Каллĕ-маллĕ куçма тытăнаççĕ. Çĕнĕ куна çĕнĕ ĕмĕтпе, çĕнĕ вăйпа ĕнерхинчен те савăкрах тума тăрăшаççĕ. Кашнин – хăйĕн тĕллевĕ, хăйĕн ĕмĕчĕ-шухăшĕ. Çапла йĕркеленнĕ пурнăç.

Пӳлĕмре шăп. Пĕр чун та çук тейĕн. Чӳрече карри, сĕтел çивиттийĕ, диван çинчи вырăнтан куçнă кавир хĕрри, çăмăл

пукан хыҫӗнчен айӑн-ҫийӗн уртса янӑ тӗрлӗ ҫи-пуҫ – пурте ӗшенчӗклӗн пуҫӗсене ҫӗрелле уснӑ. Сӗтел ҫинчи чашӑк-тирӗк, хальтерех никам тӗкӗнейменрен, тунсӑхлӑн шӑпланнӑ. Тӗрлӗрен ҫимӗҫ юлашкисем ӳпӗнсе-лӑпчӑнса канлӗн тӗлӗреҫҫӗ. Хитре чейникри вӗри какао паҫӑрах ырӑ шӑршӑллӑ пӑс кӑларма чарӑннӑ. Ҫисе ярайман торт касӑкӗсем, вӗтӗ тӗпренчӗксемпе выляса ывӑннӑн, мӗнле ларнӑ ҫаплипех тутлӑ ыйӑха путнӑ. Ӑшӑ. Тӳлек. Ҫак асамлӑ тӳлеклӗхе кӗрен калпаклӑ торшер ҫути хураллать.

Ҫемҫе диван ҫинче иккӗн – хӗрпе каччӑ. Иккӗшӗ те капӑр тумне хывса илнӗ вӗр-ҫӗнӗ пукане пек. Лӑнчӑланнӑ ҫемҫе аллисем пӗр-пӗрне ӑшшӑн ыталанӑ. Хускалмаҫҫӗ. Темиҫе минут каярах ҫеҫ тытса чарайми хӗрӳллӗччӗ вӗсем. Халӗ ытлашшипех канлӗ вӗсене – пылак та евӗклӗ. Вӑйӗсем кӑна ҫак самантлӑха хӑйӑр сӑхнӑ шыв пек пӗр чӗптӗм те юлман. Симлӗн-симлӗн лӗнчӗр-р-р кайнӑ...

...Унтанпа, пӗтӗм чун черченлӗхӗпе вышкайсӑр ҫемҫен «ааа»... тесе каччӑ мӑйӗ айне хӗсӗннӗренпе, вӑхӑт нумаях та иртмерӗ – вӗтӗ-вӗтӗ тарпа хурӑн ҫырли пек хӗрелнӗ хӗр кӑпӑшка ҫӳҫлӗ пуҫӗпе каччӑн вӗтӗ шӑлсен йӗррийӗ юлнӑ кӑкӑрӗ ҫине тӗршӗнчӗ.

– Эсӗ мана алла илтӗн ӗнтӗ. Яланлӑхах илтӗн. Тап-таса чӗреме хӑвӑн чӗрӳпе тӗвӗлерӗн. А малашне эпир мӗн тӑвӑпӑр? – ҫӗрлехи шӑплӑхра ҫав тери ҫепӗҫҫӗн илтӗнчӗ унӑн йӑваш сасси.

– Малашне... – кӑштах тытӑнса тӑчӗ каччӑ. – Малашне те эпир, хальхи пекех, ҫак ҫӗр ҫинче чи телейлисем пулатпӑр.

– Тем пекехчӗ...

Ҫаксем – тин ҫеҫ пурнӑҫ ҫулӗ ҫине хӑйсем тӗллӗн тӑма пуҫланӑ икӗ ҫамрӑк пулчӗ. Пӗри – Антун, тепри... Ӑна кайрантарах пӗлӗпӗр.

Ытти кашни ҫын пекех, иккӗшӗ те вӗсем, эреш-мереш пурнӑҫра ыррине ҫеҫ курас тесе, таса, ҫутӑ ӗмӗтпе ҫуралнӑ.

Антун мӗн ачаранпах илеме юратнӑ. Тӳсме пултарайман татмасӑр хӳхӗм чечексене курсассӑн. Аллисене малалла тӑсса мулкач евӗр чупнӑ капӑр сӗвек кӗперне ярса тытас хӗлхемпе: чупнӑ, ӳкнӗ, татах чупнӑ. Хитре хӗрачасене хӑй ҫиес канфета

çитернĕ. Ўсме, йăрăс каччă пулма питĕ васканă. Каçсерен çăлтăрсене шутланă, кунсерен хĕвел пайăркисемпе выляса киленнĕ. Асамлă Атăлта çăвĕпе шыва кĕнĕ...

Атăл çи тăрăхĕнчен инçетри-инçетри хулара тепĕр каччă пурăнать. Митя Малинин. Сăнран та, хастарлăхĕпе те, хăйсене тытма пĕлнипе те Антунпа пачах расна çынсем вĕсем. Кăмăл туртăмĕпе кăна иккĕшĕ икĕ тумлам таса шыв евĕрлĕ шăп та лăп пĕр пек – вĕри çулăмлă, кăвар чĕреллĕ, çиçĕмле вăйкăн юратуллă.

Тивĕç, шанăç, чăтăм пур çĕр çинче. Ултав пур. Çулăмран вăйлă çулăм пур. Вĕсене алпа тытса пăхма çук, суйлама та, витĕрех курма та çук.

Тинĕс-çар службинчен таврăнсан, аслă пĕлӳ илес тесе, Митя хулари химипе технологи институтне заочно вĕренме кĕчĕ. Виçĕ курс сисĕнмесĕрех хыçа тăрса юлчĕ.

Вĕренӳ çулĕн юлашки экзаменне тытса тухсан, Малинин заочник студент çурăм хыçĕнчи йывăр çĕклеме хывса хунăн çăмăл кăмăлпа ресторана кайрĕ. Çутă та каштах тĕрлĕ шавлă зала кĕрсен унăн куçĕсем алчăраса кайрĕç. Хăш сĕтел хушшине лармалла-ши тесе вăл маларах иртрĕ. Пушă вырăнсем сахалччĕ.

– Малинин! – илтĕнчĕ сасартăк палланăрах сасă.

Митя сылтăмри кĕтес еннелле çаврăнса пăхрĕ те - аслă преподавателе курчĕ. Лешĕ аллипе хăйĕн çумĕнчи пушă вырăна кăтартса кăчăк туртрĕ. Студент савăнсах унталла утрĕ.

Апатлану вăраха кайрĕ.

– Ăмсанатăп сире, манăн юратнă студентăмсем, – терĕ доцент. Унăн сăмахĕнче темĕнле хаклă çухатăва шелленĕн çемçе сĕм сисĕнчĕ.

– Мĕншĕн апла калатăр, Клим Петрович?

– Сирĕн пурте умра. Çамрăк, таса малашлăх ĕмĕтлĕ, вĕри чĕре... Çамрăклăх – çыннăн чи пысăк пуянлăхĕ.

– Сирĕн сум багажĕ пирĕннинчен сулăмлăрах.

– Вăхăт çурхи шыв пек хăвăрт иртет. Эпĕ те студентчĕ... Ăçта халĕ вăл, çав чечен лĕх? Тахçанах хыçа юлнă, каялла

таврӑнми. Итле: вӑйлӑ ҫил касать-и – ут малалла, туллать-и тӑвӑл – пурпӗрех ут. Палӑртнӑ тӗле ҫитме тӑрӑш. Тӗрӗс ҫултан ан пӑрӑн, ан парӑн – ут, ут, ут ӑслӑлӑх тӗнчин горизончӗ хӗррине ҫитиччен. Кашни ҫыннӑн пӗлӗвӗ пурнӑҫ шайӗнчен нумай ҫӳлте пулмалла. Унсӑрӑн прогресс ҫук. Арҫынна пурнӑҫра телейлӗ пулма виҫӗ япала кирлӗ: ҫирӗп сывлӑх, тарӑн пӗлӳ, лайӑх арӑм. Чи малтан сывлӑхна упрама тӑрӑш. Мӗнле калаҫҫӗ-ха: укҫа ҫухатрӑн –нимӗн те ҫухатман эс, вӑхӑт ҫухатрӑн - сахал ҫухатрӑн, сывлӑха ҫухатрӑн – пӗтӗмпех ҫухатрӑн. Унтан вӗренме тимле. Этемлӗх пуласлӑхӗ – наукӑра. Тарӑн пӗлӳсӗр пурнӑҫ – ӑман пурнӑҫӗ. Виҫҫӗмӗшне – мӗнле калас... телейлӗ пул.

– Пуласчӗ, – ӑсчах сӑмахне ӑса хывнӑн тарӑн сывласа илчӗ Митя.

1

Ҫак тӗнчере эпир пурте – илӗрттӗве
пӗр сӑмахсӑрах парӑнакан
черченкӗ вӑхӑт ачисем.
**Автор.**

Кӑнтӑрти пин-пин жасмин шӑршиллӗ лӑпкӑ каҫ. Июль вӗҫленсе пырать. Тӳпе тӑп-тӑрӑ.

Хура тинӗс хумӗсем ҫыран патнелле чупни палӑрми пулсан санатори шӑпланӗ.

Чылайччен шахматла выляса ларнӑ хыҫҫӑн, ҫывӑрма выртас умӗн, Митя патша та ҫуран утнӑ пӳлӗме кайма тухрӗ. Вунпӗр сехет иртнӗччӗ ун чух. Сумлӑрах санаторисенче вунӑ сехетре урамран кӗмелли алӑка ҫӑрапах питӗреҫҫӗ. Палатӑсем пурте хупӑ, коридор – пуш-пушах.

Ансӑртарах алӑк еннелле Митя васкамасӑр утатчӗ – ӑнсӑртран чӳречене тул енчен ҫемҫен шак-шак туни илтӗнчӗ. Каҫхи тӗксӗмрех сенкерлӗх витӗр пӗр хӗр хайне кӑчӑк туртнине курсан, каччӑ чӳрече умне пычӗ.

– Кантӑка уҫӑр-ха, – терӗ ӑна чӑп-чӑмӑр питлӗ хӗр, хӑрах куҫне хупласла усӑнса аннӑ ҫырӑ кӑтра ҫӳҫне аллипе хуллуҫҫи ҫинелле сирсе.

Митя самантрах чӳрече шашулккисене питӗркӗчрен вӗҫертрӗ.

– Ой, спаҫҫипах сире! – пӗтӗм пӗвӗпе чӳрече янаххи ҫине ӳпӗнчӗ хӗр, вара, ҫийӗнчех тӳрленсе, тулли пӗҫӗсене сарма кансӗрлекен ансӑр юбкӑна хытах карӑнтарса хӑрах урине аялалла тӑсрӗ. Яка ӳт тӑрӑх майӗпен шӑвӑнса ҫӳлелле куҫакан аркӑ тата ытларах туртӑнчӗ. Кӑрт! турӗ каччӑ чӗри: пӗҫӗсем пӗр-пӗринпе пӗрлешнӗ тӗлте мамӑк ҫӑмлӑ икӗ хура ҫунат икӗ еннелле сарӑлса уҫӑлнӑ май тюльпан хӗмӗ евӗрлӗн хӗп-хӗрлӗ пӗсехе ҫиҫӗмле мӗлтлетсе илсен, ӑ-ӑшӑ пулса кайрӗ ӑна. Пӗтӗм ӳт-пӗвӗ тӑрӑх ҫав тери ҫепӗҫ хум чупма пуҫларӗ. Чӗрийӗ темӗнле халиччен туйман евӗклӗхпе читлӗхри ачаш кайӑк пек ӑравасӑр хӑвӑрт-хӑвӑрт шуйханса тапма тытӑнчӗ. Мӗн курнине яланлӑхах асра хӑварас тенӗн, сывлама чарӑнса, хытах хӑпартланнӑ йӗкӗт вырӑнтан хускалма та хӑрарӗ, пушӑ коридор урлӑ шиклӗнрех ҫемҫен утса каҫса чӗрне вӗҫҫӗн иккӗмӗш хута улӑхакан ҫап-ҫаврака купарчаллӑ хӗре ӑшшӑн-ӑшшӑн пӑхса ӑсатрӗ. «Нивушлӗ кӑнтӑрта хӗрсем юбка айӗнчен пӗр нимӗн тӑхӑнмасӑрах ҫӳреҫҫӗ?» – пылаклӑн сӗмлентерекен шухӑш явӑнчӗ унӑн пуҫӗнче. Санаторие вӑл инҫетри Ҫӗпӗртен ӗнер ҫех килсе ҫитнӗччӗ. Ҫамрӑк хусах. Хурлӑ-тертлӗ тинӗс-ҫар ҫыннин ҫипуҫне хывса хуни те виҫӗ ҫул ҫурӑ кӑна-ха. Чи пиҫсе ҫитнӗ вӑхӑт ку. Хитре хӗрсене курсан чун-чӗрере юн ниҫта кайса кӗме пӗлмесӗр хӗвӗшсе вӗренӗ вӑхӑт. Ҫунмалли, ӑсран тухмалли чечен вӑхӑт.

2

Иккӗмӗш хут вӗсем тепӗр кунне вестибюльте тӗл пулчӗҫ. Телевизорпа илемлӗ фильм пуҫланасси тепӗр вунӑ минутчӗ. Кӗтев вӑхӑтне кӗскетес тесе-ши ҫав хӗр лутра сцена ҫине хӑпарса тӑнӑ та, хӑйӗн тӗлӗнмелле илемлӗ кӗлеткине тӗрлӗрен авкаласа, юрӑ юрлать. Пианино сассипе пӗрле питӗ уҫҫӑн янӑрать ҫепӗҫ кӗвӗ:

**... Я растоплю кусочки льда**
**Сердцем своим горячим,**
**Буду любить тебя**
**всегда –**
**Я не могу иначе...**

Тин çех пырса тăнă Митя çурма çаврашка хĕрринерехри çемçе кресло çине меллĕн вырнаçса ларчĕ те тӳсеймесĕр хĕр тата ытларах авăнасса кĕтрĕ. Хĕрĕн чăп-чăмăр кĕлеткине çăт тытса тăракан кĕске платье арки кĕç-вĕç, кĕç-вĕç тата çӳлерех улăхассăн туйăнчĕ ăна. Анчах апла пулмарĕ – юрă вĕçленчĕ те çепĕç сассипе чуна тыткăнлакан çамрăк пике, кăпăшка хумлă вăрăм çӳçне лăс малалла усăнтарса, канакансене пуç тайса илчĕ. Ăна тăвăллăн алă çупса саламларĕç, вара вăл, çара пĕçĕллĕ кĕрнеклĕ урисемпе кĕске утăмсем туса, Митя çумĕнчи пушă кресло çине пырса ларчĕ, пĕчĕкçĕ ал тутрине вĕлкĕштерсе вĕтĕ-вĕтĕ тарпа витĕннĕ питне уçăлтарчĕ. Ырă-ырă духи шăршине юриех каччă еннелле хăвалать тейĕн. Куçĕ кăн-кăвак хăйĕн – хирĕç пăхсан пĕтĕм ачаш чуна вăтантарса, ирĕлтерсе яракан йăмăх кăвак. Çăра вăрăм куç хăрпăкне çуллă хура сăрăпа сăрланă. Çав тери чипер хĕр, мĕнле пулма пĕлнĕ тулĕк. Кăштах каçăртарах тип-тикĕс сăмсийĕ чи чаплă скульптор ăсталаса тунă евĕрлĕ питĕ илемлĕ. Чух пиçсе çитнĕ хăмла çырли пек хĕрлĕ те кăштах уçăлса тăракан пĕчĕк тути, вăйлă магнит пулса, санăн вăтанса, ирĕлсе кайнă шухă чунна никам асăрхамалла мар çепĕççĕн хăй патне туртать. Çак чип-чипер ăс-пуçа тĕппипе ӳсĕртсе евĕклĕн минретекен илем хăвăн марришĕн çемçен ӳкĕнсе ирĕксĕрех ассăн сывласа илетĕн: «Эх, пĕрре çеç, пĕрре çеç ăшшăн чуп туса курасчĕ! Кайран хăть кирек тем пултăр». Канăçсăр чĕрере вăйлăн хыпса илнĕ пылак ĕмĕт, ĕлккен ĕмĕт çак çĕр çинче мĕн пуррине пурне те туххăмрах манăçа кăларать.

Хăйпе юнашар ларакан çамки çийĕн илемлĕ авăк хум туса сылтăмалла тирпейлĕн туранă кĕскерех хура çӳçлĕ, кăштах пиçсе çитеймен хурлăхан евĕрлĕ таса та çутă хăмăр куçлă, çĕнĕ хура костюм айĕнчи чăлт шурă кĕпе çийĕн хĕрлĕ галстук çыхнă

çамрăк йĕкĕт чĕринче сасартăках çав тери çемçе те ăшă çунатлă пин-пин кăткă тӳсме çук евĕклĕн йăшăлтатса хĕвĕшме пуçланине чиперкке нимĕн чухлĕ те туймарĕ.

– Савăнăç парнеленĕшĕн тавтапуç, – терĕ ăна Митя, черченкке чунĕ хытах пăлханнине палăртасран хăранăн юриех çемçетнĕ, хăюсăр хĕрачанни евĕрлĕ йăваш сасăпа. Юлашки сăмаха каласан хăй пăчăр пек хĕрелсе кайрĕ. Ача чухнехи йăлтăр куçлă хи-итре хĕрсене хирĕç пăхайми вăтану туйăмĕ халĕ те иртсе кайсах пĕтмен-ха унăн.

Хĕр, аллине сулма чаранса ун çине тĕлĕннĕн пăхса илчĕ те, нимĕн те чĕнмерĕ, – кунашкал витĕмсĕр сăмахсене сахал мар илтнĕ пулас вăл.

– Эсир мана паллаймарăр-им? – тĕмсĕлерех ыйтрĕ Митя. Асамçă пике хăйне ытлашши мăнкăмăллăн тытни самаях пăшăрхантарчĕ ăна.

– Эпир сирĕнпе курнăçнă-и вара?

– Чӳречерен уçса кĕртекене мантăр та-им?

Хĕр Митя çине витерсе пăхрĕ.

– Пулнăччĕ ун пекки. Манман. Эсир хĕрсемпе паллашма çавăн пек самантсене çеç шыратăр-им?

– Çук, ун пек ан шутлăр. Ку хутĕнче ирĕксĕрех çавнашкал пулса тухрĕ.

– Шел. Меллĕрех май тупайманнисене чĕререн хĕрхенетĕп.

Чиперкке ура çине çĕкленчĕ:

– Хăвăрăн ăсра сăнарлакан пылак шухăшăрпа кăна тăратса хăварма тивет сире. Манăн каймалла. Хăвăрăн тупăнман телейĕре тупма ăнăçу сунатăп.

Хĕр шĕвĕр кĕлеллĕ капăр туфлипе çемçен чăклаттарса коридор еннелле утрĕ.

– Тăхтăр-ха, – ăна хăваласа çитрĕ Митя.

– Хыçран ан утăр. Аван мар капла.

Митя тата тепĕр утăм турĕ.

– Мĕн каларăм? – чарăнса тăчĕ ăша çунтармăш вут-пике, каччă куçĕнчен чĕрене витермелле пăхрĕ, хăйне йĕрлекен çамрăк тек вырăнтан та хускалас çуккине ĕненсе çитсен тин малалла утрĕ.

Митя юпа пек хытса тăчĕ: каялла çаврăнас килмерĕ унăн, чун туртăннă еннелле те кайма юрамасть – тем тумалла... Телее ăраскал пӳрмен пулсан, вăйпа туртса илеймĕн. Каччăн тин çех таçта вĕçеслех хăпартланнă шухă чĕри шĕкĕ çинĕн майĕпен пусăрăнма пуçларĕ. Ӳкĕнме ĕлкĕрнĕ пăвăр куçсем шывланма та хатĕрччĕ, – шăп çак вăхăтра юнашарти палата алăкĕ уçăлчĕ, унта икĕ костыль çине хул хушшипе уртăннă, тăнлав тĕлĕнче кăштах кăвакарнă çăра вăрăм çӳçлĕ, икĕ уйрăммăн çиçсе тăракан тăп-тăрă шăрçа пек çутă та ăшă хăмăр куçлă арçын курăнчĕ. Вăл малтан çирĕппĕн çатăрласа тытнă туйисене çăмăллăн алăк янаххи урлă сиктерчĕ те ун хыççăн пĕтĕм пĕвĕпе туртăнса икĕ урине пĕр харăс малалла куçарчĕ, вара алăка хупрĕ.

– Салам! Эсир, куратăп, ытлашшипех хăпартланнă. Питĕ килĕшет-им? – терĕ вăл чăмăркка кĕлеткеллĕ чиперккене хыçран ăмсануллăн пăхса хытнă йĕкĕте.

– Селĕмскер. Ун пек чуна хĕмлентерсе илĕртекене, тĕрĕссипе каласан, курсах кайман эпĕ, – терĕ Митя, чĕрине капланса килнĕ пылак туйăма пытарма хал çитерейместĕр.

Чăлах çын пĕр вăхăт нимĕн чĕнмесĕр тăчĕ, унтан уçă çухавиллĕ йăмăх шурă çинче сирень тĕслĕ икĕ хĕрринчен шал еннелле шупкаланса пыракан хитре тăваткал куçлă вĕр-çĕнĕ кĕпин тепĕр тӳмине вĕçертсе, тарăннăн сывласа илчĕ.

– Ĕненетĕп. Хĕрсенче икĕ ярт пĕрешкел илем пулма пултараймасть. Çак сирĕн чунăра ăшшăн хускатакан илем – пĕртен-пĕрре çеç. Ун пеккки иккĕмĕш – тĕнчипе те урăх çук. Арçынсен ырă чунĕсене пĕр шелсĕр тĕппипе сусăрлантаракан асамçă пикене куç хывнă эсир.

– Эсир ăна пĕлетĕр-им?

– Манăн арăм вăл.

– Арăм?! – çăварне çерçи вĕççе кĕреслех карса пăрахрĕ Митя. Çак сăмаха унăн вилсен те ĕненес килмерĕ. Ĕненме майĕ çук: вăл... кунашкал, арăмĕ – татма хăяйми хӳхĕм чечек.

– Çапла. Пĕтĕм чунĕпе вăйсăр хĕм сапса çунакан чĕреçĕм çумне куçа курăнми çирĕп вĕренпе кăкарнă арăм вăл манăн, тепĕр майлă каласан, ирхи тĕлĕкĕм, пылак тĕлĕкĕм... вутлан ĕмĕтĕм.

– Питех те хитре вăл.

– Ирĕлсе-ирĕлсе, пиçсе каймаллах хитре. Унпа тĕл пуличчен эпĕ те сирĕн пекех тĕреклĕччĕ, кĕрнеклĕччĕ, тытса чарайми вĕри чĕреллĕччĕ.

– Эсир мана шалтах тĕлĕнтерсе ятăр. Халĕ эпĕ темĕнле ĕненме шутсăр йывăр кăсăклăх айне пултăм, çапах та сирĕн çинчен урăх нимĕн те, нимĕн те пĕлес марччĕ. Пĕлни хĕрӳлĕх таппине пуçĕпех пĕтерсе тăкассăн туйăнать.

– Ăнланатăп. Витĕрех куратăп, – вăрăммăн сывласа илчĕ хăмăр куçлă чăлах. – Апла пулин те çав ĕненме йывăр кăсăклăхăн тĕшшине пĕлмеллех сирĕн, унсăрăн хăвăра хăвăр юратми пулас хăрушлăх тыткăнлама пултарать сире. Кĕрĕр – калаçса ларăпăр. Каялла çаврăнма пулăшăр-ха: куратăр пуль, пĕр вырăнта тăрса çĕр сакăрвун градус тумашкăн питĕ кансĕр мана. Ну, мĕн хăраса ӳкрĕр! Пулăшăр тетĕп.

Митя кăштах сулăнарах вырăнтан хускалнă арçынна туйинчен тытрĕ.

– Туяран мар, хулран тытăр.

Часах йăлтăр чӳречеллĕ пĕчĕкрех палата алăкĕ яриех уçăлса кайрĕ. Алăк сулли урлă чи малтан пиçĕ резинăллă икĕ туя вĕçĕ пĕр харăс сиксе каçса паркетлă урай çине тăрăнчĕ, ун хыççăн сывлăшран уртăннă çăмăл пушмаклă икĕ ура ярăнса иртрĕ.

Митя палатăна кĕрес теменччĕ. Çын хурлăхне чăтаймасть вăл. Пĕр-пĕр сусăрланнă мĕскĕн хăйĕн çине темĕн ăнланма ыйтнăн тилмĕрсе пăхсан, темшĕн унăн хăйĕн чунĕ ыратма

пуçлать. Ирĕксĕрех килĕшмелле пулчĕ; кăмăлне хирĕç кайса, те тĕрĕс, те йăнăш турĕ – ăна хăй те пĕлмерĕ.

3

Палатăна кĕрсен Митьăна умра кино экранĕ уçăлнăн туйăнчĕ. Пĕчĕкçĕ пӳлĕм. Сĕтел. Ун çинче, хитре вазăра, – виçĕ тюльпан. Тумбочка, телевизор, лутра шифоньер... виçĕ кресло... чăлт шурă стена çумĕнче – гитара...

Каччă куçĕсем ытлашши пусăрăнсан хытă пуласран хăранăн çӳлелле тĕртекен кăпăшка тӳшеклĕ, çутă хăмăр лакпа сăрланă йывăç кравать çине тĕлленчĕç. Паха çивитти, кăпăк пек çемçен карăнса тăракан икĕ минтер, çивитти айĕнче кăшт кăна чăлт шурă простынь хĕрри палăрать. Илĕртӳллĕ. Этемшĕн вырăн пек ырă кăмăлли урăх çук та пулĕ çĕр çинче. Никама та,нихăçан та хур туман вăл. Кунта çĕнĕ чун çуралать. Пĕрремĕш сасă кăларать. Вăй илет.

Пӳлĕмре шăп. Кил хуçи çемçе крсло çине меллĕн врынаçса ларчĕ те туйисене юнашар тытса стена çумне сĕвентерчĕ: «Ларăр, – терĕ вăл аллипе пысăках мар сĕтел çумĕнчи тепĕр кресло еннелле тĕллесе. – Ан именĕр. Юнпа та, чунпа та пĕрешкел ĕмĕтлĕ çынсем эпир: хитре хĕрсене курсан, вĕри чĕререн вĕри çилĕм тăватпăр. Ятăм манăн пророкăнни пек: Антон. Оля Антуан тесе чĕнет. Манран тĕппипех урăх çын турĕ вăл. Анне çуратнă ян-ян çепĕç саслă, умри курăни-курăнми телее çара алпа ярса тытасшăн çунакан чечен кке ача мар халĕ эпĕ. Хамăн тĕлĕнмелле хĕрӳллĕ, çав вăхăтрах питех те хурлăхлă юрату çинчен кама та пулин каласа памаллах ман. Çулăмран кăмрăк пулма ĕлкĕрейменнисемшĕн, суранланман чĕреллисемшĕн, тен, усăллă пулĕ. Тимлесе итлĕр».

Митя пĕр вăхăт лармалла-ши, лармалла мар-ши тенĕн иккĕленсе тăнă хыççăн ирĕксĕррĕн тимсĕрленсе çемçе кресло хыçĕ çумне сĕвĕнсен, Антуан кăмăллăн сывласа илчĕ. Хăйĕн ăшри чун вăрттăнлăхĕн тулли çӳпçине тахçантанпах курман чи çывăх, чи

шанчăклă тусне уçса кăтартас тенĕн, шăрăхри ăрша вылявĕ пек лăпкăн пуçларĕ вăл хăйне евĕрлĕ питех те кăсăк калавне.

– Манăн гинеколог пулас килетчĕ. Арçын гинекологсене хĕрарăмсем кăмăлласçĕ тенине хама хĕрсен юбка айĕ илĕртме пуçличченех илтсеттĕм. Медицина факультетне вĕренме кĕтĕм. Икĕ курс сисĕнмесĕрех хыçа тăрса юлчĕ.

Ольăна эпĕ пĕрремĕш хут пĕчĕкрех шап-шурă катер çинче куртăм. Вырсарникунччĕ ун чухне. Атăл урлă Йăлăм еннеле каçаттăмăр. Салонра халăх сахал. Пĕр çав тери илемлĕ кĕлеткеллĕ çамрăк хĕр пĕччене чўрече умне тăнă та кăн-кăвак куçĕпе инçете-инçете тинкерет, темĕн питĕ тарăн шухăша путнă. Эпĕ ăна хыçран сăнатăп. Кĕске платье айне кĕрсе çухалса икĕ чăп-чăмăр футбол мечĕкĕпе пĕрлешекен тĕлĕнмелле хитре икĕ ури ман чĕрене хур мамăкĕпе кăтăкланăн кăтăклать. Çав тери евĕклĕ. Катер ерипен лăканнă май хĕрĕн çавракан хулпуççине кăтрарах вăрăм çăра çўçĕ лăпкать, çутă, яка, кĕрнеклĕ пĕçĕсене вĕлтĕркке шухă аркă çемçен ачашлать. Ăшăмра эпĕ çак илемлĕ хĕре çав чĕлтĕркке çўхе капăр платьесĕр куратăп. Унăн кашни путăкĕ-сĕвекĕ, мăкăлĕ-тĕмекĕ мана ўсĕртсе-ўсĕртсе ухмаха кăларать. Чĕркуççирен çўлерехри пай хитрен чăмăрланса аркă ăшне кĕрсе çухалнă тĕле пăхатăп та чĕре гитара хĕлĕхĕ пек чĕтреме пуçлать. Ĕмĕтĕм ытла та чечекчĕ çав.



Çыран хĕррине çитеспе хĕр каялла çаврăнчĕ, çаврăнчĕ те ман чĕрене самантлăха тапми турĕ: сăнĕ... ытармалла мар, куçĕ – икĕ кăн-кăвак кăвар. Эпĕ ун умне хĕрлĕ гвоздика пулса ўкме хатĕр: «Ах,

пăхинччĕ, кăштах та пулин пăхинччĕ ман çине!» – йĕресле йăлăнатăп ăшра хам. Çук, мана курмарĕ вăл, асăрхамарĕ. Куçа туртса ĕмекен питех те селĕм урисене майĕпен хускатса халăх кĕпĕрленнĕ тĕлелле утрĕ.

Ăна асăрхарĕç. Манашкалах вĕри чĕреллĕ, пылак ĕмĕтлĕ яшсем асăрхарĕç. Харсăрскерсем, сасартăках хавхаланса ӳкнĕскерсем, шуйханса-кулса хĕр çумне çыпçăнчĕç, çавра хулĕнчен тытма тăчĕç.

Куçăм хуралса килчĕ.

– Ан тĕкĕнĕр! – çирĕп те ытлашшипех хăюллă алсене хыттăн пăрса хĕр çумĕнчен сирме тăтăм эпĕ. Пĕррех чышрĕ мана питрен тимĕр чăмăр. Эпĕ тилĕрсе кайрăм: пĕр тăхтаса тăмасăр шăла шатăр-р! çыртрăм та сĕкĕнчĕке çийĕнчех тути урлă вирлĕн туртса çапрăм. Хĕре чунтан-вартан юратса пăрахни çапла тума хушрĕ мана. Тем самантра тытăçса ӳкрĕмĕр, хаяр йытăсем пек. Пуçланчĕ çăй-çай.

– Чарăнăр! – ниçта кайса кĕрейми вĕткеленет пирĕн тавралла темиçе чĕрене пĕр харăс вут хыптарнă асамçă-пике, пире уйăрса ярасшăн ачаш чунĕпе çав тери асаплăн çунса.

Çакăн пек хӳхĕм хĕршĕн çапăçма епле чарăнайăн...

Виççĕн тан пĕр шелсĕр тӳпкерĕç мана. Пĕр шелсĕр, пĕр чарăнмасăр тӳпкерĕç. Çипуç вараланчĕ, çуркаланчĕ; тута хĕрринчен юн сăрхăнать, алри сехет вĕçерĕнсе таçталла вăркăннине те сисмерĕм эпĕ. Çилĕ ниçта шăнăçайми тулса çитнĕччĕ. Тĕнче те тăвăрччĕ маншăн. Çĕр чăмăрĕ юла пек çаврăннăн туйăнатчĕ. Куç тулли пăтрав та вандал. Пĕртен-пĕр кăн-кăвак куççем хам çине питĕ хĕрхенӳллĕн пăхнине çеç астуса юлтăм.

Ăравасăр пысăк мăшкăл тӳснишĕн пачах та хурланмарăм ун чухне. Хурланма мар, пушшех хĕпĕртерĕм, – хамăн чун-чĕре чан çапса ыйтнине хӳтĕлерĕм-çке-ха эпĕ...

– Куна мĕншĕн мана каласа кăтартатăр эсир? Эпĕ сире пурнăç çулĕ çинче ăнсăртран хирĕç пулса иртсе каякан çын çеç вĕт, – терĕ Митя, Антуан, мĕн те пулин сиктерсе хăвармарăмши тенĕн, пуçне лăнк усса самантлăха шăплансан.



Ч-4263
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики

– Мана эсир хам малтан мĕнле пулнă çавăн пек куртăр тетĕп, хам мĕншĕн хĕм сапса çуннине, халĕ мĕншĕн сывлăша çăтса пурăннине кам та пулин ăнлантăр тетĕп.

– Апла-тăк... – итлеме килĕшнине палăртса аллине кресло хыçĕ хĕррине хучĕ каччă.

– Çав манăçми кунччен эпĕ вĕренӳ çинчен кăна шутласа, – калава малалла тăсрĕ Антуан. – Чуна тыткăнлакан хĕре юратса пăрахнăран тĕппипех çемĕçсе кайрăм, пурне те мантăм, тимсĕрлентĕм: кĕнекене алла хăть тыт, хăть ан тыт – вулани пуçа кĕмест. Канăçа пуçĕпех çухатрăм. Кашни ир, кашни каç пристане кайса кашни каякан-килекен катера тĕрĕслеттĕм – эпĕ савнă хĕр çук та çук, çук та çук. Катер капитанĕсем мана катаранах паллакан пулса çитрĕç: «Кĕтетĕн... Питĕ хитрескер пулĕ-ха, тавай кĕт-кĕт – килетех», – куçĕсене хĕссе илетчĕç вĕсем мана курсанах.

Аптăранă енне ăна хула тăрăх шырма пуçларăм. Кашни хĕре умĕнчен е хыçран пăхса сăнатăп: çавра купарчаллă, хӳхĕм сăнлă пикене шыратăп.

Пĕррехинче тира кĕтĕм.

Ик-виç çамрăк, пĕр хĕр çӳллĕ карлăк çине хăрах чавсапа тĕреннĕ те катари тĕрлĕрен капсене тимлесех пневматикăллă пăшалпа тĕллеççĕ. Сасартăк манăн чĕре кăртах турĕ. Вăйсăр ток пырса çапнăн туйăнчĕ ăна: кăнт карăнса тăракан кĕске юбка ытамне хĕсĕннĕ пиçĕ пилĕкне кăштах пăрарах карлăк çине илемлĕн тĕревленнĕ хĕр кĕлетки сапăрлатрĕ мана. Çӳçĕ, хулçурăмĕ, çаврака та тĕлĕнмелле хитре купарчи, тулли пĕçĕсем, кĕрнеклĕ ура тунисем – каснă-лартнă эпĕ шыракан ăша çунтармăшăн. «Вăл!» – çиçсе илчĕ пуçра шухăш-хĕлхем.

Хĕр сăртлă ӳкерчĕк хушшинчен куçса тухакан упа-кашкăр-качакасене пĕрин хыççăн теприне пере-пере ӳкерет.

Акă, пульлисем пĕтсен, пăшалне вырăна хучĕ. Тӳрленсе, пĕçĕ кăкĕ патнерех улăхма пуçланă ансăр юбка аркине аялалла туртрĕ.

– Питĕ тĕл тивертетĕр, – терĕм ăна, юнашар пырса тăрса. Хам кĕç-вĕç çухалса каясла хумханатăп.

– Ытлашшиех мар, – лăпкăн хуравларĕ пике ман еннелле çаврăннă май. Именсе илчĕ.

Çийĕнчех хыпăнса ӳкрĕм: йăнăшнă эпĕ – пачах ют хĕр! Çапах кӳренмерĕм, – сăнĕ чипер, кăмăллă, юратмалла.

Чиперккене ресторана чĕнтĕм. Хам пăтрашăнса кайнине палăртас килмерĕ. Катенпек мар эпĕ.

Хĕр килĕшрĕ.

4

Эпир унпа сĕтел хушшине кĕрсе ларнăччĕ кăна – кĕтесри пĕчĕкçĕ лутра сцена çинче хăлхана çурасла хăватлă музыка янăраса кайрĕ. Эпĕ унталла çаврăнса пăхрăм. Пăхрăм та – шак хытрăм лартăм: тĕрлĕрен инструментсене янратса силленекен яшсен умĕнче вутăш евĕрлĕ хӳхĕм хĕр авкаланать. Пуçра çиçĕм çиçрĕ тейĕн: «Çавă! Эпĕ чунтан-вартан тĕмсĕлсе шыранă ылтăн пĕрчи! Çавă!.. Ой!..»

Хĕр, хăрах аллине тӳнтер енĕн купарчи çине хурса, тепĕр аллипе микрофон тытса, пĕтĕм пĕвĕпе авăнса-карăнса юрă юрлать. Хитре икĕ чăмăр кăкăрĕ, ӳсĕртсе ярасла ытарайми чечен мăшăр пĕççийĕ ăмсаннипе самантрах сĕлеке ирĕлсе анмалла çурма уçă. Сассийĕ хăватлă джазпа пĕрле вăйлă ток евĕрлĕ манăн чĕрене татăлса, вăркăнса каясла чĕтрентерет:

**Телейпе сапатăп куçунта-ан,**
**Хыттăн-хыттăн чуптăватăп тутунта-ан –**
**А-ан пыта-ан,**
**А-а-ан пыта-а-ан!..**

Эпĕ гранит палăк пек хытса тăратăп. «А-ан... А-ан пыта-ан...» – янăрать хĕр сасси.

Музыка лăплансанах, тин çеç паллашнă хĕре сĕтел хушшине лартса хăварса, васкасах ун патне пытăм.

– Эсир... каçарăр мана. Ăнланăр: хама ниепле те тытса чараймастăп эпĕ. Ун чухне сирĕнпе пĕр сăмах та калаçаймарăм. Çиçĕм çиçнĕ пек курнăçрăмăр та ырă тĕлĕк пек çухалтăмăр. Халĕ çулăмпах çунатăп. Сирĕнсĕр çур кун та пурăнаймастăп.

Шырарăм эпĕ сире, ухмаха тухасла шырарăм. Чечексем хушшинче шырарăм, сар хĕвел хыçĕнче шырарăм – тупаймарăм. Мана астăватăр-и? – чи паха япалана кĕç-вĕç такам туртса илесрен хăранăн, чарăнма пĕлмесĕр тилмĕрме пуçларăм, хам ун чĕркуççийĕ çине ӳкме хатĕр.

– Паллах, – кĕскен, питĕ васкавлăн хуравларĕ вĕтĕ-вĕтĕ тарпа витĕннĕ юрăçă ман çине ăшă хĕм сапса. Вăл музыка янăраса каясса кĕтетчĕ. Эпĕ вĕри çатма çинчи пекех вĕткеленетĕп:

– Ой, манман-и мана!

– Манман. Анчах халĕ манăн пĕр минут та вăхăт çук.

– Хăçан ерçетĕр?

– Пĕлместĕп.

– Кану саманчĕсем пурах вĕт сирĕн?

– Пулкалаççĕ, паллах.

– Чи çывăххи, чи-чи çывăххи – миçе минутран?

Каçхине хула паркĕнче тĕл пулма калаçса татăлтăмăр.

5

Тĕл пулмалли вырăна эпĕ пĕр сехет маларах пытăм. Халь-халь çурăлса каяс пек, халь-халь сывлăш пĕтсе ларас пек чăтаймасăр кĕтетĕп, бенгали çурти пек çунатăп.

Шăп палăртнă вăхăтра васкамасăр утакан çынсен хушшинче вăл курăнса кайрĕ. Кĕске те ансăр хура юбка ăшне шăнăçайман тулли пĕççисене çемçен вылятса çăмăллăн утать. Çав тери, чăтма çук, ытарма çук хитре, савăнăçлă. Сулахай хулпуççи урлă пĕчĕк çăмăл сумка çакса янă. Ансăр аркăна е пĕр еннелле, е тепĕр еннелле карăнтаракан хӳхĕм пĕççисем йывăççен хыçне ансах çитеймен хĕвелпе йăлкăшаççĕ. Эпĕ хама, кĕлетке йывăрăшне çухатса, ырă-ырă тĕлĕкре вĕçнĕ чухнехи пек туятăп. Чĕре çăвĕ ирĕлсе туйăм хĕлĕхĕсем çине тумлать пек.

Çывăхри ресторана кайрăмăр. Çул çинче унăн ятне пĕлтĕм: ăна Оля тесе чĕнеççĕ. Оля, Оленька, Олюся – илемлĕ ят. Манăн ăна татах ачашраххăн чĕнес килет.

Сĕтел хушшине кĕç-вĕç ыталашса илесле çăмăллăн кĕрсе лартăмăр. Эпĕ, ниçта шăнăçайми телейлĕскер, унăн кашни хусканăвне, кашни куç вылявне, кашни сывламне сăнатăп.

Черккене вăл çинçе пўрни вĕçĕсемпе çемçен çĕклерĕ, ман çине ăшшăн пăхать.

– Эпир тĕл пулатпăрах тесе шутланă-и эсир? – ыйтатăп эпĕ.

– Пĕр иккĕленмесĕр шутланă.

– Епле-ха – пĕр иккĕленмесĕр?

– Манра сирĕн «Визитка» пур, – вăл черккене икĕ сыпкăмпа тĕппипех пушатса сĕтел çине лартрĕ те сумкине уçрĕ, – акă...

Манăн сехет! Катерта çапăçнă чухне алран вĕçерĕнсе вăркăннă сехет. Эпĕ çухалса кайрăм: «Ой!.. Эсир... Епле майпа?! Ăна эсир тупрăр-и? Мана валли упрарăр-и?»

– Çапла, сире валли упрас терĕм, хăçан та пулин пурпĕрех курасса шанса. Шанăç, йывăрлăхра та сўнменни, тўрре тухатех, – вăл пирус кăларчĕ: «Туртма чармастăр-и?»

– Çук, тархасшăн. Капла эсир пушшех те илемлĕ.

– Эсир те хитре, – ăшă çăвартан кăвакрах шупка тĕтĕме майĕпен вĕрсе кăларса куçне илĕртўллĕн вылятса илчĕ вăл.

Эпĕ хама ĕненместĕп: мĕн тери ытарайми илем унра! Мĕн тери ăшă ачашлăх! Манăн вăтанăçа çемçен кăтăклантаракан калама çук çепĕç ясарлăх чух пиçсе, чечекленсе, пылакланса çитнĕ.

Тĕттĕм пулсан каçхи урама тухрăмăр.

Артаклă çу каçĕ. Сывлăш уçă. Тўпе йĕпкĕн кăвак. Тĕнче татах пысăкланнă, кĕçех çăлтăрсене перĕнет пек. Кăштах ĕçнĕрен-ши – урасем питĕ çăмăл, вĕçес килет.

Таврара мĕн пурри пурте хитре. Çывăхра пĕр çын та çук. Хула пин-пин çутăпа йăлкăшать. Çутă лампăсен айĕнчи тин çех машинăпа çуса кайнă асфальт таса тĕкĕр евĕрлĕ, Оля пуснă тĕле пăхсан, çўлте, чăмăркка пĕçĕсем пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ тĕлте, халь-халь çурăлма пуçланă тюльпан çеçкине курассăн туйăнать. Яп-яка чечен урасем кашни хут уçăлса хупăннине эпĕ сăн ўкекен çутă çаврашкасенче антăхса пăхатăп. Оля куç умĕнче астарса вĕçекен шап-шурă лĕпĕш евĕрлĕ. Пысăкрах шыв

кӳлленчӗкӗсем урлӑ вӑл, кӗске аркӑ айӗнчи икӗ ҫирӗп пӗҫҫине пӗчӗк ачалла юриех илемлӗн сарса, питӗ ҫӑмӑллӑн сиксе каҫать, ҫутӑрах кӳлленчӗксене шыраса, тем тӗрлӗ кукӑр-макӑрсем тӑвать. Эпӗ ӑна ҫемҫе аллинчен ӑшшӑн тытса ҫупӑрлатӑп, вара, алсене вӗҫертмесӗр е пӗр-пӗринпе ҫӑт ҫыпҫӑнса, е уйрӑласшӑн пулнӑн ятне ҫепӗҫҫӗн туртӑнса, выляса утатпӑр. Манӑн чӗре кӑткӑ йӑви тейӗн – ачаш ҫӑмлӑ пин-пин кӑткӑ ниҫта кайса кӗрейми каллӗ-маллӗ хӗвӗшет унта.

Киле ҫур ҫӗр иртсен ҫитрӗмӗр.

6

Киле ҫитсен йӗпеннӗ пушмаксене хывса алӑк умне хӑвартӑмӑр.

Икӗ пӳлӗмлӗ хваттерте эпӗ пӗччченех пурӑнатӑп. Укҫатенкӗрен хӗсӗк пулса курман. Эпӗ телейлӗ пултӑр тесе аттеанне нумай тӑрӑшнӑ: перекет кӗнеки пур, машина пур, пуҫ ҫийӗнче тӑрӑ пур.

Зала кӗрсенех хыпӑнса ӳкрӗм. Манӑн Ольӑшӑн ҫав тери ырӑ пулас килчӗ.

– Вӗри какао ӗҫетӗр-и  е малтан торт ҫиетпӗр-и? – тетӗп.

– Какао та, торт та... – йӑлл! кулчӗ Оля.

Эпӗ хӑвӑртрах газ чӗртсе ятӑм. Сӗтел ҫине тӗрлӗрен ҫимӗҫсем пырса лартнӑ ҫӗре чейник вӗреме те кӗчӗ.

Ҫемҫе торта пӗчӗккӗн ҫырта-ҫырта вӗри какао ӗҫнӗ хыҫҫӑн эпир ӑшӑпа хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе кайрӑмӑр. Ӑшшӑн пӑхакан Ольӑна эпӗ икӗ хулпуҫҫинчен тытрӑм. Унӑн пичӗ вӗтӗ-вӗтӗ тарпа йӑлкӑшать. Куҫсем тӗлме-тӗл. Аллӑмсем унӑн кӑпӑшка ҫӳҫне ачашлама пуҫларӗҫ. Оля манӑн кӗпе тӳмисене вӗҫертме тытӑнчӗ. Вӑл кӑкӑр кӑкӗ илӗртӳллӗн курӑнса тӑракан сарлака ҫухаллӑ ҫӳхе блузкӑпаччӗ. Канӑҫсӑр пӳрнесем кӑшт сӗртӗнсенех, ҫемҫе ҫухи хулпуҫҫи айнерех куҫрӗ – ман умма ытармалла мар икӗ чӑп-чӑмӑр, шоколад тӗслӗ пӗчӗк шӗвӗркеллӗ хитре кӑкӑр тухса тӑчӗ: ҫутӑ, яка, хып-хытӑ. Манӑн чунра вӗри мунчара ҫемҫе милӗкпе ҫапӑннӑ евӗрлӗ ӑшӑ-ӑшӑ кӑтӑк чупма пуҫларӗ. Эпӗ

чăтаймарăм, кăштах пĕшкĕнтĕм те чăнк! карăннă шĕвĕрkke вĕçĕнчен е пĕрне, е теприне çемçен-çемçен чуптуса илтĕм – вара, ăшă та яка кăкăра пĕчĕк-пĕчĕк хыпкăмсемпе çуршар-çуршар сантиметршарăн чуптăва-чуптăва, тутана янах айнелле куçарса пытăм, кăштах çĕкленсе тăракан вĕри тута хĕрри патне çитрĕм. Çуллă, черчен, сĕтеклĕ тута хĕррисем мана ўсĕртсех ячĕç. Ĕмрĕм-ĕмрĕм эпĕ вĕсене – Оля, çăвара хыпнă услам çу пек, ытамра тытăнса тăрайми пулса, пĕтĕм пĕвĕпе çемĕçсе майĕпен-майĕпен диван çине тĕшĕрĕлчĕ...

Хăш вăхăтра хывăннине пачах астумастăп. Пĕртен-пĕр манăн питех те кăтăклă ўт ăшă, йăпăлкка, çав тери пылак, çурмаран катнă мăйăр хуппи пек пĕчĕк лакăма сĕртĕнсен, Оля, çĕлен пулă евĕрлĕн авăнса, малалла куçса çемçен-çемçен «ааа»... тесе йынăшни çеç асра юлчĕ... Çав самантрах вăл, çўхе çурхах пăт! тесе туртăнса çурăлнă хыççăн, тин кăна çилĕмпе çыпăçтарнă евĕрлĕ çăтă туртăнса тăракан пылак туйăм çулне майĕпен уйăрса-уçса пынă чухне, манăн сиксе тухасла тапакан чĕрене тытса чаракан кăкăрăма çивĕч шăлĕсемпе хыттăн çыртса лартрĕ. Тĕртсен те уйăраймăн... Вăйланса-вăйлансах килекен пылаклăха тўсеймесĕр юн тымарĕсем евĕклĕх шăнăçайманнине пула татăлса каяссăн туйăнатчĕç... Эпĕ нихăçан та кунашкал телейлĕ пулман. Пурнăçăн чăн-чăн тутине тинех пĕтĕм чунран туйса илтĕм. Пуçăмра пĕртен-пĕр ăнлав çеç: камшăн, мĕншĕн çурални, чĕре кама курасшăн мĕн ачаранпа çунни вăл – çакă! Пĕр çакă çеç. Оля, Оленька, Олюся, тин çеçрех кăна пылак сĕтеклĕн чăмăрланса пиçсе çитнĕскер, хăйĕн вĕр-çĕнĕ пыллă карасне никама та тыттарман, никама та тĕкĕнтермен! Вăл та пĕр маншăн кăна, пĕр маншăн кăна çуралнă пулас.

## 7

Эпир килтен тăвата талăк хушши ниçта та тухмарăмăр. Ырлăх çынна нихăçан та йăлăхтармасть. Эпĕ евĕккĕн ĕшенчĕк самантсенче Ольăн кушак çури пек çемçе хура виçкĕтеслĕхне пит çăмартипе лăпчăтса чăп-чăмăр пĕçĕне ыталаса выртма

юрататăп. Кăпăшка витĕм пит çăмартине кăтăклать, çÿçĕме хĕрлĕ чĕрнеллĕ черчен пÿрнесем ачашлаççĕ. Куçа хупатăн та – вĕрсе карăнтарнă резина кимĕпе шăнкăрав куракĕ тĕтри витĕр çÿл тÿпере инçете-инçете ишнĕн туятăн. Мĕнешкел рехет! Нихăçан та, нихăçан та вилме кирлĕ мар.

Самантлăха та сÿрĕлме, лăпланма пĕлмен юрату шал енчен çаклатнă алăка пачах та уçма хушмарĕ пире. Унпах эпир йăпанса, киленсе, тăранса пурăнтăмăр. Çĕр çинче чи пылакки, чи ачашши, чи хакли мĕн иккенне тин-тинех чăннипе ăнкарса илтĕмĕр.

Манăн кĕнеке çÿлĕкĕнче, пурте тенĕ пекех, гинекологи кĕнекисемччĕ. Хĕрсем юратакан врач пуласшăн тăрăшатăпçке-ха.

Эпĕ вырăн çинчен кăштах уйрăлсанах Оля хулăн кĕнекесене уçса хĕрарăмсен арлăх органĕсене тĕрлĕрен майлă ÿкернĕ ÿкерчĕксене пăхатчĕ те: «Эсĕ çак япалана питĕ ытараймастăним?» – тетчĕ.

– Мĕншĕн апла калатăн?

– Кашни кĕнекерех çавă та.

– Хĕрарăмсен пĕтĕм ыратăвне тĕлĕнмелле ачашшăн сиплекен çын пулас килет ман, – хуравлатăп эпĕ.

– Пул ара.

– Оля, атя-ха ÿкерчĕке оригиналпа танлаштарса пăхам, тĕрĕсех ÿкернĕ-и? – тетĕп ун умне чĕркуçленсе.

– Курас килет-и? – йăлл! кулчĕ Оленька.

– Питĕ-питĕ.

– На, ку-ур эппин... – урисене куçарса кĕнекене мана тыттарчĕ вăл.

– Ларса мар, вырт эсĕ.

Мĕн хушнине пурне те итлекенскер, çийĕнчех тăсăлса выртрĕ.

Манăн самантлăха куçа хупса ирĕлсе каясси çеç юлчĕ...

– Ÿкерчĕкри туйăм папки мĕншĕн кăштах урăхларах? – ыйтатăп эпĕ.

– Художник йăнăшнă пуль, – кулса илет Оля.

– Санăн хитререх, – пĕчĕкçĕ йăпăлкка кăчкăна виçĕ пўрне вĕçĕпе çепĕç туртăмсем тăватăп, Оля çĕлен пек йăшăлл! авăнса йăпăш сасă кăларать, эпĕ – тата ачашрах пăчăртатăп: «Ой, Антуан!..» – тарăн сывласа илет вăл...

8

Пиллĕкмĕш кунне хулана тухрăмăр. Ресторана кĕрсе лайăх апатлантăмăр та парка кайрăмăр. Карусельпе ярăнма билет илтĕм. Икĕ вырăнлă хитре ларкăч часах пире сывлăша çĕклерĕ.

Карусель çаврăнать. Эпир хытăрах та хытăрах ярăнма пуçларăмăр. Шухă çил пире хыçалалла тĕртет: мăя, пите, кăкăра кăтăклать. Ольăн çўхе платье арки яриех уçăлса каять. Пĕр кăкран пĕрлешнĕ хитре пĕçĕсем хĕвелпе йăлкăшса илеççĕ, иккĕшне те шăп икĕ пайлă пулнă тĕлтен умлăн-хыçлăн чуптуса илсе çутă кĕрен ўт çине тута йĕрри хăварас килет. Оля çилпе алхасакан платье аркине çинçе пўрнисемпе тытма тăрăшать, эпĕ чаратăп, – мана капла лайăхрах, вăл çынсем курасран именет. Унăн вăтанăçне сирес тесе, ăна хам çумма пăчăртатăп. «Юрататăп эпĕ сана, юрататăп», – çине-çинех пăшăлтататăп хам, никам сисмелле мар вăрттăн çемçе тутинчен чуптуса илетĕп.

Ăна пула эпĕ çак илĕрти пурнăçра пĕтĕм илеме чун-чĕререн юратма хистекен хăватлă телейсĕр пуçне, ăна çĕнекен, ăна пĕтерсе хуракан ырăмарлăх та пурри çинчен тĕппипех манса кайрăм. Тĕнчере пĕр хаярлăх та, пĕр ултав та, нимĕнле кўренӳ те çук пек. Оля мана пурнăç чăн курăннинчен лайăхрах пулнине ĕнентерсе вĕçĕ-хĕррисĕр чи ырă пуласлăхпа çеç пурăнас шанăçа пачĕ.

Киле çитсен, туяннă çимĕçсене майлаштарса хутăмăр та, савăнăçлăскерсем, вĕçме хатĕрскерсем, çăратнă сĕт банкине уçса çиме пуçларăмăр. Ольăн тута хĕррисем юхса анаслах çăра сĕтпе витĕнчĕç, пĕр хĕрринчен йăпăлкка шĕвек янах çинелле йăрр! шуса анчĕ, эпĕ ăна чĕлхе вĕçĕпе тытса чарасшăн пултăм, ĕлкĕреймерĕм – йăпăлкка юхă яка пĕçĕ çине тумларĕ. Çийĕнчех пĕшкĕнтĕм те ĕмсе илтĕм, вара, сĕтек пылакпа артакланнăскер, пуçа çĕклесе, хĕрĕн кăштах уçăлса тăракан çара кăкăрĕ çине

ӳпĕнтĕм, пĕчĕкçĕ мăйăр вĕçне шыраса тупрăм, тĕлĕнмелле пылакскере пĕр сывламасăр нумайччен-нумайччен, çăлкуç таппиллĕ евĕклĕхпе çепĕççĕн-çепĕççĕн туртса, нихăçан уйрăлас çукла хыпса тăтăм. Сывлăш пĕтсе çитсен тин хăмăр мрамор пек йăлкăшакан кăкăр вĕçĕ пăлт вĕçерĕнсе çăвартан тухрĕ. Оля, çакна çеç кĕтнĕн, хур мамăкĕ пек çемçе ытамлă аллипе майĕпен уртăнса-шăвăнса, ман умма чĕркуçленчĕ, çинçе вăрăм пӳрнисемпе тӳмесене вĕçертрĕ, хӳтлĕх чатăрне сирчĕ – вара...

Эпĕ хама асамлăх тĕнчине куçнăн туйрăм. Оленька яланах ытармалла мар йăл кулă парнелетчĕ мана. Çав кулă çиçнĕ тĕлтен пуçласа манăн пуç мими патнелле питĕ-питĕ ачаш кăтăклăх чупса кайрĕ... Кунашкал пĕтĕм чуна пĕр çип юлми ирĕлтерсе яракан çав тери çепĕç туртăм пуррине эпĕ тĕлĕкре те сĕмленме пултарайман, – евĕклĕхĕн тӳпийĕ пулмалла-çке-ха. Пуçра йĕпкĕн пылак сĕрĕм явăнма пуçларĕ, пĕлместĕп, темĕн пулса пырать манăн ăшăмра, темĕн хытах ирĕлет. Çав ачаш туйăм пĕтĕм кĕлеткене шăнăçайми кăтăклăн сарăлса, сирпĕнсе тухма лăнчăрах вырăн шырать. Оля, çакна сиснĕн, тата ытларах вĕриленчĕ... текех тӳсме çук... Евĕклĕх тымарĕ татăлса кайрĕ: йăнк! йăнк! йăнк! тапма тытăнчĕ кăтăк таппи... Çак вăхăтра Ольăн чарăнмаллаччĕ, ăçта унта – пыллăх авăрне путрĕ-ши е мана тата ытларах савтăр терĕ – вакуум пушшех вăйланчĕ... Кăтăк хĕрӳлĕхĕ кĕç-вĕç çурăлса тухас патнех çитрĕ, пĕр чĕптĕм те, пĕр чĕптĕм те чăтăм çук – эпĕ сывлăш пăшăхса пынăран йынăшса ятăм...

Митя, ĕнси хыçне кăвар ӳкнĕн, сасартăках пăлханчăклăн хумханса илчĕ.

– Хăвăрăн юратнă мăшăрăр çинчен çапла калама епле хăятăр эсир? – чĕтренсе тухрĕ унăн сасси.

– Тĕнчере халиччен никамăн та пулма пултарайман юратупа юратнăран калатăп та. Калав вĕçленмен-ха. Ку – пуçламăшĕ кăна. Малашне...

Антуан сăмаха вĕçлеймерĕ – палата алăкĕ уçăлчĕ те пӳлĕме Оля кĕрсе тăчĕ. Куçĕпе кăвак хĕм сапса шак хытрĕ:

– Ах, эсир кунта çитме ĕлкĕрнĕ те! – терĕ вăл, Митя çине ăравасăр тĕлĕннĕн пăхса. Пĕр кĕнĕскер, кĕтменлĕхе пула сасартăках хумханнă кăмăлне пусарма тăрăшрĕ.

– Эпĕ... – Митя калас сăмаха калаймарĕ, Ольăна вăрттăн хыçран йĕрленĕ пек пулса тухнăшăн хытах лайăхмарланчĕ. Кунта хăй ирĕкĕпе килменни çинчен, йывăр суранлă чăлаха хĕрхенни çинчен, ăна алăк умĕнче каяла çаврăнма, палатăна кĕме пулăшни çинчен, Оля коридорта каланă сăмахсене чĕрене илни çинчен, ăна кăшт та пулин кӳрентересрен аçа çапасран хăранă пекех хăрани çинчен – тата нумай-нумай ăшă сăмахсем каласшăнччĕ вăл. Анчах кун пек ытла та кăткăс самантра чуна епле уçса парайăн? Çак кăткăс самантра – сусăр Антуан... татман чечек пек хӯхĕм Оля... тата çав чечекре илĕртекен нектар патне пыма ниепле те хăю çитереймен пыл хурчĕ – Митя... Мĕнешкел хире-хирĕçлĕх!

Ах, Оля... Хура тинĕс хĕррине Митя канма килнĕччĕ. Кунашкал чи ачаш туйăма вăратакан тĕрлĕ-тĕрлĕ чечек шăршиллĕ сенкерлĕхре каккуй канма. Таçтан сиксе тухрĕ куç умне çак ытарайми илемçĕ – пĕтĕм чуна вăйкăнтарса хускатса ячĕ. Халĕ, акă, канăç та, уçăмлăх та çук. Çав канăçа çухаттаракан чеченкке ĕмĕт, ĕнĕçсĕр хытă кĕтсен, тулмалла пек. Анчах та ĕмĕт туласси палли те çук. Ку вăл пĕтĕмпе те пĕртен-пĕр ансат сăлтава пула кăна: чĕрене нимĕнле йывăрлăха пăхмасăр юратмалла тунă. Юрату вăл питĕ çăмăллăн килет, йывăррăн илĕнет, пурнăçпа пĕрле... вĕçленет. Ку вăл – пĕрререн-пĕрре Турă мĕн чи ыррине, чи çепĕççине, чи хаяррине тума пултарни.

Митя хăйĕн ăмсанăвне пытарма тăрăшрĕ. Оля, чăн та, пурнăçа илем кӳме çуралнă тейĕн. Унăн чуна ăшшăн çупăрлакан сăнĕ-пĕвĕ çинчен куçа пĕр самантлăха та вĕçертес килмест. Çĕпĕр йĕкĕтне ытларах çак тин çеç пиçсе çитнĕ хĕрлĕхлĕ хĕртен уйрăлсах çитеймен çамрăк хĕрарăмăн ăшри вăйсăр кăвайта пĕрре пăхнипех ялкăштарса яракан кăн-кăвак куçĕ тата пилĕкрен аяларах икĕ еннелле тулса çитнĕ груша евĕрлĕ сĕвеккĕн сарăлса

çавраланнă тĕлтен ансăр аркă хĕррине карăнтарса тăракан хитре пĕçĕсем ăсран кăлараççĕ. Шăп çав пĕçĕсем «грушăпа» пĕрлешнĕ тĕлте курнăччĕ-çке-ха вăл чĕрене пĕçертсе илекен хĕлхеме.

Каччă тӳсеймесĕр Оля урайĕнчен мĕн те пулин илесшĕн е туфлине хывасшăн пулса пĕшкĕнессе кĕтрĕ: «Куçа витĕр курăнман икĕ енлĕ сĕвеклĕх, тен, халĕ те нимĕнле хуплавсăрах пулĕ. Ах, тепре курасчĕ! Куç хӳрипе те пулин йăпăрт çех пăхса илесчĕ». Çук, Оля пĕшкĕнмерĕ; каччă хăйне курсан пахчана çырла вăрлама кĕнĕ ача пек çухалса кайнине аванах туйрĕ вăл: «Куратăп: ку – эсир», – терĕ те, чăп-чăмăр урисене вырăнтан хускатса малалла иртрĕ. Паха кавир çинче шĕвĕр кĕле чăклатни илтĕнмерĕ.

Тӳлек. Пĕр шăна çеç чӳречене ярмех уçасшăн сĕрлерĕ, пĕчĕк çунаттисемпе вĕлтĕртетсе кантăка чăрмаларĕ. Кĕçех вăл та таçта кĕрсе çухалчĕ.

– Паллаш, Оленька. Ку – манăн тунсăха тĕпсĕр шăтăка хăвалакан çĕнĕ тусăм Дмитрий. Мана никамран та лайăх ăнланать вăл. Унпа пĕрле эпĕ хамăн чечеклĕ çамрăклăха тепĕр хут куратăп, – самантлăха уçăмсăр шăплăх хуплас лару-тăрăва çемçетме тăрăшрĕ Антуан.

– Нумай палкама ĕлкĕртĕр-и? – калаçу мĕн çинчен пынине сиснĕн кăштах тăкăшланса ыйтрĕ Оля.

– Мĕн нумайĕ... Манăн романăн умсăмахне çех пуçларăмăр. Ку та çитет. Эпир ĕмĕтсĕрсем мар. Оленька, чунăмçăм, çавăнта «Столичная» пурччĕ, çавна ил те, кăмăл ту тархасшăн, килсе лар пирĕнпе пĕрле: паллашнă ятпа телейлĕ пуласлăхшăн пĕрер черкке ĕçер – çак çĕр çинче пĕрре çеç пурăнатпăр, – тĕлĕнмелле, нихăçан-нихăçан хур пулманла ăшшăн та самаях тарăн шухăшлăн илтĕнчĕ лăпкă хурав.

Оля лакпа витнĕ тумбочкăран çутă кĕленче кăларчĕ.

Стена çумĕнчи пĕчĕкçĕ сĕтел тавра виçĕ енчен виççĕн ларчĕç: Антуанпа Митя хире-хирĕç, нейтраллă енче – Оля.

Кил хуçи кĕленче пробкине уçса тамада ĕçне тытăннăччĕ кăна – сĕтел айĕнче, капăр ейме хӳттинче пĕр никам та курман

çĕрте, Митьăн чĕркуççине лă-ăп пырса перĕнчĕ ă-ăшă, çемçе, чăмăр чĕркуççи. Пырса перĕнчĕ те сар ачан ют çĕрте хыттăн тапма хăракан чĕрине ăшăтса ячĕ. «Ăнсăртран пулчĕ ку, астумасăр сулăннăран», – шухăшларĕ Ольăн куçа илĕртсе ĕмекен хитре урисене нихăçан та сĕртĕнсе курас çуккăн туякан каччă. Хăй мĕн туйнине ĕненме хăрарĕ. Çук, сĕртĕнни пачах ăнсăртран пулман-тĕр: тулли черккесене çĕклесе пурте пĕр харăс пушатнă чух çав çемçешке чĕркуççи çав тĕлтенех тата тепĕр икĕ хутчен питех те ачашшăн лăп-лăп перĕнсе тĕршĕнсе илчĕ. «Мĕне пĕлтерет ку? Мĕн палли? Мĕн тени?..» Çакна Митя ниепле те чухлаймарĕ. Ă-ă-ăшă пулса кайрĕ ăна.

9

Митя час çывăрса каяймарĕ. Поролон тӳшек те ытлашши çемçе пек туйăнчĕ ăна. Минтер те Оля кăкрийĕ тейĕн. Çапла-çке: чĕрене кĕтмен çĕртен ăшă туйăм вăркăшĕ вĕрсен çын хăйĕн йывăрăшне çухатать. Каять вара вĕçсе пылак ĕмĕт хыççăн, ăçта çитсен ӳкессе те пĕлмест.

Антуан калавĕ шухă каччăн чун тымарне тĕпрен хускатса ячĕ, вăйлă кăвайт чĕртрĕ тейĕн. Тин çеç чĕртнĕ кăвайтăн тĕтĕмĕ çулăмран вăйлăрах, кĕлĕ пачах çук. Япала çунсан, кăварĕ шăранса пĕтсен, кĕл пулатех.

Митя хăйĕн ку таранччен пурăннă пурнăçĕн кашни ырă самантне, кашни питех те йӳçек, хурлă саманчĕсене аса илчĕ. Хуйхă-суйхăсăр хитре ачалăх.. шкул çулĕнчи вăхăтсем... хĕрӳ туйăмлă çамрăклăх... Çук, вăл, Антуан пек, «кĕпепе» çуралман: хавха тӳпине кăмăл ыйтнă таран улăхса курман. Ырлăха Митя пурнăçра нумай çухатнă. Тĕрĕссипе, çухатнă мар, çухатмалли пулман та унăн. Телейпе, шухăш-кăмăл çĕкленĕвĕпе юнашарах çӳренĕ вăл, анчах вĕсен тилхепине ниепле те алла илеймен.

Юрату вăййи Митьăн темшĕн-çке питех ăнăçсах пымасть, çу сĕрмен урапа пек нăйкăшса, кăтăрăнса кусать.

Юрату ăна шкулта вĕрнĕ чухнех канăç паман: хитре храчасене вăрттăн юратнă, вĕсем пек чипер пулма тăрăшнă. Ӳсерехпе

вĕсемпе айкашса та курнă... анчах – тĕлĕкре. Чăн пурнăçра вара юбка арки çывăхне куç хўрипе те вĕлтсе илме хăяйман.

Ашшĕ-амăшĕ питĕ лайăх пăхса ўстернĕ ăна. Ăслă, сăпайлă пулма вĕрентнĕ, хăйсем çиес çăкăрне çитернĕ.

Ах, çав сăпайлăха!.. Ăна пула Митя çамрăклăхĕ ачалăхран ниепле те уйрăлайман. Тĕлĕнмелле меллĕ самантсем пулнă, анчах вĕсем, улăхри тĕтре пек, ăна сĕртĕнмесĕрех лăпкăн-лăпкăн сирĕлнĕ, йăваш çамрăка «икĕ çăлтăр вăййине» никам та сĕнмен, унăн тĕшши техĕмне астивме тивмен. Ачашлăх ача патне пымасан, ачашлăх патне ачан хăйĕн пымалла.

Асрах: ăна çара кайма повестка пачĕç. Вăл пĕр хĕрпе те çўресе курман-ха. «Чуптусăр» теççĕ ун пек яшсене.

Ыран призыв пунктне каймалла тенĕ каçа Митя чăлăм куç хупмасăр ирттерчĕ. Çĕнĕ куна шкулта пĕрле вĕреннĕ, халĕ чух чăмăрланса, сĕтекленсе çитнĕ Алинăпа çўллĕ çуртсенчен вашăкрах вара пытаннă пĕчĕкçĕ юхан шыв хĕрринчи икĕ патвар вулăллă вată вĕрене айĕнче кĕтсе илчĕ. Шкул пĕтернĕ хыççăн Алина кулинари училищинчен  вĕренсе тухса столовăйне ĕçе кĕнĕ. Тĕрлĕрен тутлă апат-çимĕç самаях хитрен хĕретсе çавралатнă унăн питне. Митьăпа пĕрле класран класа куçса пынă чухне вăл кăштах шуранкарахчĕ, хăйпашкарахчĕ, кăткăсем пек хĕвĕшекен ача-пăча хушшинче ытлашши палăрсах каймастчĕ. Шăп çак хĕрпе ирччен сĕвенсе тăчĕ Митя катрашка хупăллă йывăç вулли çумĕнче. Юрату-мĕнĕ пекки чун-чĕрене ăшă тĕтре карни пулман-ха вĕсен. Алла пăшал тытиччен чăн-чăн каччă шутне кĕрес тенĕрен çеç. Анчах... вăйă йĕркин «рецептне» пĕлмен вăл, хăюсăр пулнă, вăтаннă, çак тарана çитсе те ют çын сунчăкне уçса курман. Çавăнпа та ачаш ытамри Алина хăех «ме» тесе каласса кĕтрĕ. Арттăнтан! Кĕт, ылтăн пулă кĕмĕл нухрат ту çине улăхса сана пехет парасса. Мĕнле хĕрĕн хăй çинчен начар сăмах илтес килтĕр? Хĕрсем кăна-и, чăх та пулин автанран тарам пекки тăвать. Çутçанталăк çавăн пек тунă.

... Темĕнле тилмĕрсен те, пилĕкне кĕвенте пек авса ўкесле ыталасан та – Алина ансăр юбка аркине хăйĕн аллипе уçасшăн

пулмарĕ... Шурăмпуç килчĕ. Тул çутăлса çитрĕ. Çак евĕк тертлĕ каçа ялан-ялан асра тыттăр тесе-ши – Алина Митьăна пĕчĕкçĕ хитре сăмса тутри парнелерĕ. «Упра», – терĕ.

Тĕрлĕрен пылак пур çĕр çинче: пыл пур, канфет пур, ананас пур... Мĕн япала вăл «ананас»? Çакна тутанса пăхмасăрах Митя, кутамкка çакрĕ те, тăван-хурăнташсемпе сывпуллашрĕ. Илсе кайрĕç вара йывăр вакун кустăрмисем пĕр шăнана та, пĕр хĕре те кӳрентерме хăяйман Митьăна карабинран, тупăран пеме, хирĕç тăракан тăшмана çапса аркатма вĕренмешкĕн Корсаков хулине.

## 10

Тинĕс-çар флочĕн службинче тăнă чухне те çамрăксен телейĕ тени Митьăн хĕвре пекехчĕ, алпа ярса тытас пекехчĕ. Анчах...

Çав каçхине штаб дежурнăйĕччĕ вăл.

Чӳречене çăра сулхăн тĕппипех хупăрласа илсен сĕтел çинчи телефон васкавлăн шăнкăртатрĕ.

– Штаб дежурнăйĕ Малинин аслă матрос итлет, – терĕ Митя, трубкăна çăмăллăн тытса. Штаб начальникĕн çумĕ ăна старшинана телефон патне чĕнсе килме хушрĕ.

– Халех, – Малинин трубкăна сĕтел çине хучĕ те кубрика чупрĕ.

Çарта хушнă ĕçе питĕ хăвăрт пурнăçлаççĕ. Çапла тума çар уставĕ хистет.

Приказа Митя туххăмрах пурнăçларĕ. Халĕ унăн кăштах пушă вăхăт та пур. Ленин пӳлĕмĕ умĕнчи уçă вырăнта матроссем бильярдла выляççĕ. Тусĕсем кĕпĕрленнĕ тĕлте Митя чарăнса тăчĕ.

– Юлташсем, камăн киленес килет – гаража пырăр, – терĕ тин кăна алăкран кĕнĕ Дениска кочегар. Сăмаха вăл ытлашши суйласа-çавралатса тăмасть, чĕлхе вĕçне мĕнле майлă килет çавăн пек тӳррĕн лаплаттарса хурать. Хутла нумаях вĕренмен, çавăнпа та çар çыннин чи ансат ĕçĕсене тума ăна хушаççĕ:

кочегар. Пěвě те пысăк мар – хуçине кура пурттийě – ачашласа чěнеççě: Дениска.

– Мěн унта? –хыпăнса ӳкрěç вăйă сěтелě тавралла пухăнса тăнисем.

– Часть командирне килне леçме кайсан, Диденко пěр «каçхи лěпěше» лартса килнě. Сăнě хитре теме çук та - пырать: хуп хушăкě мар, пылакě-сěтекě пурне валли те çитет... – шăшинни пек чěрě куçне вылятса ěнсине шăлса илчě Дениска.

Матроссем кийисене сěтел çине ывăтса тем хушăра алăк умне кěпěрленчěç.

Часть командирне турттаракан «Волга» пěчěкçě хăтлă гаражра çěр каçать. Гаражě штаб çурчě хыçěнчех, çăра йывăççемпе хупланнă кěтесре. Кăнтăрла та, каçхине те унта, Денискăпа Диденкăсăр пуçне, никам та кěреймест – пăру çӳллěш çăмламас хура йытă пěр чуна та кěртмест. Митя çав йытăран вутран хăранă пекех хăрать: унăн хупăнма пěлмен хěп-хěрлě çăварне кур çех – сехре самантрах чěрне вěçне çитет. Халě Денискăпа пěрле гража васкакан юлташěсене çав тери ăмсанчě вăл.

Çамрăк каччă ниçта кайса кěрейми вěткеленчě. Пӳлěмре пěчченех вăл. Ăна телефон аппарачě çумне кăкарнă тейěн: уйрăлма юрамасть.

Митя, телефон шăнкăравě илтěнтěр тесе, алăка уçă хăварса крыльцана тухрě. Каç сулхăнěнче пěр матрос гаражран кубрик еннелле утать: тăраниччен хăйма çинě кушак евěрлех кăмăллă, пěтěм тавралăха маннă, хăйěн чун-чěри пылаклăхěсěр пуçне урăх нимěн те курмасть.

– Ну, мěнле унта? – чěнмесěр чăтаймарě Митя.

– Ух, эсě мěн туса тăратăн?! Вěçтер часрах! Ой, мăй таран пехет! – сасартăках чарăнса, хăрах пушмак кěлли çинче вăр-р! çаврăнса илчě вěçеслех хавхаланнă каччă.

– Дежурство-çке... – вěчěрхенсе илчě Малинин.

– Э, вунă минут хушшинче тěнче йăтăнса анмасть. Ммм... Мěнешкел чеченлěх!

– Çапах – юрамасть.

– Эккей! Юрамасть тесе тӑрать тата... Шухӑшра куҫ умне ӳкерсе пӑх-ха: сан умӑнта ҫурма ҫарамас вут кайӑк евӗрлӗ хӗр выртать – икӗ пӗчӗк ҫарӑк пек чӑмӑркка кӑкӑр, икӗ яп-яка... Ай, мӗн каласа тӑратӑп! Вӗҫтер тетӗп!

Митьӑн крыльца вӗҫне тухни хӑйне пушшех пӑлхатса яни ҫеҫ пулчӗ: «Ах, ку ӑнӑҫсӑр каҫа!..»

Сӗтел ҫине чавсаланнӑ ал ҫине шухӑшлӑн пуҫа усса ларсан-ларсан аслӑ матрос сасартӑках пуҫне вӑшт! ҫӗклерӗ, сехете пӑхрӗ: отбой пулнӑ. Отбой хыҫҫӑн телефон шӑнкӑравласси питех пулакан марччӗ. «Тен, йӑпӑртлӑха кайсан... мӗнле-ши? – ҫинҫе хӗлхем ӗмӗт ҫиҫсе илчӗ каччӑ пуҫӗнче. – Темиҫе минутра, чӑн та, тӗнче йӑтӑнса анмӗ...»

Алӑкран тухрӗ кӑна – тӑп чарӑнчӗ: «Ҫук, ӑнсӑртран тем сиксе тухсан – тӳрех ҫар трибуналӗ. Пӗтрӗн вара», – ӳкӗнсе пуҫне ватрӗ вӑл. Каялла кӗчӗ.

Кӗме кӗчӗ-ха, анчах сӗтел хушшине кӗрсе лармарӗ, чунӗ вӗткеленни тытса чарчӗ ӑна. Икӗ вӑй хӗвӗшет унӑн чӗринче: пӗри каясшӑн, тепри – хирӗҫ. Тем тумалла?

Митя йывӑр самантсенче пулакан лайӑхрах тӗслӗхсене аса илме тӑрӑшрӗ. Хаяр вӑрҫӑ пынӑ ҫӗр ҫинче. Хӑрушлӑх... Атакӑра ҫынсем хӑрушлӑха пӑхмасӑр ҫулӑм вучахне кӗнӗ... Ҫӗнтернӗ... Теветкеллӗх – пархатарлӑ ӗҫ. Пурнӑҫ аталанӑвӗ унсӑр пулмасть. Вӑл хӑрушлӑхран вӑйлӑрах.

«Эх, мӗн пулать те мӗн килет!» – вӑрт! ҫаврӑнчӗ каччӑ, пӳлӗмрен тухрӗ – алӑка тул енчен ҫӑрапа питӗрчӗ те крыльца картлашки еннелле утрӗ. Утнӑ хушӑрах пиҫиххи ҫумӗнчи кортика йӗнӗрен кӑларчӗ. Аврине ҫирӗппӗн ҫатӑрласа тытрӗ те унӑн шӗп-шӗвӗр сӑннине малалла тӗллентерсе каҫхи хуп-хура янкарлӑ тӗттӗмлӗхе чӑмрӗ. Ҫивӗч кӑраллӑ ҫынна нимӗнле хаяр йытӑ та тытса чараймӗ.

Гараж патнерех ҫитсен уттине кӗскетрӗ вӑл, аллинчи кортика тата хытӑрах чӑмӑртарӗ. Кӑкӑр умнерех тытнӑ кортикӑн вӗҫӗ вӑрӑмтуна сӑнни пек: умра мӗн те пулин палӑрсанах – ҫав

самантрах ухӑ йӗппи евӗрлӗ ун ҫине тӑрӑнма хатӗр, анчах тавралӑх талккӑшӗпех пӑч тӗттӗм, йӗп чиксен те куҫ курмасть.

Ҫуршар-ҫуршар утӑм турӗ Митя, асӑрханса пусрӗ: тӗттӗмре тем те пулӗ – лакӑмӗ те, тылла пуҫҫи те, шуйттан мӑйраки те. Ӑна халь сӗмлӗх те мар, шуйттан мӑйраки те мар, кӗҫ-вӗҫ, кӗҫ-вӗҫ хӑрушшӑн вӗрекен йытӑ сиксе тухассӑн туйӑнни кӑкӑр туллин сывлама памарӗ. Чӑмӑркка пичӗ унӑн йӗп-йӗпе, чӗри – дизель двигателӗн поршенӗ пек хӑвӑрт-хӑвӑрт тапать. Хӑй сывламасть те тейӗн: ҫур утӑм, тата тепӗр ҫур утӑм малалла куҫать... Нимӗнле сас та ҫук-ха. Нивушлӗ йытӑ вӑл татах ҫывӑхарах пырасса кӗтет? Йӑр-р! юхса анчӗ каччӑ ҫурӑмӗ тӑрӑх вӗри тар. Тата темиҫе ҫур утӑм турӗ Митя – акӑ картлашка вӗҫӗ, унтах – ҫенӗк. Телее, халь-халь леопард пек сиксе ларас хӑрушла сехмет пулмарӗ. «Ох!..» – тинех ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ ҫамрӑк матрос ҫенӗк алӑкне шал енчен хупсан. Хӑйне вӑл кокос пальми тӑррине улӑхнӑн ҫӗкленӳллӗн туйрӗ. Пӳлӗм алӑкне уҫрӗ те – ак япала! – дерматинлӑ йывӑҫ кравать... пуш-пушах, вут кайӑкӑн тӗсӗ те, йӗрӗ те ҫук, кӗтесри лутра сӗтел хушшинче – пӗртен-пӗр Дениска ҫеҫ ларать.

Митя шак хытса тӑчӗ: «Хӗр ӑҫта?» – кӑштах чӗтренерех тухрӗ унӑн сасси.

– Ӑна Диденко леҫме кайрӗ, – терӗ Дениска.

– Мӗнле – леҫме кайрӗ?

– Ҫапла, чиперех. Машина ҫине лартрӗ те, килнелле тӳ-тӳ...

– Ӑм-м... – ӗнсине ярса тытрӗ Митя, хӑй каярах юлнине тинех уҫӑмлӑн тавҫӑрса илчӗ, ҫав тери ӳкӗчӗ: поезд кайнӑ...

– Йытӑ мӗншӗн сас памарӗ? – ыйтрӗ вӑл аптранӑ енне вӑрахран.

– Эпӗ ӑна хупнӑччӗ, – илтӗнчӗ лӑпкӑ хурав.

Ирхине ирех вӗр-ҫӗнӗ «Волга» штаб умне ҫитсе чарӑнсан, кабинӑран часть командирӗ пӗрремӗш рангри капитан тухрӗ.

– Смирно!– уҫҫӑн янӑраса кайрӗ сулахай хулне хӗрлӗ ҫыхӑ ҫыхнӑ дежурнӑй сасси. Шарт! шарт! шарт! ҫирӗппӗн шартлаттарса утса пычӗ Малинин часть командирӗ патне, виҫӗ утӑм пек юлсан, тӑп чарӑнса тӑчӗ, аллине куҫ харши тӗлне тытрӗ:

«Пӗрремӗш рангри капитан юлташ, эсир ҫук чухне чаҫра нимӗнле кӗтмен ӗҫ те пулса тухмарӗ!» – кӗскен те ҫивӗччӗн рапортларӗ вӑл.

– Вольно! – аллине тӑнлав ҫумӗнчен илчӗ часть командирӗ.

– Вольно! – уҫҫӑн командӑларӗ штаб дежурнӑйӗ.

Ҫав каҫхине Митьӑн ырӑ-ырӑ ӗмӗчӗ мӗншӗн ҫунса мӗншӗн таллӑннипе, чӑн та, нимӗн те пулса тухмарӗ.

## 11

Унтанпа чылай вӑхӑт иртрӗ – нумай шыв юхрӗ, ҫумӑр ҫурӗ, юр ҫурӗ, хӗвел пӑхрӗ... Ҫав нихӑҫан та каялла таврӑнми тӑтӑрха хум юхӑмӗллӗ самаях вӑрах хушӑра кун-ҫул екки-йӗркийӗ Митьӑн пурнӑҫне темиҫе хутчен те тӗплӗн ревизи турӗ: мӗн пулайманнисене, мӗн ҫухатса хӑварнисене шута илсе хӑшне-пӗрне пӑрахӑҫласа списать турӗ, хӑшӗ-пӗрисене шыраса тупса вырӑна лартрӗ, теприсене тӳрлетрӗ, малашне ҫӗнӗрен ӑнӑҫма е йӑнӑшма пӳрнисене тата ытларах хушса пачӗ.

Хӑйӗн тахҫанах ӑнӑҫлӑ юрату сунарӗнче пулнӑ тантӑшӗсемпе Митя пур пӗрех танлашрӗ танлашрех. Лӑпкӑ океан флочӗнчен таврӑнсан вӑл металлурги заводне малтанхи вырӑнах ӗҫе вырнаҫрӗ, унтан технологи институтне заочно вӗренме кӗчӗ. Пуҫланчӗ вара яланхи пӗр канӑҫсӑр хӗвӗш пурнӑҫ, кун хыҫҫӑн кун иртни те сисӗнмерӗ. Токарь ӗҫӗ ответлӑ, питӗ пӗчӗк япаласен тӑршшӗне те, хулӑнӑшне те микрометрпа тӗп-тӗрӗс виҫмелле, пӗр брак тумасӑр.

Ҫӗпӗрте тӗлӗнмелле илемлӗ вырӑн нумай. Вӑрмансем, кӑтра симӗс тумлӑ сӑртсем, ҫутӑ кӳлӗсем...

Пӗррехинче Митьӑна ҫывӑхри Кану ҫуртне кайма путевка пачӗҫ – путевки «ҫунса» кайма пуҫланӑ та - вӑйпах сӗнчӗҫ. Унта вӗсене, кӑштах каннӑ хыҫҫӑн, ултӑ ҫухрӑмри кӳршӗ Кану ҫуртне «туслӑ визитпа» хӑнана илсе кайрӗҫ. Пӗчӗкҫӗ шурӑ катер хаваслӑ ҫынсене часах ем-ешӗл ҫыран хӗррине илсе ҫитерчӗ. Ҫӑкӑр-тӑварпа кӗтсе илчӗҫ вӗсене: мӗн чухлӗ савӑнӑҫ, мӗн тери

хаваслă шăв-шав тĕрлĕ-тĕрлĕ чечеклĕ улăхра! Баян вальс шăрантарать: чипер хĕрсен илемлĕ урисем вĕлтлетеççĕ... вĕлтĕртетеççĕ çӳхе аркăсем... чечексем вĕçеççĕ... Çăра йывăççен хушшинчи янкăс клубра янăрать джаз музыки...

Пысăк зала кĕрсен телейлĕн хĕвĕшекен яш-кĕрĕм хушшинче Митя сасартăк уйрăмах капăр тумлă хĕре асăрхарĕ – палланă куççем: Алина! Мĕнле лекнĕ кунта вăл?

Алина та тăп! чарăнса тăчĕ. Тĕлĕннĕ куççем самантрах пĕр-пĕрне хаваслăн хĕм сапса илчĕç.

Юлашки курнăçăва хăйĕнпе пĕрле инçете илсе кайнă пăшăхлă каçран вара вăхăт нумай иртнĕ, калаçмалли, ыйтса пĕлмелли темĕн чухлех. Шавлă, ытлашшипех хаваслă яш-кĕрĕмлĕ хĕвĕшӳ хушшинче нимĕн те ыйтса пĕлеймĕн, никам куçĕ сăнаман улах кĕтес кирлĕ.

Вĕсем палисадник умне уçăрах вырăна тухрĕç.

Пĕр-пĕрин çинчен чи кăсăклăраххине пĕлме вăхăт нумай кирлĕ пулмарĕ. Алина кунта столовăйĕнче ĕçлет иккен. Митьăна вăл хăй пурăнакан общежити пӳлĕмне чĕнчĕ. Пӳлĕмĕ пысăк, çапах та тăвăр: паркет сарнă урайне çăтă-çăтă майлах йĕркипе пилĕк-улт кравать лартса тухнă, таса тӳшек-çытара хитрен кăпăшкалатса тирпейленĕрен пурте пĕр пек ним хускалмасăр тутлăн тĕлĕреççĕ. Пӳлĕмре никам та çук. Тĕлĕнмелле тӳлек.

Алина альбом кăларчĕ. Вĕсем тĕрлĕ вăхăтра ӳкернĕ сăнӳкерчĕксене пăхса ачалăхри пĕр класра выляса ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ тусĕсене аса илчĕç. Çыран хĕрринчи пĕччен йывăçăн кĕрхи çулçисем пекех кашни тĕрлĕ еннелле саланса пĕтнĕ вĕсем, кашнин – хăйĕн шăпи: хăшĕ телейлĕ, тепри... кам пĕлет? Пурнăçран уйрăлса кайни те пур. Хитре чăп-чăмăр питлĕскерсем, «ку пурнăç мĕн япала-ха» тесе çутă тавралăха килсе курнă та, яланлăхах Адампа Ева тĕнчине кайнă. Шел, этеме темшĕн çут тĕнчерен уйрăлмалла тунă, тем пек пурăнас килсен те...

Алинăн та пурнăç урапийĕ тикĕс кусман. Вăл Митя çара кайсанах качча тухнă, анчах вĕсене нумай çул пĕрле пурăнма

пўрмен – пĕр-пĕрин ачалăх илемне тĕпрен ватса лутăркаласа пĕтернĕ те часах уйрăлнă. Вара хĕртен уйрăлсах çитеймен çамрăк арăм пĕтĕм ырлăх-хурлăх кутамккине шавлă, тĕтĕмлĕ-тусанлă хулана пăрахса хăварса кунта ĕçлеме килнĕ.

Кравать çине сĕвĕнсен Митя аллине Алина хулпуççийĕ урлă усăнтарчĕ. Куçĕсем тĕлме-тĕл пулчĕç: каччăн çутă, ăшшăн-ăшшăн куç пăвакан çепĕç хĕлхемлĕ импульсĕнче вăл мĕн ыйтни, мĕн йăлăнни сăмахсăрах паллă.

Алина куçне тартрĕ. Митя ăна витĕртерех пăхасшăн пулчĕ, хĕре икĕ хулпуççинчен тытса хăй еннелле çавăрчĕ. Хĕрелчĕç çырла пек çаврака питсем.

– Мĕн?.. – вăтанăçлăн ынатланса ыйтрĕ çап-çамрăк арăмран тепĕр хут хĕр пулнă чиперкке.

– Эсĕ татах хитреленнĕ.

– Нумай вăхăт хушши курманран çапла туйăнать вăл.

– Çук, чăннипе.

– Эсĕ те сапăрланнă.

– Эпĕ нимĕн чухлĕ те улшăнман. Куратăн... хăяймастăп.

– Хăюсăрсем вăрттăн хĕрўллĕ.

– Ман санран нимĕн пытармалли те çук. Телей парнеле мана.

– Тем... Телейсĕр çын епле парнелейĕ ăна хăйĕн çук пулсан?

– Тен, эпĕ...

Митя калас сăмахне калаймарĕ – хĕре хăйĕн кăкăрĕ çумне пăчăртаса çўхе тутипе ăшă, çемçе тута хĕррисене сĕртĕнчĕ. Ўкесрен сĕвĕнме кравать хыçĕ çукран вĕсем кăпăшка минтер еннелле сулăнса кайрĕç.

Вĕри тутасем пĕр-пĕринчен уйрăлмарĕç-ха. Сывлăш хĕрсе пырать, евĕклĕ-евĕклĕ çулăм хыпса илнĕ икĕ çамрăк чĕрене...

Каччă сывлăша çавăрса илес тесе çемçе магнитлă тутине кăшт вĕçертрĕ çеç – питех те ачаш хум кăтăкларĕ унăн питне... Хĕр кăкăрĕнчен тухнă ăшă-ăшă сывлăш пулчĕ ку.

Алина пăшăхлăх сўрĕлессе кĕтмерĕ: «Ытлашши ан астар, – терĕ вăл, – манăн та туйăм пур... анчах чунăм паян сана курасса пачах пĕлмен...»

– Вара?.. Ку чăрмав-им? Туятăн пуль... çунатăп.

– Паян мар... Çук, паян мар... Чăт ыранччен.

– Чуста хăпарса çитнĕ... Мĕншĕн - ыран?

– Эпĕ... хатĕр мар. Ăнлан...

– Мĕн хатĕрленмелли пур унта, куратăн вĕт... кĕçех ирĕлсе каятăп.

– Ыран... Пĕлетĕн-çке: ыран эпир сирĕн пата хирĕçле «туслă визитпа» пыратпăр. Тăнла мана: ун чух... халĕ мар... Чăтатăн... – йă-ăлл! кулчĕ Алина.

12

Тепĕр кунне чăтăмсăррăн кĕтнĕ катер килсе çитсенех карлăкри ансăр хушăран кĕпĕрленсе тухакан çынсен хушинчи Алинăна Митя карлăк урлă çĕклесе илчĕ.

Вĕсем шавлă йышран уйрăлса ем-ешĕл хурăнлăх витĕр кӳлĕ еннелле утрĕç.

Çамрăк мăшăр çыран хĕрринчи аттракцион патне çитнĕ тĕле канакансене ярăнмалли кимĕсем пĕрре те юлман – кĕтме тивет. Çанталăк хитре. Çăмăл кĕсменлĕ йăрă кимĕпе çутă кӳлĕ тĕкĕрне чĕрсе ярăнса киленесшĕнсем килсех тăраççĕ.

Митя билет кайса илчĕ. Вăл каялла пынă çĕре кимĕ кĕтме тепĕр мăшăр çитсе тăнă, кусем те васкаççĕ имĕш.

Часах чăнкă çыран хыçĕнчи кукăртан пĕр кимĕ кĕсменсене вылянтарса килни курăнчĕ. Вăл чарăнмалли вырăна çитсе сĕртĕнеспе ăна тин кăна пырса тăнă çамрăках мар арçынпа тӳсейми вĕткеленчĕк майра йышăнасшăн пулчĕ. Тулли хырăмлă самăртарах арçын вырăнтан хускалса хăйĕн чăрсăр ĕмĕтне пурнăçлама хатĕрленчĕ.

Кунашкал чипер çынсемех чи ансат йĕркене - черет кĕтессине – пăхăнманни Митьăна килĕшмерĕ, – унăн Алинăпа пĕр тăхтамасăр хăвăртрах янкăр çутă кӳлĕ тăрăх çăра йывăçлă сăмсахсен хӳттине каяс килет. Пуçланчĕ тавлашу.

– Ку кимĕпе эпир каятпăр, – терĕ кӳпчемкке арçын тарлă питне çемçе тутăрпа шăлса илсе.

– Çук, эпир, – йĕркене пăсма юраманнине палăртасшăн пулчĕ Митя.

– Мĕнле – «эпир»?

– Мĕншĕн тесен эпир сирĕнтен маларах килтĕмĕр. Манăн алра билет пур. Эсир билет та илмен-ха.

– Курăпăр... – арçын сĕмсĕррĕн шыв хĕрринелле утрĕ, кимĕ сăмси çырана пырса сĕртĕнессе кĕтрĕ.

Çак пуççăрлăха кура хивреленнĕ Митя канса килекенсем çыран хĕррине çывхаричченех кимĕ çине сикрĕ.

Кимĕ вăйлăн чĕтренсе илчĕ, каччă ларкăчра ларакан мăшăрсем çуммипе хыпăнса хыçалалла иртнĕ чухне вăл пĕр еннелле хăрушла тайăлса кайрĕ, кĕç-вĕç çаврăнса ӳкме пултарать. Шыв еннелле сулăннисем хăранипе кăшкăрса ячĕç.

Митьăн ним тума та çук: вăл çак самантра шыва сикмесен – пурте пуçхĕрлĕ ӳпĕнеççĕ. Пĕтрĕ вара!

Митя шыва сикрĕ. Сехри хăпнă кимĕçсем пĕр енчен тепĕр еннелле силленекен бортран çирĕппĕн ярса тытса хыпалансах çыран патнелле туртăнчĕç.

Кăкăрĕ таран шыври каччă кимме алран вĕçертмерĕ, вăйлăн карт туртăнса ун çине йĕпеннĕ шăши пек çăмăллăн сиксе улăхрĕ. Шыв хĕрне пырса тăнă вĕткеленчĕк майрапа куç айĕн çиллессĕн шăмарса пăхакан арçынăн ирĕксĕрех парăнмалла пулчĕ.

Кимĕ çине меллĕн майлашса выранçса ларсан та Алина хăйĕн çепĕç куллине ниепле те тытса чараймарĕ: «Ах, ку арçынсе-ем! Чисти çура автансем пек. Ытла та кулăшла: хĕрарăм вута сик тесен – вута та сикеççĕ пуль».

## 13

Кимĕ шав малалла ишет, шывпа пĕлĕт хушшинче чăрсăр хăлат вĕçет тейĕн. Ăçта васкать вăл, мĕн çухатнă, мĕн шырать çутă тĕкĕр çийĕнче?

Хĕвел савса хĕртет. Ăшă. Митя плавки вĕççĕн кăна. Хывнă лачкам йĕпе çи-пуçне Алина кимĕ хĕрри урлă кармашса таса шывпа

чӳхесе тасатнӑ май каччӑ кӗсменсене ҫӑмӑллӑн вылянтарса пырать, йӑлтӑркка авкаланчӑк ҫемҫе хум юлать хыҫа явӑнса...

Кӑнтӑр апачӗ ҫывхарать. Кимӗпе ярӑнакансем пурте кайса пӗтнӗ. Ҫутӑ кӳлӗре, тӳпери таса сывлӑша каллӗ-маллӗ ҫивӗччӗн касса вӗҫекен чаралнсемсӗр пуҫне, ҫывӑхра никам та ҫук.

Митя кимме шыв ҫине усӑнса аннӑ ҫӑра йывӑҫ тураттисен хӳттине илсе пычӗ. Ҫӑмӑллӑн сиксе анса швартовсӑрскере ҫурӑран ытларах ҫыран ҫине туртса хӑпартрӗ. Хӑйсем шӑлан тӗми ҫывӑхне, ҫӑра курӑк ҫине лӑпкӑн майланса ларчӗҫ.

Митьӑн ӗнер палӑри-палӑрми тӗтре евӗрлӗ карса илнӗ пылак ӗмӗт ниепле те сӗвӗрӗлме пӗлмест-ха. Алина хӑй каларӗ-ҫке, шантарса каларӗ: «Ыранччен кӗт». Акӑ вӑл – ӗнерхи «ыранччен». Шӑп ҫак самант е кӑштах каярах. Халь пулмасан – хӑҫан?

Каччӑ аллине хӗрӗн ҫурри таран уҫӑлнӑ чӑп-чӑмӑркка хитре пӗҫҫи ҫине хучӗ, ҫемҫен пӑчӑртарӗ. Именет хӑй. Алина каллех мӗн те пулин хирӗҫле каласран хӑрать.

Тӳпере ҫӑра туратсем витӗр йӑл-йӑл кулса хӗвел пӑхать. Унӑн пайӑркисем йывӑҫ лӑссисенчен уртса янӑ сарӑ пурҫӑн шалатка чатӑр евӗрлӗ. Йӑрӑс хурӑнсем кӑтра ҫивӗчӗсене ҫӗр патне ҫитеслех уснӑ. Ҫил ҫук, ҫулҫӑсем хускамлаҫҫӗ. Ҫӑра курӑк та ҫемҫе кавир евӗрлӗ. Хӑяхпа выляймиех тӑнӑҫланнӑ янкӑр кӳлӗ ҫуса тасатнӑ хыҫҫӑн такам типме сарса хунӑ куҫкӗски пек йӑлкӑшать. Тӳлек. Ырӑ тепле...

Алина куҫӗнче хирӗҫлес сӗм палӑрмарӗ. Унӑн лӑпкӑ сӑнӗнче темӗнле ӑнланма йывӑр паллӑмарлӑх сисӗнет: те чӑнласах шантарчӗ вӑл ӑна, те именчӗк каччӑран шӳтлесе пӑхас терӗ; ҫав пыл шӑрши пек куҫа курӑнман шухӑша е халех вӑлтса систермелле, е тӑхтамалла? Мӗн чухлӗ шанӑҫсӑрлӑх, хӑюсӑрлӑх халиччен ура ярса пусса курман ушахрах вырӑнти тӗтрере!

Каччӑ аллине кӑштах ҫӳлерех куҫарчӗ. Ҫакна Алина туймарӗ те тейӗн. Ку шиклӗ пӳрнесене сапӑрлатрӗ: акӑ хыттӑн туртӑнса карӑннӑ кӗске юбка аркине сӗртӗнсе шаларах куҫрӗҫ вӗсем.

Кашни сантиметр шаларах куçнă çемĕн евĕклĕх тата ытларах ÿссе, вăйланса пырать. Хĕрĕн кĕрнеклĕ урипе телефон юпине танлаштарас пулсан, вĕсен хушшинче пĕр-пĕрне хире-хирĕçлĕх уйрăмлăхĕ пур: телефон юпи çине мĕн чухлĕ çÿлерех хăпаратăн – çавăн чухлĕ хăрушăрах, хитре хĕр урине ачашшăн сĕртĕнсе мĕн чухлĕ çÿлерех улăхатăн – çавăн чухлĕ евĕклĕрех.

Митя текех тÿссе тăраймарĕ – Алинăна çемçен-çемçен чуптунă май çăра курăк çине сулăнтарчĕ... Малашне мĕн пулнине хăй те уçăмлăн астуса юлаймарĕ: манерсĕр вĕриччĕ, чĕри вĕçсе тухасла тапатчĕ. Çакна тăрă кун çутинче Алина та витĕрех курчĕ, вара вăл, кунашкал чун-чĕре талпăнăвне тахçанах активсе, хăнăхса çитнĕскер, каччăн вăйкăн хĕрÿлĕхĕ кĕç-вĕç сирпĕнсе тухасса туйса ăна тĕлĕнмелле çепĕç авăсăмпа пулăшма васкарĕ...

Тепĕр самантран вĕсем иккĕшĕ те тин çех çулса пăрахнă икĕ сарă чечек пек пĕр хускалмасăр лăстăр-р пусăрăнса выртрĕç.

Çак питех те евĕклĕ вăйă Митьăна çав тери килĕшрĕ. Ахальтен мар иккен тунсăхланă вăл. Куншăн çунма тăра-ать!

Алинăн хавха сĕрĕмĕ Митьăннинчен маларах сĕвĕрĕлчĕ: çинçе пÿрнисемпе каччăн çÿçне çемçен ачашлама пуçларĕ вăл.

Митьăна халь канлĕ-канлĕ. Çак канăçура – юпах вăхăтран пуçласа мĕн патне туртăнни, мĕн шырани, мĕн тупăнни. Ку пĕтĕм йывăрăша çухаттаракан асамлăх кăштах каярах юлса çитнишĕн ачлăхран тахçанах уйрăлнă каччă пĕртте кÿренмерĕ: кăмăл туртăмĕн пурнăçланас саманчĕ – çитрĕ-çитрех! Çав куçа курăнман ырлăхшăн, пуянлăхшăн çынсем мĕншĕн кĕвĕçнине, мĕншĕн çапăçнине, мĕншĕн пуç хуние – халĕ вăл пĕлет.

Митя пуçне çĕклерĕ, хăйне виçесĕр ачашлăх парнеленĕ хĕр куçĕнчен йăпанса пăхрĕ.

– Мана тытрăн-тытрăнах такки... – терĕ Алина ăна çемçе тутинчен мамăк курăк вĕçĕпе каллĕ-маллĕ шăлса.

– Эсĕ... пĕрремĕшĕ, – тата ăшшăнрах пăхрĕ сарă пикен çутă, таса, хăп-хăмăр, питĕ йăваш куçĕнчен каччă.

Çын çуралать... пĕрремĕш хут кăкăр патне туртăнать... Ку вăл – пурнăç. Пурнăçра пур япала та пĕрремĕшĕнчен пуçланать: пĕрремĕш кулă, пĕрремĕш утăм, пĕрремĕш туйăм йăпанăвĕ...

14

...Асаилӳсем... Вĕççĕр-хĕрсĕр асаилӳсем – катари, çывăхри е тата... тин кăна пулса ăша кĕрсе юлнисем.

Вăхăт паçăрах çур çĕр иртни çинчен пĕлтерсе тинĕс енчен вĕрекен çил те чӳречене лăпкама чарăнчĕ. Уçă форточкăран кĕрекен сывлăш та тĕлĕрсе кайрĕ. Тĕттĕм пӳлĕмре шăп.

Митя çаплах çывăрса каяймарĕ. Хыçа юлнисене – чăн ыррисене – пурне те аса илчĕ вăл.

Этем иртнипе пуласлăх хушшинчи самантра пурăнать. Иртни часах çухалма пултарать, пуласси – пулмасан та пултарать, вĕсен хушшинчи самант – хальхи – яланах пур. Пур. Куç умĕнчех. Вăл мĕнпур пулăмсенчен – чи чăнни, чи шанчăкли.

Акă ĕнерхи кун урăх нихăçан та пулмаслăха куçрĕ. Митя йăлăнаймарĕ ăна, тытса чараймарĕ. Мĕн хăварчĕ-ха вăл хăйĕн вырăнне? Халĕ мĕн пур? Мĕн ырă? Мĕн асран тухмасть? Оля чĕркуççийĕн ăшшийĕ?.. Çапла, ăшшийĕ... халĕ те пур. Пурнăçра тĕл пулнă е ырă, е кăштах ӳкĕнĕçлĕ пулăмсене аса илни пушшех вăйлатрĕ ăна. Ольăн витĕмлĕн витĕр витмелле хирĕç пăхнă йăлтăр куçĕн хĕлхемĕ, хирĕçлеме хăяйми тăвакан татăклă çепĕç сасси, унăн çемçе-çемçе сĕртĕнĕвĕн евĕклĕхĕ – халĕ те чуна ăшă сĕт пăсĕ евĕр лăпкаççĕ. Ырă-ырă! Çăра пĕлĕтсен хушшипе тинĕс çийĕн çунат сарса вĕçетĕн пек... вăштăр çил, мамăк çил шăппăн-шăппăн сăпка юрри юрлать пек...

Тинех каччă куçĕсем хăй сисмесĕрех майĕпен-майĕпен хупăнса тутлăн-тутлăн тĕлĕрсе кайрĕç...

Тепĕр кунне ирхи апат хыççăн Митя, Ольăна курас тесе, вестибюле кайма тухрĕ. Ольăна мар, каллех Антуана курма тӳр килчĕ унăн. Çĕнĕ тусĕ, чăн та, каччă шухăшне сисет тейĕн.

– О, иптеш! Ерçрĕр-и? Атьăр калава малалла тăсăпăр, –хытах хавхаланса ӳкрĕ вăл, Митьăна катаранах хăй патне чĕнсе.

Каччăн ирĕксĕрех килĕшмеле пулчĕ.

Вĕсем палатăна кĕчĕç. Оля çук, таçта кайнă, тен, – хулана, тен, тинĕс хĕрне. Митя ыйтма хăяймарĕ, чĕри айне пытанса ларнă пĕр хăй кăна пĕлекен çепĕç туйăма кăшт та палăртасшăн пулмарĕ.

– Тавай пуçлăр эппин, – терĕ вăл лăпкăн хăйĕн малтанхи кресло çине меллĕн вырнаçса ларса, – тулĕк чи хĕрӳ самантсене сиктерсе хăварăр, атту мана аллерги çакланĕ. Хăюсăртрах хусах эпĕ, хитре хĕрсен чĕрине сирĕн пек асамлăн парăнтарса курман.

– Юрĕ, тăрăшса пăхăп, – кăмăллăн пуçне сĕлтсе илчĕ Антуан, – анчах юрату вăл хăйне хăех хĕрӳллĕ. Пĕлместĕп, тен, пурин те мар.

– Малтанласа – пурин те.

– Тĕнчере халиччен никамăн та пулма пулатрайман хĕрӳллĕ юратупа юратрăм терĕм эп сире. Çапла, пурнăç пылак тĕлĕк евĕр пулса кайрĕ ман. Çуллахи каникул чăн-чăн çăтмаха куçрĕ, – калава малалла тăсрĕ Антуан. – Ольăна выçлăх укçишĕн ресторансем тăрăх юрласа çӳреме пăрахма сĕнтĕм. Килĕшрĕ. Эпĕ пуян çемьере çуралса ӳснĕ. Укçа хамăнах çителĕклĕ ман. Сенкер ĕмĕтлĕ çамрăксене чи малтан мĕн кирли – пурте пур: лайăх хваттер пур, «Мерседес» пур. Çутçанталăка лоджи чӳречинчен кăна пăхса йăпанса ларман. Хитре уяр кунсенче Ольăпа хула тулашĕнчи çутă кӳлĕсене курмалла, шап-шурă хӳхĕм лилисене татмалла юриех машинăпа ярăнса çӳреттĕмĕр.

Хире тухсан, никам çук çĕрте, эпĕ руле хăрах алăпа тытса, сылтăм ала çӳхе платье айне икĕ яка кăк хуçланнă тĕле хуратăп... Оля пуçĕпе ман хулпуççи çине тĕршĕнет. Пирĕн тĕрлĕ ятлă полюссем куçа курăнман электромагнит хумĕсем пек пĕр-пĕрин патнелле туртăнаççĕ... евĕклĕх ăрши лăпкать чĕрене. «Мерседес» пире сăпка евĕрлĕн канлĕн-канлĕн сиктерсе таса инçет хĕррине çитме илĕртет.

Кайсан-кайсан Оленька вă-ăрăммăн сывласа илет... Калама çук ырă! Нимĕнле Кавказ та, нимĕнле тинĕс те кирлĕ мар.

Киле çитсен – евĕккĕн ирĕлсе пушаннă вырăна тултарасшăн пулса-ши – Оля тӳрех ман умма чĕркуçленсе ларчĕ, пуçĕпе малалла ӳпĕнчĕ...

Ой, пĕлесчĕ сирĕн шăп çак вăхăтра манпа мĕн пулса пынине! Ăна сăмахпа каласа пама майĕ çук. Ку вăл – фейерверк, киленӳ фейерверкĕ! Чунăмпа эпĕ пыллă пĕлĕтсен ăшне путрăм. Манăн туйăм çăвĕ пĕтĕм кĕлеткене шăнăçайми шăранса анса çăлкуç таппине куçрĕ - сисетĕп: евĕклĕх çыххи кĕç-вĕç татăлса каять... Шăппăн тăсса ĕнĕрлени те тытса чараймарĕ ăна...

Митя сасартăках канçсăррăн туртăнса, чĕтренсе илсе ура çине тăчĕ.

– Çитет! Тек ан калăр. Куна итлеме мана сиенлĕ. Каччă эпĕ. Вăй илсе çитерейменчерченкке еккĕме тӳрлетме май çук таранах пăсатăр эсир.

– Пурăнса ирттерни çынна нихăçан та пăсмасть, яланлăхах асра тытма çырса хăварнă кĕнеке пек вăл – е хурлăхлă, е ытарлă, е хушуллă. Иртни – каялла таврăрма çукки – шухăшлаттарать, пурнăçа юратма ăс парать. Халиччен мĕн калани – калавăн тĕшши мар-ха, хуппи çеç. Кирек мĕнле çимĕçĕн те тĕшши пулмалла. Тап-таса чĕре хуп-хура кăмрăк пуличчен мĕнле хыпса çуннине калатăп эпĕ. Чăннине калатăп. Чăн-чăннине. Итлес кăмăлăр пурах сирĕн - хамран пĕлетĕп. Ларăр, – ал лаппине малалла тăсса кайăк вĕçнĕн вылятса илчĕ Антуан. Митя ларасса кĕтмесĕрех калава малалла тăсрĕ.

– Оля маншăн çеç çуралнă терĕм вĕт эпĕ сире. Ку – тĕрĕс. Унра мĕн пурри, мĕн хитри, мĕн ырри – пĕтĕмпех мана валли пулнă.

Вăл мана нимĕн те чарман. Шурă вырăн çинче эпир икĕ чĕрĕ пуканеччĕ. Эпĕ унăн илемĕн кашни пĕр-пĕтĕмлĕхĕ çине куçа илмесĕр пăхса выляма юартаттăм. Мĕнешкел йăпанăç! Санăн хăрах аллунта вĕр-çĕнĕ мечĕк пек ывăç тупанне кăнт тапса тăракан чăп-чăмăр кăкăр, тепринче – пĕчĕк-пĕчĕк çемçешке чечек папки. Вăл пӳрне вĕçĕсем çепĕççĕн пăчăртанăçемĕн кăлт-кăлт туртăнса илет, ейӳпе витĕнет...

Манпа Ольӑна та питӗ ырӑ. Ҫакна палӑртмасӑр пӗр хут та тӳсеймест вӑл, хӑйӗн ытлашшипех савӑк туйӑмне нимӗн чухлӗ те пытармасӑр ӑшпиллӗн: «Ой, Антуан! Мана урӑх никам та кирлӗ мар», – тет...

Митя хӑвӑрт алӑк патнелле утса пырса сулӑ ҫумӗнче чарӑнса тӑчӗ: «Эпӗ сирӗнне урӑх пӗр сӑмах та итлеместӗп», – терӗ те, васкавлӑн ҫаврӑнса, алӑка тепӗр енчен хупрӗ. Юр пек шурӑ алӑк икӗ вӗри чӗрене икӗ еннелле уйӑрса вӗсен хушшине тимӗр питлӗхпе хупларӗ тейӗн - хупӑнчӗ те тек хускалмарӗ.

Палисадник умне Митя питӗ пӑлханса тухрӗ: «Ах, ӑҫта-ши халь Оля, ах, ӑҫта-ши?!» – ниҫта кайса кӗрейми вӑркашать каччӑ чӗри, хӑрах алли кӗсьере унӑн... Кӗске хуллӑ кӗпин ҫаннине ҫемҫен лӑпкать ӑшӑ ҫил.

## 15

Ольӑна Митя каҫхи апат хыҫҫӑн тин тӗл пулчӗ. Клуба кайма тухнӑччӗ вӑл. Сарлака пусма вӗҫӗнчи алӑка уҫсассӑн кӑшт ҫех ҫапӑнмарӗҫ вӗсем. Тӗлӗнмелле ырӑ духи шӑрши хумӗ тӑпах тытса чарчӗ ӑна. Хӑп-хӑмӑр та кӑн-кӑвак хӗм сапакан кӑвар куҫсем самантрах тӗлме-тӗл пулчӗҫ.

– Оля!.. Ох, сире курас тени!..

– Мӗн?

– Ҫунатӑп...

– Вӑл сире темӗн те пӗр каласа пачӗ пуль... Ан ӗненӗр ӑна, – каччӑ чӗринчи чӑрсӑр пӑтравлӑха сиснӗн е ҫак хитре йӗкӗт хӑйне мӗн пӗлме юраманнине кайрантан-кайран пурпӗрех пӗтӗмпех пӗлесрен хӑранӑн ырра шанакан сусӑр упӑшкин сентименталлӑ сӑмахӗсене ӑса хывма кирлӗ маррине малтанах асӑрхаттарма васкарӗ хӑйӗн илемӗпе шухӑ чӗрене самантлӑха тапма чаракан чиперкке.

– Сирӗнпе питӗ калаҫмалла ман... – ҫемҫе пӳрнисене ҫепӗҫҫӗн ярса тытрӗ вӗри туйӑмне тытса чараймиех пӑлханнӑ каччӑ.

– Халь мар, Митенька. Илтрĕр-и, халь мар.

– Хăçан?.. Хăçанччен кĕтмелле? Тӳсĕм çитмест... – Митя унталла-кунталла пăхса илчĕ те çывăхра никам та çуккине кура Ольăна икĕ чăмăр хул айĕнчен çупăрларĕ. Вăл сисет: йăл кулăллă хĕрлĕ тута хĕррине хăйĕн тутипе сĕртĕнсе илес пулсан – Оля хирĕç мар, анчах çакăнта, уçă çĕрте, çынсем курасран хытах шикленет. Вăштăр çил çывăрать. Пăлтăр умĕ тӳлек шăплăхра. Çывăхра никам та çук – пĕр чун та. Митя, чĕри сиксе тухасла тапнине чарас тесе, чун ăшшине паракан вут пикен пӳрнисене тата çепĕçрех пăчăртарĕ. Пичĕсем çывăхланчĕç, куçĕсем питĕ шиклĕ. Епле шикленмĕн: мĕн чухлĕ чăрмавлăх... май çуклăх... вăтанулăх... Хăюлли, çынăн кăмăл туртнине чикĕсĕр тăваканни - хĕрӳлĕх. Митя хăйне тытса чарайми пулчĕ. Кăкăрпа кăкăра хыттăн тĕшĕнтерсе куçне хупрĕ. Хĕп-хĕрлĕ хĕрнĕ тимĕр хĕмĕ сирпĕннĕн кăшт çех сĕртĕнсе илчĕç вĕри пылаклă йăпăлкка тута хĕррисем.

– Ой, кунта мар, Митенька! – питне хăвăрт пăрса çирĕп алсен хушшинчен шăвăнса тухасшăн туртăнчĕ Оля. – Тăнлăр, кунта мар...

– Ăçта?

– Халь пĕлместĕп, кайран... кайран калăп.

Аллея енчен такам килни курăнчĕ. Вĕсем хыпăнса ӳкрĕç.

Ытамран вĕçерĕнсен Оля çавракан янах айнелле хĕсĕннĕ кăпăшка çӳçне пӳрне вĕçĕпе вăшт кăна хулпуççи çине сирчĕ те тем самантра ылтăнланă хăлăплă хулăн алăк хыçне кĕрсе çухалчĕ.

Митя вырăнтан хускалма та хăрарĕ. Оля темĕнле ăнланма çук çепĕç-çепĕç вăйсăрлăх вĕрсе кĕртрĕ унăн чĕрине: «Кунта мар, Митенька! Тăнлăр, кунта мар...» Апла- тăк, кунта марри – умра, вăл пулмаллах. Паян-и, ыран-и е тата кайрантарах – пулмаллах. Кĕтме шанăç пурри - аван-ха, анчах унăн Ольăпа халех, пĕр тăхтаса тăмасăр çак самантрах курнăçас килет.

## 16

Кĕтнĕ вăхăт час çитмерĕ.

Ольăна курас тесе Митя, хăй пĕрремĕш хутра пурăнать пулин те, юриех иккĕмĕш хутри коридор тăрăх иртсе çӳреме

тăрăшрĕ. Пĕр хут утса тухать, аяла анса, тепĕртакран тата тепĕр çаврăм тăвать. Таçта çĕтсе çӳрекен чăтăмсăррăн кĕтнĕ вăхăтăн çулне кĕскетесшĕн çунать.

Каç пулнăччĕ. Шăппăн пырать хитре кавир тăрăх сенкер ĕмĕтшухăшлă çамрăк хусах. Акă каллех сас парасса кĕтнĕ алăк, паллană алăк, уçăлса кайрĕ. Кăртах турĕ каччă чĕри: вĕриленчĕ, çав самантрах... питех ĕшеннĕ вĕркĕч пек лăстăр-р халсăланса лăпкăн-лăпкăн пусăрăнма пуçларĕ.

Митя Ольăна курасса шаннăччĕ, уçă алăкра – Антуан. Нумаях пулмасть сĕтел хушшинче черккесене çĕклесех туслашнă патвар йĕкĕте курсан, унăн йăлтăркка хăмăр шăрçа пек куçĕсем сасартăках хаваслăн йăлкăшса илчĕç: «О, кăвар чĕреллĕскер! Кĕрĕр-кĕрĕр. Калаçу вĕçленмен пирĕн. Шăпах ерçӳллĕ вăхăт халь. Оля çук. Кĕçех килмелле вăл» – хулăн шăнкăрав татăклăн янăранă пек янăрарĕ уçă сасси.

– Чĕре манăн вĕри çех те мар, çемçе те. Ырă çынсен сĕнĕвне нихăçан та хирçĕлемен эпĕ. Юрĕ ара, «урăх пĕр сăмах та итлеместĕп» терĕм пулин те, хамăн кăмăлăма хирĕç кайсах, ятаралса тенĕ пек сирĕн калавăра вĕçне çитичченех итлеме сăмах паратăп, – терĕ Митя, кĕтнĕ шанăçĕ тулманшăн сасартăках тунсăх сĕмĕ капланнине пытарма тăрăшса. Вăл халь хăйĕнчен таракан телее тепле майпа та пулин хăй патнелле çавăрма лăмлă улăх урлă чупма та хатĕр.

Алăк хупăнсан вĕсем каллех малтанхи пекех çемçе креслăсем çине вырнаçса ларчĕç. Антуан пӳрнисене сарса çăра çӳçне хыçалалла сирчĕ, унтан, гитарист чи çепĕç кĕвĕсене суйланăн пуçне кăшт кăна сылтăмалла тайса илчĕ. Пӳлĕмре пĕр вăхăт нимĕнле сас та пулмарĕ. Çак шăплăх тăтăшла тарăн шухăшсене пĕр тĕвве çыхăнма пулăшрĕ.

– Пурнăçа эпĕ карт вăййипе танлаштаратăп: алăра пысăк козырь пулсан – саншăн нимĕнле хăрушлăх та çук. Эсĕ вăйлă, никама парăнми улăп эсĕ. Оля маншăн пур ырă мар япаласене тĕппипех хупласа хуракан туз козырь пулса, –терĕ те Антуан кĕпе çухавин тепĕр тӳмине вĕçертрĕ, çăмăллăн сывласа ячĕ. –

Унпа вăхăт иртни сисĕнместчĕ. Эпир иксĕмĕр те питĕ-питĕ ясарланса çитрĕмĕр. Килте-и, хулара-и е çул çинче-и – вĕçĕмех ыталашас килетчĕ, йăпанас килетчĕ.

Пĕррехинче, «Любят только раз» эротикăллă кинофильм курса тухнă хыççăн, каçхи урампа пыратпăр. Кино пире çав тери астарса ячĕ. Хамăр инçе-инçе вĕçеслех артакланнă, ура айĕнче мĕн пуррине те туймастпăр. Оля хăрах аллине ман брюки кĕсйине чикнĕ... Чĕвен тăнă урхамахăм патак пек шак хытнă. Киле çитиччен тӳсме чăтăм çукчĕ...

Эпир улахрах вырăн шыраса хула садне кĕтĕмĕр. Оля çӳллĕ хӳме çумне сĕвĕнме ĕлкĕрчĕ-и, ĕлкĕреймерĕ-и – тӳрех юнпа та, чунпа та пĕр пĕтĕм пулса хĕрӳллĕн сыпăнса лартăмăр. Ун пек чухне нимĕн çинчен те шутламастăн, пĕтĕм ăнлав – ырă!.. ĕçĕ те пĕтнĕ. Малашне тата ырăрах мĕнле пулмаллине Оля лайăх пĕлет: хӳме çумне меллĕнрех сĕвĕнчĕ те, пĕвĕпе çĕкленсе, мăйран уртăнчĕ...

Евеклĕх ниçта кайса кĕрейми хĕвĕшме пуçланăччĕ...

– Мĕн хăтланатăр эсир кунта?! – илтĕнсе кайрĕ çав вăхăтра хыçра чăтма çук хаяр сасă. Шартах сикнĕ хыççăн пуçа пăрса каялла пăхрăм та – хуралçă старика курах кайрăм. Пăшалне хатĕр тытса пирĕн çине тĕлленĕ, йытти – упа çӳллĕш, кĕç-вĕç туртса çурасла çăварне карнă.

– Канатпăр, – терĕ Оля, çара вырăн хупăнмалла йăшт кăна тӳрленсе тăрса. Эпĕ, шак хытса, ие чăмланă çын пек чĕлхене çĕтертĕм. Ним калама та пĕлместĕп.

– Кунта капла аташма юрамасть, – çиллессĕн ăс пачĕ сад хуçи.

– Пире – юрать: эпир упăшкипе арăмĕ. Сирĕн пирĕнпе нимĕнле ĕç те çук, – çава пек çивĕччĕн касса татрĕ ăна Оля кĕпе аркине тӳрлетсе.

Старик урăх пĕр сăмах та шарламарĕ, – вăл пире хăратасшăн çеç пулнă: паллах, ăмсаннă тӳсейми. Пырать, телее, милици килсе тухмарĕ – вăл нимĕн ыйтмасăрах тытса каятчĕ е штраф тӳлеттеретчĕ.

«Упăшкипе арăмĕ...» Ух, тупса коларĕ те вара Оля сăмахне! Çырăнса пĕрлешесси çинчен хамăр эпир сĕмленмен те, – ахалех питĕ лайăх, тĕлĕнмелле лайăх. Урăх ют савăк, хăй тĕллĕн иртсе çÿрекен сÿрĕк савăк пĕр чĕптĕм те кирлĕ мар.

Çак кĕтмен пăтăрмахшăн Оля манран ытларах пăшăрханчĕ пулас. «Шуйттан старикки!.. Мĕнешкел паха кăмăла пăсса хучĕ», – терĕ вăл, çав кăлтăка çийĕнчех тÿрлетес шутпа хамăрăн тăван алăк янаххи урлă каçнă-каçманах ман умма чĕркуçленсе ларса...

Шăп çак вăхăтра палатăна Оля пырса кĕчĕ.

– Эсир каллех пĕрле-мĕн, – терĕ вăл, Митя çине кăштах вăтанчăклăн йăпăрт пăхса илсе.

– Эпĕ халех каятăп... Антуан тунсăхлатăп терĕ те – кĕтĕм...

– Дмитрий питĕ кăмăллă каччă – хитре, çирĕп сывлăхлă, çутă ĕмĕтлĕ. Мана вăл хамăн çурмаранах хуçăлса аниччenхи чечен пурнăçа аса илтерет, татах та нумай пурăнас килтерет, – йĕкĕтĕн пичĕ чăннипе мĕншĕн хĕрелнине пĕлмесĕрех çепĕç именĕçе сирме тăрăшрĕ кил хуçи.

– Ларăр-ларăр... Эпĕ кансĕрлемĕп. Манăн утюгламаллисем нумай, – аллине кайăк вĕçнĕн вылятса илчĕ Оля, хăй çуса çакнă шурă япаласене пуçтарма балкона тухрĕ.

– Çук, эпĕ каятăп, – ура çине çĕкленчĕ Митя. Утюгламалли пÿлĕме кĕçех Оля пырассине хăйма шăршине сиснĕ кушак пекех сисрĕ вăл.

Коридорта вĕсем пĕтĕмпе те икĕ сăмах çеç хушса илчĕç.

– Çичĕ сехетре паркри беседкăна пыр, – терĕ Оля, каччă ăна темĕн ăнланма ыйтакан кăкăр ачилле хирĕçлеме май çукла куçран йăлăнса пăхсан, хăй чарăнса тăмарĕ, çунă япаласене тепĕр алли çине куçарчĕ те малалла утрĕ – çунакан, тĕмсĕлекен чĕре çумне темĕнле кăтăклă-кăтăклă ĕненмех те йывăр пылак шанăç хăварчĕ.

17

Ку пурнăçра телейшĕн çунма питĕ çăмăл, телейлĕ пулма йывăртарах.

Ҫӳллӗ ҫыран хӗрринчи шурӑ беседкӑра Митя Ольӑна нумайччен кӗтсе ларчӗ. «Кӗҫ килет, халех килет, куратӑпах эп ӑна, аллинчен те пулин тытса пӑхатӑпах. Ах, килинччӗ! Ах, килинччӗ!..» – хӗмленсе ҫунчӗ унӑн чӗри, чӗрӗ патаксенчен чӗртнӗ кӑвайт пек ҫунчӗ. Ӗмӗтленме чару ҫук. Ӗмӗтлен, хӑть тӗнче хӗррине ҫитиччен ӗмӗтлен. Пӗр автан авӑтнипе пурпӗрех тул ҫутӑлмасть. Пурнӑҫӑн хӑйӗн йӗрки пур.

Тавралӑх тӗттӗмленчӗ. Тинӗспе горизонт пӗрлешнӗ тӗл палӑрми пулчӗ. Чӑнкӑ сӑрт ҫамкине тӗртсе хускатайманран хытах пӑлханнӑ шухӑ ҫил ҫывӑхри кипарис ҫулҫисене ҫиллессӗн лӑскать. Вӑйсӑр ҫутӑллӑ темӗн пысӑкӑш «шӑна кӑмписем» хӑйсен тунисене кӑна ҫутатаҫҫӗ, сӗвӗрӗлсе-сӗвӗрӗлсе пыракан сарӑ тӗс аякка ҫитеймест. Ҫӗршывӑн тӗрлӗ кӗтесӗнчен килнӗ канакансене ҫутӑ кирлех те мар. Улахрах вырӑн шыракан мӑшӑрсем ҫӑрарах йывӑҫсен хӳттине тӗрӗслесе кил тӗлне ҫухатнӑ сурӑхсем пек тӗмсӗлсе ҫӳреҫҫӗ. Вӗсене никам куҫӗ курайман тӗттӗмрех вырӑн кирлӗ. Тинӗс сывлӑшӗпе тулнӑ кӑнтӑр сӑнӗ Ҫӗпӗр каҫӗсенчен пачах урӑхла. Кунта пурте тем шыраҫҫӗ, тем кӗтеҫҫӗ, тем ҫухатнӑ... Кукша пуҫлӑ кӳпчем арҫынсемпе сарлака шӗлепке тӑхӑннӑ пахчари катемпилле хыткан та ватӑ майрасен те куҫӗсем уҫӑлнӑ. Хӑйсен ҫара ӳчӗсене уҫҫӑнрах кӑтартма тӑрӑшса ҫӑтӑрах та кӗске, йӑлтӑркка ҫӳхе юбка-кофта тӑхӑннӑ ихӗлти хӗрсем пӗччен ларакан каччӑ ҫине куҫ айӗн илӗртӳллӗн пӑхса илсе иртеҫҫӗ. Митьӑшӑн вӗсем пачах ют. Илемпе илем пӗр мар. Ольӑн хӑрах ура тунийӗ тӗшне те тӑмаҫҫӗ вӗсем.

Каччӑ Ольӑна кӗтет. Пӗр ӑна кӑна... Ӑҫта-ши вӑл? Кампа-ши вӑл?

Тинӗс палӑрми пулчӗ. Хуп-хура. Куҫ умӗнче темӗн пысӑкӑш сӑмала хуранӗ тейӗн. Ҫылӑхлисене тамӑкра ҫакӑн пек хуранта вӗретеҫҫӗ пуль. Тем сарлакӑш, пилӗк хутлӑ ҫурт ҫӳллӗш, тӗрме хӳми пек чӑнкӑ чул ҫыран. Тухса тараймӑн.

Мӗн вӑл ҫылӑх? Ҫылӑхпа ҫылӑхмарлӑх хушшинче уҫӑмлӑ, катаранах курӑмлӑ чикӗ ҫук. Чӗре ыйтать пулсан, ҫав чӗрене

тепĕр чĕре илĕртет пулсан, йышăнать пулсан, икĕ чĕре пĕр-пĕринпе телейлĕ пулсан, çакă – çылăх-и? Чĕрене сиплеме пулать, йăпатма пулать, тапма чарма пулать – хушма... çук.

Кашни чĕрчунăн питĕ асамлă, никам туртса илейми ачаш вăй пур. Ăна чун туртни теççĕ. Ача çуралсанах амăшĕ патнелле туртăнать, чупма пуçласан – урамалла, вунвиçĕ-вунтăватă çултан пуçласа мĕн утайми пуличченех – юратăва иленет...

Юратун варианчĕ нумай: вăхăтлăх юрату, сӳрĕк юрату, хĕрӳллĕ юрату... Вĕсенчен хăшĕ кирлĕ маррине – этем хăй те пĕлмест. Ют çын арăмне вăрттăн юратаканăн чĕри ĕнĕçсĕр пылаклăхпа шиклĕхе пула пушшех тытса чарайми хĕрӳ туйăмлă.

Юрату вăл – сассăр перекен пăшал. Эсĕ – тилĕ. Çав сассăр пăшал пульлинчен ăнсăртран типшар курасран сыхланса, хăвăн е палăракан, е палăрман йĕрна хӳрӳпе шăлса, тарса çӳретĕн. Умра тĕтре. Ăçта пырса тухасси – курăнмасть. Юрату санăн хĕврех-ха, инçе çула кайма чикнĕ çăкăр чĕлли пек чĕре çумĕнче. Çулĕ инçе... вĕçĕ курăнмасть. Шанатăн, ĕненетĕн чĕре çумĕнче мĕн пуррине. Çутă ĕмĕтпе утатăн пурнăç çулĕ тăрăх... Айлăм, улăх пек тӳрем вырăн, тăвайкки... Шав утатăн. Çав эсĕ шаннă юрату чи пысăк ĕмĕте хăш тĕле çитсен тивĕçтерессине те пĕлместĕн... Çакăн пек уçăмсăрлă, пурнăçăн пăтравлă чанĕнче явăнса-явăнса, тен, ху сисмесĕрех, нимĕн пĕлмесĕрех тамăк хуранне кĕрсе ӳкетĕн...

Ох, чĕре ыйтнине те итлес килет, çăтамаха та лекес килет!

Фу-у... Темле шухăш та пырса кĕрет тунсăх пуçа.

Митя çӳçенсе илчĕ. Сулхăн. Тӳсме çук кичем. Кĕтнĕ кайăк çук та çук, çук та çук... Каччă чĕрине хурт сырнă тейĕн: йăшкать, йăшкать... хурланса йăшкать.

Оля килмерĕ.

18

Палатăра иккĕн: пĕри хăйĕн тĕлĕнмелле асамлă пурнăçĕ çинчен йĕркипе каласа парать, тепри тимлĕн итлесе ларать. Калавçăн сассийĕ лăпкă.

– Кунсем, эрнесем иртрĕç... Кашни çутă кун пире валли мĕн те пулин çĕннине, татах та татах ырăраххине, евĕклĕреххине илсе килетчĕ, çитесси тата савăкрах пуласса шантаратчĕ.

Каçсерен эпир унпа вырăн çинче çаппа-çарамас выртса телевизор пăхаттăмăр. Хăш чухне унта пирĕнешкелех çаппа-çарамас хĕрпе каччă хĕрӳллĕн айкашнине кăтартатчĕç: тĕрлĕ майлă ыталашни... йăпăш сасă... хĕр пуçне пăрса пылаккнăн йынăшни... – пĕтĕм юн вылянса каять. Чи вĕри самантсенче Оля сиксе тăратчĕ... Тĕлĕнмелле ачаш мăкăльсем чĕлхене сĕртĕнсен, эпĕ çухалса каяттăм, хĕп-хĕрлĕ чечек çеçки пек çӳп-çӳхе, çеп-çемçе, ирĕлсе-ирĕлсе тăракан пĕчĕк тутипе Оля сывлăша пӳлсе лартаслах тата çăтăрах тĕршĕнетчĕ – ман туйăм тĕвви çине ăшă-ăшă пыл сăрхăнса аннăн туйăнатчĕ...

Унашкал чун-чĕре хыпса ирĕлнине эпĕ çак тĕнчене килнĕренпе те курман. Ку вăл хĕрӳллĕ юратăвăн тӳпиййĕ пулнине, кунтан çӳлте урăх нимĕнле кăвар та, нимĕнле евĕклĕх те çуккине çавăн чухне яр-уççăн ăнланса илтĕм. Оля хăйĕн çĕнелсех-çĕнелсех тăракан ачашлăхне пĕр тумлам юлми мана паратчĕ.

Çаппа-çарамас çап-çамрăк хĕр санпа нимĕн вăтанмасăр хăйĕн пĕтĕм кăмăлĕпе питĕ азартлăн йăпанса вылянине курнă-и эсир? Ку – сăмахпа каласа парайми ырлăх, пĕтĕм чун-чĕм савăкĕн фейерверкĕ.

Ольăпа пĕрле чухне манăн ăнланулă пурнăç пĕр минут та евĕксĕр пулман. Кăмăл тулнин чи техĕмлĕ самантне чылайăшĕсем хăнара ӳкиччен ĕçсе-çинине калаççĕ. Эпĕ кунпа килĕшместĕп. Маншăн Ольăна пĕр хăйне кăна йăпăртлăх курни те – евĕклĕх тӳпи.

Унпа пĕрле пулма мĕн тери аван! Куçа уçатăн – вăл сан умăнта, куçа хупатăн – вăл пурпĕрех сан умăнта; вăл пăхни, вăл санăн чунна ачашласа çав тери йăвашшăн кулни – нихăçан манăçми.

Эпир пĕр-пĕрне хирĕç пăхса ниепле те тăранаймастăмăр: апат çисе ларатпăр-и е çемçе вырăн çинче ыталашса выртатпăр –

пĕри теприне хăй патне туртакан ăшă импульслă куçсем яланах тĕлме-тĕл, хамăр – кĕç-вĕç ирĕлсе каяслах савăклă. Оля мана чĕкеç пек çепĕççĕн чĕвĕлтетсе яланлăхах ăшра юлмалла ăшпиллĕ ыйтусем парать, эпĕ ырлăха пула сăмахлама та ӳркенетĕп.

Нихăçан та манас çук: «Эсĕ хăмăр куçлă, эпĕ кăвак куçлă – ачамăрсем пирĕн мĕнле пулĕç-ши?» – терĕ вăл пĕррехинче. Шăпах вĕри ытамраччĕ эпир ун чухне, кăн-кăвак куçсем ман куçра савăк вылянине сăнатчĕç.

– Хитре пулĕç, – çӳхе тутипе ачашлантăм эпĕ.

Начар хуравшăн пĕртте кӳренмерĕ вăл. Кӳренме мар, мана ырланăн, мана ăс панăн: «Çак çĕр çинче пачах çук çĕнĕ чуна пурнăç парасси – мĕн тери пысăк пархатар вăл», – терĕ.

Вырăн çинче пурте лайăх: пурте çемçе, пурте таса... Вăтанăçран нумай вăйлăрах ясарлăх чĕре çумĕнчи пĕр-пĕрне ирĕлсе каясла юратма хистекен ачашлăха хускатать.

Ольăпа иксĕмĕр хушăра мĕн пулса иртни – пĕтĕмпех çав тери хитре. Кăмăллă. Эпир мĕн тĕрлĕ кăна вылямастăмăр пулĕ, çапах та татах рехетлĕрех пулма тăрăшаттăмăр.

Оля пĕр вĕçĕмсĕр астаракан илемлĕ урисене чух куçа илĕртмелĕх сарса лутра диван хĕррине ларатчĕ. Пĕр-пĕрин çумне çемçен лăпчăннă икĕ хĕп-хĕрлĕ чечек çеçки шăп ман çине вăтанса пăхнăн туйăнатчĕ. Тăранма пĕлмен куçăм ун еннеллех туртăнатчĕ...

– Эсĕ хăçан гинеколог пулса çитетĕн? – тесе ыйтрĕ вăл теплерен эпĕ ун умне чĕркуçленсе ларсан, манăн тĕрлĕрен ӳкерчĕксемлĕ учебника хупса çемçе аллипе пуçран шăлса илнĕ май.

– Вĕренсе тухсан.

– Питĕ ăста врач пулайăн-ши?

– Пĕлместĕп, анчах пултарнă таран тăрăшса пăхăп. Мĕн.. кăнттамлăх сисĕнет-им? Пултăк çук-им?

– Çук, пачах урăхла, ĕçлеме тытăнсан, киленĕç илпекне пула, эсĕ çак хальхи ачашлăха çухатасран хăратăп. Питĕ çамрăк

хитре хĕрсене те сиплеме тивет-çке-ха санăн... – шухăшлăн хуравларĕ вăл.

## 19

Митя çемçе кресло хыçне вăйлă магнит туртса лартнăн вырăнтан тапранма та хăрарĕ. Çапах хăйне вăл çывăхри ярса тытма çук сарă лĕпĕш хыççăн хыпăнса чупнăн туйрĕ. Оля пĕчĕкçĕ сар лĕпĕш пулса куç умĕнчех вĕлтĕртетсе вĕçет пек... Пӳлĕмĕ те чечеклĕ улăх еверлĕ тӳлек... Вĕлтĕртетсе вĕçет сар лĕпĕш... ăçтан тытайăн.

Антуан иртнине мар, хальхине те мар, пулассине хытах шелленĕн пуçне креслăран тĕреннĕ ал çине йăпăртлăх тайса илчĕ те, çав самантрах кăштах усăннă çӳçне икĕ аллипе каялла сирсе калава малалла тăсрĕ – лăпкăн, ирĕклĕн, кăмăллăн.

– Ольăпа пĕрисем патне çуралнă куна уявлама хăнана кайиччен эпĕ пирĕн юратăва хăçан та пулин сулхăн сĕм çапасса ĕмĕрне те шутламан. Ытарайми хӳхĕм хĕрпе хăнана тухма хăрушă иккен – питех те çăткăн йĕкĕтсем сăпсасем пекех сĕкĕнеççĕ.

Эпир самаях сыпнăччĕ.

Эпĕ хаваслă хăнасемпе кĕреке хушшинче ларатăп. Сĕтел çинче – шăкăрин тулли черккесем, хур тукмаккисем, банансем... Чĕлхесем пурин те самаях çемĕçсе, салтăнса кайнă. Куçсем пур япалана та чăн пурринчен илемлĕрех, хаклăрах, чăрсăртарах кураççĕ.

Залра хăватлă музыка янăрать. Хумлă шыв çинчи тетте мечĕксем пек чӳхенекен çамрăксем тĕрлĕрен авăнса-явăнса ташлаççĕ. Пăхатăп та – пĕри ман Ольăна тем майлă та çавăрттарать, лешĕн, ĕçнĕскерĕн, савăнăçлăскерĕн, куçĕсем хĕвел пек йăлкăшаççĕ, кĕлеткийĕ – платье ăшĕнчен хывăнса ӳкменни кăна.

Хам та шутсăр кутăн çав: Ольăна никама та пӳрне вĕçĕпе те тĕкĕнтерес килмест ман. Ку сăмсалай вара пӳрнепе çех те мар, Оля аллине ывăçпах çупăрласа тытнă... епле ташлаççĕ: пĕççисем пĕр-пĕринпе явăнманни çеç.

Манăн кăварлă ăшра самантрах тем пулса иртрĕ: чĕре айне темĕнле сивĕ чĕрĕп йăпшăнса кĕчĕ – тирет, чавать, чĕрет. Ольăна чун-чĕререн савман пулсан, çакнашкал чĕрĕп пуррине эпĕ ĕмĕрне те пĕлес çукчĕ. Чун чăтма çук тăвăнса çитрĕ. Алри черккене тĕппипе çăвара ӳпĕнтертĕм те, сĕтел хушшинчен хирĕнсе тухса, алăк патнелле утрăм: курса юлăр... ман çурăма.

Çур çĕр иртсен Оля киле хыпăнса пырса кĕчĕ: «Антуан, ма тухса тартăн?!»

Эпĕ нимĕн чĕнмесĕр тăхлан пек хытнă куçăмсемпе маччаналла пăхса выртатăп.

– Мĕншĕн пăрахса хăвартăн мана? – майран ыталаса, тăп-тăрă куççуль витĕр ман куçран тилмĕрсе тĕлленчĕ вăл. – Мĕншĕн çиллентĕн? Ма чĕнместĕн? Чунăмçăм! Ташлама юрамастчĕ-им манăн?

– Ташлама?! – хыпăнса ӳкрĕм эпĕ. – Тытма юраман çĕртен çупăрласа силлени – ташлани-и вăл?!

– Ăнсăртран унăн алли, тен, ют çынна пачах тĕкĕнме юраман тĕле те перĕнчĕ пуль... Ĕнен: ятарласа мар. Çавăншăнах труках юратми пултăн-и? Эпĕ сана шырарăм, пĕр тĕпренчĕк кăмăла кайман, чĕрне хури чухлĕ те çывăх мар çынсен хушшинче шырарăм. Санран самантлăха ик-виçĕ утăм хушши çех уйрăлса йăнăш турăм пулсан – каçар. Каçар, лайăхскерĕм манăн, урăх нихăçан та апла тумăп.

Шухăшра эпĕ ăна питĕ хытă юратнăран хам ытлашши кăраланнине туйрăм. Чунăм çемçелчĕ. Пӳрнесене кĕрепле пек сарса кушак çури пек йăвашскере кăпăшка пусĕнчен çупăрларăм, хыттăн-хыттăн чуптурăм. Эпĕ алла кăшт пушатсанах, вăл мана тутаран пусласа пĕтĕм пĕвĕм тăрăх çепĕç-çепĕç хыпамсем туса евĕк фейерверкĕн пульчĕ патне çитрĕ... – манăн кӳренĕве чĕре çумĕнчен тĕппипех ирĕлтерсе кăларас терĕ пуль. Эпĕ...

Антуан калас сăмаха калаймарĕ – Оля килсе кĕчĕ. Митьăна курасса кĕтменскер алăк патĕнче тăпах чарăнса тăчĕ. Сăлтавсăр мар. Çак хитре йĕкĕт умĕнче унăн самаях пысăк айăп пур.

– Эсир кунта-ҫке, – терӗ вӑл Митьӑна, ҫӑра куҫ тӗкӗ айӗн, тем пытарнӑн, тем кӗтнӗн, асамлӑ вӑрттӑн пӑхса илсе. – Сире эпӗ кӳреннӗ тесе. Тӳсӗм пур сирӗн.

Пӳлӗмрен Митя Ольӑран питӗ ҫунса ыйтас килнӗ сӑмаха ыйтмасӑрах, пӗлес тенине пӗлмесӗрех тухрӗ.

20

– Мӗн тума кирлӗ пулчӗ сире ҫав фокус? – хыпӑнса ӳкрӗ вӑл, хитре урисемпе пӑхӑр вӗҫлӗ ҫӳллӗ кӗлеллӗ туфлипе асфальт тӑрӑх тикӗссӗн чӑклаттарса пӗччен килекен Ольӑна палисадникри ансӑр аллейӑра хирӗҫ пулсан.

Вӑл – Митя, каҫхи тинӗс ҫилӗ хытах ашкӑнса тӑрмалакан чӑнкӑ ҫыран хӗрринчи шурӑ беседкӑра чунне йӑшкатса, ыраттарса, чӗри тӑвӑнса хытаслах тӳсеймесӗр Ольӑна кӗтсе ларнӑ Митя.

– Ӑнланмарӑм: мӗнле фокус? – кӑн-кӑвак куҫӗпе ытарайми илемлӗ хӗм сапрӗ ӑш ҫунтармӑш пикемпи.

– Хӑвӑр каланӑ ҫӗре ма пымарӑр? Мӗншӗн улталарӑр?

– Ах... – ҫемҫен кулса илчӗ Оля. – Сирӗн парӑнса тӑраслӑхӑрпа кӑмӑлӑр тасалӑхне питӗ тӗрӗслесе пӑхас килчӗ.

– Мӗн пӗлтӗр? Халӗ мана ӗненетӗр-и?

– Черчен чӗреллӗ пек...

– Апла хӑҫан-ха, хӑҫан иксӗмӗр улаххӑн калаҫса ларӑпӑр?

– Халӗ мар... Халӗ мар, Митенька. Хӑҫанне – калӑп. Кӗтӗр.

– Кӗтме йывӑр. Шанӑҫ пулсан та, питех те йывӑр. Ҫав ырӑ саманта ҫывӑхлатма нивушлӗ майӗ ҫук?

– Паян-ыран – ниепле те. Кӗтӗр. Вӑл ҫитетех.

– Ҫак самантра ерҫетӗр вӗт-ха – атьӑр гостиницӑра номер йышӑнатпӑр. Кайрӑмӑр...

– Ой, ҫук-ҫук, Митенька! Хамах калӑп. Кӗтӗр. Кӗтме ҫуралнисем... кӗтеҫҫӗ.

Оля кайсан та Митя пӗр вӑхӑт шак хускалмасӑр тӑчӗ. «Кӗтӗр. Вӑл ҫитетех. Кӗтӗр. Вӑл ҫитетех...» – ҫепӗҫ-ҫепӗҫ кӗвӗ евӗрлӗ ҫемҫен-ҫемҫен янӑрарӗ унӑн хӑлхинче ҫак ӑшӑ сӑмах.

Тепрер сехетрен хăтлă палатăра çемçе кресло çине хăрах аллине пит çăмарти çумне тытса, канлĕн сĕвĕнсе, Антуан калавне итлесе ларнă чухне те çепĕççĕн янăраса тăчĕ çак кĕвĕ: «Кĕтĕр. Кĕтĕр. Вăл çитетех...»

Хăйпе хăй савăнса та, хурланса та, чĕн пек пиçĕхсе çут тĕнчене сенкер тĕспе курма пуçланă Антуан, çак çамрăк каччă ăшĕнчи хĕрӳленсе пыракан курăнми-сисĕнми кăвайта пачах туймасăр, лăпкă сасăпа калава татах малалла тăсать.

– Йăпанас килни хамран вăйлăрах ман, – вăрăммăн сывлса илчĕ вăл шухăша тарăн уçса пама тăрăшса. – Кашни çыннăн ĕмĕчĕ – евĕклĕхе пурнăçран май пур таран ытларах илесси. Сирĕн те, манăн та, патшан та çавах вăл, Ольăн та.

Пылак хĕрӳлĕх нихăçан та йăлăхтармасть. Анчах унăн та тӳпи пур. Çав тӳперен çӳлелле урăх пĕр шит те улăхаймăн, шаплатса персе анма пулать, хăпарма çук.

Пирĕн, Ольăпа иксĕмĕрĕн, хамăр улăхса çитнĕ шайра, чи пылак юратăвăн шăп тӳпинче чарăнса ĕмĕр вĕçне çитиччене тытăнса тăмаллаччĕ – тăраймарăмăр. Ăçта унта...

Ольăна шап-шурă простынь çинче çаппа-çарамас выртнине курасчĕ сирĕн - ун чухне ăнланăттăр: чăн-чăн пурнăç мĕн вăл иккенне. Епле хитре! Елка тураттинчен çакса янă тĕлĕнмелле илемлĕн, хĕрлĕн-çырăн-кĕреннĕн йăлкăшакан кантăк шар евĕрлĕ – çап-çаврака икĕ футбол мечĕке пĕр-пĕрин çине хунăн хитрен тĕмеленсе, çинçе пилĕкĕпе кăштах пăрăнарах, хăяккăн выртать вăл. Илĕртме пĕлет. Пăхса ытараймăн. Кăнт карăнса хытнă икĕ чăмăр кăкăрĕ айăккăн ӳпĕнсен те усăнмасть: кил-ха чупту тенĕн, шĕвĕр вĕçĕпе сан еннелле çĕкленсе, туртăнса тăрать; парафинран шăратнă евĕрлĕ икĕ яка пĕçĕ пĕрлешнĕ тĕл пылаклăн-пылаклăн куçа ĕмет, пите ун çине хурса, груша авăкне çепĕççĕн ыталаса илсе, тутлăн-тутлăн çывăрса каяс килет – чуна кăтăклантаракан, ӳсĕртсе яракан илем! Çак илеме манăн никама та, пĕр никама та парас та, кăтартас та килмест.

Пĕр хĕвеллĕ ырă ирхине хăнана кайма пуçтарăнтăмăр. Вăл вырăн çинчен çĕкленчĕ те, ним тăхтамасăр, икĕ чăмăр мечĕкне

хитрен вылянтарса, трюмо умне утса пычĕ. Тĕкĕр тĕлне çитсен пĕр Ольăран самантрах икĕ çаппа-çарамас тетте Оля пулса тăчĕ, пĕри тепринчен хитре, хитри хитринчен хитре. Хирĕç пăхаççĕ. Çав тери селĕм. Ман куçсене Оля çумне кăкарнă тейĕн. Вăл çӳçне васкамасăр турарĕ те пукан хыçĕ урлă çакăнса тăракан лифчика илсе ман умма пырса тăчĕ, эпĕ ун çумĕнчи кашни тĕмехуçланчăка ăмсанса пăхнăран сăмсаран пӳрни вĕçĕпе ачашшăн тĕртсе: «Çитет йăпанса. Çакна тӳмелесе яр-ха», – терĕ, вара çурăмĕпе ман еннелле çаврăнчĕ. Эпĕ яка тăхасене тӳмеленĕ хушăрах аялалла пăхатăп: хыçалалла мăкăрăлса тăракан авăк тĕле панулми хурсан, ытараймасăр, вăл та кусса анмассăн туйăнать. Çав вырăна кайран Оля таса мрамортан касса якатнă пек кĕрнеклĕ урисене умлăн-хыçлăн çĕклесе çинçешке плавкипе туртса лартрĕ.

Эпĕ те тумланма пуçларăм.

– Хăш платьене тăхăнас? – ыйтать вăл манран.

– Леш сарлака аркăллине.

– Çук, вăл фигурăна пăсать. Кĕске юбкăпа шурă блузка тăхăнатăп.

– Вăл хыс•ана та лайăххăн хуплаймасть сан, аркă айĕнчи чĕркуççирен çӳлерехри кашни сантиметр çара ӳт арçынсене ухмаха кăларать, усал ĕç тума хистет, – хирĕçлетĕп эпĕ.

– Мĕн, унпа ытлашши илĕртӳллĕн курăнатăп-им?

– Ытлашширен те ытлашши, ачаш та чăрсăр туйăма тӳсме çук тытса чарайми.

– Çапах çавнах тăхăнам-ха.

– Эпĕ хушнине итлеместĕн эсĕ.

– Эпĕ илĕртӳллĕ пулни – сана япăх-им? – йă-ăлл! кулчĕ Оля.

– Çав ытарайми илĕртĕве ыттисем туртса илесрен хăратăп.

– Туртса ан илтер. Эсĕ арçын вĕт.

– Ăмсанакан çын – арăсланран та хаяр, ăна çĕнме йывăр.

– Çĕнетĕн. Маншăн вăйлă каччăсенчен чи вăйли - эсĕ.



*«... Ольӑна шап-шурӑ простынь ҫинче ҫаппа-ҫарамас выртнине курасчӗ сирӗн — ун чухне ӑнланӑттӑр: чӑн-чӑн пурнӑҫ мӗн вӑл иккенне».*

Троллейбус çинчех пĕри Оля çумне сăвăс пек çыпçăнчĕ:

– Хитрескер, сире мĕнле чĕнеççĕ? – тет, мана юриех асăрхамăш пулса. Хăйĕн куçĕсем сап-сарă чăхха курнă тилĕнни пек.

– Çакăнтан ыйтăр, – хуравларĕ Оля, пуçĕпе ман еннлле сĕлтсе илсе.

– Эпĕ сирĕнпе калаçатăп, – çинех тăчĕ каçрашка. Хăпма шутламасть.

– Эй, йĕкĕт, хуп çăварна! – çурăм хыçне турăм хайхине. Вăл мана тӳрех чăрсăррăн хулпуççирен ярса тытрĕ, хăй умĕнчен сирме тăчĕ. Этем юратупа вăйлă. Сассăма хăпартса хам çак хĕршĕн чуна пама хатĕррине палăртма тиврĕ:

– Ил шăршлă аллуна! – терĕм йĕрĕнчĕклĕн куç айĕн шăмарса пăхса.

– Ах, «шăршлă»! – пĕррех туртса çапрĕ питрен мана вăл. Эпĕ – хирĕç. Хытах лекрĕ. Кăшман пек хĕрелчĕ лаптака сăмси. Вĕсем виççĕн пулнă-мĕн.

Ман çине тем самантра пур енчен те кире пуканĕ пек ал чăмăрĕсем тăрăнчĕç. Эпĕ шăла çыртса янах шăммисене сиктермелле çапма тăрăшрăм. Хĕрарăмсем çухăрма пуçласан, троллейбус чарăнчĕ.

Пире çынсем туртса уйăрчĕç.

– Гой эсĕ, ашак! Сăмсу çине картсах хур: сана масар тĕпĕнчен те шыраса тупатпăр эпир, – тилĕрсе юнарĕ мана çав пуçтах, хăйне ман пата вирхĕнсе пыма чаракан алсене сирме чăрсăррăн туртăнса. Çĕр кăмрăкĕ пек вичкĕннĕн е йăлкăшакан, е сасартăках йĕпкĕн тĕксĕмленекен икĕ хура та нĕрсĕр сивĕ куçа яланлăхах астуса юлтăм.

Киле таврăнсан та иртсе каймарĕ çак пăтăрмаха пула чĕрене капланнă тăвăну. Оля – айăпа сиссе-ши – çийĕнче мĕн пуррине хăвăртрах хывса, мана салтăнма пулăшрĕ.

Элир вырăн çине выртрăмăр.

Кирек мĕнле йывăр лару-тăрура та Оля маншăн яланах чăрмав ыратăвне сирсе сиплекен эликсир пулсаччĕ. Куçа курăнмасăр килсе тухнă çилĕ-пăшăна çемĕçтерме часах майне тупрĕ вăл. Тинех чĕре кăштах лăпланчĕ. Çапах вăл ман сĕнĕве килĕштерменшĕн хам кăмăлсăрланни тĕрĕсех пулнине палăртас килчĕ ман. Çавăнпа, кушак пек питĕ çемçе ăшăскер пĕтĕм пĕвĕпе ман çине тăсăлса выртсан, ăна тин кăна пушаннă тутинчен чуптуса илтĕм те: «Эпĕ каланине итлемерĕн: сарлака платье тăхăнмаллаччĕ», – терĕм. Эх, хам та çав... кăмăла шăнăçайми евĕклĕхшĕн тав тумалли сăмахччĕ-ши çак?

Оля çăра куç тĕкĕсене сасартăках çурă таран лăс! усăнтарчĕ – кўренчĕ пулас.

– Манпа эсĕ мĕншĕн юриех тиркешесшĕн? Сана лайăх пултăр тесе тăрăшрăм-çке-ха. Ытарлăн ўпкелешме мĕн турăм эпĕ? – терĕ вăл хуçăкрах сасăпа.

– Итлемерĕн.

– Эсĕ манран сивĕнесшĕн-им? Тăраниччен килентĕн-килентĕн те – халĕ кирлĕ мара тухрăм-и?

– Эпĕ ун пек каламарăм.

– Çук, каларăн.

– Каламарăм.

– Каларăн.

Сипленсех çитеймен чĕре ыратса кайрĕ. Ольăна хам çирен сиртĕм те сиксе тăтăм: «Апла, эпĕ лайăх мар пулсан – тухса кай ман патран!»

Вăл та сиксе тăчĕ – икĕ чăп-чăмăр çавра мечĕке вылянтарса кĕске утăмсемпе диван патнелле утрĕ, лифичика ярса тытрĕ: «Каятăп», – пурçăн çыхăн пĕр çаккине хулпуççи урлă ывăтса тўмелеме пикенчĕ.

– Кай.

– Каятăп. Нимĕн чухлĕ те шел мар-и?

– Шел мар.

Плавкине тăхăннă чух, иккĕмĕш урине çĕклесен, тўрĕ тытаслăха çухатса. Оля ўкеслех тайăлса илчĕ, аллипе диван

пуҫӗнчен ярса тытсан тин кӗрнек урине ҫемҫе ункӑна чикрӗ. Вӑл, хӑй тухса каяссипе хӑратса, эпӗ каҫару ыйтасса, кукленсе ларса чӗркуҫҫирен ыталасса кӗтрӗ. Манӑн, тӑруках хӗрсе кайса пӗрре кутӑна пенӗскерӗн, мӗскӗнленес килмерӗ. Мӗскӗнленни - ху вӑйсӑррине пӗлтерет.

Тумланса ҫитсен, Оля алӑк хӑлӑпне ярса тытрӗ:

– Тепӗр хут ыйтатӑп: шел мар-и?

– Шел мар.

– Пӗр тӗпренчӗк те хӗрхенӳ ҫук-и?

– Ҫук.

Оля сасартӑках алӑк ҫумӗнчен уйрӑлчӗ те ҫиҫӗмле хӑвӑрт ман умма пырса чӗркуҫленсе ларчӗ, пилӗкрен ыталаса илсе урасем пуҫланса кайнӑ тӗле пичӗпе ачашшӑн сӗркеленме тытӑнчӗ: «Антуан, савниҫӗм, ан хӑвала мана. Чӗререн ыйтатӑп: ан хӑвала» – тӗлӗнмелле ҫепӗҫ сасӑпа йӑлӑнчӗ вӑл. Кӑн-кӑвак куҫӗнче – кӑн-кӑвак куҫҫуль, хӗп-хӗрлӗ пыл сӗрнӗн хӗп-хӗрлӗ тути... Кӑн-кӑвак куҫҫульлӗ куҫӗнчен витерсе пӑхрӑм:

– Малашне эпӗ каланине итлетӗн-и?

– Итлетӗп.

– Мана «кутӑн» теместӗн-и?

– Теместӗп.

– Маншӑн шывра та сӳнми кӑвар пулатӑн-и?

– Пулатӑп.

Куҫҫуле Турӑ та ӗненет. Кӑмӑл ҫемӗҫрӗ:

– Хывӑн эппин.

Вӑл юриех илӗртекен чӑп-чӑмӑр авӑк тӗмӗксемпе ман еннеле ҫаврӑнса васкавлӑн хывӑнчӗ те, икӗ хытӑ кӑкӑрӗпе вӗри кӑкӑрӑма ҫӑт перӗнсе, мӑйран уртӑнчӗ, чуптума пуҫларӗ – вырӑн ҫине ӳпӗнтӗмӗр. Оля тем хушӑра ман ая хӗсӗнсе кӗрсе тин ҫеҫ шывран туртса кӑларнӑ чӗрӗ пулӑ пек авкаланма пуҫларӗ. Эпӗ хама вӑйлӑ хумсем урлӑ е ҫӳлелле ҫӗкленесе, е аялалла анса шав малалла ишекен кимӗпе пынӑн туйрӑм. «Эй,

тăм пуç, çак евĕклĕхе эпĕ килтен хăваланă!» – тесе айванла кутăнлашнишĕн чĕререн ӳкĕнсе илтĕм. Хам, ăнсăртран евĕксĕр хускану туса, ăна кӳрентересрен хăратăп, кăн-кăвак куçĕнчен пăхса унăн кăмăл симптомĕсене пĕлме тăрăшатăп: куçне вылятма чарăнса çăварне кăштах карчĕ пулсан, çак вăхăтра манăн туйăм тĕввине ă-ăшă-ăшă çăлкуç таппи пырса çапрĕ пулсан – ăна лайăх, апла-тăк эпĕ тĕрĕс çул çинче. Ах, татах тапинччĕ, татах тапинччĕ çав çăлкуç таппи!..

Эпир çĕрĕпе куç хупмарăмăр.

Унăн ăшă, яка кĕлетки çумĕнче вăй пур чух хускалмасăр выртма майĕ çук. Кашни орган, кашни клетка канăçа çухатать, лăстăр-р! пылак ĕшенчĕклĕ чун инçетри пĕлĕтсем патнелле вĕçнĕн туйăнать. Оля çав тери тараватъ, манăн пĕтĕм вăя улăм пĕрчи витĕр эрех ĕçнĕ евĕр евĕклĕн сăрхăнтарса ĕмет тейĕн. Эпĕ хĕвел ăшшинче киленĕçлĕн пиçĕхсе выртакан çĕлен пек ăшпиллĕн хал çухатнине пĕлмесĕрех ман çине ачаш кушакла улăхса выртать те, тутине тарлă пит тĕлне тытса: «Чупту мана», – тет. Эпĕ чуптăватăп. «Тата чупту», – тет. Тата чуптăватăп. Юн вĕриленсе каять – вара вăл магнит йăлăна туйăм индикаторĕпе сыпăнтарать... Эпĕ хама ăшă мунчара кĕтăклă милĕкпе çемçен-çемçен сăтăрнăн туятăп. Лăпкать-лăпкать çав евĕклĕх мана, çан-çурăм кăтăк хумĕ пулса сӳсленсе кайичченех лăпкать. Çепĕç хум çапнипе чун-чĕре хĕрӳлĕхĕн пĕвийĕ татăлса каять... Çак самантра вăл пушанка сыпăнăва çăтăрах пăчăртаса хускалми пулать... Канлĕ-канлĕ. Пĕр сăмах чĕнмесĕр, пĕр тапранмасăр унăн йăлтăркка хитре, виçесĕр кăмăллă кăн-кăвак куçĕнчен ытарайми пăхса выртас килет, тĕлĕнмелле çепĕç пăчăртав хушшине пĕтĕм кĕлеткепе туртăнса кĕрес килет...

Кунашкал евĕклĕхе эпĕ тĕлĕкре те курман.

## 21

Тинĕс енчен вĕрекен ăшă çил чӳрече каррине лăпкăн чӳхентерсе илчĕ. Тӳсеймерĕ пулас чĕррисен пурнăçне ăмсанмасăр. Антуан калавне вăл та вăрттăн итлесе тăнă-тĕр.

Çилĕн ĕçĕ çавă: ир-ирех вăран, йывăçсене вăрат, хумсене, карапсене хăвала, юратакансене вăрттăн йĕрле... çўçĕсенчен тăрмала...

Çын нихăçан та пĕччен пулмасть – ĕшĕннĕ-и вăл е пушă пўлĕмре хурланса ларать-и – шухăш, сывлăш тата шăплăх яланах унпа пĕрле. Чи йывăр вăхăтра та уйрăлми туссем вĕсем.

Пўлĕмре – уçă сывлăш. Тинĕс сывлăшĕ. Тата - иккĕн, икĕ вĕри чĕре, çав чĕресен айне вут хураканнисĕр, Ольăсăр. Оля çук, ăшра кĕтеççĕ ăна – иккĕн тан.

– Эсир Тбилисире пулнă-и? – ыйтрĕ Антуан.

Митя, самолет тўперен вĕçсе аннă самантри пек асамлăх хумĕпе кресло çумне лăпчăнса хытнăскер, сасартăках хускалса илчĕ:

– Çук, пулман. Мĕн унта?

– Унта питĕ чăнкă шыв сикки пур. Шывĕ, чул ту тăрринчен мар, çўл тўперен юхса аннăн туйăнать. Таса, çутă, васкавлă. Шарлак тĕлĕнче Пўлĕхçĕ çўлтен çĕр çине кĕмĕл хутăшĕ сапать тейĕн. Тăкăнать шыв, явăнса, шавласа тăкăнать тарăн авăра – вĕçсĕр-хĕрсĕр, ĕмĕр-ĕмĕр. Шухăшласан, пĕтĕм тавралăх шыв айне пулмалла пек. Тавралăх тулса каймасть. Шыв тинĕсе васкать. Шарлакран сиксе аннă шыв, çав чул хысакĕнчен татах та татах сикес тесе, тинĕсе васкать; унтан, çĕр айĕпе каялла таврăнса, чул ту тăрринчен аялалла вирхĕнет, сикет – каллех тĕрлĕ карапсем касса çўрекен, путакан, вĕçĕм кама та пулин, мĕне те пулин хăйĕн айне тăвасшăн çунакан çиллес хумсемлĕ тинĕсе талпăнать... сикет-сикет çаврăнать татти-сыпписĕр...

Эпир те Ольăпа çав шыв сикки евĕрлĕ. Çемçе вырăн шарлакĕнчен сиксе анатпăр та, татах унăн ытамне хăвăртрах çаврăнса çитес тесе, пурнăç чеченлĕхĕпе йăпанма тĕрлĕ сăнлă, тĕрлĕ шухăшлă – е ырă, е ăмсануллă та сивлек чăрсăр ĕмĕтлĕ – çынсемлĕ уçă сывлăша васкатпăр, унтан кăмăллăн е кăмăлсăррăн ĕшенсе таврăнса каллех кăпăшка вырăн сиккине чăматпăр.

Тепĕр кунне ирхи апата эпир пĕр тумланмасăрах, вырăн çинчех çирĕмĕр. Оля урине хитрен хуçлатса минтер çумне сĕвенсе ларчĕ те сĕтел варринчи савăта çывăхарах куçарчĕ. Эпĕ пуçа унăн пружина пек çӳлелле тĕртекен çемçе пĕççи çине хутăм. Вăл турилккери торт касăкне тытать те ман тута патне илсе пырать, эпĕ çыртса илсен, кăпăш касăка хăйĕн çăварне хыпать, кăкăрăм çине ӳкнĕ тĕпренчĕксене питĕ йăпшакан çулласа илет, чĕлхи кушак çуринни пек кăтăклă. Манăн хускалас та килмест. Магнит евĕрлĕ çепĕç туртăмлă пĕçĕ çинчен апельсин шывне ĕçнĕ чухне çеç пуçа çĕклетĕп.

Апатланнă хыççăн каллех вăй кĕчĕ.

– Çĕркаç мĕншĕн хăваларăн эсĕ мана? – ыйтрĕ Оля.

– Тата хытăрах юрат терĕм.

– Халĕ çителĕксĕртерех юрататăп-им?

– Евĕклĕх нумай пулсан та – пурпĕрех сахал пек.

– Маншăн та çавах.

Вăл икĕ кăкăрĕпе малалла ӳпĕнсе мана хĕрӳллĕн чуптума тытăнчĕ, эпĕ ăна çара çурăмĕнчен ачашлатăп. Чуптăвăм тута хĕрринчен шаларах иртрĕ. Хĕр чĕлхи ман çăварта татăлнă калта хӳри пек авкаланса вылянать... Эпĕ куçа хупатăп...

Тĕрĕссипе калас-тăк, тан тапса тăракан виçесĕр савăнăç лăпкатчĕ пире.

Эпир шăпах пурнăçра кунтан ытла пулайми пылак сĕтекпе тулса çитнĕччĕ. Чи ырă, чечекке вăхăт! Тин çеç пĕве кĕрсе палан пек, пĕрлĕхен пек таса сĕтекпе тулса çитнĕ хĕрӳ чĕреллĕ хĕрпе каччă вăтă патшаран çĕр хут телейлĕ: вĕсен е çутă, е ырă пуласлăхĕ пур; мулпа кӳпĕннĕ вăтă патшан малашлăхĕнче ырри те, хитри те – пĕри те çук.

Ольăпа эпир, иксĕлми телейлĕскерсем, каçхине хулана тухрăмăр. Алсене яслири ачасем пек çирĕппĕн çупăрласа тытнă. Вăхăтăн-вăхăтăн утнă хушăрах çепĕç пăчăртавлă пӳрнесене вĕçертмесĕр юриех икĕ еннелле евĕккĕн туртăнса илетпĕр. Пурте пирĕн çине ăмсанса пăхаççĕ пек. Ырлăх! Вăрçă çук, выçлăх çук. Эпир - ырă вăхăт ачисем!

– Пуранма лайах вĕт, – саванаҫне ниепле те пытараймасть Оля.

– Лайах, – хуравлатап эпĕ.

– Мĕншĕн ҫынна вилмелле туна-ши?

– Ачамарсен ачисен, ачисен ачисене валли вырăн пултăр тесе.

Шик! шăхăртни илтĕнсе кайрĕ ҫак самантра. Милиционер чаранма хушрĕ: эпир хĕрлĕ ҫутăна уямасарах утнă-мĕн, пĕтĕм тĕнчене маннă...

Алăка тул енчен шаккарĕҫ.

– Кĕрĕр, – терĕ Антуан.

Палатăна тăп-тăрă шĕвĕкпе тултарнă шприца хатĕр тытнă шурă халатлă хĕр кĕрсен, Митя коридора тухрĕ.

22

Сестра палатăра нумай тăмарĕ. Хăйĕн яланхи хăнăхнă ĕҫне турĕ те Антуана кресло ҫине ларма пулăшрĕ, вара, тӳлек пӳлĕме йăл кулăллă сенкер куҫĕпе ачаш хĕм сапса, часах ҫурăмĕ хыҫне шурă лепĕш пек илем йăпăрт куранса юлнине ҫеҫ хăварма васкарĕ.

Митя кĕнĕ ҫĕре Антуан таблетка ĕҫме ĕлкĕрнĕ.

– Вăт ҫапла, – терĕ вăл, каччă ҫемҫе вырăна шăпланса ларсан. – Тухтăрсем те саваҫҫĕ мана: антибиотиксемпе хăналаҫҫĕ...

– Чипер хĕр. Юратмалла. Паллах, унăн та – хăйĕн телейĕ, – ҫамрăк медсестрана ырласа шухăша тарăнлатма тăрăшрĕ Митя.

Антуан пурнăҫа, унăн чăн-чăн тутине халиччен никам кирлĕ пек туйман туйăмпа курма хăнăхнă. Ҫак сăнран пăхма улăпла кĕрнеклĕ, анчах ҫамрăклах сусăрланса утайми пулнă ҫыннăн кашни сăмахĕ – чăн-чăн легенда. Унта йывăрлăхран хăраса каялла чакни ҫук, унта пурнăҫ илемĕ тата... юрату.

Калавҫă, ҫав легендăн тĕп геройĕ, меллĕнрех тӳрленсе ларса сывалмалли процедурăна пула татăлнă калава малалла тăсрĕ.

– Кам çуралман, çав телейсĕр. Пурăнма тăрать. Пурнăç – илемлĕ! Хула тăрăх уçăлса çӳренĕ хыççăн киле таврăнсан, эпир каçхи апат çирĕмĕр, кăштах «Улыбка» хĕрлĕ эрех ĕçрĕмĕр. Кăмăлсем лайăх. Оля хывăнма пуçларĕ, эпĕ те хывăнтăм. Пӳлĕмре ăшă. Çипуç кирлĕ мар. Никам та çук. Фиалка шăрши тӳлек сывлăшра.

Çемçе вырăн пире тараватйышăнчĕ. Çук, выртмарăмăр. Оля кăпăшка минтере стена çумне тăратса, хитре урисене тунисемпе пĕр-пĕрин айне хĕреслентерчĕ те, çурăмĕпе ун çине сĕвĕнчĕ. Эпĕ питпе çӳлелле май çаврăнса тин çеç хуппине сӳнĕ çамрăк çăка вулли пек хитре пĕçĕсем çине пилĕкпе тĕршĕнтĕм кăна – Оля мана пĕчĕк ачана çупăрланă пек ыталаса илчĕ. Тĕлĕк тейĕн: хускалма та кирлĕ мар, сăпка евĕр ытам хăех ерипен лăпканать; çутă пӳлĕм, ăшă сывлăш, куç умĕнче – вĕрсе карăнтарнă пек икĕ чăп-чăмăр кăкăр...

Оля мана çепĕççĕн çупăрласа лăпкă кӳлĕ хĕрринчи хăмăшсем çилсĕр сулланнă евĕрлĕн тӳлеккĕн сулăна-сулăна шăппăн-шăппăн сăпка юрри юрлама пуçларĕ. Чуна кăтăклать черчен сасă:

**Çăлтăр çиçет, çăлтăр вылять**
**Çилсĕр каçхи тӳпере.**
**Хăй вăтанать: шав хĕм сапать,**
**Ырă сунать вăл пире.**

**Эсĕ манра, эсĕ манпа –**
**Хыттăн тапать ман чĕре.**
**Вут чунупа, йăл куллупа**
**Çав чĕрере эс вĕре.**

**Саншăн юмах, саншăн çăтмах,**
**Саншăн телей пулăп хам:**
**Сан тутуна, сан кăмăлна**
**Мамăк пулса ачашлам.**

Лăпкать Оля мана. Ăшă сывлăшĕ питĕме, çÿçĕме лăпкать... Эпĕ хам йывăрăша çухатрăм... Эпĕ – Оля сывласа кăларнă сывлăш халь, эпĕ – хăлха çакки курăкĕн мамăкĕ. Майĕпен-майĕпен çĕр çумĕнчен уйрăлтăм, ним çилсĕр йывăçсенчен çÿле çĕклентĕм, тÿпене хăпартăм... Чечеклĕ улăх çийĕн, çăра вăрмансем çийĕн, кăвак тинĕс çийĕн вĕçетĕп. Умра – сеп-сенкер инçет... Мана пăсран та çемçе сарă-кăвак-симĕс-кĕрен пĕлĕтсем сĕртĕнсе иртеççĕ. Канлĕ-калнĕ...

Эпĕ тутлăн-тутлăн çывăрса кайрăм.

23

Чăлах çын калавĕ Митьăна пĕтĕм чунтан пăлхатса ячĕ, чĕре картинех пырса тиврĕ. Пĕр сывламасăр, пĕр сăмах сиктермесĕр татах та татах итлес килчĕ унăн çак икĕ вĕри туйăмпа шăранса кĕвĕленнĕ пурнăç романне. Антуанăн кашни сăмахĕ, кашни вăрăммăн сывласа илни, хĕрĕн илемне, чăннипе мĕнле вăл çавăн пек, нимĕн ÿстермесĕр илемлĕн сăнласа пани асамлă туртăмăн куçа курăнман таса вĕренĕпе ăсран тухаслах çирĕппĕн çыхса лартрĕ ăна Ольă çумне.

Ольăна вăл çывăрнă чухне те манма пултараймарĕ. Унăн сăнĕ, кĕлетки-çурăмĕ, вăрăм куç тĕкĕсене кăштах усăнтарса чĕре çуне ирĕлтермелле пăхнисем, сана самантлăха сывлайми туса йăл-л! кулни – куçа хупсан тĕлĕке куçаççĕ.

Тĕлĕкре Оля чĕвĕл-чĕвĕл саслă пĕчĕкçĕ хитре хĕрача пек: кĕттермест, йĕкĕлтемест, ытамран шăвăнса тухмасть, такамсем курасран шикленмест...

Тĕлĕк – тĕлĕкех вăл, унпа çырлахма майĕ çук: ултавлăн курăнать те – е йăпатса, е хăратса сÿрĕлет.

Пурнăç пачах та урăхла. Вăл нихăçан та улталамасть, никампа та йăнăшмасть. Этем шăпине çав этемĕн ăсĕпе тивĕçне кура е тĕрлĕрен кĕтмелĕхсене пула йĕркелет. Унăн та асамлăхĕ пур: кашни çыннăн пуласлăхне вăрттăнлăхра тытать. Шанатăн ăна, кĕтетĕн, ĕненетĕн.

«Кётӗр. Вӑл ҫитетех...» Мӗнешкел асамлӑх! Нимӗн чухлӗ те канӑҫ памасть ҫамрӑк йӗкӗте ҫак виҫӗ сӑмах. Ӑна Оля каларӗ. Хӑй каларӗ, такам мар, никам хӗтӗртнипе те мар. Шанӑҫ пур пек. Анчах хӑҫанччен кӗтмелле? Санаторие ӗмӗрлӗх килмен. Шутлӑ кунсем иртсех пыраҫҫӗ, вагон кустӑрмисем пекех пӗр чарӑнмасӑр васкаҫҫӗ. Куҫа хупса илме те ӗлкӗреймӗн – чӑматана ҫӗклесе вокзала утас вӑхӑт ҫитсе те тӑрать. Вара мӗн?.. Шанӑҫ, эсӗ шаннӑ шанӑҫ... пырса кӗрейми утарти таптаса сарӑ пыл шӑрши ҫеҫ пулчӗ-шим? Пулас тӗл пулу, ҫав тери илӗртӳллӗ пулас тӗл пулу нивушлӗ, нивушлӗ пылак ӗмӗтре ҫех юлать? Автобус килессе кӗтме йывӑр мар, отпуск хӑҫан ҫитессе те кӗтме йывӑрах мар, вӗри чун ыйтӑвӗ хӑҫан пурнӑҫланасса кӗтме – ой! питӗ йывӑр: апат ҫинӗ чухне те, канса ларнӑ чухне те ӑш вӑркать, чӑтма ҫук тунсӑх пусать.

Каччӑ чӗрине ирӗксӗрех хӑйма чӳлмекне уҫайман кушак ҫуринни евӗрлӗ хӑйӗнчен килмен шиклӗ, ачаш, пӑс пек вӑйсӑр салхулӑх пусса илчӗ: «Эх, Малинин, Лӑпкӑ океан флочӗн запасри аслӑ матросӗ! Ӗмӗт чечекӗ тӑм тивсе шанса ларнисем санӑн малтан та пулкаланӑ...»

Тепрер кунтан, ҫав кӑмӑл-туйӑм асапне самантлӑха та пулин манас тесе, кӑнтӑр апачӗ хыҫҫӑн Митя каллех Антуан патне кайма шутларӗ.

– Кӗрӗр, – илтӗнчӗ алӑка шакканине хирӗҫ шал енчен лӑпкӑ сасӑ.

– Эпӗ сире калава вӗҫне ҫитичченех итлеме сӑмах панӑччӗ. Хамӑн сӑмаха ҫирӗп тытатӑп эпӗ. Акӑ, татах килтӗм. Кансӗрлемерӗм-и? – каҫару ыйтнӑн, хӑрах аллине кӑкӑр ҫумне тытса, пуҫне ҫемҫен тайса илчӗ Митя пӳлӗме ҫур утӑм пек маларах иртсен.

– Питӗ аван. Шӑпах кӗтнӗ вӑхӑта ҫитрӗр. Манӑн анализсем килчӗҫ. Консультаци илме профессор патне клиникӑна каймалла пулать терӗҫ. Тен, пӗр-икӗ кун унтах юлма тивет. Килӗшрӗм. Оля та хирӗҫ мар. Унччен калава вӗҫлемеллех ман.

Телевизора сӳнтерӗр-ха, – визитшӑн кӑмӑлӗ хытах ҫӗкленнине систерсе, кресло ҫине меллӗнрех вырнаҫса ларчӗ туясемсӗр пӗр утӑм та утайман кил хуҫи.

Митя телевизор сӳнтеркӗчне пуссан, палата шӑпланчӗ. Антуан ҫакна ҫеҫ кӗтнӗ тейӗн – шӑплӑха ҫав самантрах ҫӗнӗрен хускатрӗ.

– Нимӗнле йывӑрлӑха пӑхмасӑрах хама эпӗ телейлӗ тесе шутлатӑп, – Митьӑна хура шӑрҫа пек куҫӗнчен тӳррӗн пӑхрӗ вӑл. – Сывлӑша ахаль ҫӑтса пурӑнман, ҫӗре усӑсӑр таптаса хытарман. Ҫамрӑк пулнӑ, хӗрӳллӗ пулнӑ, никам тытса чарайми вӗри чӗреллӗ пулнӑ: пурнӑҫӑн чи чечен пайӗсене куҫӑн курнӑ. Ыттисем, тӗлсӗр-мӗнсӗр, нимӗнле юратусӑр сулланса пушмак тӗпӗсене ҫӗтсе, ҫут ҫанталӑк панӑ паха ҫимӗҫе ҫӗртсе ҫӳрекенсем, пурнӑҫ мӗн иккенне лайӑххӑн пӗлмесӗрех ҫӑва тӗпне кӗрсе выртаҫҫӗ – хуртсене ҫитерме, хӑйсене ҫӗртме. Ӗмӗрлӗхех, – аллине хӗҫпе каснӑн вертикаллӗ сулса тӑп тытрӗ яланлӑхах вырӑн ҫумне кӑкарнӑ евӗрлӗ ҫамрӑк чӑлах. – Кунҫулӑн авӑк кукринче Ольӑна ӑнсӑртран тӗл пулман пулсан, мана та ҫав хурлӑхлӑ шӑпах кӗтетчӗ ахӑр.

Ҫак ҫутӑ тӗнчере мӗн пурӗ те – пӗртен-пӗр Ольӑна курасшӑн ҫех ҫуралнӑ эпӗ. Манӑн шухӑшӑм, ырлӑхӑм, асапӑм – пӗтӗмпех унпа ҫыхӑннӑ, унпа чӑн-чӑн кун ҫути курнӑ.

Оля манӑн кашни киленӗве, кашни тӗпренчӗк савӑнӑҫа тӗрлӗ тӗслӗ ытарайми ӗлккен тума тӑрӑшрӗ. Кӳлӗ хӗррипе машинӑпа ярӑнса ҫӳретпӗр-и е хула паркӗнче «шуйттан урапипе» ҫаврӑнатпӑр: «Тӗнче мӗн тери илемлӗ! Ҫакӑ – пӗтӗмпех эсӗ пуртан. Илтетӗн-и, эсӗ пуртан», – тесе чун-чререн хавхаланса мана куҫран пӑхатчӗ вӑл.

– Иксӗмӗр пуртан, – тӳрлететӗп эпӗ ӑна.

– Ҫак илем ӗмӗрлӗхе пыринччӗ.

– Ӗмӗр – ытла та нумай. Илем пӗр вӗҫӗмсӗр пулма пултараймасть.

– Эпĕ хитре пулма пултаратăп-çке: паян та ĕнерхи пекех...

– Эсĕ – эсĕ вăл, пурнăç – пачах урăхла япала: паян – савăнăçлă, ыран... хурлăхлă, салху.

– Иртнĕ кунсем каялла таврăнмаççĕ, нихăçан та. Çавăнпа этемĕн пурнăçĕ çепĕç юрă пулмалла – кашни самант асра юлтăр. Тавай, Антуан, пĕр-пĕрне нихăçан сивĕнми юратар.

– Тавай юратар – эсĕ те, эпĕ те – нихăçан сивĕнми юратар. Çутçанталăк хĕвелпе çех те мар, чечекпе çех те мар – юратупа илемлĕ.

Арçын хăй юратнă чухне, хĕрарăм хăйне юратнă чухне телейлĕ.

Ольăпа пĕрле пулнă кашни самант асра ман. Хĕрсене таса çутçанталăк хăй арçынсен кăра чунĕсене çемĕçтермешкĕн юриех çав тери хитре те ачаш кăмăллă çуратса янă пуль. Çапла пуль.

Килте яланах улах. Кансĕрлекен никам та çук. Эпир унпа кушак çурисем пек вылятпăр: е пĕри аялта, е тепри çӳлте. Айăнçийĕн çаврăннă май вăл хăйма кăпăкĕ евĕрлĕ çемçе тутипе манăн питех те сисĕмлĕ ӳте кăп-кăп сĕртĕнсе илет: «Сана çапла лайăхи?» – тет.

– Ытлашшипех, – хуравлатăп эпĕ.

– Эсĕ манпа çапла вылясан – мана та шутсăр лайăх.

Шутсăр лайăххине хам та туятăп-ха, – кашни сĕртĕнмессеренех, пулă пек авăнса, çемçен йынăшса илет.

Шăп çавнашкал кăмăллă самантра теплерен манăн ăна килĕшӳсĕртерех сăмах тухса кайрĕ: «Эпĕ сана шыраса тупман пулсан, çакăн пек телейлĕ пулаймăттăн», – терĕм, вăл нимĕнле фонетикăра та çук сасăпа евĕклĕн йынăшса илсен. Теме каларăм-çке. Çав ăшăрхавлă самантра вăл, чăн та, ытлашшипех телейлĕччĕ... Пĕлместĕп, мĕн япăххи пур ку сăмахра? Мĕн начарри?

– Питĕ ниме тăман айваннăн курăнатăп-им? – сасартăках темĕнле пусăрăнчăк, ӳкĕнчĕклĕрех сасăпа ыйтрĕ вăл.

– Чи малтанхи хут курнă чухне салхуллăччĕ эсĕ, тарăн шухăшлăччĕ.

– Кайран?..

– Кайран эпĕ сана ӳсĕрсен, пирус тĕтĕм-сĕрĕмĕн ытамĕнчен туртса кăлартăм.

– Ах, апла-и... – çат! тутарчĕ çемçе тутаран мана вăл.

Эпĕ самантрах вĕриленсе кайрăм: арçынсем хама хăрушла тӳпкенисене чăтма тӳсĕм яланах çитетчĕ манăн, хĕр çупкине «çиме» – чăтăм çитеймерĕ: пĕррех тăрăнтартăм чышкăпа янах айĕнчен. Хытах тивертес теменччĕ. Кунашкал чухне водительсем «тормоз тытми пулчĕ» теççĕ. Тормоз тытмарĕ.

Оля кравать хĕрринчен, мелсĕррĕн çаврăнса, урайне ӳкрĕ, хускалми пулчĕ. Эпĕ – ун хыççăн.

– Ой... ан макăр, – пуçĕнчен ярса тытрăм ăна. Сасартăках çав тери ӳкĕнсе кайрăм. Вăл чĕнмест.

– Хытах ыратать-и?

– Ăхă, – янахне хупланă ал витĕр илтĕнчĕ кӳренӳллĕ сас. Эпĕ чунтан-вартан юратнă хĕрĕн манран пăрăнакан куçĕсенче – çап-çутă куççуль, кăн-кăвак чечек тăп-тăрă шывра чӳхенет пек.

– Хăш тĕлте ыратать?

– Çак тĕлте: ывăç айĕнче. Питĕ ыратать...

– Тăхта, спиртпа сăтăратăп.

– Кирлĕ мар... Сана хам çупрăм. Каçар, Антуан, юрататăп эпĕ сана, юрататăп...

Вăл мана ыталаса илчĕ. Эпĕ ăна ачашшăн çĕклесе вырăн çине вырттартăм. Сăнĕ ӳкĕнĕçлĕ – те хăйне, те мана ӳкĕнет, – куç хăрпăкĕсем йĕпе, пичĕ ирхи сывлăмпа витĕннĕ хурăн çырли евĕрлĕ, йăлăнса пăхать:

– Чупту мана.

Çине-çинех, çине-çинех хыттăн чуптума пуçларăм, – кĕçех, иксĕмĕр те чуста пек çемĕçнĕскерсем, çаврăнса ӳкрĕмĕр. Вырăнĕ те мамăк пекехчĕ... Оля, кĕскен-кĕскен сывласа, çепĕççĕн пăшăлтатма пуçларĕ:

– Мана çапла лайăх, ăх... лайăх. Сана мĕнле?

– Мана та лайăх...

Çав каçхине эпĕ эпир хамăрăн хĕрÿллĕ юрату тÿпинчен аялалла анма, чи-чи лайăххисем, нихăçан та сĕвĕрĕлес çук пек тĕлкĕшекен евĕклĕхсем хыçалалла иртсе пыма пуçланине пĕрремĕш хут ирхи тĕтреллĕн туйса илтĕм: тарăхнă чухне ытлашши кăра эпир, хаяр, виçене пĕлместпĕр – пурне те манса, пĕр-пĕрне самантрах пĕр сăмахсăрах çапма та, пăрахма та пултаратпăр иккен; апла-тăк пирĕн юратăвăн кăкĕ-тымарĕ пач вырăнтан тапратми çирĕпех мар – ăçта çитиччен тÿсĕ-ши?.. Ах... куç умне ÿкерме те хăрушă!

– Оля каçарман пулсан, пăрахса тухса кайнă пулсан, хăвăра ÿкĕннĕ пулăттăр-и? – ыйтрĕ Митя.

– Çав кăраллă пăшă вăхăтра эпĕ нимĕншĕн те ÿкĕнме шутламан. Ун чухне эпĕ лайăххине çеç пĕлнĕ, хаярлăха тĕшмĕртме – сĕмленмен те. Усалли, чи хаярри, мана хыçранах йĕрлесе çÿренĕ-мĕн, анчах çийĕнчех шыраса тупайман.

24

Этем хăйĕнче мĕн пуррине яланах пĕрле илсе çÿрет: сăнĕ, кăмăлĕ, юратăвĕ... Вĕсене унран туртса илейместĕн. Вĕсем – ĕмĕрлĕх.

Сăнĕпе Антуан детективлă кинофильмри тĕп геройăн сăнарĕ пек. Калаçнă май пуçне суллаНă чухне сарлака çамка хĕррипе кăштах хулăн хумлăн усăнса анакан хыçалалла тирпейлĕн туранă тĕксĕмрех хура вăрăм çÿçне юлашки модăпа кастарнă. Йĕпкĕн хура çăра куç харши. Куçĕ хĕве сиксе кĕме вĕткеленекен ачаш йыт çуриннилле ырă, çав вăхăтрах – хаяр та. Кĕске те мар, вăрăм та мар тÿрĕ хитре сăмса. Хĕрачанни пек пĕчĕк илемлĕ тута. Çаврака тикĕс питçăмарти. Тута хĕррипе сĕвек авăклă тулли янах – çаксем пурте çулĕпе вăтăралла çывхаракан çамрăк çынна, вăл лăпкăн ларнă чухне, инçе вĕçеве кайма хатĕрленнĕ летчика аса илтереççĕ. Çемçе кресло çумĕнче... икĕ костыль.

Хытах ёшеннён, пёри теприн ҫине пуҫне хунӑ. Ку вара куҫа мӗн курӑннине йалтах самантрах ёненми тӑвать: ҫак юмахри пек паттӑр сӑнлӑ ҫыннӑн илемӗ те, хӗнӗ те хайпе пӗрлех иккен.

...Антуан тимлён итлесе ларакан Митя ҫине пӑхса тарӑннӑн сывласа илчӗ:

– Пӗр вырсарни кун Оля патне малтанхи тусёсем пычӗҫ. Адреса тепле майпа шыраса тупнӑ тулёк. Юрлама пыма чӗнчӗҫ. Ольӑсӑр вёсен ёҫ япӑхса кайнӑ мӗн: пахалӑхӗ чакнӑ – тупӑш килмен.

Хытах ӳкётленӗ хыҫҫӑн, Оля килёшрӗ. Ман кӑмӑла ыйтса-туса тӑмарӗ. Чӗреҫём манӑн хурлӑн йӑшкама пуҫларӗ, теме сисрӗ вӑл, темрен хӑрарӗ, питӗ хӑрарӗ.

Кӗтмен хӑнасем тухса кайсан, Ольӑна хамӑн шухӑша каларӑм.

– Каятӑп. Ачасене шел: укҫа илейми пулнӑ вӗсем, укҫасӑр – мӗн пурӑнни, – терӗ вӑл.

– Укҫа пур вӗт-ха. Сана та, мана та ҫитет.

– Ачасене?..

– Вӗсем хӑйсем ӗҫлесе илччӗр. Мӗншӗн сан аркунтан тытса ҫӳремелле вӗсен? Чӗчӗ ачисем-им?

– Аркӑран тытман вӗсем. Ӑна хӑвах лайӑх пӗлетӗн.

– Тытсан – кая пулать. Чикансем ачана, лапкана мӗн те пулин илме ярас чух, малтан хӗнеҫҫӗ, ҫав япалана асӑрхамасла ӳкерсе ан ҫӗмӗртӗр тесе, – ватса пӑрахнӑ хыҫҫӑн хӗненин усси ҫук. Тӗрӗс тӑваҫҫӗ. Эпӗ те сана хамӑрӑн черчен пурнӑҫа ҫӗмӗриччен чарасшӑн. Ҫӗмӗрнӗ хыҫҫӑн – мӗн чарни... Ваннӑ чӳлмеке пуҫтарма ҫук. Тӑвӑлнӑ пӗве пӗр татӑлса кайсан умра мӗн лайӑххи пуррине пурне те аяла тӑвать. Сивӗнекен кӑмӑла катанпир карса тытса чараймӑн. Хӳринчен пӑшал йӗтри тивнӗ мулкача стоп-сигнал кирлӗ мар.

– Чарни – ура хуни вӑл. Манӑн эсӗ мана, чӗрӗ чечек пек, чӗрӳ патне ҫекленнине курас килет – хамӑн кӑмӑлӑмпа, хамӑн шухӑшӑмпа пӗрле.

– Çĕклетĕп.

Эпĕ ăна икĕ урине урайĕнчен уйăрса, сăпкари ача пек, ярса тытрăм, чĕре çумне пăчăртарăм: «Акă çĕклерĕм».

– Эсĕ мана çĕклетĕн, ман шухăшăма, кала: мĕншĕн йышăнмастăн?

– Улăштар эсĕ ăна, – куçĕнчен пăхса тилмĕртĕм эпĕ. – Вĕсем сан умăнта вĕрентнĕ йытăсем кайри урисем çине тăрса ташланă пек чĕтренсе ташлаççĕ пулин те – улăштар.

– Çăлтăрсем улшăнмаççĕ.

– Ан кай тетĕп, итле мана.

– Ыйтаççĕ... – сассине витĕмлетрĕ Оля. – Йăлăнса ыйтаççĕ. Шантартăм.

Çак ниçталлисĕр таçталла кăмăлсăр хурав ман чĕре тӳсĕмĕн савăтне туллин тултарса хĕрринчен тăкăнтаракан юлашки тумлам пулчĕ. Тем хушăра вĕриленме ĕлкĕртĕм, сисмерĕм те – çирĕп ытамри тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ юнтармăша хам çумран тĕртсе ятăм:

– Апла пулсан, пуçĕпех кай!

Оля та самантрах кăмакаран шартлатса сикекен кăвар пулчĕ:

– Каятăп!

– Йĕпе простынӳсене те хăвăнпа пĕрлех ил.

Оля куçĕсем ман çине шăтарасла кăнн! пăхса вутчуле çапнă çулу пек йĕпкĕн кăвак вĕтĕ хĕм сапрĕç:

– Эсĕ... олух! Çапла калама епле хăйрăн?

– Çеп-çемçе татăкна та илсе кай, – чĕринчен витĕрех тивертес тесе хĕрӳлĕхе витĕмлентерме краççына тата ытларах сапрăм эпĕ.

Оля, шак хытса, хускалми пулчĕ, унтан, сасартăках вăрт! çаврăнса, шифоньер патнелле утрĕ:

– Çакăн хыççăн пĕр çеккунт та тытăнса тăмастăп эпĕ кунта. Аса илĕн-ха, выртса макăрăн, – чĕтренсе тухрĕ унăн сасси.

Хитре хĕрсем çавăн пек хаяр ӳпкев саслă пуласса пĕлмен эпĕ, пĕр пĕчĕк усал япала чăннипе пулнă пĕтĕм ыррине тĕппипех чĕрсе тăкассине те чухлайман.

Оля чăматанне хăпăл-хапăл пуçтарчĕ те, урăх нимĕн шухăшласа тăмасăрах, алăка тек нихăçан та уçас çукла тул енчен хыттăн шалтлаттарса хупрĕ. Эпĕ çаврăнса та пăхмарăм: иксĕмĕр те ытлашшипех хĕрӳленнĕччĕ – тем самантра, пурне те манса, пĕр-пĕрне пач хĕрхенми пултăмăр; пирĕн хушăра вĕри юрату шап-шурă чечеке ларнă çеç мар, вăйсăр çил те вĕрмен тейĕн.

## 25

Антуан сĕтел çинчи графинран чĕрĕк стакан пек шыв ĕçрĕ. Мтьăна сĕнчĕ, каччă хирĕçлесен, стакана вырăна лартрĕ.

– Оля тухса кайсанах, ман чĕрене куçа курăнми нишлĕ хурт кăшлама пуçларĕ: темĕн чи хаклă, чи кирлĕ япалана яланлăхах çухатнăн туйрăм. Ниçта шăнăçайми тунсăх пусрĕ.

Çав каçах ресторана телефонпа шăнкăравларăм. Ольăна чĕнме хушрăм. Вăл часах трубкăна тытрĕ.

– Оля, эпĕ ку. Ăнлан: сансăр пĕр кун та пурăнаймастăп, çур кун та пурăнаймастăп. Хăрушă мана. Таврăн.

–Хăп ман çумран, – пик!-пик!-пик! пиклетме пуçларĕ трубка. Оля манпа калаçасшăн та пулмарĕ.

– Ах, калта! – тарăхса кайрăм эпĕ. – Курăпăр-ха, кам камран хăпĕ. Эпĕ утса çӳрес çĕре ейме сарса хурăн, чечек пулса пырăн эп ларнă тĕле.

Мăнаçăм та, кутăнăм та манăн темрен те пысăк: хама хаклама, хама юратма пĕлекен арçын-çке-ха эпĕ, мулаххай çакки мар.

Тăвата кун хула тăрăх ӳсĕр çын пек сулланса çӳрерĕм. Пиллĕкмĕш каçхине çĕрле киле таврăнтăм та – хваттере кĕмелли алăк çумне çурăмпа сĕвĕнсе пĕр-пĕрин çумне çăтă пĕрлештернĕ урисене хуçлатнă та, тем чăмласа, алине кĕнеке тытнă пĕр хĕр лара парать. Оля!

Эп çывхарсанах, вăл çăмăллăн сиксе тăчĕ:

– Антуан, эпĕ сана кĕтетĕп.

– Куратăп. Мĕн хистерчĕ тата? Кирлĕ пулчĕ-им?

– Тăхта, ан васка...

– Сӑмах та хушас килмест. Тӑсӑлса ӳкеслех ывӑннӑ эпӗ. Кайма пултаратӑн. Силленчӗк-хутланчӑк тусусем тӳсеймесӗр кӗтеççӗ пулӗ.

– Тархасшӑн итле. Итле: ан хӑвала мана, ан хӑвала тархасшӑн.

Эпӗ алӑка хупса кӗрсе тӑрасшӑнччӗ – вӑл урине алӑк сулли хушшине хӗстерчӗ:

– Ан хуп. Итле. Пӗр сӑмах çеç. Пӗтӗмпе те пӗр сӑмах çеç.

– Пӗр сӑмах анчах пулсан, юрӗ, кӗр эппин, тулӗк самантлӑха кӑна.

Кӗчӗ. Эпӗ алӑка хупрӑм.

– Мӗн каласшӑнччӗ?

Вӑл ман умма чӗркуçленчӗ:

– Антуан, сансӑр кун çук, пурӑнаймастӑп...

Эпӗ алӑка уçрӑм:

– Çакна çех каласшӑнччӗ пулсан, тӑр та халех тухса кай.

Вӑл мана хытӑрах çатӑрласа тытрӗ, ӑман çӗклесе килнӗ амӑшӗ патнелле туртӑннӑ шӑнкӑрч чӗппи пек янахне каçӑртса, йӗресле куçран пӑхрӗ:

– Антуан, эпӗ лайӑх пулатӑп, саншӑн мамӑк пулатӑп, саншӑн чун йӑпатмӑшӗ пулатӑп: мӗн хушатӑн, мӗн ыйтатӑн – çавна тӑватӑп; сан кӑмӑлна, сан чӗрӳне сарӑ çу евӗр ирӗлсе йӑпататӑп. Ан хӑвала мана, ан хӑвала. Туйсам: манӑн ӗмӗр-ӗмӗр санпа пӗрле пулас килет. Хӗрхен тархасшӑн, чунсӑр ан пул, – хӑй, чӑн та, ирхи сывлӑш пулса, манӑн хурлӑ тӑвӑнӑç кӑкӑра уçӑлтарма хатӗр, унӑн хыпаланчӑк пӳрнисем тимлесех тӳмесене вӗçертме пуçларӗç... Кӗçех эпӗ пӗтӗм чуна çемӗçтерекен, ирӗлтерекен, чӗре çумӗнчи хаярлӑха вӗри хуранти пӑс пек сӗвӗрӗлтерекен евӗклӗ туртӑма туйрӑм... Хӑш вӑхӑтра тӗппипех салтӑнса вырӑн çине кӗрсе выртнине те астуса юлаймарӑм. Манӑн хӗрӳ ытамра Оля пӗтӗм пӗвӗпе вӗреме пуçларӗ...

26

Митя хӑйӗн Ольӑна пӗрремӗш хут курсанах куç умне манӑçми ӳкерӗнсе юлнӑ илемӗн асамлӑ туртӑмне ӑсра сӑнарланӑвӗ хӗрелсе-хӗрелсе пит çине тухасран хӑранӑ евӗрлӗ

тăнăçсăррăн хускалса илчĕ. Çакна Антуан асăрхамарĕ те тейĕн: сассийĕ ăста скрипач аллинчи сĕрме купăсла çамрăк чуна тыткăнлакан çепĕç кĕвĕсене суйларĕ.

– Çав каçхине эпир, лаçра хĕп-хĕрлĕ хĕрнĕ тимĕре шыва чикнĕ пек, малтан ытлашши хĕрсе, кайран темиçе кун каярах сасартăках сивлеке кĕрсе ӳксе пĕр-пĕрне çухатса, çухату сивĕкне-йӳçĕкне астивсе курнăскерсем, каллех çĕрĕпех çывăраймарăмăр.. Чун ыратăвне сиплерĕмĕр.

Ирхине Оля ăшĕ пăтранни çинчен каларĕ. Çывăрманран пулĕ тесе, ку сăмаха ăнкарса илмех тăрăшмарăм: «Юрăпа ĕçсем мĕнле сан?» – ыйтрăм унран.

– Юрă, кăмăл хĕрӳлĕхĕсĕр, хавхаланусăр, вилет. Чун туртăмĕ кирлĕ, ăна эсĕ çапса хуçрăн. Ăнтăлу çук.

Вăл урай çума пуçларĕ. Пичĕ шуранка. «Çĕрĕпех куç хупманран ĕнтĕ. Темех мар», – шухăшларăм эпĕ.

Оля, йĕпе мунчалине алран вĕçертмесĕрех, икĕ кĕрнеклĕ урине кăштах сарса, ывăннăн лутра пукан çине ларчĕ.

– Мĕн эсĕ?..

– Ăш пăтранать. Тăварлă пулă çиес килет.

– Халех илсе килетĕп. Тăварлă пулла юратмастăнччĕ-çке...

– Çие юлнă манăн.

– Мĕн терĕн?

– Пирĕн ача пулать.

– Ача-а?.. Ăçтан пĕлетĕн?

– Ĕнер врач каларĕ. «Иккĕмĕш уйăхра», – терĕ.

– Çуратас тетĕн-им?

– Паллах. Хамăрăн вĕт.

– Фу-у-у... – ăшри сывлăша ĕçлеме чарăнакан вĕркĕч пекех вăрăммăн сывласа кăлартăм эпĕ. – Вăт хыпа-ар...

Ольăна темиçе кун каярах кăна манăн ятăм та пачах ниме тăмастчĕ. Авă мĕн! Кĕтмен çĕртен вăл ман пата мĕншĕн хыпăнса вĕçсе килнин сăлтавĕ тинех уçăмлăн палăрса çитрĕ.

Эпĕ шухăша кайрăм: «Ача халĕ пире кирлĕ мар. Иртерех. Çитменнине, пĕрлешмен эпир: Оля хĕр, эпĕ – каччă. Ĕçчен

лашаран хăмăт тармасть. Çуратма мăшăрлансан та ĕлкĕрме пулать».

Хамăн уйлава Ольăна пĕлтертĕм те больницăна аборта кайма сĕнтĕм. Эпĕ мĕн хушнине, мĕн ыйтнине, мĕн кăмăлланине пурне те итлетĕп, пурнăçлатăп тесе сăмах панăскер, килĕшрĕ.

Ун патне больницăна питĕ паха чечек çыххипе кайрăм.

Палатăра пĕчченех вăл. Вырăн çинче выртать. Пичĕ сĕт пек шурă, тути хĕррисем кушăрканă. Кăвак куçĕсем эпĕ ăна шелленине курасшăн пулса ман çине салхуллăн йăлăнса пăхаççĕ.

Кравать хĕррине лартăм:

– Хăвна мĕнле туятăн?

– Вăй çук, ыттисем чиперех пек.

– Турра шĕкĕр. Эпĕ вĕрĕлесрен хăранăччĕ. Хĕрхенетĕп сана, Оленька.

Вăл мана алран тытрĕ:

– Халĕ ĕнтĕ тинех эпир телейлĕ пулатпăр-и?

– Тем тесен те пулатпăр, – терĕм ăна питĕнчен çемçен шăлса, пуçра хамăн çырмари çурхи шыв пек пăтранчăк шухăш явăнать: «Ăша хăшкăлтармалли тупрăм хам валли: халĕ ĕнтĕ ĕнсе çине утлансах ларать, тĕртсе те антараймăн. Кĕтсех тăр – каллех çие хăварать, кайран тата тепре... Икшер, виçшер çăвăрлама пуçлĕ. Самант – «хăçан çитет-ши?» тесе ача чухне çуннă чечен яшлăх иртсе те кайрĕ. Çамрăклăхпа, черчен ĕмĕтўпе сыв пуллаш. Канасси те, вĕренесси те пулмасть. Манăн вĕренмеллех. Чăн-чăн этем пулса çитни çинчен диплом илмеллех. Çук, авланма юрамасть, ир халь. Тепĕр енчен тата, кашни çын чĕринче ют куçа курăнман вăрттăнлăхсем пур. Ольăн та пур. Хитре кăн-кăвак куçĕнчен тинкернипе çеç мар, çаппа-çарамас чух витĕр пăхсан та курман эп вĕсене. Çие юлман пулсан, çак халĕ хама йăлăнса пăхакан шуранка чиперккене эпĕ кирлĕ те марччĕ. Ăна юратакансем, ўксе пуççапакансем мансăр та нумай. Пĕр пĕчĕк кăлтăкшăнах мана вăл çўп-çап шăтăкне ывăтрĕ пулсан, пурнăç вăл – тин çеç питĕ лайăх юсанă сехет

мар: пысăкрах кăлтăк тăвасси те пулĕ, – вара пĕр шухăшласа тăмасăрах тĕпсĕр путлăха ыватĕ. Мана вăл пĕркунах хăпма ыйтнăччĕ. Мĕнле майпа хăпса пĕтмелле-ха кунтан?»

Майĕ хăех тупăнчĕ. Нумай кĕттермерĕ. Оля вăй илсе çирĕплениччен кăна тăхтарĕ.

Центрти хаçат страницинче пĕр хулара эстрада юррисене юрлакансен конкурсĕ пуласси çинчен пĕлтерӳ пичетленнĕччĕ. Конкурсра çĕнтернисене чикĕ леш енчи çĕршывсенче палăрнă халăх юратакан ансамбле илеççĕ. Питĕ илĕртӳллĕ. Парижа, Лондона, Америкăна кайса çӳреме çул уçăлать. Унта сана кĕтеççĕ, чечек çыххисем ыватса алă çупаççĕ...

Ольăна хăйĕн пултарулăхне тĕрĕслесе пăхма канаш патăм.

– Пĕрле каятпăр, – терĕ вăл.

Манăн урăх ĕçсем пурччĕ.

– Эпĕ кайран пыратăп, санăн васкамалла – паянах вĕçтер, – çутă ĕмĕте пурнăçлассишĕн ăнтăлтарма тăрăшрăм ăна, паха ĕçе тума пĕртте тăхтама юраманнине палăртас килнĕрен.

– Юрĕ. Эсĕ пыр вара.

– Пыратăп.

– Тем пулсан та пыр. Кĕтетĕп. Чăтайми кĕтетĕп.

– Пыратăп, кăвакарчăнăм, ан шиклен, машинăна техосмотр тусанах пыратăп.

Билет илтĕмĕр те – çав кунах йĕпкĕн кăвак тӳпере каçхи çăлтăрсем савăнăçлăн йăл-йăл çиçме пуçласан кĕмĕл çунатлă самолет ăна, ман ытамран уйăрса çӳле-çӳле çĕклерĕ те, инçетри хулана илсе кайрĕ.

Эпĕ юлтăм. Пире пĕр-пĕринпе çыхăнтарса тăракан пăяв – те ырлăха, те хурлăха – татăлчĕ. Татăлчĕ... Оля текех каялла таврăнас çук: конкурсра çĕнтеретех вăл, шурă урхамах пек çиле касса ыră пуласлăха хирĕç вĕçекен телее çилхинчен ярса тытатех, – ăна ăмсанман, ăна юратман, унăн кăмăлне туллин тивĕçтермен çынсене курман эпĕ.

Телее алхапăл ярса тытма... пылак ĕмĕтлĕ яш-кĕрĕме кашнинех пўрмен. Шăпамăра хамăр суйласа илместпĕр эпир, вăл хăй пире суйласа илет.

Самолет куçран çухалчĕ. Оля сăнĕ – куç умĕнчех. Мĕнши ку? Çухату-ши е черчен чуна, чечен ĕмĕтлĕ ăнтăх чуна, ĕмĕрлĕх парне?

Çын пурнăçра сахал тупать, çухатма кашни кунах çухатать – мĕн курнине çухатать, утса çўренĕ йĕрсене çухатать, хăйĕн ĕмĕрне виçсе панă кунсене çухатать... – сисмест кăна.

Оля кайрĕ... Çав куна эпĕ яланлăхах çухатрăм. Ку çухату маншăн питĕ асаплă пулчĕ. Çак чечеклĕ-тумхахлă-тусанлă çĕр тăрăх мана мĕн чухлĕ утма е юплĕ туясемпе куçса çўреме пўрнĕ – сахал-и, нумай-и – эпĕ ăна нихăçан та манас çук.

Çакна эпĕ кайран тин, пурнăçра чи лайăххи хама сĕртĕнсе иртсе яланлăхах курăнми пулсан тин, яр уççăн тавçăрса илтĕм.

Антуан шăпланчĕ. Пўлĕм те шăпланчĕ.

Митя та хăй сисмесĕрех сулахай аллин пўрне вĕçĕсене икĕ куç харши пĕрлешнĕ тĕле тĕрентерчĕ: «Шухăшлаттарать... Чăн та, эпир, пĕр ĕмĕр пысăкăш пĕрнеллĕ хăйăр сехечĕн хăйăрĕ ним паллисĕр кимĕлсе тăнă евĕр, кашни самантрах хамăра виçсе панă чи хаклине – çеккунта, минута, куна – урăх нихăçан та каялла таврăнми яланлăхах çухататпăр. Çав катмар пĕрне тĕпĕнчи питĕ пĕчĕк шăтăкран тăкăнать, тăкăнать асамлă кунçул сехечĕн вĕтĕ хăйăрĕ. Куçа курăнмасăр тăкăнать. Пире чун кĕрсенех чăп тулли пулнă пĕрне кунран-кун, çуллен-çул хухнăçемĕн хухса пырать. Ăна никам та тытса чараймĕ...»

Каччă ассăн сывласа ячĕ: «Пурăнма васкас пулать».

Пурăнма васкас пулать. Нихăçан та вĕçленми çутă пуласлăх çук. Çак тĕнчере мĕн пурри – хĕвел, кăвак тўпе, илемлĕ ялсемпе хуласемлĕ ем-ешĕл тавралăх – пурте хаклă, вĕсенчен те чи хакли – ПУРНĂÇ!

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ

Хĕрарăм хăйĕн илемĕпе,
арçын хăйĕн юратăвĕпе вăйлă.
**Автор.**

Арçынна пурнăçра телейлĕ пулма виçĕ япала кирлĕ:
çирĕп сывлăх, тарăн пĕлӳ, лайăх арăм. Вĕсенчен пĕри
пулмасанах – вăл телейсĕр.
**Автор.**

### 1

Курорт вăл – курорт.

Тинĕс енчен кăшт çех уçă çил вĕрет. Капăр çуртсене сырса илнĕ çăра йывăççен çулçисем тӳперен вăтанăçлăн хĕртекен хĕвел пайăркисене хуçса аяккалла сапмалла выляççĕ. Ăшă сывлăш хумĕ пĕчĕк хула тăрăх хирти ăрша евĕрлĕ ирĕклĕн ярăнса çӳрет. Таврана тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен ырă шăрши сарăлнă. Таса, çутă, илемлĕ... Çĕр чăмăрĕ çине куç виçейми инçет пысăкăш сеп-сенкер кантăк хуран ӳпĕнтернĕ тейĕн. Тӳпере пĕр пĕлĕт татки те курăнмасть. Аялта, тинĕс катаран капланса килекен шурă кăпăклă хумсемпе хăйăрлă çырана лăпканă тĕлте – сарăрах çутă хăмăр шăналăк çине тĕрлĕ тĕслĕ çырла типĕтме сарса хунă евĕрлĕ хĕрлĕ-сарă-кĕрен эрешсем – кăкăр-çурăмне хĕвелпе пĕçертекен яш-кĕрĕм йăвă-йăвă выртса тухнă. Теприсем, вырăнта лара-тăра пĕлменнисем, ăшă чӳхенчĕк шывра шăмпăлтатаççĕ, пĕр-пĕрне ахах-мерчен тумламсемпе сирпĕтеççĕ... Вĕсенчен инçех те мар шурă парăслă кимĕ чăп-чăмăр пӳ-силлĕ çамрăк хĕрĕн чăн-чăн илемне ывăç тупанĕ çине çĕклесе тинĕс тĕкĕрĕ çийĕн пĕтĕм тĕнчене кăтартса çаврăнать...

Çук, ытарайми илем юмахра çех мар, тĕлĕкре те çех мар куç умне тухать. Вăл чăн пурнăçра та пур.

Кăнтăрлахи апат хыççăн Митя санатори кĕнекине илчĕ те палăртнă вăхăт тĕлне грязелечебницăна кайрĕ. Чĕркуççине пылчăкпа сиплеме талонсем панăччĕ ăна. Кăнтăрта пурте сиплĕ – шыв та, хĕвел те, пылчăк та.

Юратать Митя ҫак процедурӑна: нимӗн юлми хывӑнатӑн та брезентран карса тунӑ пӗчӗк пӳлӗмри кушетка ҫине тӑсӑлса выртатӑн. Чӑп-чӑмӑр кӑкӑрне шурӑ лифчик ҫыхнӑ, пиҫӗ пӳне ҫӑт тытса тӑракан шупка кӑвак кӗске шорты тӑхӑннӑ, хыҫҫӑр пушмаклӑ ҫара урисемпе ҫӑмӑллӑн утса пынӑ ҫамрӑк хӗр сан уру ҫине пӑсланса тӑракан ҫемҫе пылчӑк хурать, чӑркать, утиялпа витет. Вырт кӑна маччаналла пӑхса: ӑшӑ, канлӗ, пылак ӗмӗтлӗ... сиплен.

Вӑхӑт ҫирӗм минут ҫитсен ҫав хӗрех пӗтӗм ӗҫе каялла турӗ те Митьӑна тӑма хушрӗ.

Митя икӗ аллине пуҫ айне хурса ӑсра кунран-кун хушӑнса пыракан ытарайми самантсене сӑнарласа выртатчӗ. Кирек ӑҫта кайсан та – урампа иртсе пырать-и е черешня туянма черетре тӑрать-и – пӗр сӑн ниҫта та уйрӑлмастчӗ унран, пӗр ӑша ҫунтармӑш сӑн... Халӗ те хӑмӑр куҫлӑ пациент мӗн асра юлнисене пурне те пӗрле пухса тепрер хут лайӑххӑн киленсе-йӑпанса та ҫитеймерӗ – ҫирӗм минут иртсе те кайнӑ! Хӑш хушӑра? Ҫакна каччӑ пачах та сисмен. Пӗчченлӗх тунӑсхне нимӗн чухлӗ те ан туйтӑр тенӗн, ӑсра сӑнарланинче Оля хӑйӗн мӗнпур илемӗпе таса сывлӑш витӗр питӗ асамлӑн илӗртсе тӑчӗ ӑна. Вӑл пирчев кӗлеткипе авӑнса икӗ ал хушшинчен ҫӗлен пулӑ пек ҫӑмӑллӑн шӑвӑнса тухни, чӗре ирӗлсе каймалла хирӗҫ пӑхса йӑл кулни, йӗкӗр «футбол мечӗкне» астаруллӑн вылянтарса тикӗссӗн утни, сасартӑках чарӑнса тӑрса ҫӑра куҫ тӗкӗсене лӑс! усӑнтарса витӗмлӗн пӑхни, чӑп-чӑмӑр хитре урисене карӑнтарса чӳрече янаххинчен аялалла тӑсни – пурте, пурте, кашни хӑйне евӗр уйрӑмах хӳхӗм пуласшӑн ҫуннӑн, куҫ умӗнче ҫутӑ кӳлӗ ҫине ӳкнӗ хӗвел шевли пек лӑпкӑн вылянса тӑчӗҫ.

Ҫав кунашкал ытарайми урӑх пулма пултарайман илеме шӑп чи ырӑ тӗлтен пырса татрӗ сиплевҫӗ ҫамрӑк хӗр.

Тин ҫеҫ лачакаран тухнӑ сысна ҫури евӗрлӗ пылчӑкпа вараланнӑ Митя тулли кӑмӑлпа ҫӑвӑнмалли хӳтӗ патнелле утрӗ.

Маччасӑр ҫӑмӑл душ пӳлӗмӗсене те кунта брезентран карса тунӑ. Пӗр-пӗринпе юнашар хӗреслене тӑракан тӑватӑ пӗчӗк

пӳлĕм, шăнкăрч вĕлли евĕрлĕскерсем. Иккĕшĕ хĕрарăмсен уйрăмĕ енче, тепĕр иккĕшĕ – ку енче.

Пӳлĕмсем пушшипе пушă маррине катаранах курăнма пуль – усăнса тăракан карă хĕрри кашниннех çирĕм-вăтăр сантиметр таран урайне çитеймест. Нимĕнле карăсăр уçă хушăра ирĕклĕн вылять нӳрĕ сывлăш.

Митя халь анчах пушаннă пӳлĕмĕн чаршавĕ хыçне кĕчĕ çеç – часах ăна ăшă душăн кĕмĕл хĕлĕхĕсем умран та хыçран çупăрласа çемçен-çемçен кăтăклама пуçларĕç.

Шывлă урай тĕкĕр евĕрлĕ çутă, таса. Çав таса тĕкĕр çине чаршав хĕрри айĕпе юнашар пӳлĕмри душра çăвăнаканăн шупка кĕрен кĕлеткин илĕртӳллĕ сăнĕ ӳкет.

Юнашар пӳлĕмри «тĕкĕрте» Митя пекех тин кăна пылчăкран тухнă тепĕр хӳхĕм хĕр вĕттĕн-вĕттĕн пĕрхĕнекен кĕмĕл хĕлĕхсен хушшинче авкаланать. Унăн чечен ĕмĕлкин кашни хусканăвĕ марля витĕр курăннăн лайăхрах тинкерме хистесе уçăмсăррăн палăрать. Ытла та илĕртӳллĕ...

Илĕртӳ вăл – ют пахчари çырла евĕрлĕ: пĕлетĕн, татма юрамасть, çапах та ун çине куç хӳрипе те пулин пăхса илес килет. Кăмăл ыйтăвĕн, чун ыйтăвĕн чиккийĕ çук. Çын хăех ăна тытса чарма пĕлет. Анчах... пур чухне те мар.

Пăслă пӳлĕмре çурма çутă. Ăшă-ăшă юхă çыххи çара ӳте çапăнса саланнă йăлкăш тумламсем урайне сирпĕнеççĕ. Шăппăн илтĕнет юнашар хӳтĕри душ кĕвви. Унăн хăюсăр сасси кассăн-кассăн улшăнса илнĕ май хĕр тĕрлĕ-тĕрлĕ хăлаçланса çаврăнкаланнине туятăн. Ах, çак вăхăтра хăть самантлăха та пулин карă пулминччĕ!

Митя темиçе хутчен те аллине каркăç еннелле çĕклеме тăчĕ. Çук, чăтаймарĕ – йăпшака шиклĕхе вăйпа пусарса брезент хĕррине кушак пек хăюсăррăн пĕчĕк хушăк туса кăшт кăна уçрĕ. Уçрĕ те – унăн куçĕ умне янтарь шывĕпе çăвăнакан хип-хитре ангел тухса тăчĕ... Кунашкаллине Митя çуралнăранпа та курман. Ку вăл – ĕмĕтленнĕ ĕмĕтри чи асамлă илем! Каччă куçĕсем шарса кайрĕç, хускалми пулчĕç.



***... шурă парăслă кимĕ чăп-чăмăр пӳ-силлĕ çамрăк хĕрĕн чăн-чăн илемне ывăç тупанĕ çине çĕклесе тинĕс тĕкĕрĕ çийĕн пĕтĕм тĕнчене кăтартса çаврăнать...***

Хĕр те асăрхарĕ йĕкĕте, шăпах ун еннелле çаврăннăччĕ вăл, кăтрака йĕпеннĕ çӳçне хул пуççи çинелле ывăтатчĕ. Çамрăкскер, сирень çеçки евĕр сенкер куçлăскер, хăраса ӳкмерĕ, кĕмĕл юхă айне кукленсе ларса çухăрса ямарĕ. Ирĕкре, тăван килтен темиçе пин çухрăм аякри çĕрте, çынсем ытлашши вăтанмаççĕ. Хитре чечекрен хитре лĕпĕшсем те тармаççĕ. Йăлл! кулса илчĕ тап-таса кĕрен питлĕ хĕр, каччă чĕрине çемçен пăлхатса хăйĕн пĕтĕм чăмăр е сĕвек тĕме-тĕмекĕсем уçăмлăн курăнмалла хăяккăн пăрăнса тăчĕ. Мĕнешкел чеченлĕх! Куçа хуп та именĕç сăнчăрне татса вут урлă сик.

Этем çавăнпа этем вăл: унăн ăс пур, тавçăрулăх пур, чăтăмлăх пур, хăйĕн чун хĕрӳлĕхĕн вăйлă туртăмне чи вĕри самантра та тытса чарма вăйĕ пур. Ăна ирĕксĕрлесе кăкарма чĕн йĕвен кирлĕ мар.

Сăпса сĕрлевĕ саслăн шарлатса вуншар кĕмĕл хĕм пайăркисене сапать ывăнма пĕлмен душ. Хĕрĕн çутă кĕрен пĕвĕ тăрăх чупакан ахах шăрçасем аялалла тăкăнаççĕ... Икĕ пукане пек чечен тăлпăва лăпкать-лăпкать ăшă шыв. Пĕртен-пĕр пĕчĕк карă уйăрса тăрать вĕсене...

Чатăра каччă питĕ шеллевлĕ туйăмпа хупрĕ.

Халиччен Митя уйрăмах лайăххисенчен хĕвеле, чечеке, таса сенкер инçете курма хăнăхнă. Илемлĕхĕн тӳпийĕ кусем çех те мар иккен.

Лечебницăран Митя пыл пек пылак ĕмĕтпе тухрĕ.

Илемĕн, пылаклăхăн, чун-вар ыйтăвĕн виçи çук; вĕсен кирлĕлĕхĕн чӳлмекĕ тулса çитсе хĕрринчен тăкăннине нихăçан та кураймăн. Тикĕс асфальт тăрăх çăмăллăн сиктерсе пыракан автобус çинче ырă туйăмсен ытамне путнă каччă хăйне ăрша вылявĕллĕ ем-ешĕл улăх çийĕн хăлха çакки курăкĕн мамăкĕ евĕрлĕ ним хускалмасăр вĕçнĕн туйрĕ. Çил тĕлĕрет, тĕлĕрет тавралăх... лăпкă-лăпкă: чĕлтĕрти шупка сирень тĕтрийĕ асамлăн çупăрланă ăна.

Санаторие çитсен те сĕвĕрлмерĕ çав ăшă лăмлă лечебницăри симлĕ хитре авăк-тĕмек-путăксемлĕ тап-таса кĕренлĕх... Куçа хупсан та куç умĕнчех вăл. Çакнашкал ытарайми

чечене сипетпе Антуан тахçанах кăмăлĕ ыйтнă таранах киленсе курнă. Унăн калавĕ ĕнĕçсĕр хĕрӳллĕ юрату çинчен хывнă эпосла поэзие çывăх. Митьăна вăл чăн-чăн пурнăçа аякран мар, крыльца вĕçĕнчен те мар, чĕре çӳллĕш çĕкленĕ ывăç тупанĕ çинче çывăхран курма вĕрентрĕ, вĕри чĕрине çав чăн пурнăç романĕн тĕп геройĕсен туйăмĕ-юратăвĕ-шăпийĕ çинчен ытларах та ытларах пĕлесшĕн çунма хистерĕ. Роман вĕçленмен-ха. Грязелечебницăри кĕмĕл душ айĕнчи чакăр сирень куç унăн кăсăклăхне татах ӳстерчĕ, тата çепĕçрех, чеченрех турĕ. Калав икĕ хитре чечеке кăра çил ватнă тĕлте татăлнăччĕ. Малалла мĕн? Кам тупнă, кам сыпнă вĕсен шăпине?..

Çемçе вырăн çине салтăнмасăрах канма тăсăлса выртнă курортник сасартăках пуçне çĕклерĕ: тăчĕ, галстукне тӳрлетрĕ, алăк патнелле утрĕ.

2

Митя алăкран шакканă чух Антуан хаçат вулатчĕ.

– Тархасшăн! – терĕ вăл вырăнтан хускалмасăрах. Майĕпен уçăлакан хушăкран каччă пуçĕ курăнсанах сассийĕ хапăллăн хавхаланчĕ: «Иртĕр-иртĕр! Ан именĕр...»

Хăтлă палата. Чуна çывăх япаласем пурте хăйсен вырăнĕнче: стена çумĕнче – гитара, сĕтел çинче – сарă роза çыххи... Оля çук. Çакна Митя пӳлĕмре духи шăршин сӳрĕклĕхĕнчен пĕлчĕ: Пĕлчĕ те – питĕнче çийĕнчех темĕнле питĕ йăпшакан вĕлтлетсе илчĕ вăйсăр салху сĕм: «Шел, унăн палăри-палăрми йăл куллине вăрттăн та пулин пăхса илеймĕн. Ах, пăхса илеймĕн...»

Калаçу тĕнче хыпарĕсене сӳтсе явнипе пуçланчĕ. Унтан Антуан хаçата тирпейлĕн хуçлатса хулăн кĕнеке айне хучĕ те – сăмах-юмах хăй тĕллĕнех пĕркунхи вĕçленеймен лирикăллă калавăн йĕрĕ çине куçрĕ.

– Çапла, Оля кайрĕ, – чăлт шурă кĕпе çухавине пӳрне вĕçĕпе ерипен уçрĕ Антауан. – Эпĕ чул юпа пек хытса тăрса юлтăм. Ăсатакансем часах тĕрлĕ еннелле саланса пĕтрĕç. Манăн киле каяс та килмест. Каян-киленсемпе хĕвĕшекен аэровокзалран суд залĕнчен тухнăн пусăрăнчăк кăмăлпа пуçа тарăн шухăшлăн усса тухрăм. Паллă мар пуласлăха хирĕç хама кĕтекен çăмăл машина

патнелле васкамасăр утатăп. Ура айĕнче мĕн пуррине те туймастăп.

Ăшши-пăшшипе хам мĕн туса хунине çийĕнчех нимĕн те пĕлмерĕм, – пурнăç çулĕ тап-такăр, тип-тикĕс, çап-çутă пулассăн туйăнатчĕ, анчах манăн туйăм ăсра сăнарлакан ултавлă шухăшпа явăçса кайнă-тĕр. Оля çăра пĕлĕтсем витĕр таса инçет уçăлса пынине курма хăнăхса та çитмерĕ пулĕ – мана сенĕкпе те тирсе сирейми йывăр тунсăх пусрĕ. Манăн ку таранччченхи пурнăçра кунашкал пысăк телее çухатни пулманччĕ.

Çухатнă япалана манас тесен, унран лайăхраххине тупмалла, унсăрăн манаймастăн. Хурлăхпа савăнăç шайлашăвĕ çавăн пек йĕркеленнĕ. Пурнăçра кашни çынна хăйĕн кăмăлĕ ыйтнине тивĕçтерессишĕн çунмалла тунă. Унта айăплисем те, айăпсăррисем те çук.

Йăнăшсем пулнишĕн кунсем чарăнса тăмаççĕ. Мĕн пулма пӳрни хăйĕн йĕрĕпех пырать. Унран пăрăнса иртейместĕн.

Кунсем иртеççĕ те иртеççĕ. Тунсăха сирес тесе ытларах уçă сывлăшпа йăпанма тăрăшатăп. Пĕррехинче пыратăп çапла хула тăрăх пĕччен. «Мерседес» та мана пит шеллет пек: сăпка юррине ĕнĕрсе сиктерет – çĕтсе çӳрекен телейĕме шыраса инçет хĕррине те вĕçме хатĕр. Пире хирĕç ерипен куçать çут тĕнче. Çуртсен хыçне пытаннă ката уçăлса пырать. Катаранах куратăп: автобус кĕтмелли вырăнта пĕр хĕр умри машинăна чарăнма ыйтса аллине çĕклерĕ. Водителĕ темшĕн ун çине çаврăнса та пăхмарĕ. Эпĕ çывхараспа малалла тăснă çинçе пӳрнесем каллех çемçен вылянса илчĕç.

Чарăнтăм.

Çаврака питлĕ хĕр çăмăл алăка уçрĕ те, кĕске юбка аркине тытса, нимĕн ыйтмасăрах юнашар кĕрсе ларчĕ. Эпĕ вăл кăштах хĕрĕнкĕреххине сисрĕм. Шупкан хĕрелнĕскер мăйĕ умне усăннă çăра тĕксĕм хăмăр çӳçне хул пуççи хыçнелле ывăтрĕ те юбкине тӳрлетрĕ. Сăмах хушма васкамарĕ: асĕнче таçта темĕн манса хăварнине шырать тейĕн.

Ирĕксĕрех ыйтма тиврĕ:

– Сирĕн ăçта каймалла?

– Ăçта илсе каятăн...

Кунашкал хурава эпӗ пачах кӗтменччӗ. Ҫапах именсех каймарӑм. Сасартӑках пӑтраннӑ шухӑш самантрах тӑрӑлчӗ:

– О,кей, эппин кайрӑмӑр...

Машина хускалсанах хӗр ҫӑмӑллӑн сывласа ячӗ. Эпӗ ӑна шанма пуҫланӑ чечек пек сӳрӗкленнӗ кӑвак куҫӗнчен пӑхрӑм:

– Кампа ӗҫрӗн?

– Санпа-а, – ҫаврака хул пуҫҫийӗпе йӗкӗлтевлӗн хытах тӗртсе илчӗ мана вӑл. Ӗмӗтсӗр выҫӑх яшсене сахал мар курнӑ пулас. Хӑюллӑ. Ҫара чӗркуҫҫийӗнчен ӑшшӑн тытнипе ӑна тӗлӗнтерейӗмӗн. Карапа ҫӑтакан авӑрӗн анинче арҫын пӳрни йӗррисем вӑтанчӑк ача питӗнчи кук тӗрринчен те ытларах пулӗ. Пилӗк унки-резинкин нимӗн тытӑнки те ҫук, паллах. Ҫакна сӳрӗк куҫӗнчен пӑхнипех туятӑп. «Ку «лӗпӗше» кил тӗлне кӑтартма юрамасть. Хула тулашӗ... Ҫав кӑна», – ӑшӑмра сӗмленетӗп хам.

Хула тулашӗнче эпӗ ҫывӑхри-катари кашни тӗмене, кашни вара пӗлетӗп. Вӗсенче эпир Ольӑпа таптанӑ вырӑнти куракӑсем халӗ те кукӑр ӳсеҫҫӗ.

«Мерседес» хӑвӑртлӑхне хушрӗ.

Ларкӑч ҫӑмӑллӑн сиктернӗ май юбка хӗрри ерипен шӑвӑнса ҫур пӗҫӗрен иртрӗ. Ҫара чӗркуҫҫи хӗвел ҫутипе йӑлкӑша-йӑлкӑша илет. Эпӗ сылтӑм алла икӗ тайлӑм хушшине хутӑм. Хӗр, ҫакна ҫеҫ кӗтнӗн, урине кӑштах куҫарса кӗрӗрех пӗвӗпе ларчӑк хыҫӗ ҫумне меллӗнрех сӗвенчӗ, пуҫне тӑнӑҫлӑн ҫемҫе пуҫелӗк ҫине хучӗ. «Ме, хуҫалан», – тени пулчӗ ӗнтӗ ку.

Ывӑҫ тупанӗ яка ӳт тӑрӑх йӗлтӗр пек шуса часах кӗрен чечеклӗ плавки ӑшне кӗрсе кайрӗ. Мамӑк перечетке евӗрлӗрех хыса айне хӗсӗнчӗ...

Машина васкать. Ҫул хӗррипе ҫынсем, йывӑҫсем, юпасем вӗлтлетсе юлаҫҫӗ. Эпир иксӗмӗр те пӗр сӑмах та чӗнместпӗр, – пурте сӑмахсӑрах паллӑ. Хӗр хӑйне кунашкал ют аласем лӑпканине тахҫанах хӑнӑхса ҫитнӗ, эпӗ хамӑн йӑшӑлти тунсӑха хам ҫумран аякка хӑваласшӑн. Хӗрӗн кашни хусканӑвне Ольӑннипе танлаштаратӑп: пӑхнине, сывланине, алпа тытнине... Уйрӑмлӑхсем пур. Самай.

Мана çав тĕлĕнтерчĕ: Ольăпа ярăннă чухне, эпĕ унăн куçне уçайман «тюльпанĕн» сывлăмпа витĕннĕ икĕ çăтă çеçкипе пӳрне вĕçĕпе пĕр-пĕринпе çемçен-çемçен сăтăрса выляса пыраттăм. Ку «чечекĕн» вара... çеçки пĕрре çеç! Меллĕ мар тепле... питĕ сисĕмлĕ «ăман пуçне» шыраса тупаймастăп. Аптăранă енне икĕ пӳрнене шывак путлăха путарса йытпулли евĕр вылянтаратăп...

Сăпкари пек киленĕçлĕн ярăнса пыракан «сарă лĕпĕш» сывламасть те тейĕн. Капла ăна питĕ канлĕ пулас. Çавна эпĕ кайсан-кайсан икĕ пӳрне вĕçне çатма çинчи çу пек ă-ăшăскер лĕ-ĕп! ирĕлсе аннинчен туйрăм.

Çук, çапах çак кашни иртсе каякан çумне çыпçăнакан астарчăк Ольăн хăрах туфли кĕллийĕ тĕшне те тăмасть: çамрăк пулин те – сӳсленчĕк, сӳрĕк, ленчешке – ним хĕлхемсĕр.

Пĕр ем-ешĕл пĕчĕк васана çитсе уй-хир куçĕнчен пытансан мотора сӳнтертĕм. Хĕре мĕнле чĕннине те пĕлместĕп. Ыйтма та кирлĕ мар. Мĕн пулмалли пĕр сăмахсăрах питĕ лайăх майлашăнса пырать. Ларкăч хыçне вырттарсанах салон çемçе тӳшек пулса тăчĕ. Ун çинче Оля çутă кӳлĕри хĕвел шевли пек куçа йăмăхтаратчĕ. Ку нӳрĕкскерĕн, сӳсленчĕкскерĕн, тӳшек çинче те хĕр чĕрĕлĕхĕ пĕтнĕ; илĕртӳ ăршийĕ пачах юлман: кӳлепи пур, илемĕ çук, техĕмĕ çук – чунсăр курпăль татăкĕ. Ӳчĕ хавшак, мăйĕ кĕске. Çурăмĕ çине ӳпĕнсен пушанка кăкăрĕ нимĕн палăрмасть. Хăй, тĕрлĕрен ытамра тĕвĕнсе-лăпчăнса, пыл тутине те пĕлми пулнă. Хуппине сӳнĕ çарăк пекех çарамасланчĕ. Эпĕ ăна авкалантарас тесе хура тара ӳкичченех ăшталанатăп, вăл тулли мар çемçешке çăнăх миххи евĕрлĕ ăçталла тĕртетĕн, çавăнталла лапчăнать, нимĕнле хĕрӳлĕх палли те çук, лăмлă путăкĕн – ни тĕпĕ, ни çыранĕ...

Оля... иксĕлми телей çыххиччĕ! Мĕн чухлĕ хитре çамрăк хĕр çĕр çинче! Вăл пĕрре çеç. Ун пеккине эпĕ урăх кураймăп, пурăнса иртнине... каялла тавăраймăп. Тавăраймăп.

Пуçа минтер пек лĕпĕшке хĕр кăкăрĕ çине хутăм. Пурне те, пурне те манас тенĕ чух чĕреçĕм пушшех ыратса кайрĕ.

3

– Хитреччĕ-и? – ыйтрĕ Митя пач палламан йĕкĕте çăмăллăн парăннă хĕр çинчен ытларах пĕлесшĕн пулса.

– Мĕнле калас, – кăштах тытăнса тăчĕ Антуан. – Сăнĕ аптăрасах каймасть. Унсăрăн эпĕ машинăна чарман та пулăттăм. Унашкал чăмăр питсене арçынсем юратаççĕ. Анчах ăна Ольăпа тĕлĕкре те танлаштараймăн. Оля тинĕсри кăра хумсене те пĕрре пăхнипех хускалми тума çуралнă. Мана вăл йывăр туйăм парса хăварса хама тытса чарайми турĕ.

Антуан тарăннăн сывласа ячĕ. Чӳрече витĕр шупкан кăваккăн инçете-инçете тăсăлакан тинĕс анлăшĕ курăннă тĕлелле пăхса пĕр вăхăт чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан журнал сĕтелĕ çине сарса хунă хаçата тытса тирпейлĕн хуçлатрĕ те малтанхи вырăна хучĕ.

– Темĕн те çыраççĕ, – пуçне тарăн шухăшлăн сулласа илчĕ çамрăклах туясемсĕр утайми пулнă Антошка. – Вĕрентесшĕн. Вулатпăр. Анчах пурнăçăн хăйĕн екки, хăйĕн утти, хăйĕн рельсĕ. Ăна çав çирĕп туртăмран пăраймăн, – вара вăл çăра хулăн çӳçне яланхилле икĕ аллипе хыçалалла сирчĕ те Митьăна куçĕнчен тӳррĕн пăхрĕ:

– Вакуум мĕнне пĕлетĕр-и эсир? – тилмĕрчĕ вăл пачах ниме кирлĕ мар ыйтăва хускатса.

Вакуум ним çук пушă вырăнти вăйлă туртăм пулнине Митя лайăх пĕлет. Анчах ăна тепĕр çынна уçăмлăнрах ăнланмалла тĕп-тĕрĕс епле каламалла-ха? Тахçан вăл ку сăмаха Ожегов словарĕнче вуланăччĕ, çавна аса илчĕ:

– Вакуум – пĕр-пĕр япала тĕппипех чакса нимсĕр тăрса юлни, – çăмăлах та, йывăрах та мар çĕклеме хул пуççи çинчен хывнăн ерипен кресло хыçĕ çумне сĕвенчĕ каччă.

– Çук, ку тулли хурав мар, – тӳрлетрĕ ăна Антуан. – Вакуум вăл – ним çук çĕрти пушă вырăна мĕн туртăнма кирлине вăйпа туртăнтарса тăракан туртăм. Çĕр çинче мĕнле чĕрĕ чун пур – патша-и вăл, тарçă-и, слон-и вăл е микроб-и – эпир пурте куçа курăнман таса вакуум туртăмĕнче пурăнатпăр. Кашнин чун тĕшшин тытăмĕнче ĕмĕрне те тулайми пушăлăх пур. Хитре хĕрсене, арăмсене, ют çын арăмĕсене эпир мĕншĕн чуп тăватпăр? Çав куçа курăнман вакуума, чун-кăмăл туртăмĕн пушăлăхне тултарассишĕн. Çапла-и?

– Тĕрĕс те пулĕ, – хăй хирĕçлеменнине иккĕленӳллĕнрех палăртрĕ Митя.

– Тĕрĕс те пулĕ мар – тĕп-тĕрĕс. Урăхла пулма пултараймасть. Ольăпа пĕрле чухне эпĕ çав пушăлăха асăрхасах кайманччĕ. Чунăм хăвăлланса юлнине Оля ларнă самолет курăнми пулсан йĕпе асфальт тăрăх машина фари каçхи урамра кашни кĕтес-хушăка хыпашласа пынă вăхăтра туйрăм. Хуп-хура тĕнчене шăтарса пыракан сарă хумлă çутăра – Оля тата эпĕ... Пĕр чечекĕн икĕ уйрăм çуначĕ çинчи икĕ сывлăм тумламĕ. Телейлĕ тĕл пулупа телейсĕр уйрăлун манăçми тĕслĕхĕ. Эпир пĕр-пĕрне çав тери хытă юраттарас килнĕ вăхăтра тĕл пулнă. Хытă юраттарнă. Çапах та пĕр-пĕрне витĕрех куракан пулайман. Кăмăлсен шайĕ тĕрлĕрен пулнă.

Икĕ пĕр пек кăмăллă çын тĕнчипе те çук. Кашни çын – хăйне евĕрлĕ тĕнче: хăйĕн хĕрӳлĕхĕ, ĕмĕчĕ, тĕллевĕ. Кашнин чĕринче хăйĕн уйрăм ăнтăлу. Пурнăç – тĕлĕк мар. Тĕлĕкре эпир çунатсăрах вĕçетпĕр, шыв тĕпĕнче те тинĕс лăймакине сирсе ишетпĕр. Çĕр чăмăрне хамăра килĕшнĕ майлă çавăрма пултаратпăр. Чăн пурнăçра этеме хăйĕн паллă мар шăпине пăхăнма пӳрнĕ.

Ольăна пула эпĕ вĕренӳре çулталăк планне тултараймарăм: вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ тĕле «хӳре» юлчĕ. Деканатра мана çав «неуда» çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланиччен тӳрлетмесен университетран кăларса ярасси çинчен пĕлтерчĕç. Ку – иçĕм çырли çиесси мар, начар япала. Хыпăнса ӳкрĕм. Преподавательсем отпускра. Тĕп дисциплинăна вĕрентекен доцент патне ирĕксĕрех килне кайма тиврĕ.

Алăка самаях интеллигентла утмăл çулсенчи арçын уçрĕ:

– Эсир кам патне? – шăтарасла пăхрĕ вăл ман çине. Сăнĕ вичкĕн.

– Университетран эпĕ. Ангелина Феофановна кирлĕччĕ... – тетĕп.

Кӳпшемкке арçын зала кĕрсе çухалсанах алăк кукрине сăнне курнă-курманах хăйне чĕмсĕррĕн пăхăнтаракан Ангелина тухрĕ. Ăна эпир коридорта та, аудиторире те тӳррĕн хирĕç пăхма хăраттăмăр. Пĕрре пăхнипех тĕксĕм кăвак чула та ним мар ватакан çав тери хаяр хĕрарăм: куçĕсем – хура кăвар, чĕлхи –

çивĕч хĕç... Вăл ÿхĕнни пек сăмала кусĕпе шăтарасла пăхсанах ман пĕтĕм хастарлăхваткă пулса пĕрĕнет.

– Мĕн ыйтупаччĕ? – типпĕн ыйтрĕ доцент.

– Ангелина Феофановна, чăрмантарнăшăн каçарăр. Экзамен пирки эпĕ... Вăхăтра параймарăм.

– Ман ĕç вырăнĕ университетра.

– Эсир отпускра терĕç те... Йышăнсамăр ĕнтĕ...

– Ху мĕн каланине кăштах та пулин чухлатăн-и эсĕ? Ку вăл – экзамен! Эпĕ хамăн килтен аудитори тумастăп.

Алăк кукри пĕр вăхăт тарăн шăплăхпа хупланчĕ. Ним калама та пĕлместĕп. Ăш вăркать. Йывăрлăхран тухмалли май тупасшăн.

– Енчен... ман килте?.. – хам сăмахран хам шикленсе ÿкрĕм эпĕ. – Эп пĕчченех. Чăрмантаракан никам та çук. «Мерседес» подъезд умĕнчех. Кайăпăр-и?

Кăнн! пăхрĕ ман çине хĕрĕх пилĕк çулсенчи хĕрарăм:

– Ытлашши хăюллă эсĕ. Чăрсăр.

Эпĕ хуçăк кăмăллăн пусăрăнса хирĕç чĕнменнине кура-ши ÿкĕте кĕрес çукла хаяррăн пăхрĕ пулин те кăштах шухăша кайса тăрсан «сирĕнпе шалт аптрамалла» тенĕн кĕскен сывласа илчĕ те хăй тумланса тухасса кĕтме хушрĕ.

Çул çинче нимех те калаçаймарăмăр. «Мерседес» кукăр-макăр урам тăрăх шăши евĕрлĕ çивĕччĕн йăпăртатса пырса пире часах кил умне илсе çитерчĕ.

Фиалка шăршиллĕ пÿлĕме эпĕ чÿречесене уçса хăварнăччĕ. Экзамен шăплăхра пулмалла. Хула шавĕ ытлашши ан илтĕнтĕр тесе чÿречесене хупрăм.

– Ку кам? – ыйтрĕ Ангелина Феофановна пысăк залра стена çумĕнчи Оля портретне курсан. Унта Оля çурă таранран ытларах уçăлнă кăнт хытă çара кăкăрĕсемпе илĕртсе хăяккăн пăрăнса тăратчĕ. Кăштах усăннă çăра куç хăрпăкĕ айĕнчи куçĕнче çав тери черченкĕ кулă.

– Юрăçă, – тетĕп, – палланăскер...

– Илемлĕ хĕр. Сĕм суккăр куçа та шартса йăмăхтаракан илем! – çемçен пăчăртанă ывăç тÿртне пит çăмарти çумне

перĕнтерсе пуçне тайăлтарчĕ Ангелина Феофановна. Хаяр çыннăн та илемлĕх туйăмĕ...

Антуан сăмаха каласа пĕтерейменрĕ – шăп çак вăхăтра палата алăкĕ çемçен сас пачĕ те майĕпен уçăлакан хушăкра кăкăрĕ умне пĕчĕкçĕ чечек çыххи тытнă Оля курăнчĕ. Куçĕ хĕм сапакан кăнкăвак кевер чулĕ пек, пичĕ хĕвел пайăркисемпе йăлкăшакан кĕрен шар евĕрлĕ.

Митя чĕри кăрт! турĕ. Çиçĕм хĕмĕ пырса тиврĕ тейĕн: ыраттарса мар, пылаккăн-пылаккăн пĕçертсе. Эх, çакăнта халь Антуан пулас мар пулсан! Эх... Куç умĕнче чуна туртса ĕмекен чеченлĕх. Алăк та уçă. Анчах ун патне амăшне курнă пĕчĕк ача пек чупса пыма çук. Юрамасть. Ют çын арăмне вăрттăн юратаканăн чĕрине икĕ вут çунтарать: пылаклăх тата шиклĕх. Антуан Митьăшăн Ольăн пĕр пӳрни вĕçне те пулин тытса тăрса самантлăх йăпанма чаракан та, çав вăхăтрах ăна курма, унпа тĕл пулма, ăна куçĕнчен вăрттăн-вăрттăн пăхса илсе киленме пулăшакан та пулчĕ. Çавăнпа та каччă хăйне халь хĕп-хĕрлĕ пиçнĕ çĕр çырли йăранĕ тавралла тытса çавăрнă йĕплĕ хӳме умĕнче ларнăн туйрĕ.

Антуан Ольăна Митьăран каярах курчĕ: вăл алăк еннелле айăккăн ларатчĕ. Çапах та пӳлĕмри сывлăш чӳрече каррине кăтралатса çемçен хускатнине Митьăпа пĕр вăхăтрах сисрĕ.

Темиçе минутранах тарăн кюветра тăна кĕтĕмĕр. Эпир кутăн-пуçăн çаврăнса ӳкнĕ. Çав хĕрӳллĕ чуптăвăм мана çĕнĕ «иномарка» хакне ларчĕ. Пырать, пĕр-пĕр фургон айне чăмман. Ун чухне пирĕнтен пĕр асаилӳ кăна юлатчĕ. «Мерседеса» халĕ те çавăншăн юрататăп: хăй кутăн-пуçăн вăйкăнса хытах вансан та пире çăлса хăварчĕ. Питре те, кĕлеткере те пĕр суран та çук. Икĕ чĕрене вĕри тутасем урлă сыпăнтарнă биополе туртăмĕ чечек пек хӳхĕм Эльзăпа иксĕмĕре тĕп-тĕрĕс-тĕкел сыхласа хăварчĕ пуль?

11

– Кĕпепе çуралнă эсир! Иксĕр те, – пуçне сулкаласа илчĕ Митя. Унăн кăштах хĕрелнĕ питĕнче хытах тĕлĕнни палăрчĕ.

– Çав кун ăраскалăм шеллерĕ мана, – терĕ Антуан. – Шеллерĕ... Тен, юлашки хут.

– Мĕншĕн апла калатăр?

Кунашкал ыйту піласса малтанах сиснĕн, калавçă кăмăллăн сывлаcа илчĕ:

– Пĕлетĕп: пурнăç вăл – ырăпа усал хутăшĕ. Иçĕмĕ те пур унта, эрĕмĕ те... Иçĕмне эпĕ çисех пынă, эрĕмне – иртсе пĕтерейĕмĕн.

Ольăна пуçĕпех манас шутпа çак тин çех пиçме пуçланă хĕр пĕрчисемпе явăçса кайса эпĕ кунпа çĕре те пăтраштарса ятăм. Вĕсем мана ухмаха кăларчĕç. Кăмăл çӳпçийĕ анинченех тулнă савăнăçа каласа кăтартма хевте те, май та çук, – çепĕç сăмахсем çитмеççĕ.

Вĕсен кофеинпа карăнтарнă йăва пек чăмăр кăкăрĕсене чуп туса ӳсĕрĕлнĕ хыççăн çумăр шывне юратакан ешĕл калча евĕрлĕскерсен ытамĕнче çывăрса каяттăм, пит çăмартине сайра-сайра мамăк вĕçĕ кăтăкланипе вăранаттăм.

Ăшă тӳшек çинчи вăйă искусствине çак çăра куç хăрпăкĕсене илĕртӳллĕн усăнтарса кăштах именчĕклĕн пăхакан йăлтăр куçлăскерсем манран лайăхрах пĕлни пĕтĕм тĕнчене мантарчĕ. Хĕвел анать-и, çумăр çăвать-и – чун туртакан çурт патне каймалли çула куçа хупсан та пĕлеттĕм.

Пĕррехинче пыратăп çапла каçхи урампа. Умра мĕн пуррине те курмастăп. Мана тытса чарчĕç. Тăваттăн. Пĕр телейсĕр кун

эпир вĕсемпе троллейбусра çапăçнăччĕ. Çĕркăмрăкĕ пек хура та вичкĕн куçа тӳрех палласа илтĕм. «Ах, шыраса тупрĕç иккен!» – вĕлтлетсе илчĕ пуçăмра сивĕ хĕм, мана «масар тĕпĕнчен те шыраса тупатпăр» тенĕччĕ вăл.

Вĕсем сăмах та чĕнмерĕç – хаяр йытăсем пек ман çине тăваттăн пĕр харăс сиксе ӳкрĕç: тӳрех çичĕ е сакăр тимĕр алпа тӳпкеме пуçларĕç. Кашни чи ыратакан тĕлтен тивертесшĕн çунчĕ. Эпĕ пултарнă таран хӳтĕленме тăрăшрăм, хам тискер кашкăрсен айне пулнине туймасăр пĕтĕм вăйран турткалашрăм, пуçа пĕксе кăкăра хупларăм. Шăп çак вăхăтра вара – кам шутланă, кам тĕлленнĕ? – мĕн пулмаллинчен чи хăрушши, чи тискерри пулса иртрĕ: çав вичкĕн çĕркăмрăк куçли урнă евĕрлĕн питĕ ăста майпа кĕсьерен пуклак авăрлă пысăк аптăри, тен, аптăри те мар, е ятарласа тунă пăшатанран та хăрушă япала, е тата çивĕчрех сăнă – пĕлместĕп – туртса кăларчĕ. Ăна кинжал пек аялалла хыттăн çатăрласа тытса хăйĕн юлташĕсене манăн аллăмсене хыçалалла пăрма хушрĕ.

Эпĕ темĕн пек хирĕнсе пăркалантăм пулин те вĕсем мана, тилĕрсе çурăлма хатĕрскере, месерле çавăрса тусанлă асфальт çумне пăталаса хучĕç...

– Мĕншĕн?.. Мĕншĕн кун пекех?.. Мĕ-ĕншĕн?! – инкеке сирме е самантлăха та пулин тытса чарма нимĕнле май та çуккине кура пĕтĕм чун сивлек кӳренӳпе кӳтсе çитнĕрен юлашки вăйпа шăла çыртса мăкăртатрăм эпĕ...

Вăл аллине хуçăлнă çиçĕмле çӳлелле çĕклесе аптрие сутана шăмми витĕр шăтарса тухмалла тăрăнтарчĕ...

Эпĕ çак тĕнчере унашкал ырату пуррине пачах та пĕлменччĕ – асапа тӳсеймесĕр, кĕреçепе çурмаран каснă ăман пек авкалантăм. Çăра кăн-кăвак тӳпе çилĕ сапакан куçăмра вĕлт! çуталса илчĕ те, чĕтренсе-чĕтренсе, хуралса килчĕ – мана хупласа хучĕ. Эпĕ, вилме пуçласа, тăна çухатрăм...

## 12

Калавçă пуçне пĕксе хускалми пулсан тăнăçлă пӳлĕме самантрах тулли шăплăх хупларĕ, каччă чĕринче пытарăнчăк шухăшсене сирсе хĕрхенӳ туйăмне каплантарчĕ.

– «Ăраскалăм юлашки хут шеллерĕ» тенине халĕ ăнлантăм, – вăрăммăн сывласа тăнлавне кресло хысине чавсаланнă алли çине тĕрентерчĕ Митя. – Н-да-а... Мĕн тери тĕрĕс мар ку тĕнче! Ним шелсĕр.

– Тĕнче – илемлĕ. Ăна пăсаканнисем – эпир хамăр, – тўрлетрĕ йăнăш шухăша Антуан. – Хурлăха этем ытларах этемрен тўсет. Тĕттĕм кĕтессенче çĕçĕпе çўрекенсенчен ан хăрăр, кăнтăр кунĕнчех хĕвре курайманлăх чулне чиксе çўрекенсенчен те ан хăрăр: калама çук, ытарма çук хитре хĕрсенчен хăрăр – вĕсене пула çак çĕр çинче çĕçĕпе чикекенсем, хĕври чулпа пуçран çапакансем пулаççĕ. Асамлă кун-çулăн е тайлăк, е тўрĕ çулĕ-сукмакĕ мана шăпах çавсем патне илсе тухрĕ.

Больницăна Эльза та, Алла та – пĕри те пымарĕç. Вĕсене эпĕ вăйлă чухне çеç кирлĕ пулнă. Сусăрланнисен кравачĕ камах питех кирлĕ-ши?..

Ольăна эпĕ кĕтме шутламан та. Эпир унпа хрусталь сăпкара сиксе ўсмен. Айăпĕ хамăн та, унăн та ытлашшипех пулнă. Иртнине каялла тавăраймăн, кĕл пулсан – текех çунаймăн.

Пĕр ирхине сасартăк палата алăкĕ уçăлчĕ те ансăр хушăкран чечек çыххи курăнчĕ, унтан – çăп-çăра куç хăрăпкĕ, кăн-кăвак куç. Оля! Ман чĕрене хĕвел шевли çунтарса илчĕ тейĕн – хыпăнса ўкрĕм:

– Эсĕ!.. Епле майпа?!.

– Мана мĕншĕн пăрахрăн? – куçран сўрĕккĕн пăхрĕ вăл чечек çыххине тумбочка хĕррине хурсан, аялти куç хăрпăкĕ вĕçĕнче хăйĕн – çап-çутă хрусталь шăрçи пек пĕр тумлам куççуль.

– Пăрахман-çке...

– Ма пымарăн? Епле-ха эсĕ мана çав урамри кашни шăлавар çухи çумне çыпăçакан йўнĕскерсемпе улăштарма пултартăн?

– Пĕлтĕн-им? Каласа пачĕç-им? – чĕрем ыратса илчĕ ман.

– Илтрĕм. Пурне те пĕлетĕп.

– Апла пулсан мĕншĕн килтĕн?

– Сана хаяр инкек çапса хуçнă терĕç те... акă, килтĕм.

– Конкурс... Конкурс мĕнле иртрĕ?

– Начар. Хамран телейлӗреххисене ҫӗнтереймерӗм. Кӑшт ҫех. Икӗ балл ҫитмерӗ. Питӗ кӳренмелле. Ҫак пурнӑҫа, иксӗмӗр хирӗҫсе кайнӑ тӗлтен пуҫласа, пӗтӗмпех чӗрсе тӑкса ҫӗнӗрен пурӑнма пуҫлас килет.

– Ан хурлан, ытлашши ан хуҫӑл – темех мар. Пурнӑҫ пӗтменха. Малашне хамӑрӑн пур-ҫук телейӗмӗре ҫурмалла уйӑрӑпӑр, ҫунӑк кӗл айӗнче упранса юлнӑ кӑварпа чӗремӗре ӑшӑтӑпӑр. Астӑватӑн-и, чи пӗрремӗш хут курсанах, эпӗ хамӑн чунӑма пӗр тӗпренчӗк юлми тӗппипех сана парасшӑнччӗ. Эсӗ «кунашкал шанӑҫ пурнӑҫра пӗрре ҫеҫ пулать» тенӗччӗ?

– Пурте асрах. Ун чухнех эсӗ хӑрах урупа вутлӑ ту ҫине пусса тӑраттӑн. Сехете ҫухатрӑн... ырӑ куна ҫухатрӑн...

– Сана ҫухатрӑм. Нимӗн те ҫук ҫӗртех ку пурнӑҫра эпӗ час-часах темӗн те ҫухататӑп...

Нумай каласрӑмӑр. Нихӑҫан та каялла таврӑнми хыҫа иртсе юлнине тепӗр хут куҫ умне ӳкерсе шеллерӗмӗр.

Пурӑнма Оля ман пата куҫрӗ. Маншӑн вӑл савакан та, сиплекен те, тарҫӑ та  пулчӗ. Халӗ ӗнтӗ, унӑн пулӑшӑвӗсӗр, эпӗ, чӑн та, кӑвар чӗре хӗм сапнӑ самантсенче каланӑ пек, «пӗр кун та, ҫур кун та» пурӑнайман пулӑттӑм.

Инкек мана, ҫав тери хаяр паралич пулса, пилӗкрен аялалла пырса ҫапрӗ. Хӗрарӑмсемшӗн юрӑхсӑра тухрӑм. Ҫакна Оля малтанах туймӑша печӗ, – манӑн пурлӑхӑм хавхалантаратчӗ ӑна.

Икӗ костыльпе куҫса ҫӳреме пуҫласан ЗАГСа кайса ҫырӑнса килтӗмӗр. Хам, тӳррипе каласан, арҫын марччӗ ӗнтӗ, хӗрсемпе те, арӑмсемпе те вылясси иртнӗччӗ.

Ҫутӑ, вӗҫӗмсӗр шӑнкӑр кулӑллӑ савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ яланлӑхах, тек ӗмӗрне те ман пата ҫывӑха килми ҫумранах хура юланутпа сиккипе юртса инҫетри пулмаслӑха кайнине эпӗ больница койки ҫинче нимӗн хускалмасӑр выртнӑ чухнех тавҫӑраттӑм, ҫырӑнса таврӑнсан вара Ольӑшӑн эпӗ юратнӑ мӑшӑр мар, хӗн-асап ҫеҫ пулса тӑнине тата таранрах ӑнланса илтӗм. Маншӑн сасартӑках хӗрсен чӑп-чӑмӑр ҫара кӑкӑрӗ мар, йӑлтӑркка хитре ҫавра пӗҫҫийӗ те мар – уҫӑ, тап-таса, яп-янкӑр тӳпеллӗ ем-ешӗл ҫут ҫанталӑк пӑхса ытарайми паха пулса тӑчӗ.

Çак пурнăçра мĕн чи хаклине, мĕн чи кирлине тинех пĕрремĕш хут пĕтĕм чун-чĕререн туйса илтĕм. Ку асамлă çĕр çинче манăн урăх нимле те мар – пĕртен-пĕр çирĕп сывлăхлă пулса, уçă кĕпе çухавине вĕлкĕштерсе пăлхавлăн вĕрекен кăра çиле парăнмасăр хаярлăха хирĕç çирĕппĕн утакан çын пулас килетчĕ. Ĕмĕтĕм калама çук чеченччĕ.

Чеченччĕ... Анчах пĕччен инçе каяймасттăмччĕ эпĕ. Оля манпа юнашар курăнма çынсенчен именетчĕ – кӳлĕ хĕррине улахрах вырăна тухса лараттăмăр. Вăл мана пысăк касăксем касса арбуз çитеретчĕ, сĕт коктейлĕ ĕçтеретчĕ. Эпĕ кураксем вĕçнине, ачасем шыв хĕрне чупнисене катаран пăхса йăпанаттăм, ăмсанаттăм, хамăн ачалăха аса илеттĕм – иртине шеллеттĕм, пулнине шеллеттĕм, пулас çуккине шеллеттĕм, хыçа тарса кайнă телейĕме куçа курăнман чечен шăплăхра кураттăм...

Тĕнчере айăплисем çук. Йăнăшакансем, тĕрĕс мар пурăнакансем нумай. Ольăна кӳренме сăлтав пулман ман. Пурнăç çавăн пек çаврăнса тухрĕ: эпĕ ăна, ача куççулĕ евĕрлĕ таса ĕмĕтпе мана парăннăскере, сутрăм, пĕр шелсĕр – чун-чĕре тасалăхĕн çурхахне ватса ытлашши ачашлăха вĕрентрĕм-вĕрентрĕм те кайран çав черченкке ачашлăха хам пĕр тумлам та пами пултăм. Ăна ăнланатăп: вăл çамрăк, хĕрӳллĕн тапса тăракан сĕткенлĕ – чи чечек сарнă, нектар сапмалли вăхăт, – шерпете антăхса, ăмсанса вĕçекен пыл хурчĕсем, сăпсасем ăна кирлех. Çав пылаклăха унран туртса илме, ăна выçă хăварма, этемле шухăшласан, манăн право çук.

Сисетĕп: хăйĕн кăвар пек вĕри туйăмне вăл манран пытарма тăрăшать. Унăн хĕрӳлĕхĕн чиккийĕ çуккине аванах пĕлетĕп – хам курнă, пĕтĕм тĕнчене мантаракан евĕклĕ туйăмăн иксĕлми хумĕнче хам чӳхеннĕ, хам йăпаннă, хам путнă.

Ольăшăн эпĕ мăйран уртăнса ыраттаракан чăрмав пулса тăтăм. Çакна лайăх ăнланаттăм, уççăнах кураттăм. Ăшĕнче унăн мана кăтартма юраман кăмăлсăрлăх пурри палăратчĕ. Суранăма сӳтсе çыхнă чухне те хăйне, йăлтăр кулăллă çепĕçлĕхне такам туртса илнĕн, кăнттамммăн тытатчĕ.

– Асăрханарах эсĕ – ыраттаратăн, – йĕп пек тирнине тӳсеймесĕр мăя пăрса çăвара караттăм эпĕ.

– Мĕнле çыхмаллине хушмасăрах пĕлетĕп. Ан вĕрент. Эсĕ ыраттарнисене эпĕ тӳснĕ-çке, – теме систерсе вăлтса тавăратчĕ вăл.

– Эпĕ сана кунашкалах ыраттарман.

– Мана пăрахиччен е пăрахнă хыççăн?

– Астумастăп.

– Ун вырăнне эпĕ нихăçан манăçми лайăх астăватăп: пăрахичченхи, чи малтанхи хут ыраттарни, евĕклĕччĕ; пăрахнă хыççăнхи, пĕтĕм шанчăка çапса хуçни – халĕ те чĕрене касать.

– Сĕвĕрĕлтер эсĕ вĕсене.

– Чĕрене хушаймастăн.

Хирĕçлеме майĕ çук хуравсем мана парăнтарса тĕрĕслĕх тараси çине хуратчĕç.

## 13

Антуан тарăннăн сывласа илчĕ.

– Ольăшăн эпĕ çумăрпа тумлакан кашни тумлама нимĕн палли юлми сăхакан хăйăрччĕ. Оля, эпĕ вăйлă чухне килти пĕр çӳпĕне те кӳрентерме хăяйманскер, самаях хăюланчĕ. Хăйне теветкеллĕн тытма пуçларĕ. Ман чĕрере вăл хуçаччĕ.

Ун патне час-часах телефонпа такамсем шăнкăравлатчĕç. Вара вăл, мана сиплеме пăрахса, сӳтнĕ бинтсене çыхса пĕтермесĕрех хăвăрт таçта тухса вĕçетчĕ. Таврăнсан юбка арки мал енчен кăштах лӳчĕркеннине асăрхаттăм, шухăшăмра çемçешке плавкийĕ те малтанхи вырăнтан куçнăн туйăнатчĕ.

– Начар хыпар пĕлтерчĕç, – терĕ вăл пĕррехинче хуларан таврăнсан. Сăнĕ, яланхи пекех, хитреччĕ.

– Мĕнле хыпар?

– Каламалла-ши?..

– Кала ĕнтĕ.

– Саншăн питĕ хăрушă: эсĕ тек нихăçан та çап-çамрăк хĕрсене те, хип-хитре хĕрарăмсене те... юратаймастăн. Манăн вара сана ĕмĕрĕпе асăрхаса, йăпатса пурăнма тивет. Ку та ырă япала мар – тамăк.

– Кам каларĕ?

– Сана операци тунӑ хирург.

– Тата мӗн терӗ?

– Пилӗкрен аялалла шалкӑм ҫапнине ниепле те сыватма май ҫук терӗ.

– Ку – япӑх. Маншӑн та, саншӑн та... – пуҫа сулласа илтӗм эпӗ.

Хӳхӗм хӗрсен сар кӑйӑкӑнни пек ҫемҫе йӑви малашне мана нихӑҫан та кирлӗ пулас ҫуккине вӑл врач каламасӑрах лайӑх пӗлетчӗ-ха. Чирлӗ ҫынна пӑхассине мӗншӗн тамӑк тесе шутлать – ҫавна ниепле те тавҫӑрса илеймерӗм: тамӑк – вӗресе тӑракан сӑмала хуранӗ вӗт...

Манпа инкек пуличчен, эпир унпа ваннӑна иккӗн пӗрле кӗрсе ларса кушак ҫурисем пекех выляттӑмӑр. Пирӗнпе пӗрле ӑшӑ шыв та ахӑлтатса кулатчӗ. Юлашки вӑхӑтра эпӗ ӑна хытах кӳрентернӗ ахӑр – ҫурӑма сӑтӑрма та кӑмӑлпа пыми пулчӗ, тархаслаттӑм. Алли ҫапах ҫемҫеччӗ, кӑшт сӗртӗнсенех чӗрем ҫӗнӗ вӑйпа тапма пуҫлатчӗ.

– Ку халӗ ӗнтӗ мӗн тума кирлӗ? – терӗ вӑл теплерен ним сисӗнмесӗр хыҫа иртсе юлнӑ пач салхусӑр сенкер кунсенче хӑй питӗ савнӑскере чарӑнса ларнӑ сехет маятникне вырӑнтан хускатнӑ евӗрлӗн ҫепӗҫ пӳрне вӗҫӗпе ҫемҫен суллантарса.

– Мӗнле – «мӗн тума?» Кур-ха, епле хитре! – ӑна ӑшӑ кулӑ парнелес тесе юриех евӗклӗрех сӑмахсем шырарӑм эпӗ.

– Хитре... – йӑ-ӑлл! ҫиҫсе илчӗ утмӑл турат пек кӑвак куҫӗ. Ҫав вӑхӑтра телефон янӑраса кайрӗ – вӑл супӑнь кӑпӑкӗсене шӑлмасӑрах ванна пӳлӗмӗнчен сирпӗнсе тухрӗ.

«Аха... юрӗ... кӗт...» – илтӗнет ман хӑлхана хупӑ алӑк витӗр уҫӑмсӑртарах сасӑ. Вӑл тутине ывӑҫ тупанӗпе хуплатчӗ пулин те – хыпӑнчӑк сӑмахсем пӳрнесен хушшинчен пурпӗр асаплӑн хӗсӗнсе тухатчӗҫех. Тӑван килӗмре чи шанӑҫли маншӑн – пӗртен-пӗр хамӑн чӗре кӑначчӗ.

Кайрантарахпа тапса тӑракан хӗрӳлӗхе ҫемӗҫтерекен вӑрттӑн тӗл пулусене Оля манран пытарми пулчӗ. Телефон шӑнкӑравласан, «кӗт» сӑмах вырӑнне «кил» теме пуҫларӗ. Чӑтӑм пӑявӗ ман пӑркӑчланнӑҫемӗн пӑркӑчланса пычӗ. Ҫутӑ

кӳрекен чӳречесене те курайми пултӑм. Хамӑн пӳрнӑç нимӗнпе те тытса чараймиех майсӑр тӳнтер еннелле çаврӑнса кайни канӑç памарӗ мана. Юратнӑ арӑм урӑх арçынна савсан тин эпир хамӑр вӑйсӑррине туятпӑр. Туятпӑр та кирек мӗнле хаярлӑха та макӑрмасӑр чӑтса ирттерес тесе çав хаярлӑха пӑхӑнакан чӗреллӗ пулатпӑр.

14

Пӳлӗмре шӑп. Шӑна вӗçни те илтӗнмест. Сусӑр çыннӑн лӑпкӑ сасси уçӑ чӳрече каррине те хускалми турӗ, вазӑри чечексем куççульленнӗ. Антуан кӗпе çухавин иккӗмӗш тӳмине вӗçертрӗ.

– Акӑ эпӗ çемçе кресло çинче мачча кӗтессине пӑхса тарӑн шухӑша кайса ларатӑп: çинçе çип трӑрӑх пӗчӗкçӗ эрешмен майӗпен явӑнса аялалла анатчӗ, хӑйӗн çывӑхри пуласлӑхӗ патне çул хыватчӗ – урисем авӑн çапакансен тӑпачисем пекех вылянатчӗç. Пӗчӗкскер кӑна пулин те – телейлӗн туйӑнатчӗ вӑл мана. Алӑкран шаккарӗç. Оля çийӗнчех чупса пырса çаклашкана сӑлӑпран вӗçертрӗ. Вӗсем ыталашса илчӗç.

«Ку леш пӗркунхи ӗçкӗре Ольӑпа тӗрлӗ майлӑ явӑнса ташлаканни-çке! – çутамрах çырӑ йӗкӗте палласа илтӗм эпӗ. – Авӑ кампа явӑçса кайнӑ вӑл!» Манӑн чӗре айне ун чухнех сивӗ чӗрӗп йӑпшӑнса кӗнӗччӗ. Пӗр самант тӑхтаса тӑмасӑрах ултавлӑх пулассине тӗрӗсех систернӗ çӑра йӗплӗскер, эпӗ – сисмен, тавçӑрса илеймен, хаярлӑх хама хыçран йӗрлессе пачах кӗтмен.

Оля тӳрех магнитофон пӑркӑчне пӑрчӗ. Çав самантрах манӑн суранлӑ чӗрене татӑлса анаслах чӗтрентерсе хӑватлӑ кӗвӗ янӑраса кайрӗ. Вӗсем евӗклӗн çаврӑнса ташлама пуçларӗç. Эпӗ, Оля пулӑшӑвӗсӗр вырӑнтан çӗкленме пултарайманскер, тӑхлан кӗлетке пулса хытса лартӑм. Яланах хитрешӗн çунакан куçӑм, таса юнпа тулса-тулса пырса, тӗтрелле куракан пулчӗ. Çӑралса явӑнакан тӗтрере хӑлхана çуракан музыкӑпа пӗрле манӑн таçтан инçетрен васкасах чупса килнӗ хӗнлӗ кунсем, пӗр-пӗрне путара-путара пӑтрашӑнса, кутӑн-пуçӑн çаврӑнма тытӑнчӗç. Урӑх нимӗн

те курмастăп. Хăлхара – хăрушă чан сасси: пысăк инкек, тӳсме çук хаяр инкек килсе çитнине хыпăнса пĕлтерекен чан сасси...

Çав тери вăйлă ӳкĕнӳ кресло çумне лумпа хирсе те çĕкленеймиех вирлĕ пăталаса лартрĕ мана. Хамшăн гранит чул катрамĕ эпĕ. Вĕсем, сывлăш çавăрмалла тенĕ пек, çывăрмалли пӳлĕме кĕрсен кравать пружинин ĕсĕклевĕпе пĕрле Ольăн шăппăн-шăппăн тытăнарах тухакан пăшăх сасси илтĕнме пуçласан та вырăнтан хускалмарăм.

Çук, йĕмерĕм, пите хупламарăм. Шыва путнисем макăрмаççĕ. Куçа пĕр вылятмасăр мачча кĕтессине пăхса, нихăçанхинчен те тăнлă ăспа тавçăрса илтĕм: ку вăл – эпĕ тахçантарах хама тытса чарайман самантра теплерен пĕр çупкă çинĕ хыççăн сасартăках вĕриленсе кайса ăна янах айĕнчен алă чăмăрĕпе хыттăн тăрăнтарнăшăн хаяррăн тавăрни пулчĕ. Ăнлантăм, питĕ лайăх ăнлантăм: Оля çав пăшăх сасăпа манăн кăмрăкланнă чĕрене çивĕччĕн пайăн-пайăн касса вакланишĕн пĕтĕмпех, пĕтĕмпех хам айăплă. Ăна çакнашкал евĕклĕн йынăшма эпĕ хам вĕрентнĕ. Çак куçа курăнмасăр килнĕ инкекĕме эпĕ хам кун çути панă: хăрушлăха вăхăтра туйман, шăп кирлĕ тĕлте чарăнса тăма пĕлмен.

Чĕреçĕм, çулăмпа çунакан хут хăвăрт хуралса-авăнса çунса пĕтсен, вĕттĕн-вĕттĕн пĕрĕнсе урайне ӳкнĕ евĕрлĕн, картлăн-картлăн пĕтĕрĕнсе тăвăнчĕ: малашлăх татах хаяртарах пуласси палăрчĕ. Телейлĕх тĕнчи вăйлисем майлă.

Оля – мана ытларах йӳçек кӳрсе, чирлĕ çынран именме пĕлмен пуçтах йĕкĕте кирлĕ таранах пылаклăх парас тесе-ши – ăна ӳсĕртсе яракан, мана çапса хуçакан çепĕç сывлăша çине-çинех ăшпиллĕн кăларса тепĕр вĕри сывлама пăшăхларĕ – манăн пурпĕрех сипленес çук сурана витĕрех сăхмалла вĕтĕ тăвар сапас терĕ пуль...

15

«...Вĕтĕ тăвар сапас терĕ пуль...»

Тепĕр хут илтĕнчĕ çак кĕске сăмах çаврăнăшĕ. Никам каламасăрах. Хăй тĕллĕн. Шăппăн-шăппăн.

Антуан, икĕ аллине икĕ чĕркуççи çине хурса, пуçне тарăн шухăшлăн аялалла усрĕ.

– Малаллине хăвăр куратăр. Пурте куç умĕнче: Оля... эпĕ... тинĕс сывлăшĕ... Пурнăç хăйĕн еккипе пырать. Питех те начар çанталăк – хаяр, сивĕ çил-тăман – çул çинчи çынна хытă лăскать, анчах ăна пĕтерейместь вăл, пачах урăхла, ăна çирĕплетет, чăтăмлăрах, тӳсĕмлĕрех тăвать, йывăрлăха çĕнтерме, тĕппипех парăнтарма кĕрешӳ хăвачĕ парать, вăй парать, – çитес çĕре çитмеллех унăн. Ӳкме юрамасть. Этем хăйĕн тап-таса тивĕçне пурнăçлама çуралнă. Эсир мана «ку чăлаха инкек тĕппипех çапса хуçнă» тесе ан шутлăр. Вăй пур манăн. Çак куç виçейми е ăмăр, е сенкер инçетлĕ пурнăçа ĕмĕтсĕррĕн юратакан хĕрӳлĕх те пур, юлашки пурлăхăм – чи шанчăклă чунăм – ирхи сывлăмран та таса, – терĕ вăл калав вĕçленнине систерсе хăрах хулне кресло хыçĕнчен уртнă май. Унăн хăмăр ахах пек тăп-тăрă куçĕсем уçă чӳрече витĕр пĕр лаптăк сеп-сенкер пĕлĕте тĕлленчĕç. Çав сенкер вĕççĕрлĕхе пăхакан куççенче мĕн курса иртни – ырри-усалли, йӳççи-пылакки – пурте каялла таврăнайми шеллевлĕх хĕмĕпе çырăннă.

Митя вăрăммăн сывласа илчĕ. Клим Петрович ресторанра каланă сăмахсем аса килчĕç ăна. «Арçынна пурнăçра телейлĕ пулма виçĕ япала кирлĕ: çирĕп сывлăх, тарăн пĕлӳ, лайăх арăм» тенĕччĕ доцент. Виçĕ хаклă япала... Пĕри çухалсанах тепри пăсăлать. Вĕсене юсасси, тупасси, тĕрĕс упрасси – этемрен пĕр хăйĕнчен кăна çех килмест: шеллевсĕр шăпа валеçет вĕсене. Çавăнпа пуль хаяр ку тĕнче?

Антуан урăх чĕнмерĕ. Сенкер тӳпере ширать тейĕн ача чухнехи чечен ĕмĕтне.

Сасартăках хупланса килнĕ шăплăх Митьăна тарăн шухăша путарчĕ. Анчах, çакăн пек чуна тыткăнлакан романа итлесе пĕтернĕ хыççăн чĕнмесĕр ларма юраманнине туйса, кичемрех чĕмсĕрлĕхе каччă çийĕнчех сирме тăрăшрĕ:

– Оля кăнтăрла сайра курăнкалать. Ăçта çӳрет вăл?

Пылак шухăшлă йĕкĕте çак кăсăк ыйту тахçантанпах канăç паманччĕ.

– Хулара магазинсем тӑрӑх чупса ҫӳрет. Хӑйне килӗшекен питӗ паха атӑ тупса туянасшӑн ҫунать – ниепле те тупаймасть, – терӗ лӑпкӑн Антуан, пуҫне чӳрече енчен пӑрмасӑр.

– Пӗр каҫхине ҫӗрлерех таврӑннӑччӗ вӑл.

– Ун чухне «Гагрӑна кайса килтӗм. Поезд час пулмарӗ» тесе каларӗ.

«Суйнӑ. Куҫӑн суйнӑ. Ҫав тӗттӗм каҫхине пӗрремӗш хут курӑннӑ чуна самантрах тыткӑнлакан чӑп-чӑмӑркка тӑлпуллӑ пике ытла та хӳхӗм чечекчӗ. Тин кӑна татнӑ такам аллинчи ҫырла евӗрччӗ. Шиклӗрех йӑпанчӑк куҫӗнче темӗнле вӑрттӑнлӑх пурри палӑратчӗ. Кашни ҫыннӑн, паллах, никама пӗлтерме юраман питӗ ҫепӗҫ вӑрттӑнлӑх пур», – шухӑшларӗ Митя хӑй ӑшӗнче. Унӑн куҫӗ умне Оля чӳрече янаххи ҫинчен аннӑ самант курӑнса кайрӗ: кӗске ҫӑтӑ юбкӑна ҫурасла карӑнтарса урайнелле туртӑнакан ҫап-ҫаврака хитре пӗҫӗ... икӗ хура ҫунат... хӗп-хӗрлӗ пӗсехе... унтан ҫаксем пурте ҫиҫӗмле ҫиҫсе илсе самантрах куҫ умӗнчен ҫухални... Кайран тепӗр кунне ҫав ӑша вут хыптармӑш чечек пикене иккӗмӗш хут курни:

**... Я растоплю кусочки льда**
**Сердцем своим горячим,**
**Буду любить тебя всегда –**
**Я не могу иначе...**

Шӑп пӳлӗмре ҫемҫен-ҫемҫен илтӗнсе тӑчӗ ҫепӗҫ кӗвӗ. Оля сасси. Ҫак тӗрлӗрен чечеклӗ тӳлек вестибюльте юрланӑ чуна ӑшшӑн-ӑшшӑн кӑтӑклакан ҫав тери черчен сасӑ халӗ те хӑлхаран тухма пӗлмест. Антуан калавӗ те юрӑ сӑмахӗсене витӗмлентерсе нихӑҫан манӑҫми турӗ: «Телейпе сапатӑп куҫунтан...» Авӑ мӗн тери хӗрӳллӗ иккен вӑл Оля! Ах, Оленька-Оля!..

Палатӑран Митя шеллевлӗ, ҫав вӑхӑтрах вӑрттӑн-вӑрттӑн ачаш туртӑмлӑ туйӑмпа тухрӗ.

16

Шота Ольӑна капӑр кавирлӗ ҫемҫе ларкӑчра сӑпка пек ярӑнтарса санаторие ҫитиччен ӑсатса ячӗ. Вӗсем ыран каллех

тĕл пулма каҫаҫса татăлса хĕрӳллĕн чуп туса уйрăлчĕҫ. Тепĕр кунне кăнтăрла иртни икĕ сехет те аллă минутра хура «иномарка» палăртнă вырăна ҫул хĕрринчи ҫăра ҫулҫăллă кипарис хӳттине ҫитсе чарăнчĕ. Тепĕр вунă минутран сăрă тротуар тăрăх ҫӳллĕ кĕлеллĕ туфлипе чăклаттарса Оля килни курăнчĕ. Яланхи пекех чăп-чăмăр пĕҫĕсене ҫурă таран хуплакан хăмăр-кăвак эрешлĕ кĕске те ҫăтă кĕпепе вăл. Аллинче пĕчĕкҫĕ сăран сумка. Шăп виҫĕ сехетре вĕсем ҫăмăл алăксене шăппăн хупса никам асăрхаман вырăнтан хускалчĕҫ.

Ку хутĕнче хура «иномарка» хула тулашĕнчи ешĕл чечеклĕ айлăма мар, вашăкрах ҫыранлă тинĕс хĕрринчи пĕр ҫынсăр улах вырăна ҫул тытрĕ. Вĕҫсĕр тикĕс шоссе ҫыран хĕррипе тăсăлать. Вăл ҫутă тĕнчене икĕ пĕр пек пая уйăрса тăнăн туйăнать: пĕр енче бирюза тĕслĕ айлăм-тĕмеллĕ ем-ешĕл тавралăх майĕпен хыҫалалла куҫса пырать, тепĕр енче – чĕркĕмĕл явăннă евĕрлĕн йăлтăрккан айăн-ҫийĕн вылянса куҫ виҫейми тинĕс сарăлса выртать. Унăн уҫăмлăн курăнми вĕҫсĕр хĕррийĕ инҫетри сенкер марля каррийĕ хыҫне кĕрсе ҫухалать.

Шотăна пĕчĕккĕ чухне тĕнче хĕрри ҫӳллĕ тусен хыҫĕнче пек туйăнатчĕ. Ӳсерехпе темиҫе ту урлă та каҫрĕ – ун хĕрри патне ҫитеймерĕ. Пурнăҫ ҫавнашкал вăл: мĕн чухлĕ ытларах пурăнатăн патне ҫитменлĕх ҫавăн чухлĕ ытларах уҫăлса пырать. Хастар та пылак ĕмĕтлĕ грузин каччи Шота Мускаври М.В. Ломоносов ячĕллĕ университета вĕренме кĕресшĕнччĕ – кĕреймерĕ, ют ҫĕршывсемпе ҫыхăнас ĕҫсене туса пыракан дипломат пуласшăн ҫунатчĕ – пулаймарĕ. Ай, куҫсем ҫеҫ-и! Пурнăҫра сан патна хăй тĕллĕнех питĕ ҫăмăллăн вĕҫсе пыракан пĕртен-пĕр япала вăл – юрату. Ҫапла, сан чĕрӳне хăвăнтан ыйтса тăмасăрах пылак ҫулăм хыптаракан хĕрӳллĕ юрату. Ăна пулах эсĕ нихҫанхинчен те йăвашрах, ачашрах, ҫемҫе кăмăллăрах пулма тăрăшатăн, ăҫта такăннине, ăҫта ӳкнине те манатăн.

Евĕклĕ туйăмпа хăпартланнă Шота хăрах аллипе руле ҫавăркаланă хушăрах тепĕр аллипе Ольăн ҫемҫе пӳрнисене ăшă ывăҫран вĕҫертмерĕ.

– Пĕлетĕн-и, савнă кăвакарчăнăм Олюля, – терĕ вăл чечек пикене куҫран пăхса. – Эпĕ – ĕмĕтсĕр. Эсĕ хăвăн илемӳпе мана

нихăçан та тăрантараймăн, хăть шыв сикки, хăть ытлă-çитлĕ персик пул.

– Выçă чăхха тĕлĕкре те вир кĕрпи курăнать... – чăлт шурă шăлĕсене хитрен кăтартса йăл кулчĕ Олюля.

– Ку – тĕрĕс. Çĕркаç эпĕ санпа çĕрĕпех шурă парăслă кимĕпе лăпкă кӳлĕре ярăнтăм. Мĕнешкел тутлă тĕлĕк!

– Шурă парăс... пĕр çилсĕр... кимĕ ярăнать... Пулма пултараймасть. Физика законĕсен çыхăнăвĕ çук, – шухăш хастарлăхне юриех татах хĕрӳлентерчĕ Оля.

– Тĕлĕк – фантази. Чăн пурнăçран нумай вăйлăрах вăл. Этем хăйĕн пылак ĕмĕтне тĕлĕкре çеç туллин тивĕçтерет. Эпĕ тăваттăмĕш класра вĕреннĕ чухне пирĕн питĕ-питĕ хитре учительница пурччĕ. Ăна эпĕ уйрăмах калама çук ырă туйăма тин çеç ăнланма пуçлакан черчен чунăмпа вилесле юрататтăмччĕ. Чăн пурнăçра эпир унпа пачах пĕр пуракра пулмалли çырласем мар: пĕри шăпах пиçсе сĕтекленсе çитнĕ, тепри – тĕвĕленме пуçланă кăна-ха. Тĕлĕкре вара эпĕ хам мĕншĕн кун çути курнине пĕрремĕш хут унран пĕлтĕм. Ун чухнех ман юрату мĕн тери хĕрӳллĕ пулнă!

– Унтанпа чăн пурнăçра нумай хĕр чĕрине çунтартăн-и?

– Çук, эпĕ Есенин пек хĕрсен чĕрине вут хыптаракан «ылтăн пуçлă» пулайман. Мана тиркекенсем те пулнă. Эпĕ Тбилисире çуралса ӳснĕ. Каччă пулса çитсен пĕррехинче фуникулерта тĕлĕнмелле хӳхĕм хĕре куртăм. Эпир эреветлĕ сенкер симĕс тарăн-тарăн айлăм çийĕн таса сенкер уçлăхра ерипен çӳлелле вĕçеттĕмĕр. Вăл чӳречерен аялалла пăхатчĕ, эпĕ – ун çине. Çапла пĕр сăмах чĕнмесĕрех ту тăррине улăхрăмăр. Кайран вăл ăçта пурăннине пĕлме тӳр килчĕ. Каçсерен подъезд алăкĕ умĕнче вăл тухасса кĕтеттĕмччĕ. Уншăн темĕн пек çунтăм пулин те – çавăраймарăм эпĕ ăна. Вăл маншăн патне пырайми çутă сенкер инçет пулчĕ. Ун асамлă сăмахĕ халĕ те ман ачаш чунăма патне пыма çуклăха парăнтарса тăрать. Эпĕ ăна нихăçан та манмастăп. «Урăх ан килĕр, – терĕ вăл куçăмран хирĕçлеме майĕ çукла черченнĕн пăхса. – Куншăн ӳкĕнме кирлĕ мар. Пĕр юрăра питĕ тĕрĕс каланă сăмахсене ăса хывăр: «Если невеста

вышла за другого, то неизвестно кому повезло...» Ку тӗнчере эпир пурте паллӑ мар шӑпаллӑскерсем. Кам кама савса е савмасӑр йӑнӑш туни пачах уҫӑмлӑ мар». Ҫак ӑслӑ каланӑ сӑмахсемшӗн ӑна пушшех хытӑ юратса тӗнче курӑмӗ тӗлӗшӗнчен вӑл манран чылай ҫӳлти шайра пулнине тавҫӑрса илтӗм. Эпӗ хамӑн тивӗҫлӗхе виҫмесӗрех вут кайӑка ӑмсаннӑ, анчах ман тап-таса юратӑвӑма ырӑ пуласлӑх пӳрмен: пӗр-пӗрне савас кӑмӑлсем пирӗн тӗрлӗрен пулнӑ. Вӑл хӑйӗн чун тыткӑҫӗ пулма эпӗ тивӗҫсӗртерех тесе шутланӑ. Вӑт ҫапла, эпӗ пӗртте ахах пӗрчи мар.

Оля тинех ҫак хитре грузин тӗкӗрте мӗншӗн «Шота, эсӗ телейлӗ» тесе ҫырнине вуласшӑн пулнине тавҫӑрса илчӗ. Ав епле! Хитре ҫынсем те макӑраҫҫӗ. Камшӑн пӗр хура пӗлӗтсӗр сеп-сенкер тӳпеллӗ ку тӗнче?

– Шел. Хӑвна халь ҫавӑнпа телейсӗр тетӗн-и? – шеллевлӗн ыйтрӗ чечек пике. Вӑл ҫак тарана ҫитсе те хӑйне хӑй хурлакан арҫынна курманччӗ. Ҫак чун тасалӑхне витӗмлентерни ӑна Шотӑна пушшех ытларах савма ҫӗнӗ импульс пачӗ.

– Телей – самантлӑх япала, – ҫемҫен кулса илчӗ япшар каччӑ. – Ҫавӑнпа эпир вӑл ҫумра ҫук чух ялан телейсӗр.

– Халӗ мӗнле?

– Халӗ эпӗ – сеп-сенкер тӳпери ӑмӑрткайӑк, – ҫемҫе пӳрнесене тата ҫепӗҫрех пӑчӑртаса чечек пикене хӑйӗн ӗмӗтленнӗ ӗмӗтри ырлӑхпа йӑпанакан чӗри тата ырӑрах пуласлӑхшӑн ҫунса хавхаллӑн тапнине систерчӗ «сеп-сенкер тӳпери ӑмӑрткайӑк». Эппин телейлӗ.

Никам кансӗрлемен ҫӗрти арҫынпа хӗрарӑм хушшинчи пӗр-пӗрин патнелле ҫепӗҫҫӗн туртӑнакан евӗклӗ туйӑм – радиохумӗ евӗрлӗ. Ҫав куҫа курӑнман асамлӑ хума туйма нимӗнле индикатор та кирлӗ мар: вӑл пур, вӑл вӑйлӑ. Ӑна вӑтанӑҫлӑн хирӗҫ пӑхнинчен, ачаш сӗртӗнӳрен е ӑшшӑн калаҫнинчен туятӑн. Йӑлтӑр хура куҫлӑ Шотӑра ҫаксем пурте вӗтӗ чулсем ҫийӗнчи шыв юххиллӗн умлӑн-хыҫлӑн ылмашӑнса тӑраҫҫӗ. Мӗншӗн ылмашӑнса пынине пӗлмӗш пулма май ҫук.

– Хӗрӳллӗ туйӑм запасӗ ытлашшипех сан, анаран тӑкӑнать, – терӗ Оля ҫепӗҫ пӑчӑртаври пӳрнесем пӑчӑр-пӑчӑр ӑшӑ тарпа витӗнсен.

Шота каллех йăл кулса илчĕ:

– Юпах çулĕсенче ăна эпĕ пурнăçа кĕртме пĕлмен. Ухмах пулнă. Çав хĕрӳллĕ туйăмăн тĕп тĕллевне ăнкарман. Расходлама вăтаннă, куç шăрçине сыхланă пек сыхланă. Пурнăçра кун пеккисем пулкалаççĕ-ха. Пĕр çар подразделенири апат-çимĕç склачĕнче ревизи пырать. Сентре çинче консерв, тушенка, повидло банкисем, нар çинче пушанма пуçланă сахăр, кĕрпе, çăнăх миххисем, тип улма-çырла уйрăмĕн кĕтесĕнче – пĕр михĕ лавр çулçи. Ăнçламан та.

– Куна мĕн тума усратăр? – ыйтать тĕрĕслекен.

– Никам та çимест. Пурте яшкаран кăларса пăрахаççĕ, – хуравлать тунтук старшина. Эпĕ те çав старшина пек тунтук пулнă. Чи ачаш туйăма никама памасăр упранă, упранă.

Оля пуçĕпе Шота хул пуççийĕ çумне тĕршĕнсе черчен сассипе пĕчĕк шăнкăрав пек çемçен янăратса варне тытсах кулса ячĕ. Сĕрме купăс сассиллĕ машина вăрăм сурпан евĕрлĕ инçете тăсăлакан асфальт тăрăх шав вĕçет малалла.

17

Такăр шоссе юхать-юхать сенкер тӳпеллĕ симĕс кăвак кĕмĕлпе витĕннĕ тавралăх тăрăх е айлăмалла анса, е тĕме çинелле улăхса ыткăнать. Хура «иномарка» ниепле те унăн вĕçне хăваласа çитеймест.

Ытармалла мар хитре çу кунĕ. Тӳпери сар хĕвел хăйĕн ылтăн хĕлхемĕсене çамрăк хĕр кăкăрĕ евĕрлĕ ĕлккен мăкăрлă-айлăмлă сылтăмри ем-ешĕл анлăш çине, сулахайри лăпкă-лăпкă хумлăн сывлакан тинĕс çине сарса хунă. Кирек хăш еннелле пăхсан та – пур çĕрте те куçа шăнăçайми илем вĕтĕ-вĕтĕ шыв юххиллĕн йăлтăртатса вылянса тăрать. Пĕтĕм çĕр чăмăрĕ ахах-мерчен виткĕчпе витĕннĕ тейĕн. Сывлăш катари-катари тăп-тăрă сенкерлĕхе витĕрех курмалла таса. Хура «иномарка» унăн иксĕлми сипетне ĕçсе тăранаймасăр вĕçет-вĕçет тикĕс асфальт тăрăх шап-шурă чечеке ларнă пĕчĕкçĕ хулана инçете-инçете хăварса. Çывăхарах сарăлса килнĕ çыран хĕрри вашăкланнă тĕле çитерехпе вăл хăвăртлăхне чакарса никам ури йĕр хывман

çулсăр хысак еннелле пăрăнчĕ, хĕвелпе пиçсе капăрланнă курăка таптаса е хытăрах, е çемçен лăканса пычĕ-пычĕ те, чăнкă сăрт хӳттине çитсен çерçие асăрханă кушак пек шăппăн чарăнчĕ.

Çул тăршшĕпе йăл-йăл кулса калаçса, пĕр-пĕрин çаврака чĕрçине хăрахшар ал тупанĕпе çемçен сĕртĕнсе пынă савăклă пикепе каччă кабинăран тухрĕç. Юнашарах – тинĕс. Ун çийĕпе сайра-хутра уçă сывлăша пĕр сассăр касса шурă-хура кăкăрлă чарлансем вĕçсе иртеççĕ. Катаран пĕр-пĕрне путармалла вылянса килекен çутă хумсем шурă кăпăк ярăмĕ пулса ылтăн хăйăрлă çырана чăпăрт чуп туса илеççĕ те сĕвек тайлăмран çăмăллăн аялалла шуса анаççĕ. Хумсем кармашса çитеймен тĕлтен пуçласа чăнкă сăрт таранах тинĕс çилĕ шăлса тикĕсленĕ хăйăрлă çыран кĕренрех сарă паха кавир евĕрлĕ. Ун çинче пĕр йĕр те, пĕр тĕрĕ те çук. Пĕрремĕш тĕрре чи малтан Шотăн çара ури тĕрлерĕ, вăл Оля чĕркуççийĕ умне пĕшкĕнсе хĕвелпе йăлкăшакан шурă лакланă шĕвĕр кĕлеллĕ пушмакне хывма пулăшрĕ, вара васкасах хăйĕн кĕпе тӳмисене вĕçертме пуçларĕ.

Оля васкамасăр хывăнчĕ. Малтан тăпăл-тăпăл кĕлеткене çăтă тытса тăракан платьене çурăм тăрăх асăрхануллăн шутарса тăвăр ункăран хирĕнсе тухрĕ те ăна тирпейлĕн хуçлатса хăйăр çине хучĕ. Унтан çарамасланма ĕлкĕрнĕ каччă еннелле çурăмĕпе çаврăнса тăрса пĕрре пăхнипех ăшшăн вăтантаракан куçлăскере лифчик тăхисене вĕçертме хушрĕ. Ун хыççăн икĕ çунатне сарса вĕçме хатĕрленнĕ чарлан евĕрлĕ çинçе плавкине хывса хăйăр çумне лăпчăннă платье çине ывăтрĕ. Кĕçех вĕсем, икĕ çаппа-çарамас вĕр-çĕнĕ пукане пек хитрескерсем,кăкăрпа кăкăра хыттăн перĕнтерсе тутапа тута çăттăн çыпçăнчĕç. Ольăн кăпăшка çăра çӳçĕ тинĕс çилĕ вĕрнипе варкăшса каччăн çаврака хул пуççине хупларĕ, хĕресленнĕ хулсем хыттăн пăчăртанчĕç.

Çук, ура çинче вăрахчен тытăнса тăраймарĕç вĕсем: Оля пиçĕ пилĕкĕпе пĕкĕ пек хыçалалла авăннă май майĕпен-майĕпен сулăнса çĕр туртăмĕ патнелле тĕшĕрĕлчĕç. Çав самантрах хĕвелпе пиçсе пушшех евĕкленнĕ манна кĕрпи пек çемçе, ăшă, вĕтĕ кĕрпеклĕ хăйăр çине хăйĕн йывăрăшне çухатнă пике купарчи перĕннипе çурмаран уйăрнă рак хуранĕ евĕрлĕ вашăк лакăм

пулчӗ – ҫийӗнчех тӑсӑлса-сарӑлса такана евӗрлӗн путӑкланчӗ, вара хур мамӑкӗ пек кӑтӑклӑ хӑйӑр вӗри сывлам такчӗпе ырӑ духи шӑршиллӗ яка пирчев ҫурӑма ҫемҫен ҫупӑрласа ачашшӑн-ачашшӑн сӑтӑрма пуҫларӗ...

Ҫак вӑййӑн инстинктран килекен тӗшши виҫӗ фазӑран тытӑнса тӑрать: икӗ тӗрлӗ ятлӑ полюслӑ туйӑмсем пӗр-пӗринпе перӗнессине чӑтӑмсӑррӑн кӗтни, перӗнни, тарӑнрах сӗкӗнсе киленӗҫӗн чи ҫӳлти пусӑмне тӗмсӗлсе ҫитни. Чӑн юрату процесӗ чи малтан ҫав пархатарлӑ критерирен пуҫланса каять. Унӑн тӗп тӗллевӗ – май пур таран ҫепӗҫрех, евӗклӗрех, илӗртӳллӗрех пуласси. Шота пурнӑҫра кунашкал евӗклӗх пуррине ачалӑх ҫулӗсенче пӗрремӗш хут тӗлӗкре туйнӑ. Ун чухне вӑл Ольӑна курасси ҫинчен тӗлленмен те. Этеме хӑҫан хурлӑхпа савӑнӑҫ парассине пурнӑҫ хӑй йӗркелесе тӑрать. Халӗ вӗсем пӗрле. Икӗ хитре кӑвакарчӑн пӗрле. Тутапа тута, кӑкӑрпа кӑкӑр, чӗрепе чӗре кӑкарӑннӑ. Шота лайӑхран та лайӑхрах, ачашран та ачашрах пулма тӑрӑшать. Оля куҫне хупнӑ. Мӗнешкел ырӑ: хум хыҫҫӑн хум элчӗ евӗклӗх сапӑнать чӗре картине, лӑканать-лӑканать хӑйӑр тӳшек...

Чи малтанхи юрату вӑййи кайранхинчен нумай хӗрӳрех. Кун пек чухне вӑхӑта шутламаҫҫӗ. Ӑш хыппин ҫырлахӑвӗ хӑй тӗллӗнех васкаса килет. Васкаса килекен вӗри укол евӗрлӗ хӗрӳлӗх таппи ҫывхарса пынине сиссен Оля пиҫӗ пилӗк авӑкне кӑштах ҫӗклесе пӗр енчен тепӗр еннелле ачашшӑн-ачашшӑн пӑрса илчӗ. Ҫак сывлӑш ҫитми пулнӑ самантра калама ҫук телейлӗскерсем хӑйсене ҫеҫ илтӗнмелле ҫепӗҫ сасӑ кӑларса иккӗшӗ те пӗр вӑхӑтрах ним хускалми пулчӗҫ. Ку вӑл – хавха тӳпи. Кунтан ытла евӗкли ҫут тӗнчере урӑх ҫук. Ҫав ырӑ-ырӑ сулӑмра пӗрре те киленсе курман ҫын чӑн-чӑн евӗклӗх мӗн иккенне пачах пӗлмест.

Ҫулӑмран вӑйлӑ ҫулӑм пур, хитререн тата хитререх хитре пур. Шота хитре хӗрсене сахал мар курнӑ. Вӗсенчен пӗри те чун-чӗре туртӑмне Оля пек нихӑҫан та манӑҫми евӗккӗн хускатман. Ку вӑл ӗмӗтри ӗмӗтре те пулман черченкӗ ӗмӗт тулни мар-и? Шӑпах ҫавӑ.

Шота пуҫне лӑштӑр-р Ольӑн ҫара кӑкӑрӗ ҫине хунӑ. Оля та хурӑн сӗтекӗ шӑршиллӗ вӗри мунчара тин ҫеҫ ҫапӑнса тухнӑ евӗрлӗ хӗп-хӗрлӗ хӗрелнӗ, пурҫӑн тутӑр пекех лӑнчӑланнӑ. Тинӗс ҫав-ҫавах ҫутӑ, таса, илӗртӳллӗ. Хум хыҫҫӑн хум ҫапать ҫырана. Ҫиле хирӗҫле вирхӗнекен лаша ҫилхи евӗрлӗ катаран чупса килнӗ шурӑ кӑпӑксем ҫӳлерех те ҫӳлерех кармашса ӑравасӑр телейлӗ чечек пикепе хитре йӗкӗте хӑйсен ытамне вирхӗнме йыхӑраҫҫӗ.

«Эй, вӗҫсӗр тикӗс ҫийлӗ. сеп-сенкер тӳпеллӗ, йӑлтӑр кӗмӗл шӑрҫаллӑ Хура тинӗс! Сан тӗнче сарлакӑш кӗвӗҫ хумлӑ ытамунта мӗн чухлӗ карап путман пулӗ! Мӗн чухлӗ пурнӑҫ татӑлман пулӗ! Ҫапах эсӗ ырӑ. Санпа йӑпанакансем, савӑнакансем, ырӑ куракансем асап тӳснисенчен темиҫе пин хут нумайрах. Эсӗ савӑк, эсӗ сывлӑх, эсӗ телее шыракансене телейпе тӗл пултарса е ачаш, е ытлашшипех хаяр пурнӑҫа чӗререн юратмалла хастар кӑмӑл паратӑн. Ку пурнӑҫра пире телейлӗ пулма мӗн паманнине – эпир хамӑр илетпӗр...»

Шота шухӑша тата тӑсатчӗ пуль – Оля йӑшӑлл хускалса ҫемҫе пӳрнисемпе ӑна ҫӳҫӗнчен шӑлса илчӗ:

– Шо-от, – терӗ вӑл черченнӗн, – хӗвел хытӑ хӗртет. Атя шыва кӗретпӗр.

– Атя.

Мамӑк кӗрпиллӗ хӑйӑр ҫинчен Шота маларах ҫӗкленчӗ, ҫав самантрах аллине тӑсса Ольӑна ҫӗкленме пулӑшрӗ. Вара вӗсем, йӑлтӑр кӑвар куҫлӑскерсем, яслири ачасем пек алла-аллӑн тытӑнса сарӑрах шурӑ кӑпӑклӑ хумсене хирӗҫ чупрӗҫ. Мӗнешкел илем! Мӗн тери черченлӗх! Вӗсене ӑмсаннӑран хыҫа тӗрӗленсе юлнӑ ура йӗррисем те хускалмасӑр выртма чӑтаймарӗҫ.

Вӗсем сарлака вашӑк хумсен авӑкӗсенче вӑлта хулкки евӗрлӗн е ҫӳлелле ҫӗкленсе, е аялалла ярӑнса анса йӗкӗреш пулӑсем пек юнашар ишрӗҫ. Шотӑн пичӗ тата ҫутӑрах хӑмӑрккан хӗрелнӗ, Ольӑн – тӑп-тӑрӑ шывпа чӳхеннӗ тин ҫеҫ пиҫсе ҫитнӗ хурӑн ҫырли пек.

Ишнӗ хушӑрах пӗр-пӗрне шывпа сирпӗте-сирпӗте йӑлтӑр куҫсемпе вӑтанӑҫлӑн хӗм сапса вӑрахчен йӑпансан никам

хĕтĕртмесĕр хăй тĕллĕнех пулса пыракан кăмăл туртăмĕн еккипе каялла çаврăнчĕç. Çемçе, ăшă, тăп-тăрă шыв вĕсене хăйсен йывăрăшне туяйми тайлăк-майлăк сăпкара сиктерет тейĕн: алпа хăлаçланма кирлĕ те мар, çÿлелле-аялалла чÿхенсе куçакан лăпкă хум хăех сана ылтăн хăйăрлă çыран патне илсе пынăн туйăнать.

Яка хăйăрлă шыв тĕпĕ урана перĕнекен пулнă тĕле çитсен вĕсем ура çине тăчĕç кăна – Оля çав самантрах ачашшăн пăчăртанă çаппа-çарамас ытам тыткăнне лекрĕ: çемçешке йăплака хулăнрах та çÿхе тута хĕррисем тем хушăра пĕр-пĕринпе вĕри магнитла чăплатса сыпăнчĕç, ăшă-ăшă кăтăк ейĕвĕ сарăлса кайрĕ икĕ кĕрнеклĕ тăлпу тăрăх. Çăттăн тĕршĕннĕ кăкăрсене лăпкакан ăшă шыв чуп тума нимĕн чухлĕ те чармарĕ, унăн çепĕç кăпăклă лăпкавĕнче кушак çурисем евĕрлĕ ачашланма пушшех те лайăх. Лайăх. Паçăрах ыйхăран вăраннă туйăм тĕвви епле евĕккĕн тĕртет кăп-кăпăш сĕвек вырăна! Епле евĕклĕ! Сÿс пек çемĕçсе кĕлетке йывăрăшне çухатнă Оля вĕри ытамра хăрах урине кăштах аяккарах куçарса хăй сисмесĕрех тутлăн-тутлăн чĕтренсе илчĕ. Çĕнĕ вăй илнĕ каччăн тытса чарайми хĕрÿлĕхĕ ăна пĕтĕм тĕнчене манăçтарчĕ...

## 18

Тинĕс кукăрĕнчи хула пляжĕ.

Катаран шуралса килсе хум çапать хăйăрлă çырана Хура тинĕс. Хум хыççăн хум... Симĕсрех тĕслĕ курăнакан ăшă шывра хĕвелпе пиççе хĕрелнĕ çынсем çăмăл вăлта хулккисем пек чÿхенеççĕ. Çемçе кĕрпеклĕ анлă çыран çине талккăшĕпех шалçа пăрçи типĕтме сарса хунă тейĕн: ура пусма вырăн çук таранах хĕвелпе пиçекенсем выртса тулнă – янкăр тÿпе пăхса йăпанать. Чи хитре хĕрсене суйлать уçă сывлăш. Çил тĕлĕрет таçти улăхра. Лăпкă хумсем çырана вăтанса чуп тăваççĕ.

Митя хумсене хирĕç нумайччен ишрĕ. Юратать вăл каçăр хумсене çурмаран касса малалла талпăнмашкăн: темĕнле курăнман вăй сана каялла тĕртет, эсĕ – парăнмастăн. Корсаковри тинĕс бухтинче те çаплахчĕ: чăрсăр вал ăна çĕклесе хыçалалла

ывăтатчĕ, çирĕп алăсем пурпĕрех кăтăру тӳпине улăхатчĕç. Тинĕс çар флочĕн службинче тăнă чухне Лăпкă океан та лăпкă марччĕ. Кунта пачах урăхла: йĕри-тавра – хаваслă сас, йĕпеннĕ, хĕп-хĕрлĕ питлĕ хитре хĕрсен куçĕсенче – йăлтăр кулă.

Митя аякран шывра шăмпăлтатакан кашни хĕрте хăй кĕтнĕ сăна куратчĕ, çывăхнерех ишсе пырать те – çук. Оля мар. Кунĕ епле хитре! Тинĕсĕ-шывĕ – тин кăна сунă кăпăклă сĕт пек. Ав пĕр хĕрпе каччă ăшшăн-ăшшăн ыталаннă: хул пуççийĕсем кăшт анчах курăнаççĕ, куçĕсем – шĕл кăвар, курăнман аллисем тем тăваççĕ унта... аялта... Эх, Ольăччĕ сиксе тухас çакăнта! Çав йăл кулăллă хĕр пек, кăкăрпа кăкăр çăт юнашар пулсанччĕ. Унăн ăна курсан услам çу пек ирĕлекен чуна тутлăн-тутлăн туртса ĕмекен кăн-кăвак куçĕнчен ирĕккĕн хирĕç пăхса тăраниччен киленесчĕ...

Шел, пылак ĕмĕт эликсирне Митя пляжра кураймарĕ. Кăтра хумсен чĕлхе çук – вăл ăçтине каламарĕç.

Ольăпа вĕсем пач кĕтмен çĕртен каçхи апат умĕн ал çумалли пӳлĕмре тĕл пулчĕç. Качă чĕрине темĕнле ăшă-ăшă юхăм пырса кĕчĕ. Умывальниксем юнашар. Пуçĕсене кăштах пĕкнĕскерсем аллисене васкамасăр супăньлерĕç.

– Кайрантарахпа пыр. Эпĕ пĕчченех, – шăна вĕçнĕ чухнехи сасран та шăппăн пăшăлтатрĕ Оля çывăхрарах çăвăнакансем илтесрен хăранăн çамрăк яш еннелле пăхмасăр.

– Антуан ăçта?

– Паян пулмасть вăл. Консультацине кайрĕ.

Икĕ çепĕç сасă пĕр-пĕрне шăппăн-шăппăн чĕнсе илнине никам та сисмерĕ. Вăрттăнлăх – питĕ хаклă япала евĕрлĕ, çынсем ăна тĕплĕ пытарма пĕлеççĕ.

Вун пĕрмĕш палатăн алăк янаххи урлă Митя урай ан чĕриклеттĕр тесе чĕрне вĕççĕн асăрхануллăн пусса, чĕри тапма чарăнса ларнăн пач сывламасăр каçрĕ. Çăра питĕркĕчне пăрсанах вĕсем, икĕ вĕри çилĕм пек, нихăçан та уйрăлас çукла хыттăн ыталанчĕç. Тинех ирĕклĕн, никамран шикленмесĕр, хĕрӳлĕхе пытармасăр. Тинех, тинех çитрĕ кĕтнĕ самант. Митя Ольăн хăйма кăпăкĕ пек çемçе тутине пĕркун кăшт çеç сĕртĕнсе

илнӗччӗ, халӗ ӑна вӑл ӗмӗтсӗррӗн-ӗмӗтсӗррӗн, сывлӑшӗ пӗтсе ҫитсен те чарӑнмасӑр чуп турӗ. Чӗрийӗ унӑн евӗклӗх капланӑвӗнче куҫа курӑнман ҫулӑмпа хыпса илсе тӳсме ҫук пылак хӗрӳлӗх хумӗ пырса ҫапӑннӑран кӗпе ҫӗлекен ҫӗвӗ машинин хурси пек хӑвӑрт-хӑвӑрт тапма пуҫларӗ. Кӑтӑк выляВӗпе пружина евӗрлӗ пирчевленнӗ аллисем ҫемҫе хул калакӗнчен уйрӑлмасӑр икӗ хытӑ мечӗк пек чӑмӑр кӑкӑра кӗҫ-вӗҫ ҫурӑласла лапчӑтса Ольӑна ҫирӗппӗн хӑй ҫумне пӑчӑртарӗҫ. Хӗрарӑмӑн тӗлӗнмелле ачаш ӳтне черчен чунӗпе туйнӑран ӑшри пуҫа пылаккӑн ҫавӑракан евӗк пӑлхавӗ хӑйшӗн яланах кӑмӑл ыйтнинчен хаяртарах пулнӑ ҫут тӗнчене те паллайми турӗ ӑна. Халӗ вӗсем ку тӗнчере урӑх нимӗн те, пачах та нимӗн те курмаҫҫӗ: мӗнпурӗ те – икӗ пыл сӗрнӗ тута, икӗ мӑшӑр ҫутӑ куҫ, икӗ пӗр пек ҫепӗҫ туртӑм кӑна. Урисем иккӗшӗн те мамӑк евӗрлӗн ҫемӗҫсе кӗлетке йывӑрӑшне тытса тӑрайми пулса пынӑран, тутаран тута уйрӑлмасӑрах вӗсем стена ҫумне хӗсӗннӗ вырӑн ҫине сулӑнса кайрӗҫ.

– Мӗн каласа пачӗ вӑл сана? – ыйтрӗ Оля ниҫта кайса кӗрейми вӗриленнӗ каччӑ кӑштах сывлӑш ҫавӑрмашкӑн тута хӗррине вӗҫертсен.

– Ан ыйт. Эпӗ хам та хам мар халь. Чунӑм ҫӳл тӳпери вӗҫсӗр уҫлӑха вӗҫет – пурте-пурте манӑҫра. Ҫак саманта кӗтсе илессӗн туйӑнманччӗ, – ҫак ҫав тери ырӑ самант каллех яланхи пекех чи ырӑ вӑхӑтра темӗнле чӑрмав сиксе тухса татӑласран, Оля татах та татах Антуана асӑнасран, хӑй ӑна ҫеҫ парӑнса тӑнине каласран, хӑйне ҫак вӗри чуптӑвӑмран ытлашши урӑх нимӗн чухлӗ те иртме ирӗк памасран шикленсе хурава туйӑм хӗрӳлӗхӗ еннелле сулӑнтарма тӑрӑшрӗ Митя.

– А эпӗ ҫак самант ҫитесрен хӑраттӑм, – каччӑ ҫӳҫне ҫемҫен шӑлса илчӗ Оля.

– Мӗншӗн?

– Ҫунса каясран, кӗл пуласран.

– Хитре чечексем кӗл пулмаҫҫӗ.

Митя каллех чуп тума пуҫларӗ. Оля пуҫне минтер ҫине хучӗ. Капла тата аванрах: ҫӳлелле карӑннӑ чӑп-чӑмӑр кӑкӑр уҫӑ

çухаран хирĕнсе тухрĕ – куçа пылаккăн туртса ĕмекен илем санран пытанас вырăнне хăй сан патналла туртăнать, сана кăмăл ыйтăвне тӳсĕмлĕрех пулма тытса чаракан чăтăм чикки хĕрринче текех тытăнса тăми тăвать. Каччă хăйне хăй тытса чарайми пулчĕ: питпе пит, тутапа тута ачашшăн сĕртĕннĕ хушăрах унăн канăçа çухатнă сылтăм алли яка пĕçĕ тăрăх шуса улăхса футбол мечĕкĕ пек çавра мăкăра çемçен çупăрларĕ, çемçен пăчăртарĕ.

Малалла кайма ăна Оля алли тытса чарчĕ.

Татах тем пачах кĕтменни сиксе тухасран шикленекен харсăрлансах çитеймен çамрăк йĕкĕт кăн-кăвак куçран пĕчĕк ачалла йăлăнса пăхрĕ: «Мĕ-ĕншĕн?» – пăшăхса тухрĕ унăн сасси.

– Тăхта.

– Мĕн тăхтамалли! Куртăн вĕт – кĕçех çурăлса каятăп.

– Апла пулин те тăхта. Пĕлетĕн-и, эпĕ питĕ хĕрӳллĕ: пĕр çыпçăнсан – уйрăлмастăп... Шухăшла, эсĕ каччă, эпĕ уйрăлми çыпăçни – пире кирлех-и?

Митя кăн-кăвак куçа вăтантармалла витерсе пăхрĕ:

– Кăмăллатăп эпĕ сана.

– Кайран ӳкĕнмĕн-и?

– Кăмăллатăп эпĕ сана.

– Çак хальхи шухă хĕрӳлĕх сĕвĕрĕлсен пăрахмăн-и мана?

– Кăмăллатăп эпĕ сана.

– Сăмах паратăн-и?

– Паратăп.

– Хывăн эппин... Нимĕн юлми. Эпĕ çапла юрататăп.

Кунашкал сĕнĕве тĕлĕкре те илтсе курассăн туйăнман Митя хыпăнса ӳкрĕ. Унăн çемçешке пӳрнисем, чӳрече умĕнче тулалла тухасшăн çунакан шăна çуначĕсем пек вĕлтĕртетсе, хăвăрт-хăвăрт кĕпе тӳмисене вĕçертме пуçларĕç.

Хывăнма вăл Ольăран маларах хывăнса пĕтерчĕ. Нимĕн юлми тенĕрен, аллинчи сехете те, çутă, паха сулăна çурмаран хуçлатса, сĕтел çине салтса хучĕ.

Оля васкамарĕ. Хăйĕн кĕске те çăтă платье айне пытаннă илемĕпе тӳсейми астарса, Митьăна тин-тинех чăннипе тулса килекен ĕмĕт пылаклăхĕпе юриех вăрах асаплантарать тейĕн.

Малтан икĕ урине умлăн-хыçлăн çĕклесе кăвакрах сенкер чечеклĕ плавкине хыврĕ, çакăн хыççăн тин çап-çавра йĕкĕр мăкăра хуплакан çăтăрах хитре платьене икĕ аллипе асăрхануллăн тытса пĕтĕм пĕвĕ тăрăх майĕпен çӳлелле шутарчĕ. Унăн таса ӳчĕ кашни сантиметр ерипен сарăлса, чăмăрланса, уçăлса пынăçемĕн каччă чĕри вăйлăран та вăйлăн тапма пуçларĕ. Хăй тĕллĕнех çӳлерех те çӳлерех уçăлса пыракан чи илĕртӳллĕ карамельтен шăратса тунă евĕрлĕ кĕрнеклĕ пĕçĕсем ăна питĕ евĕклĕн кăтăклантарса çемçен-çеçен ӳсĕртсе ячĕç.

19

Вĕсем тек ура çинче пĕр çеккунт та тытăнса тăраймарĕç, пĕр-пĕрне çара хул пуççирен çупăрланă-çупăрламанах кĕлетке йывăрăшне çухатса, шурă минтерлĕ вырăн урлă сулăнма ĕлкĕрчĕç çеç – çав самантрах Оля хăйĕн пĕтĕм курăни-курăнми илемĕпе каччăн вĕри ытамне путрĕ. Хуçланчĕç, юпленчĕç хитре пĕçĕсем...

Шăп. Тĕнче те сывлама чарăннă тейĕн. Мĕнешкел ырă самант! Туйăм тĕвви хур мамăкĕнчен те çемçерех, ăшă, йăпăлкка, çăтă хушăка хĕсĕнсе кĕрсе кăтăк нервисене çав тери çемçен сĕртĕнсе урăх малалла иртме май çук тĕле çитсен Митя нихăçанхинчен те тарăнрах ăнланса илчĕ: «Епле лайăх çак çут тĕнчере пурăнма!» Ах, куна кĕтни! Куншăн çунни!.. Ăшă... çуллă... çепĕç туртăм... Юнашарах çĕнĕлĕхре халиччен курманнине шыранăн çемçен вăтанса хирĕç пăхать йăлтăр кăвак куç, кăкăртан тĕртет икĕ хытă чăмăр кăкăр... Кашни хускану – çăвара хыпнă пыл кашăкĕ евĕрлĕ. Ольăн ăшăран вĕрирех, вĕрирен ăшăрах ӳчĕн калама çук черчен сĕртĕнĕвĕ пĕр хăй кăна – кунтан ытла ырă пулма пултарайман евĕклĕх тĕнчи. Мĕн тери ырă пăчăртав! Митьăн пĕр хускалман, пĕр вылянман клетка юлмарĕ. Кунашкал хĕрӳлĕхе арçынсем вăрах чăтаймаççĕ.

– Митя, Митенька, ан васка... – туйăмсен вылявне кăштах хĕссе ярирех хуçланнă урисене тӳрлетесшĕн пулчĕ Оля.

Каплах ачашшăн хускалма кирлехчĕ-ши? Каччăн пĕтĕм нерв çипписем тăрăх вĕтĕ-вĕтĕ мамăк вĕçĕсем сăрăлтатса евĕклĕн-

евӗклӗн чупса кайрӗҫ – чӗриӗ сиксе тухасла хыттӑн-хыттӑн тапрӗ...

– Ӑӑ... халех-и? – Митьӑна ҫурӑмӗнчен ҫупӑрласа экстаз вӑйланӑвне иксӗтесшӗн ҫунчӗ Оля.

Ӑҫта унта. Ҫавӑн пек хӗрӳлӗхе тытса чаракан вӑй та пур-и вара? Йӑрнт! йӑрнт! йӑрнт! пырса ҫапӑнать чи сисӗмлӗ тӗле вӑйкӑн хӗрӳлӗх таппи... Оля, пуҫне пӑрса, сасартӑках лӑстӑр-р ҫемӗҫсе кайрӗ... хускалми пулчӗ...

– Каҫар... – терӗ Митя уҫӑ сывлӑша ҫавӑрса илеймесӗр тарлӑ пичӗпе ҫара кӑкӑр ҫумне лӑпчӑнса.

– Эсӗ питӗ тунсӑхланӑ пулас, – пӳрнисене сарса ҫӳҫӗнчен лӑпкарӗ ӑна пӗрлӗхен пек хӗрелнӗ пике.

– Питӗ-питӗ. Курассӑн туйӑнманччӗ.

– Таппу вӑйлӑ. Сисӗнет, каччӑ, ҫамрӑк каччӑ.

## 20

Пӗрремӗш икерчӗ тачкарах пулнине Митя хӑй те туйрӗ. Кунашкал каччӑсене хӗрарӑмсем хурланине пӗлет вӑл. Унӑн Ольӑна шутсӑр хӗпӗртеттерес килетчӗ, тӗкӗрле йӑлкӑшакан йӑм хура урхамах пек вӑйлӑ арҫын пулас килетчӗ, хӑйне никамран та ытларах юраттарас килетчӗ. Никамран ытла юратӗ-ши ӑна халь Оля ҫакӑн пек пулса тухнӑ хыҫҫӑн?Курать Митя: Ольӑна темӗн ҫитмен пек – нумаях пулмасть кӑн-кӑвак кӑвар евӗрлӗ хӗм сапакан куҫӗсенче темӗнле вӑйсӑртарах шухӑш яваннӑн туйӑнать... «Чуп ту мана, чуп ту мана...» – аса илчӗ вӑл Антуан каланӑ сӑмахсене. Мӗншӗн ҫуннине, мӗн курасшӑн пулнине – Оля пытармасть халь, тытма та, чуп тума та чармасть; хӑй те хӗрхенӗҫлӗ: пӗркуннехи сарлака пусма ҫине тухмалли алӑк хыҫӗнчи евӗрлӗ, чӗрӗ пулӑ пек, ӑшӑ ытамран шӑвӑнса тухмасть. Мӗн чухлӗ илем унра! Мӗн чухлӗ черченлӗх!

Ирхи сывлӑмлӑ тин ҫеҫ ҫурӑлма пуҫланӑ хӗп-хӗрлӗ тюльпан евӗрлӗрех чечек папки!.. Пӗрремӗш хут хӗре чуп тунӑ чухнехи пекех вӑтантарать. Пӗр каҫхине ҫак самаях каҫа юлса килнӗ пике чӳрече сулли ҫинчен аннӑ самантра катаран курнипех чӗрене ҫиҫӗмле пӗҫертсе илнӗччӗ вӑл. Митя куҫне хупрӗ... пуҫӗпе малалла ӳпӗнчӗ...

Питех те йăлăнăçлă, ачаш чĕреллĕскере нумайччен хăйĕн çывăхне яман тĕлĕнмелле хитре, тап-таса, кăн-кăвак кевер куçлă пике евĕклĕн-евĕклĕн йынăшса илчĕ:

– Ой, Митя!.. Ăх... ăсран кăларатăн... ăă-ă... – хĕрлĕ чĕрнеллĕ çинçе пӳрнесем каччă çӳçне, лĕп кăна çил пек, çемçен-çемçен тăрмалама пуçларĕç... Ирĕлет-ирĕлет икĕ чĕрере евĕк карамелĕ...

Митя тинех, пӳлĕннĕ сывлăша тарăннăн çăтса, ӳкесрен хăранăн, çара кăкăр çумне тĕлĕрсе кайнă кушак çури евĕрлĕн йăпшăнса выртрĕ.

Каçхи таса сывлăшлă шăплăх хупларĕ пӳлĕме.

Икĕ хитре тăлпăва пĕччен тунсăхлă маччаран ăмсанса пăхать çутă лампа. Митя Ольăна ыталанă, Оля алли – Митьăна. Иккĕшĕ те пĕрешкелех халсăрланнă, вĕсене халь – канлĕ-канлĕ... ырă-ырă...

21

Митя вăрахран тин пуçне çĕклерĕ. Унăн çепĕç ытамĕнче – чуна ăшшăн кăтăклакан йăлтăр куçлă Оля. Вăл та, хăй пекех, пуçласа кун çути курнă чухнехи чи хитре çи-пуçпа. Кĕлеткийĕ вĕрсе карăнтарнă евĕрлĕ: пĕр пĕркеленчĕксĕр, пĕр усăнчăксăр – куçа шартса яракан илем. Çакна Митя ăсра тахçанах туйса тăнă, халĕ куçăн курать: чăн та, ытармалла мар. Антуан тĕрĕсех каланă. Çур тĕпренчĕк те суйман.

Пурнăç – тĕлĕнмелле ырă япала: мĕн тери, нихăçан та манайми евĕклĕ курăнусем, пĕтĕм чун хавалне йăпатса, çӳл тӳпене çитиех çĕклентерсе яракан ырă-ырă пулăмсем пур унта. Çуллахи ăшă, хĕвеллĕ тӳлек çанталăкра ыраш пуссинче куçа илĕртсе шăппăн-шăппăн ăрша вылять. Çутă ĕмĕт пурнăçланнă вăхăтсенче этем чунĕнче те çавăн пекех савăклăх вылять – тӳпинченех тулса çитнĕ кăмăла шăнăçайми. Вĕçес килет, ирĕлсе каяслах хĕпĕртес килет; чипер пынă çĕртех такăннине, йăнăшнине е хăш чухне ыратмаллах ӳкнисене тĕппипех пуçран кăларса ывăтса, пурне те, пурне те юратас килет. Пĕтĕмпех, асамлă пурнăç, сана пула. Эсĕ мĕн пĕчĕкренпех чи çутă, чи

чечен ĕмĕтпе нумайччен-нумайччен йăпатса, шантарса, вăрттăн-вăрттăн астарса пыратăн-пыратăн та – çав çулран-çул улшăнса, татах та татах лайăхланса, хаклăланса, юлашкинчен манăçа çухатаслах ăша çунтара-çунтара, чун йăлăнса, хĕмленсе ыйтнине пĕр-пĕр илемлĕ кун кăштăрт кăна алла тыттаратăн. Мĕн  тери телей!

## 22

Митя Ольăпа кунашкал чăп-чăмăр çара кăкăр урлă чĕрепе чĕре перĕнмеллех çывăхланасса мар, пĕр-пĕр мĕнле те пулин улахрах шăплăхра юнашар ларса калаçасса та шансах çитменччĕ, – ытла та нумай çунтарчĕ ăна вăл. Ку йăваш çамрăка асаплантарас-ха терĕ пуль: çав асап чăн-чăн евĕклĕхе куçасса самай кĕтме тиврĕ. Халĕ кĕтевлĕ, вĕткеленӳллĕ самантсем хыçа тăрса юлчĕç: вĕсем – пĕрле, кăкăрпа кăкăр тачă тĕршĕннĕ, пӳлĕмре улах, алăка çăрапа питĕрнĕ, хĕрӳлĕхĕ – иккĕшĕн те кассăн-кассăн пĕрĕхекен вулкан евĕрлĕ...

Акă каллех пĕр-пĕрне савăклă куçран кăштах вăтанăçлăн питĕ йăпанса пăхрĕç вĕсем. Каччă хитре тутана çепĕççĕн сĕртĕнчĕ çеç – Оля, тути хупăран, тепĕр сывлăш çулĕпе сывласа çемçен-çемçен ĕнĕрсе илчĕ – çирĕп кăкăр айне хĕсĕнчĕ...

– Атя çакăн пек... – икĕ чăп-чăмăр йăлтăркка пĕçĕне ыталаса хул çумне ачашшăн пăчăртарĕ тӳпене вĕçеслех хавхаланнă каччă.

– Хăвна мĕнле лайăх... – йăăлл! кулчĕ телейлĕ пике.

– Вăт çапла...

– Ан васка.

– Юрĕ...

Кĕçех пĕтĕм чуна лăпкакан, пĕчĕм чуна çунат паракан, ăсран кăларакан хĕвеллĕ пĕвери курăклă çырана вăйсăр хум пырса çапнă евĕрлĕрех йăпăш чуп тăвăм сассийĕ илтĕнме пуçларĕ. Сасси... Сассийĕ пĕр хăй кăна пылаккăн çăтнă сывлăша пăшăх кăкăртан каялла тухайми тăвать.

Евĕклĕ сулăмсем Митьăна хăйĕн йывăрăшне пачах туйми турĕç. Сенкер уçлăхра кĕсменсĕр кимĕпе изумруд тĕслĕ лăпкă хумсене çурмаран çурса анлă тинĕс тăрăх куç виçейми инçет

патнелле пырать пек. Çил çук, тӳпе пӗлӗтсӗр, инçет таса – тинӗс тӑвӑлӗ пуласси палли те çук. Ырӑ! Ишет вӑл, ишет кӗсменсӗр кимӗпе...

Ольӑн та сывлӑшӗ хӑвӑртланчӗ, сассийӗ чӗвӗлти хӗрачаннин евӗрлӗн татах çепӗçленчӗ: «Эпӗ... эпӗ... халех...» – туйӑмсем тӗвӗленнӗ тӗлӗпе кӑштах çӗкленчӗ вӑл, икӗ еннелле пӑрса илчӗ – çепӗç экстаз кӗввине кӑларнӑ май вӗри тутипе каччӑ кӑкӑрне ӑшпиллӗн çыртрӗ...

23

Вӑхӑт майӗпен шӑвать. Шутӑрин. Телейлисем сехете пӑхмаççӗ. Кӑнтӑр-и, каç-и – ырӑ пурпӗрех.

Тутлӑн ӗшеннӗ самант часах иртрӗ. Çамрӑк хастарлӑх таптаса çӑл куçле иксӗлми тапса тӑрать. Унӑн кашни таппи тапса хыçа иртнинчен тата хитререх пулма тӑрӑшать. Пӗр иртнӗ евӗк вырӑнне теприне шырать.

Шурӑ простынь çинче – икӗ хӳхӗм тюльпан, – пӗри тепринчен черченрех, нектарӗ иккӗшӗн те пӗрех.

Евӗклӗн-евӗклӗн тамалса иртнине вӑхӑт хыçала хӑварчӗ. Вӑл текех каялла таврӑнмасть. Хальтерех хыçа юлнинче чи ырри кӑначчӗ. Тата мӗн сиктерсе хӑварнӑ-ши вӗсем? Хӑш евӗкне тутанман?

Оля ывӑçӗ хур мамӑкӗ евӗрлӗ: ӑшӑ, çемçе, питӗ çепӗç пӑчӑртавлӑ. Хӑй те юлхавлӑ амӑш ытамӗпе вылякан кушак çури пекех – кашни клеткӑна, кашни мускула вӑрататать – е пӑчӑртать, е авать.

Ывӑçра мӗн пурри вӑрансанах Оля пӗвӗпе çӳлелле çӗкленчӗ, икӗ аллипе каччӑ кӑкӑрӗ çине тӗренчӗ... Юрату вӑййинче пурте ырӑ, пурте лайӑх. «Кокос пальми» айӗнче – татах та лайӑх: выртатӑн шӑппӑн, канлӗн-канлӗн – лӑпкать-лӑпкать сана питӗ-питӗ евӗк пӑчӑртавлӑ туртӑм...

Кунашкаллине Митя тӗлӗкре те курманччӗ.

24

Уçӑ сывлӑш... Жасмин шӑрши... Чечеклӗ пӳлӗм...

Миçе хутчен пилӗкшер, вуншар, çирӗмшер минутчен пӗрпӗринпе çӑт çыпçӑнса пӑтранчӑк шыври вӗтӗ хуртсем евӗрлӗ

темĕн тĕрлĕ те авкаланчĕç вĕсем – çакна нихăшĕ те шутламарĕ. Каччă кăштах лăпланать-и е çурăм çине йăванса тарлă пуçне минтер хĕррине хурать – унпа Оля çемçе тутипе чăп-чăп ачашланма пуçлать çех – тем самантра çамрăк хастарлăх каллех хĕрсе каять. Çĕнĕрен вăй илет туйăмсен вылявĕ...

Кунта пурте кăмăл уççишĕн шăп кирлĕ пек йĕркеленнĕ: çемçе тӳшек... çемçе минтер... черченкĕ шăплăх...

– Çут тĕнчере телей пурри епле лайăх! Çав телей вăл – санпа пĕрле пулни, – терĕ Митя халь кăна хуппине сӳнĕ çарăк пек илĕртӳллĕн юнашар çĕкленсе тăракан икĕ чăп-чăмăр кăкăр вĕçĕсене е пĕрне, е теприне чăп-чăп чуп туса.

– Маншăн – эсĕ пурри... – икĕ пит çăмартинчен çупăрласа калама çук ăшшăн хĕмленсе пăхрĕ ун çине йĕп вĕçĕ пек вĕтĕ-вĕтĕ тарпа витĕнсе тата ытларах хитреленнĕ Оля. Çав ăшă хĕмленĕвре темĕнле каласа пĕтермен çепĕç-çепĕç вăрттăн туртăм пурри палăрчĕ.

– Мĕн?.. – кăн-кăвак кевер куçа именсе пăхрĕ каччă.

– Офицерле, офицерле теççĕ. Мĕн япала вăл? Атя астивсе пăхар, – йăăлл! кулчĕ чечек пике.

Ку пылак шухăша Митя хăй сĕнесшĕнччĕ, Оля ăна рентгенла витĕрех курнă тейĕн.

– Эсĕ ман шухăшсене вулатăн, – кăпăш сапаланчăк çӳçлĕ пикене янахне каçăрттарса çемçе ӳт çумне çуллă тутипе ачаш сĕлĕхле тĕршĕнчĕ телейлĕ каччă. Икĕ хитре чăп-чăмăр пĕçĕ хыттăн карăнтарнă гитара хĕлĕхĕ евĕрлĕ çӳлелле туртăнчĕ...

– Ой, Митя!..

Митя чĕнмерĕ. Кăмăл чăп тулли чухне, чĕре евĕккĕн-евĕккĕн сиксе выляна чухне арçынсем чĕнмеççĕ...

Вунă сехет çывхараспа евĕклĕн-евĕклĕн ывăнса çитнĕскерсем, телейлĕскерсем, тин çеç тăп-тăрă шывпа çунă хурăн çырли пек йăлтăр хитре питлĕскерсем, кăкăрпа кăкăр мĕнле хупланса выртнă çаплипех – иккĕшĕ те пĕр харăсах тупăран персен те вăранми тутлăн-тутлăн çывăрса кайрĕç. Çутă сӳнтермен пӳлĕм тин-тинех тĕлĕнмелле ырă шăплăха путрĕ, яп-янкăр таса сывлăш та хупрĕ куçне – çывăрса кайрĕ.

25

Пĕрисем çыварнă чух теприсем куç хупмаççĕ. Пурнăç мĕн ĕмĕртен çапла йĕркеленнĕ.

Улах пӳлĕмре мĕн пурри, мĕн çукки пурте лăпланса нимĕн хускалми пулсан тепĕр сакăр-тăхăр минутран питĕрнĕ алăк çăрине тул енчен уçăпа шакăртаттарнă сасă илтĕнчĕ. Часах алăкран, икĕ çирĕп костыль çине уртăнса, Антуан кĕчĕ. Кунта кĕçĕр ăна никам та кĕтменччĕ.

Малтанах вăл нимĕн те пĕлмерĕ-ха – яриех уçăлса пыракан алăка хупас тесе тăрăшатчĕ. Кайран алăка питĕрнĕ хыççăн ерипен çаврăнса вырăн çинчи пĕр-пĕрне ачашшăн çупăрласа канлĕн-канлĕн тĕлĕрекен çаппа-çарамас кĕлеткесен çыххине курсан, куçне ĕненмесĕр, юпа пек шак хытса тăчĕ. Куçĕ самантрах тĕнче пĕтнĕн хуралса килчĕ. Этеме титан чĕре кирлĕ çакна чăтмашкăн. Антуан тем хушăра сасартăках тилĕрсе кайрĕ: хул хушшинчи тĕревсем çине çирĕппĕн тĕренсе юнашарти хыçлă пукана хăвăрт кравать çумнерех куçарчĕ те, тепĕр питех те хĕнлĕ утăм туса, меллĕн вырнаçса ларчĕ – вара, ик аллине сурчăкласа, пĕр аллипе яка урлуççиллĕ вăрăм костыле вĕçĕнчен, теприпе урлуççи тĕлĕнчерехрен тытрĕ те, хул хушши уртăнмалли шĕвĕр утюг евĕрлĕрех сулăмлă тĕреве çӳлелле çĕклесе, пуçне айăккăн хурса тутлăн-тутлăн тĕлĕрекен кăпăшка çырă çӳçлĕ хитре чечек пикене пĕтĕм вăйпа шăп тăнлавĕнчен нач! туртса çапрĕ. Çав сасса илтсен Митя шартах сиксе вăранса кайрĕ, анчах мĕн пулса иртнине тавçăрса илме ĕлкĕреймерĕ – нач! нач! пуç купташки çурăлса каймалла икĕ хутчен питĕ вирлĕн пырса çапрĕ ăна йывăр туя кĕтесси... Уçă сывлăшлă, ырă шăршăллă лăпкă пӳлĕм хăй те тӳсейми хурланса виçĕ хутчен асаплăн ахлатрĕ тейĕн... Сĕтел çинчи хитре вазăри чĕрĕ чечексен куçĕсем хĕп-хĕрлĕн хĕрелсе пĕр сассăр шывланчĕç...

Лешсем, ăнăçсăр юратăва пула каçарма майĕ çук таранах çылăха кĕнĕскерсем, касăлнă ăмансем пек туртăнса ним тапранми пулсан та, шанчăклăрах пултăр тесе, никам тытса чарайми талăрса кайнă Антуан иккĕшне те тата тепрер хут хĕрнĕ султтан евĕрлĕн начлаттарчĕ. Йăм хĕрлĕ юнпа икĕ тĕлтен

хĕрелчĕ шап-шурă питлĕ çемçешке минтер. Халĕ – шанчăклă: текех вĕсем пĕр-пĕрне урăх нихăçан та, нихăçан та юратаймĕç... Юратма пĕлни – искусство, юратма пĕлнине пурне те паман.

Костыль урайне ÿкрĕ.

26

«... Пушанчĕ чун, кĕлленчĕ туйăм –
Хăть кашкăр пек выртса ÿле.
Телей пур чух телейсĕр турăн
Таса, черчен илемÿпе...»

Антуан.

Тĕнчере чи хăрушши мĕн пулма пултарасси – пулчĕ. Пĕтĕмпех куç умĕнче. Эх, Антоша-Антуан!.. Кăвар чĕреллĕ çамрăк каччă хĕвел шевли пек çутă ĕмĕтлĕччĕ. Питĕ-питĕ телейлĕччĕ... Ăçта, хăш тĕлте такăнчĕ вăл? Хăш авăрта майсăр пысăк йăнăш турĕ? Ольăна тĕл пулса-и е çав çурхи калча пек çамрăк вĕсĕлтисемпе явăçса кайса? Çук, Эльзăпа Аллăн кунта айăп çук.

Арçынна чăннипе телейлĕ пулмашкăн виçĕ япала кирлĕ, пĕри – лайăх арăм. Оля лайăхчĕ. Антуана вăл хăй пĕрремĕш курăннипех ырă шанчăка çухатаслăх пырса çулăхайми чечен иммунитетлă тунăччĕ... Хăшĕ, кам пăсăлчĕ? Пурнăçăн е тайлăк, е тÿрĕ çулĕ-сукмакĕ илсе пынă тепĕр тĕл пулура унăн сассине илтнипе гранит палăк пек хытса тăнă таса чунлă каччă-и е «телейпе сапатăп куçунтан» тесе юрлаканни? Антуан çынна пысăк-пысăк инкек кÿме никам ÿчĕ çине те çĕçĕ-хĕç тăрăнтарман, çав çĕçĕ-хĕççе ун çине мĕншĕн тăрăнтарчĕç? Ольăшăн. Каччăсен чунне хĕрÿллĕн тыткăнламаллах хитре пулнишĕн – Оля айăплă мар. Мĕншĕн, мĕншĕн йывăр костыле маччапатне çитесле çĕклесе çапса икĕ хитре чечекĕн пурнăçне татрĕ Антуан? Ольăшăн. Куншăн айăпли – калама та хĕн – Оля.

Пулчĕ... Ăçта, хăш курăнман кукăрти тĕпсĕр çырмана килсе тухрĕ халь: «Эй, ытарайми çутă тĕнче! Санăн ачаш ытамна эпĕ те килтĕм. Мĕн тери хава-а-ас!» – тесе уçă яҥ сасăпа çухăрса çуралнă, таса, çутă, чечен ĕмĕтлĕ Антошка-Антуан? Мĕн туса хучĕ вăл? Мĕн курать?.. Чи хÿхĕм, чи хаклă, чи çывăх çынна – Ольăна яланлăхах çухатрĕ вăл.

Çухатрĕ... Ку – чăн. Ĕненмелле мар, тӳсмелле мар чăн. Оля ăна, чунĕпе хĕрӳллĕскере, вăйлăскере, халĕ ытлашшипех хавшанăскере, анчах кĕлмĕçе мар, мĕскĕне мар, асапа парăннăскере те мар – питĕ хăрушă, питĕ хĕнлĕ самантра арçыннăн хаяр тивĕçне чун ыйтнă пек пĕр шелсĕр пурнăçланăскере, çак çилĕллĕ те пăтравлă тĕнчере тăр пĕччен тăратса хăварчĕ. Оля вăратнă, Оля парнеленĕ виçесĕр илпек ачашлăх, ытарлăх, ĕлккенлĕх халĕ те унрах-ха. Çак илемĕпе те, çепĕçлĕхĕпе те, кăмăлĕпе те пĕр пекки урăх пулма пултарайман асамçă Антуана калама çук телейлĕ, вĕçевлĕ, хăватлă, юлашкинчен, унран ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайса, нĕрсĕр синкерлĕ, çав тери телейсĕр турĕ.

Юратăва Оля никам сĕмленме пултарайми черчен турĕ, ытарайми турĕ, чун-чĕре çӳпçине шăнăçайми, кăмăл-туйăма тытса чарайми турĕ. Антуаншăн малашне те çаплах пулĕ вăл; ăшă, савăк, пылак, нихăçан та йăпанса тăранайми турĕ, Антуаншăн халĕ те çаплах вăл. Оля хăйне пĕр самант та асран тухайми, нихăçан та, нихăçан та юратма пăрахайми, унран самантлăха та уйрăлма, ăна такама пама, ăна çухатма çав тери хăрушă турĕ – халĕ те, такам туртса илнĕ пулин те, такамăн ăшă ытамĕнче юлашки сывлăша кĕскен-кĕскен сывласа кăларчĕ пулин те, ăна çухатма, ăна çак çап-çутă та хăш чухне пăч тĕттĕм тĕнчере текех çук тесе ĕненме тӳсме çук хăрушă.

Оля юратăва çĕнĕрен те çĕнĕрен вăйланса, хаклăланса, пылакланса пыракан турĕ – вăйланма, хаклăланма, çухатнăран чăрсăр чуна пĕр вĕçĕмсĕр ыраттарма вăл паян та, ыран та, нихăçан та чарăнмĕ...

Йĕрекен чĕрере, пăлхавлă юна тăвăнса уçлакан чĕрере – юрату, чун савнă çынна вилĕм кӳрекен юрату; хыпса çунакан чĕрере – сунтал çинчи хĕм сапса чĕтренсе выртакан тимĕр пек хĕрӳ туйăм, çав хĕрӳлĕхрен тĕнче хĕррине çитиччен тарас килекен вĕри туйăм; кăкăр кăшкарне хыттăн тапса чан çапакан чĕрере – çав тери хаяр хаярлăх, çав тери ачашлăх, – чун ыйтнине, чун туртнине пĕр шелсĕр çурмаран касса татакан хаярлăх, – çавнах, хăй касса татнăскерех, чи сиплĕ шеллев сĕтекĕпе сиплесе каялла таврăнма йăлăнса чĕнекен манерсĕр черчен ачашлăх.

Ачашлăх та хаярлăх... Тӳсме çук ултав та пăтрав. Тăмлă тарăн варта кĕрлесе, явăнса юхакан çурхи шыв пек пăтравлăх.

Çак пăтравлăхра... Оля выртать... çутă-çутă ĕмĕтсен тĕксĕм ванчăкĕ. Чăн пурнăçра мĕнле хитре пулнă, халĕ те çавăн пекех хитре вăл – çутă, таса, çеп-çепĕç кĕрен. Çак çут тĕнчере вăл хăй пуррипе кашни арçын чĕрине чĕп-чĕрĕ хĕм сапнă. Митя та ăна ăсран тухаслах юратнă. Юратнă...

Иккĕшĕ те вĕсем мĕн ачаранпах питĕ телейлĕ пулнăччĕ.

Пулнăччĕ... Мĕншĕн «пулнăччĕ»? Мĕншĕн тесен вĕсем ун чухне хĕм сапса тăракан кăвар евĕрлех таса чĕреллĕччĕ. Халĕ... çав кăвар пек таса мар: каçма юраман чикĕ урлă каçнă вĕсем. Хăш вăхăтра пăсăлма, вараланма ĕлкĕрнĕ? Чечен чĕрийĕсенче амăшĕн чĕрçийĕ çинче çӳл тӳпене вĕçсе çитесле хăпартланса хастаррăн сикнĕ хаваслăх та иртсе кайса пĕтмен-çке-ха...

27

Пӳлĕмре шăп. Хускалмасть выртса ĕсĕклеймиех хурланнă сывлăш та. Чӳрече карри урайне çитиех пуçне тайнă. Сас памасть костыль...

Икĕ куç хăрпăкĕ хушшине хĕсĕнсе тухса ларнă пĕр тумлам куççульлĕ куçне хупнă Антуан, хытах ĕшеннĕн, пуçне каялла ывăтса пĕр вăхăт нимĕн хускалми пулчĕ те, сасартăках малалла сулăнса, хурлăхпа тулнă пичĕпе сивĕнме ĕлкĕреймен Ольăн икĕ чăп-чăмăр кăкăрĕ хушшине  тăрăнчĕ.

Тăрăнчĕ... Ăравасăр хĕрӳллĕ юратнă ăна вăл. Хăйĕн çинчен манса кайсах юратнă. Уншăн – çак халĕ пачах ют каччă ытамĕнчен вĕçерĕнсе, питĕ кӳреннĕ чухнехи пек, пуçне унран тепĕр еннелле пăрса выртакан Ольăшăн – нимĕн те хĕрхенмен. Анчах хăш чухне çав тери ачаш, тепĕр чухне ытлашшипех хаяр пурнăçăн чипер пынă хушăрах кĕтмен-туман çĕртенех сасартăках ӳпĕнме пултаракан тайлăк урапи ăна, хĕрӳ юратупа хавхаланса ырăпа ырăмарлăх шайлашăвне çухатнăскере, кун-çулăн сакăлта авăрĕнче хытах сиктерсе тумхахлă çул çине ӳкерсе хăварчĕ.

Ăна таптарĕç. Вăйлăскере, харсăрскере – таптарĕç... Пĕр шелсĕр.

Пуçне хурлăхлăн каялла ывăтнă чухне чунĕ тăвăнса килнĕрен тӳсме çук асаплăн пăчăртаса хупнă куçĕнче унăн – пĕр тумлам куççульччĕ. Пĕр тумлам... Çурăлса каясла кӳтсе çитнĕ чĕре витĕр сăрхăнса, пăчăртанса, ыраттарса тухнă тумлам –

тăрă, çутă, тап-таса. Çав пĕр пĕчĕк тĕкĕр катăкĕ евĕрлĕ йăлтăркка тумлампа – пĕтĕм пурнăç: пурăнсаирттерни – чи лайăххи яланлăхах хыçа тăрса юлни, тек нихăçан та, нихăçан та каялла таврăнас çукки, – Ольăпа тĕл пулни, пĕр-пĕрне хĕмленсе юратни, ирĕлсе каяслах савăнса выляни, юратăва вăй пани, артаклани, чеченлетни, юлашкинчен... çапса хуçни. Çав ахах пĕрчи евĕрлĕ пĕр пĕчĕк çутă тумлампа – унăн хыçа тăрса юлнă пурнăçра мĕн пулни, халĕ куç умĕнче мĕн пурри, малашне мĕн пуласси, мĕн пулас çукки – çĕр тӳсейми манерсĕр йывăр ӳкĕнӳ: мĕншĕн... мĕншĕн çапла пулса тухрĕ? Мĕншĕн сывă, вăйлă, телейлĕ чухне çеç ырă ку тĕнче? Сусăррисемшĕн, вăйсăррисемшĕн мĕншĕн ытла та хаяр вăл? Мĕншĕн?.. Чĕрене питĕ шанчăклăн туйăнакансем те шанчăклă мар. Хăвăн кăвар чĕрӳсĕр пуçне урăх кама, кама шанмалла ку пурнăçра?

Пĕтрĕ, пĕтĕмпех пĕтрĕ... Чĕрене упрамасăр упранă юрату та, алран вĕçерĕнсе тарнă телей каялла таврăнасса чăтаймасăр кĕтекен шанăç та.

Пĕртен-пĕр çитменлĕх пур юратун – вăл каçарусăр.

Ăçта ытларах пĕтеççĕ çынсем? Вăрçăра, шывра, юратура. Ку – чăн.

Çак ытлашшипех пăтравлă та çылăхлă çĕр çинче темĕн те пур – никам тытса чарайми хĕрӳллĕ юрату та, çулăмран та хаяр тавăру та... Пур!

Пӳлĕм çĕр тĕпĕнчи пек чĕмсĕрленнĕ. Чăп тулли шăплăх. Митя хывса хунă кĕмĕл сехетĕн сасси илтĕнмест. Сĕтел çинчи ялтăркка кăвак вазăри паян кăна тунине çĕçĕ каснă чĕп-чĕрĕ виçĕ хĕрлĕ тюльпан пуçне уснă. Чăтма çук йывăр траур. Çемçе кресло хыçĕнчен уртса янă чăлт шурă кĕпе çине пуçне хурса пĕр сассăр йĕрет пĕччен тăрса юлнă хуп-хура пурçăн галстук. Ним сассăр ĕсĕклет стена çумĕнчи тăлăха тăрса юлнă гитара. Лутра кравать хĕрринчен усăнса аннă шап-шурă простынь хĕрри Антуан ури айне хĕсĕнсе лӳчĕркеннĕ – вăл та йĕрет. Каçхи тунсăхлă йăм тĕксĕм чӳрече хыçĕнче темĕн çӳллĕш чăнкă çырана катаран хуп-хуран, симĕссĕн-кăваккăн шуралса, пăлханса килекен çиллес кăпăклă хумсемпе пыра-пыра çапăнса хуçăлса макăрать Хура тинĕс...

Хуçăлса макăрать...

**Шупашкар. 1992-мĕш çул.**



***Оля... Çак çут тĕнчере вăл хăй пуррипе кашни арçын чĕрине чĕп-чĕрĕ хĕм сапнă.***

# ПĔЧĔКРЕХ ХИТРЕ ХĔРАЧА

## КАЛАВ

*... пулас мăшăрне,*

*хĕрлĕхне упрайман хĕрĕнне,*

**хĕрхенетĕп.**

**Автор.**

1

Ĕçрен таврăнсан Альберт лайăх çăвăнса каçхи апат çирĕ те уçăлмалла тесе урама тухрĕ. Гастроном умĕпе иртсе пынă чухне кĕтмен-туман çĕртенех Эммăна курчĕ вăл. Лешĕ çак вăхăтра лавккаран тухатчĕ. Çак пĕчĕкрех хитре хĕрачана Альберт çийĕнчех пырса çаврака хул пуççийĕнчен çупăрласшăнччĕ – хăйсен хушшипе васкасах уçă алăк еннелле туртăнакан çынсен ушкăнĕ сирĕлессе кĕтмелле пулчĕ.

Эмма та Альберта часах асăрхарĕ, вара каччă хăй патне пырасса шанса куçа йăмăхтаракан хĕвелтен хӳтĕленсе çемçе ал лаппине куç харши тĕлне тытрĕ те уçăрах вырăна пăрăнса тăчĕ.

– Кăн-кăвак чечек куçлă пирĕштине чĕререн хĕрӳллĕ салам! – терĕ Альберт тинех сылтăм аллипе Эммăн чăмăркка хул пуççинчен çепĕççĕн çупăрласа.

– Салам, – йăвашшăн кулчĕ хĕр.

– Ăçта çухалса пурăнатăн эсĕ? Сана курманни – çур ĕмĕр!

– Курасшăнах çунман эппин.

– Епле çунман! Çав юлашки тĕл пулу хыççăн çĕрĕпе çывăраймарăм. Тепĕр кунне сана курас тесе пĕр вĕçĕмсĕр Турра кĕлĕ турăм.

Тĕрĕссипе, халĕ кăна асăннă юлашки тĕл пулу пĕр эрне каярах çеç пулса иртнĕччĕ. Курасса та вĕсем Эммăпа мĕнпурĕ те икĕ хутчен анчах курнăçнă. Пĕрремĕш – ĕçре. Ун чухне Альбертсем ытти слесарьсемпе пĕрле çип арлакан шавлă цехран кăштах канас шутпа фабрика умĕнчи палисаднике тухнăччĕ. Чие тĕмисен çумне лутра юпасем тăрăх хăма çапса тунă ансăр тенкел çинче йĕркипе тин çеçрех пиççе çитме пуçланă вун ултă-вун çичĕ çулсенчи ихĕлти хĕрсем чĕвĕл-чĕвĕл калаçса ларатчĕç. Пурте чăп-чăмăр çутă пит-куçлă, пурте чипер. Вĕсем, йывăç-чечек лартса ўстерекенсен цехĕнче сезонлă ĕçлекенскерсем, машина килессе кĕтетчĕç. Кашнин аллинче кĕреçеччĕ.

Шухă хусахсене хĕрсем пулсан – çитрĕ савăнăç. Ăçта савăнăç, унта вăйă-кулă... Пуçларĕç выляма.

Пилĕк-ултă хĕрачаран пĕри – кăн-кăвак куçли – уйрăмах питĕ илĕртўллĕччĕ. Каччăсем ытларах ун çумне çыпçăнма тăрăшатчĕç. Теменле куçа курăнман питĕ черчен ăшă туртăм пурччĕ ун çумĕнче. Сăнĕ хитре, кĕлетки тăпăл-тăпăл, ура тунисем кĕрнеклĕ. Палламан ачасем хăйпе хăюллăнах ыталашса вылянине пĕртте хирĕçлеместчĕ вăл. Альберт та хаваспах авкаларĕ ăна. Çурăмĕнчен, пилĕкĕнчен, ĕлккен мăкăрăлчăклă кăкăрĕнчен чăмăртарĕ. Анчах нумаях выляймарĕç вĕсем: кĕçех хĕрсем кĕтекен машина çитсе чарăнчĕ, вара тенкел çинчи черченкĕ хĕр пĕрчисем пурте харăсах çĕкленчĕç те сарă лĕпĕшсем пек вĕлтĕртетсе машина еннелле тĕпĕлтетрĕç. Хĕрĕн ятне те пĕлсе юлаймарĕ Альберт. Тепĕр тесен, темех мар-çке. Каччă чухне сахал-и пулать кунашкал ăнсăртран тĕл пулнă хĕрсемпе йăпăртлăх выляса илесси. Çапах та хĕрачаран уйрăлсах çитеймен çап-çамрăк хĕрĕн чăп-чăмăр кăкăрне çепĕççĕн сĕртĕнесси – мамăк тĕтриллĕ шавлă цехра çĕмĕрĕлнĕ станоксене юсасси мар – самай евĕклĕрех. Çавăнпа та пĕчĕк шăнкăрав пек шăнкăртатса кулакан чиперккене ун çинчен пĕр нимĕн пĕлмесĕрех алран вĕçертни кăштах шелрех те, çапах халĕ ĕнтĕ мĕнех тăвайăн...

Иккĕмĕш хутĕнче вĕсем Атăлта шыва кĕнĕ чухне тĕл пулчĕç. Каллех ăнсăртран çеç. Альбертсем моторлă кимĕпе пысăк хăвăртлăхпа шыв тĕкĕрне касса пляж çумĕпе иртсе пыратчĕç. Виççĕнччĕ вĕсем, виçĕ йĕкĕт, кăвар чĕреллĕскерсем, плавки вĕççĕн çеçчĕ. Кăтра хумлă шывра йыт пуллисем пек шăмпăлтатакан çынсен хушшинче Альберт сасартăк паллана сăна асăрхарĕ: çăп-çăра куç тĕклĕ кăн-кăвак куçлăскер. Çавă! – карт сикрĕ каччăн чĕри. «Тăхтăр-ха, – терĕ вăл çийĕнчех руль тытса пыракан юлташне. – Эпĕ халех...» Хăй пĕр тăхтаса тăмасăр шыва сикрĕ. Кимĕ самантрах ухă вĕçевĕ пек хăвăртлăхне чакарса хăйĕн йывăрăшĕпе шыв çине пусăрăнчĕ.



Кăкăр таран шывра хĕвеле хирĕç илемлĕн кулса тăракан хĕре Альберт мăйĕнчен ыталаса илчĕ, унтан çара пилĕкĕнчен çупăрласа хыттăн хăй çумне пăчăртарĕ: «Сире курни – епле аван! Эпĕваскатăп, калăр: сире мĕнле чĕнеççĕ?»

– Эмма.

– Ăçта пурăнатăр?

– Ку – вăрттăнлăх.

– Калăр ĕнтĕ...

– Вăрттăнлăха пĕлтермеççĕ.

– Ах, ăш çунтармăш эçĕ, Эмма! Атя, шыва путар иккĕн те пĕрех хут, – Альберт хĕре тата çирĕпрех ыталарĕ те – çемçе ăшă шывра иккĕшĕ те пуçĕпех курăнми пулчĕç.

– Халĕ калатăн-и? – ыйтрĕ Альберт ура çине çĕкленсен, тин çеç куçне уçнă тап-таса çунă çырла пек йăлкăшакан хĕрлĕ питлĕ хĕртен.

– Çĕрпе пĕлĕт хушшинче, – терĕ Эмма хĕвеллĕ кулăпа ирĕлсе.

– Ай, çаплах мана асаплантаратăн-и?!

Вĕсем каллех бирюза тĕслĕ йăлтăр çутă шыва нимĕн курăнми путрĕç. Ку хутĕнче хĕре Альберт шывра ытларах тытрĕ, лешĕ, чĕрĕ пукане евĕрлĕскер, урисене горизонтальлĕ çĕклесе каччă ытамĕнче пулă чĕппи пекех авкаланчĕ. Ай мĕн тери савăклă! Татах тапкалантарасчĕ, анчах, шел, шыв айĕнче сывлăш çук, – ирĕксĕрех ура çине çĕкленме тиврĕ.

Пит-куç тăрăх шыв юхма чарăнсан вĕсем ытамран вĕçерĕнмесĕрех пĕр-пĕрин çине ытараймасăр кăмăллăн пăхрĕç. Альбертăн сылтăм алли, канăçа çухатнăн, шывра хĕр кăкăрне, çурăмне, пилĕкне çупăрларĕ, унтан пиçĕ хырăм тăрăх шуса анса çемçе резинка айĕн çăтă плавки ăшне шăвăнса кĕчĕ те икĕ çирĕп пĕçĕ çăт пĕрлешнĕ тĕлте чарăнчĕ. Йă-ăлл! кулчĕ хĕр пилĕк çулти хĕрача пек вăтаннăн, йĕпе çамкипе каччăн тулли пит çăмартийĕ çумне тĕршĕнчĕ.

– Альберт, кайрăмăр! Хăвăртрах, – илтĕнчĕ çак вăхăтра кимĕ çинчен.

Васкамалла. Юлташĕсем чĕнеççĕ. Каччă алли ăçта шăвăнса кĕнине пĕлмеççĕ вĕсем: шыв айĕнче нимĕн те курăнмасть. Вĕсем çеç-и – Эммăпа Альбертран инçех те мар ăшă шывра кăвакалсем пек савăнăçлăн шăмпăлтатакансем те хĕрпе каччă епле кăмăллăн ыталашса тăнине пачах та асăрхамаççĕ тейĕн. Мĕн тери хитреччĕ тĕнче ун чухне!

Халӗ Альбертпа Эмма виҫҫӗмӗш хут тӗл пулчӗҫ. Юлашки ӑравасӑр евӗклӗ те нихӑҫан манӑҫми асамлӑ уйрӑлу хыҫҫӑн пӗр-пӗриншӗн ҫывӑрма пӗлмесӗр тунсӑхлани ҫинчен хавхаланса калаҫса илсен вӗсем майӗпен вырӑнтан хускалчӗҫ те хӑйсем ӑҫта каяссине пӗлмесӗрех Карл Маркс урамӗпе васкамасӑр тӑвалла утрӗҫ.

Эмма хӑйӗн чӑмӑркка кӗлеткине тӑп тытса тӑракан ӗлккен хӗрлӗ чечексемлӗ шупкарах ҫутӑ ҫӳхе кӗпе тӑхӑннӑ. Аркийӗ кӗске, хӗвелпе пиҫсе хӑмӑрланнӑ ҫаврака чӑмӑр чӗркуҫҫисене хуплаймасть вӑл. Ҫавна май утнӑ чухне икӗ тулли пӗҫӗ ансӑр аркӑ ӑшне шӑнӑҫайман пек туйӑнса хӗрӗн илемлӗ кӗлетки ытлашшипех илӗртӳллӗн курӑнать.

Альберт хӗрӗн ҫемҫе аллине хӑйӗн ывӑҫ тупанӗпе ачашшӑн ҫупӑрларӗ: «Халӗ ӗнтӗ текех, ху ӑҫта пурӑннине каламасӑр, санран ҫур утӑм та уйрӑлмастӑп, – терӗ вӑл. – Сана курасшӑн хыпса эпӗ пӗтӗм ӑша ҫунтарса ятӑм, кӑвар чӗреҫӗм кӗл пулчӗ. Ун чухне, тем пек йӑлӑнса ыйтрӑм пулин те, хӑвӑн кил тӗлне эсӗ мӗншӗн каламарӑн?»

– Тӗрӗс тунӑ. Унсӑрӑн санӑн чӗрӳ краҫҫын сапсан та ҫунман вут пуҫҫи пулатчӗ. Ку – япӑхрах.

– Кӗл пулни аван-и?

– Кӗл – таса япала. Унпа сурансене сиплеҫҫӗ.

– Эппин вӑт халӗ, тавай, сипле мана.

– Шел, каярах юлтӑн. Виҫмине эпӗ Шупашкарта тек пулмастӑп.

– Ан шӳтле-ха, – хӗр пӳрнисене хытӑрах чӑмӑртарӗ Альберт.

– Шӳтлесе мар, чӑн. Билет алра.

– Ӑҫта каятӑн?

– Магнитогорска.

– Мӗн ҫухатнӑ эсӗ унта?

– Романтика шырама каятӑп.

– Романтика эпир иксӗмӗр пӗрле кунта та темӗн чухлех тупӑпӑр.

– Ҫула тухсан каялла чакмаççĕ.

– Ай, чĕре суранĕ эсĕ манăн!

– Чĕре – чул мар, çапах пурне те чăтать вăл.

Малалла Эмма хăй ĕçрен тухни çинчен, комендант ăна общежитирен кăларса яни çинчен каларĕ. «Лайăх ача пулса икĕ каçлăх хваттер тупса пар-ха», – терĕ вăл юлашкинчен, пăтранчăк шухăшсен авăрне путнă йĕкĕте çĕмĕрт куçĕнчен тилмĕрсе пăхса.

– Хватте-ер... – кĕтмен сăмаха пачах кĕтмен вăхăтра илтнĕрен кăштах асаплăн иккĕленсе тăчĕ каччă. Унтан: «Атя пирĕн пата общежитине», – çăмăллăн сывласа илчĕ вăл.

Хĕр, ку сĕнӳпе килĕшменнине палăртса, çăра куç тĕкĕсене лăс! усăккăн витĕмсĕрлетрĕ те майĕпен пуçне пăркаларĕ.

– Мĕ-ĕншĕн? – хирĕçлев сăлтавне пĕлесшĕн çунчĕ çĕмĕрт куç.

– Пĕччен мар вĕт-ха эсĕ унта.

– Пĕр пӳлĕмре виççĕн пурăнатпăр эпир. Лайăх ачасем. Нихăш те кăмăлсăр пулмĕ.

– Ҫук, пымастăп.

Альберт аптраса ӳкрĕ: мĕн тумалла? «Тăхта-ха, – самантрах çиçĕм пек çиççе илчĕ хăюллă шухăш ун пуçĕнче. – Енчен те Маруç аппасем патне кайсан...»

Маруç аппăшĕсем халĕ çемйипех ялта. Отпускра вĕсем. Пионер ураменчи пăчкă кĕрпи тултарса тунă çуртне хутрансситрен кĕркелесе пăхма хушса çăра уççине ăна парса хăварнăччĕ.

Альберт хăйĕн шухăшне Эммăна пĕлтерчĕ.

– Юрĕ, – килĕшӳллĕн пуçне сĕлтсе илчĕ хĕр.

## 2

Лăсă шăршиллĕ хăмасенчен çапса тунă пĕчĕк çурт тул енчен ӳпле пек çеç курăнать пулин те шалта тирпейлĕ, таса. Стенасене кĕмĕл сăрăллă чечексемлĕ симĕсрех çутă шпалер çыпăçтарнă.

Урайӗнче – килте тӗртнӗ йӑрӑмлӑ-йӑрӑмлӑ урай сарри. Хитре карӑллӑ чӳречесем. Никельленӗ сарлака пуҫлӑ ҫӳллӗ кравать ҫинчи вырӑна сенкер ҫивиттипе хупланӑ, унтах капӑр тӗрӗллӗ шӑтӑкла виткӗчпе пӗркеннӗ икӗ кӑпӑшка минтер ҫӗкленсе тӑрать. Урамалла пӑхакан кантӑксен умӗнче – чӗрӗ чечексем.

Ҫак тӳлек сад варринчи вилла пек хӑтлӑ пӗчӗкҫӗ ҫурта килме Эмма килӗшсен Альберт питӗ хавхаланса ӳкрӗ. Тем астарчӗ ӑна, унӑн канӑҫсӑр чунне тем вылятрӗ. Каччӑ кӗлеткинче хускалман пӗр вырӑн та юлмарӗ. Ытларах ҫывӑрма юратакан чи ачаш пукане те ыйхӑран вӑранчӗ: теме сиснӗ вӑл – алпа пусса пусарсен та лӑпланса выртасшӑн мар. Эх, ҫамрӑклӑх!..

Ҫенӗк алӑкне кӗле ярса пӳрт алӑк янахӗ урлӑ каҫнӑ-каҫманах Альберт икӗ аллине кӗрнеклӗ ҫурӑм енчен хул хушши айӗпе ярса икӗ пирчеклӗ чӑмӑр кӑкӑртан тытрӗ те Эммӑна ҫав тери ҫепӗҫҫӗн хӑй ҫумне пӑчӑртарӗ, вӗри тутипе кӑпӑшка ҫӳҫе сирсе пит ҫӑмарти патнелле кармашрӗ.

Хӗр ачаш ытама чиперех лӑпчӑннӑччӗ, унтан тем шут тытрӗҫке – юриех йӗкӗлтевлӗн вылянса ытларах астарнӑн, вӑл сасартӑк вӑрт! туртӑнса ҫаврӑнчӗ – ҫав самантра унӑн чӑп-чӑмӑр пӗҫҫи сунчӑк пек пирчевлӗн тӑртаннӑ мӑкӑрӑлчӑк тӗмене хыттӑнах пырса перӗнчӗ. О-ой!.. Ырӑ-ырӑ пулса кайрӗ хӗре, ҫав нимӗнпе те танлаштарайми манерсӗр евӗклӗ тӗмене унӑн татах та татах сӗртӗнес килчӗ.

Хӗрӳ чун-чӗре ҫӗкленӗвне Альберт ҫийӗнчех палӑртасшӑн марччӗ, – тин ҫеҫрех кӑна ҫавраланса ҫитме пуҫланӑ ҫап-ҫамрӑк пике, халиччен кун пеккине курманскер, шартах хӑраса ӳкесрен шикленнӗччӗ. Телее, мӗне палӑртас мар тени ҫумне Эмма хӑй пырса перӗнчӗ. Хыттӑн пырса перӗнчӗ те каччӑн пӗтӗм ӳт-пӗвӗ, чун-чӗри лӑпкӑнлӑх чикки урлӑ каҫнине витӗрех курчӗ – урӑх нимӗн вӑтанмалли те, пытармалли те ҫук: мӗн пурри, мӗн кирли пӗтӗмпех паллӑ.

Альберт хӗре пичӗпе хӑй еннелле ҫавӑрчӗ те, пусӑрӑнми тӗмене кӑвапа айнерех хыттӑн тӗртӗнтерсе чӗрне вӗҫҫӗн ҫӗкленнӗ

хěп-хěрлě йăлтăркка питлě Эммăна çирěппěн кăкăр çумне пăчăртарě. Вěри ытамри хěрěн пěтěм çан-çурăмě ăшăрхаллă вăйсăр ток çапнăн евěклěн-евěклěн чěтренсе илчě, тутапа тута сěртěнсен лěнчěр-р-р çемěçсе кайрě вăл, ăшă кăкăр çумне кушак çури пек ытла та ачашшăн лăпчăннă кěлетке йывăрăшě пěтěмпех каччă ытамне кусрě. Альберт хăй те сисмерě, хăш вăхăтра вěсем ура тытăнкине çухатса кăпăшка тӳшек-минтерлě кравать çумне сулăнчěç, çав самантрах каччăн хыпаланчăк алли йěке пек яка та пирчев ӳт тăрăх шуса вěлтěркке çӳхе аркă ăшнелле васкарě.

– Тăхта кăштах. Хывăнар малтан... кěпе лӳчěркенет, – пӳлěнчěклěн пăшăлтатрě вěри ытама пăчăртаннă хěр чуптăвăма пула чарăннă сывлăша çавăрса илсен.

Альберт Эмма хирěçлесрен, ӳкěтлесрен, ан тив тесе йăлăнасран, тухса каятăп тесе каласран хăранăччě. Ун вырăнне çак хěр пулсах çитеймен хитре хěрача хăй хывăнма сěнни Альберта кěтмен çěртен çав тери савăнтарса ячě. Вара вăл хăйěн çап-çара хул-çурăмне тулашри тěнчерен пытарса ăшшăн хупласа упракан çи-пуçран хăвăртрах хăтăлма пикенчě.

Kaç пулса çитмен-ха, çу кунě вăрăм. Пӳлěмре лампа çутмасăрах çутă. Тӳмесем пěрин хыççăн тепри вěçерěнеççě. Хыпаланнă хушăрах каччă хěр питěнчи кашни питě чечен, вăтанчăкрах кулла асăрхать.

Эмма васкамасăр хывăнчě.

Çӳхе платье ăшěнчен ытарайми илемлěн тухса тăнă çутă кěрен тěслě чăп-чăмркка хěр пěвě Альберта кěç-вěç ирěлсе каясла пăлхатрě. Тек пěр çеккунт та тытăнса тăраймарě вăл: хитререн те хитрен çěкленсе тăракан кăкăрлă пикене хыттăн-хыттăн хăй çумне пăчăртарě – унччен те пулмарě кăпăш тӳшеклě кравать черченнěн сас пачě питě çемçен авăнса.

– Майěпен, ма-айěпен, ан васка, – татах çепěçреххěн пăшăлтатрě хěр. Вăл хăйěн ачашлăхě каччăн туйăм хускатăвěн тачкăшне вăраххăн-вăраххăн хăнăхса пырасса кěттересшěнччě, –

ăçта унта, çакнашкал чи хĕрӳллĕ вăхăтра арçынсене сăмахпа каласа ӳкĕте кĕртеетĕн-и вара: хĕр сăмахне итлеме каччă шутламарĕ те – кĕçех вĕсем иккĕшĕ те пĕтĕм тĕнчене туххăмра мантарса яракан евĕклĕх ытамне путрĕç...

Альберт малтанах чи ачаш вырăнта темĕнле питĕ ырă чăрмав пуласса шаннăччĕ – Эмма вун сакăр çула та çитеймен-çке-ха, анчах çеп-çемçе мамкăран та çемçерех тĕлте нимĕнле чăрмав сĕмĕ те палăрмарĕ. Эммăн кашни хĕр ачана кăштах ӳсерехпе хăйĕн чун-чĕри тасалăхне тивĕçлĕн ĕнентерсе телейлĕ çĕнĕ çын пулма çут çанталăк пĕртен-пĕр хут кăна панă хĕрлĕх паллин тĕпĕ-йĕрĕ те юлман. Йăл кулнă-кулманах пĕтĕм кăмăла çепĕçлентерекен савăклăха вăл тахçанах активсе пăхнă-мĕн... Кунтан та ытларах тĕлĕнтермĕш – Эмма Альберт хусканăвĕсене хирĕç тĕлĕнмелле ырă сулăмсем тăвать. Çак арçынсене туххăмра ӳсĕртекен пысăк ăсталăха хăй те тин çеçрех кăна амăшĕн чĕрçийĕ çинчен уйрăлнă пепке-хĕр хăш вăхăтра тĕшмĕртме ĕлкĕрнĕ тулĕккĕш?..

Альберт теплерен сайра пĕрре куркаланă черченкĕ çурма арăм-хĕрсенчен ытларахăшĕ кунашкал самантсенче пушаннă михĕ пек кăна туйăнатчĕç, – тепĕр кунне те чуна çемçен йăпантаракан савăк аса илӳ нимех те юлмастчĕ вĕсенчен.

Эмма вара пачах урăхла – хăйăрлă юшкăн çинчи чĕрĕ пулă пек. Кăкăрĕсем вĕр çĕнĕ мечĕк пекех хытă унăн, кĕлетки пирчев, ывăçпа чăмăртасан та пусăрăнман çирĕп пĕçĕсем виçесĕр кĕрнеклĕ – пурте чĕрĕ вĕсем, кашни мăкăль, кашни путăк, кашни авăнчăк хăйне евĕрлĕ киленӳ парать.

Альбертăн та Эммăна ытларах та ытларах савăк кӳрес килет...

– Сана мĕнлерех пулсан лайăх? – ыйтать вăл хĕрĕн чĕркуççирен çӳлерехри яка та пиçĕ пайне икĕ аллипе тĕреклĕ хул çумне ачашшăн туртăнтарса.

– Ой, капла ытлашширех! Кăштах пушат. Вăт çакăн пек лайăх, – çепĕççĕн пăхса йă-ăлл! кулать хĕр вăраххăн сывласа илнĕ май. Часах питех те сисĕмлĕ туйăм хускатăвĕн тăрăхне ăшă-ăшă тапă пырса çапрĕ. Хыттăн-хыттăн тапма пуçларĕ каччă чĕри. Кĕçех вĕсем иккĕшĕ те пĕр харăс лăпкăн-лăпкăн сывласа ячĕç.

Тĕлĕнмелле тӳлек шăплăхпа хупланчĕ пӳлĕм.

Альбертăн тапранас та килмест. Икĕ хитре чăмăр тĕмеллĕ хĕр кăкăрĕ çинчен сулăнса кайма та вăй юлмарĕ ун. Чăп-чăмăрккa мăкăле çемçе пит çăмартипе лапчăтса хускалмасăр выртма канлĕ-канлĕ. Альберт хăйне ырă-ырă тĕлĕкре кăнтăр хĕвелĕ ăшшинче тăп-тăрă ăрша юххиллĕ симĕсрех кăвак кăпăклă хумсем çийĕн пĕр шавсăр сывлăш карапĕнче пуçа кĕрен минтер çине хурса ландыш тĕтри витĕр хăлха çакки мамăкĕ евĕрлĕ ним лăканмасăр лăпкăн-лăпкăн вĕçнĕн туйрĕ. Икĕ вĕри туйăма пĕрле сыпăнтаракан лăнчăланнă тĕвĕ йăлăран вĕçерĕнмен-ха. Ăшă-ăшă йăвара темĕнле питĕ çемçе пускăчсем хушшăн-хушшăн каччăн ӳтне çепĕççĕн кăлт-кăлт пăчăртаса илеççĕ... М-мм мăнтарăн хĕрĕ! Кунашкалах ытарайми пулмашкăн епле пĕлнĕ-ши...

3

Пӳлĕм каç сулхăнĕпе тĕттĕмленсен Альберт тăрса çутă çутрĕ.

Шурă простынь çинче пĕр хуплавсăр выртакан Эмма лампа çутинче татах та илемлĕн курăнать. Кăштах вăтаннăн çемçен йăл кулса питĕ йăвашшăн пăхать хăй. Каччă ăна хăрах аллипе хул айĕнчен, тепĕр аллипе кăпăшка çӳçĕнчен çупăрларĕ те пĕчĕкçĕ çӳхе тутинчен çепĕççĕн-çепĕççĕн чуп турĕ.

Каччă тути хĕре самантрах çемĕçтерсе ячĕ. Юратнă çынна ырă тума питĕ çăмăл: тытăнки пушаннă пĕçĕсем хăйсем тĕллĕнех икĕ еннелле сулăнчĕç...

Ку хутӗнче Альберт васкамарӗ. Паҫӑр ӑна Эмма черченкӗ туйӑмсен вӑййине вӑраххӑнрах тытӑнма ыйтнӑччӗ, ҫавна аса илчӗ вӑл.

Капла Эммӑна, чӑнах, аванрах-мӗн. Ҫакна каччӑ ачашлӑх ҫулӗ нимӗн туртӑнмасӑр шӑп вӑхӑтлӑн уҫӑлса пынинчен сисрӗ. Эх, йӗрки-куркине малтанах пӗлменни пурнӑҫра темӗн чухлех иккен! Кӑмӑллӑн йӑпану ыйтӑвӗнче, мӗнле илӗртсе мӗнле хыӑннинчен пуҫласа, мӗнле тумланасси таранах никам уҫса парайми вӑрттӑнӑх нумай. Кӗске вӑхӑтрах икӗ чун-чӗрене мӗн кирлӗ таран киленӳ парассин меслечӗн чиккийӗ ҫук. Ҫемҫе вырӑн ҫинчи вӑййӑн пӗртен-пӗр тӗллевӗ – пӗрле вылякана ытларах евӗклӗх кӳрсе, унран кӑмӑл тулли рехет илесси. Ҫакна Эмма, ахӑртнех, Альбертран маларах ӑнланнӑ. Ахальтен-им калама ҫук ачаш пулма тӑрӑшать вӑл, ҫав ачашлӑхпа хӑйне ҫепӗҫҫӗн ыталанӑ сар ачана чӗре патне ҫитиччен сӑрхӑнса кӗмеллех ирӗлтерсе ярасшӑн.

Кӑмӑла тӗппипех ҫемӗҫтерекен ҫӑмӑл ӗшенчӗк ҫитсен те вӗсем ытамран вӗҫерӗнмерӗҫ. Халӗ вӗсене ҫак самантра, ҫак ырӑ-ырӑ самантра, урӑх нимӗн те кирлӗ мар, пурте ҫителӗклӗ.

Ҫак самантра... Пурнӑҫ вара самантран чылай анлӑрах, ҫитменнине, хӑш чухне питех те хаяр вӑл.

«Мӗн ҫинчен шутлать-ши халӗ Эмма? – ҫемҫен-ҫемҫен сӗмленсе выртрӗ Альберт, хӑйӗн ҫара кӑкӑрӗ ҫине пуҫне хунӑ хӗрӗн нумаях пулмасть кӑмакаран кӑларнӑ кукӑль пек ӑшӑ хул калакӗ ҫумӗнчен аллине илмесӗр. – Кӑмӑл туртӑмӗн сенкерлӗхӗ ҫинчен, романтика ҫинчен пулӗ. Пурнӑҫ ҫинчен, кун-ҫул асамлӑхӗпе паллӑмарлӑхӗ ҫинчен, хӗрӗн чыслӑхӗпе тивӗҫлӗхӗ ҫинчен хӑть кӑштах та пулин ӑнланать-ши? Ачашлӑха аванах пӗлет вӑл, анчах пурнӑҫ тӗллевне ӑнкарать-ши? Сӑнӗ хитре, кӑмӑлӗ те ырӑ, кӗлетки-ҫурӑмӗ те пит хӳхӗм, – апла пулин те мӗнле майлашӑнӗ-ши унӑн малашнехи шӑпи? Епле пулсан та, пӗр-пӗр ырӑ кун хитрескер, черченскер, паллах, кама та пулин качча тухатех вӑл, анчах ҫутӑ ӗмӗтлӗ

упăшкин таса юратăвне тивĕçлĕ арăм пулайĕ-ши?.. Шел, хăйма кăпăкĕ пек çемçе кăмăлласкере, питĕ çамрăкла кам мурĕ улталама хăйнă-ши?.. Нивушлĕ хăех тӳсеймен...»

Шухăш... шухăш... Пĕр пуçланса кайсан таçта çитиех тăсăлать вăл. Ăнсăртран татăлсан кăна унăн вĕçĕ пулать.

«Эмма, эсĕ тин çеç çеçке çурнă чечек халь, ытарайми илемлĕ, тунсăхпа хуçăлса курман, телей мĕнне пĕлетĕн, каялла таврăнми иртсе кайнă савăклă самантсене шеллетĕн, хĕрлĕхе иртерех çухатнăшăн шеллеместĕн-и?» – тесе ыйтасшăнччĕ Альберт, шăп çак вăхăтра кĕтмен-туман çĕртенех Эмма пуçне çĕклерĕ те чăмăркка кăкăр вĕçĕпе тута хĕррине перĕнсе, икĕ çемçе аллипе ăна майран ыталаса илчĕ: «Кала, – тĕпчерĕ вăл, куçран çав тери йăвашшăн пăхса, – эпĕ сана килĕшетĕп-и?»

Кун пек çепĕç ытама мĕнле каччă ытараймĕ: çитменнине, вĕсем иккĕшĕ те пĕтĕм чуна тĕпрен хускатакан çи-пуçпа-çке-ха.

– Килĕшетĕн, – кăмăл чăрсăрлăхне пытараймасăр хĕре питĕнчен, тутинчен, кăтăклă янах айĕнчен тутлăн-тутлăн тĕлĕрсе каймалла чуп тума пуçларĕ Альберт. Вĕри сывлăш, ачаш сĕртĕнӳ, пылак туйăм пурĕ пĕрле пĕтĕçсе Эммăшăн вĕри сывлăша кăкăра шăнăçтарайми хăйне евĕрлĕ пĕр пĕтĕм евĕклĕ чун вылявĕ пулса тăчĕç. Пĕтĕм кĕлетки вĕтеленчĕ унăн. Чи сисĕмлĕ вырăнсене хĕвĕнсе шăнăçайман кăтăк хумĕ икĕ чăмăркка кăкăра пырса капланчĕ, ăна тата хытăрах карăнтарчĕ. Текех пĕр çеккунт та тӳсеймерĕ Эмма: каччăн яка пĕвĕ тăрăх пурçăн тутăр пек майĕпен-майĕпен шуса анса шурă простынь çине тĕлĕнмелле илемлĕн тăсăлса выртрĕ. Çав самантрах Альбертăн хĕрӳлĕхе тата ытларах вăйлатакан çуллă тути тем ыйтнăн çӳлелле илемлĕн кăнтарса тăракан шăккалат тĕслĕ тĕксĕм хăмăр кăкăр вĕçĕ патнелле туртăнчĕ...

## 4

Икĕ каç пĕрле пулчĕç хĕрпе каччă. Икĕ каç çĕрĕпе çывăраймарĕç. Тепĕр кунне Альберт романтика шыракан пĕчĕкрех хитре хĕрачана инçетри хулана ăсатса ячĕ.

Эмма кайрĕ. Альберта вăл нихăçан манăçми евĕклĕ аса илӳ парнелесе хăварчĕ. Ăна пĕрремĕш хут курнă, унпа шывра, хула ураменче е шупка кĕрен тӳлек каç ытамĕнче пĕрле пулнă кашни минута куçа хупса куç умне ӳкерме те асамлă тĕлĕкри пекех евĕклĕ. Çапах та каччă чĕрине шăппăн-шăппăн тем йăшкатать, тем канăç памасть: е хур тĕкĕпе çемçен сĕртĕнсе çу сĕрнĕн ăшăтса илет, е вăхăтăн-вăхăтăн чарăнса шеллевлĕ туйăма вăрататъ. Çук, уйрăлу тунсăхĕ мар, Эммăна пуçĕпех çухатни те мар – çак такама ĕмĕрлĕхе пӳрнĕ хитре чечекĕн пĕр çеçкийĕ, чи чеченни, тĕпрен татăлса яланлăхах унра юлнăн туйăнать ăна...

**Шупашкар. 1991-мĕш çул. Пуш уйăхĕ.**

# ЭКСТРА-ПРИМА-ЛЮКС-ШОФЕР

**Калав**

***Вĕре, ПУРНĂÇ, вĕре,***
***ан ватăлтăр чĕре!***
***Автор.***

## 1

Канмалли кун çитсенех, çĕр выртмалла çырлана пуçтараннă рабочисене Йăлăма илсе кайма шоферсенчен кам тӳрех килĕшессе диспетчер лайăх пĕлет: «Кам пултăр? Паллах, Онька Шалимов–Мулкач тути. Ку тĕлĕшпе пуççăр юланутçă вăл. Хуш кăна – Атăл урлă сĕвек кĕперĕ тăрăх та чупса каçĕ», – çапла шухăшларĕ те путевка çырнă май вăтам çулсенчи хĕрарăм хăй ăшĕнче çемçен кулса илчĕ.

Онька Шалимов – çавра питлĕ, йăлтăр хура куçлă, чун туртнине кирек мĕнле майпа та пулин тивĕçтересшĕн хыпса çунакан лара-тăра пĕлмен йăрă каччă. Хăйĕн çирĕм ултă çулĕнче нумай пăтăрмах сиктере-сиктере кăларнă. Мĕн кăна пăсса-тӳссе тӳрлетмен! Пăсмалли, тӳсмелли, тӳрлетмелли татах та пайтах унăн, пайтах.

Пĕчĕкçĕ шăпăрлан чухнех вăл лара-тăра пĕлмен сехре хăптармăш пулнă. Çавна пулах ярăнакан сăпкаран сикнĕ те

тутине çурса пăрахнă. Сурана лайăх сипленĕ пулсан та хăрах хĕрринче яланлăхах хитре авăклă пĕчĕк çĕвĕк юлнă. Çавăншăн ăна – халь чи малтан кам каланине пĕлме çук – Мулкач тути тенĕ. Çав кăшт кăна палăракан хитре çĕвĕке пула хăй кулман чухне те йăвашшăн кулнăн туйăнать вăл.

Пĕр вăхăтра Онькăна рабочисене профилакторине турттаракан автобус панăччĕ. Тавай ĕçлесе ывăннă çынсене сывлăха çирĕплетме кану çуртне турттар, вăйпитти халăха савăнтар, профилакторире тӳлевсĕр апат çи. Общежитире пурăнакан хусахшăн кунтан ырри мĕн пултăр? Анчах хăйĕн чĕрине шăнăçайман хĕрӳлĕхĕпе нумай хушă ĕçлеймерĕ вăл унпа. Пĕррехинче автобуса ытлашши хăвалланăран радиаторти шыв чакнă та çăра пăс пăрлаттарса явăнса тухнă. Туххăмрах салона сарăлнă.

– Пари-им! – тенĕ Мулкач тути шӳтлĕрех сăмахсем суйласа. Канма каякансем «гори-им!» тенĕн илтнĕ ун сăмахне. Кашниййĕнех пурăнас килет-çке-ха. Пурте хӳри айне кăвар лекнĕ кушакла хăвăртрах чӳрече патнелле кĕпĕрленнĕ. Пĕтĕм кантăка çапса ватса тулалла сирпĕннĕ. Çав кунах пуçлăх Онькăна груз турттаракан  кивĕрех ГАЗ-53 çине куçарнă: «Чул-хăйăр е вут-шанкă çеç турттармалла санăн», – тенĕ. Куншăн Шалимов-Мулкач тути пĕртте ӳкĕнмен, пуçтахланма та пăрахман – ванман тиевпе пушшех нимĕнле лакăм-тĕкĕме уямасăр çил вĕçтерсе çӳренĕ, урапа çулĕ çинчи çăра тусана асар-писер тăман пек мăкăрлантарса аяккалла явăнтарнă.

Акă Онька каллех вăрăм çула тухрĕ – Атăл леш енне, çырлана.

Атăл урлă паромпа каçсанах хăмаран касса тунă саксемлĕ кузова çăмăл витре-пураклă çынсем сырса илсе пушă çĕрелле кутăн-пуçăн чăмрĕç те çемçен кĕрлекен шупка кăвак урхамах-машина вырăнтан тапса та сикрĕ.

Çĕнĕ пыл шăршиллĕ вăрманăн лакăм-тĕкĕмлĕ çулĕ тăрăх вирхĕнекен грузовик кузовĕнче çынсем ещĕкри пушă кĕленчесем

пек силленеççĕ, пĕр-пĕрин çумне пуçĕпе е хулпуççипе çапăнса илеççĕ, умĕнчи курпунлă çурăма çамкапа тăрăнакан та пур.

– Эй, Мулкач тути! Хулленрех эсĕ! Вут турттармастăн вĕт! – тӳнлеттерчĕ пĕри кабина тӳпинчен.

Пĕр хи-итре хĕр пур кузовра. Мĕнле каламалла, хĕр мар, шухă чĕрене евĕккĕн хумхантаракан шĕл кăвар тейĕн. Çавна Онька асăрхама ĕлкĕрнĕ те. Ах, мăнтарăн каччăсен чунĕ!

– Сарă çӳçлĕ, чакăр куçлă вут кайăка кабинăна лартăр. Унсăрăн акселератор хирĕнсе пырать манăн, – илтĕнчĕ уçă чӳречерен унăн сасси мотор кĕрлевне хупласа.

Сарă çӳçлĕ, чакăр куçлă вут кайăк – Илона, преспа штамповка цехĕнчи çамрăк штамповщица. Çакна кузовра каллĕ-маллĕ лăканса пыракансем туххăмрах тавçăрса илчĕç. Мĕнех калăн, хитрене пурте кураççĕ.

Илона вун тăхăр çулта кăна-ха. Ку вăл шăпах çулăмла хыпса илнĕ пĕрремĕш юратăвăн пылак сĕрĕмĕнче пĕтĕм тĕнчене тап-таса сенкерлĕхре курнă вăхăт, питĕ черчен ĕмĕтсем пурнăçланасса шаннă вăхăт. Кам шутланă чи ырă-ырă туйăмсем те ултавлă пуласса? Юратсах çӳретчĕç вĕсем тин çеç çартан таврăннă Ромăпа. Киноран е сӳнсе çутăлакан хĕрлĕ-сарă-кăвак çутăсемлĕ шавлă дискотекăран тухсан та пăч тĕттĕм каççенче киле васкас килместчĕ, савнипе вĕçĕмсĕр пĕрле пулас килетчĕ. Анчах улталарĕ Рома Илонăна, никам тĕкĕнмен пыл карасне ватрĕ те урăххине качча илчĕ. Çавăн хыççăн хăйĕн черчен чĕрине хытах ыраттарса курнă çамрăк хĕр малашне каччăсемпе асăрхануллăрах пулма тăрăшрĕ.

Илона кузовран кабинăна куçса ларасшăн пулмарĕ. Хăвăрт çаврăнакан кустăрмасем çав-çавах сиккипе вĕçтерчĕç вара пирченнĕ тăпраллă тусансăр çул тăрăх. Лăсă шăршиллĕ уçă сывлăш аскăнла кătăклать çынсене пит-куçран, вĕлт те вĕлт иртсе юлаççĕ кăтра çулçăллă йывăççем вĕçĕ-хĕррисĕр.

Тавралăх вăрманти каçхи тĕттĕмлĕхпе хуплансан ывăнма пĕлмен грузовик пĕчĕкрех илемлĕ тӳреме пырса чарăнчĕ. Канма

килнисем кунта ҫӗр выртма шухӑшларӗҫ. Кӑвайт чӗртрӗҫ, ӗҫрӗҫ-ҫирӗҫ. Ҫӳлелле кармашса кӑтра тӗтӗме куҫакан ҫулӑм тавралла ҫемҫе вырӑн майласа ҫывӑрма выртрӗҫ. Хускалми пулса сивӗнме пуҫланӑ машина та куҫне хупрӗ. Унччен те пулмарӗ – таҫтан -муртан хаяррӑн тапӑнса килчӗ вӑрӑм тунасен вӑрӑм хӗҫлӗ-сӑннӑллӑ пысӑк ҫарӗ – сывлама та ҫук. Онька чӳрече кантӑкӗсене хӑпартрӗ те урине хуҫлатса пуҫне ҫемҫе ларкӑч ҫине хучӗ. Ҫат та ҫат ! илтӗнет кӑвайт енчен питрен ҫупнӑ сасӑ. Ҫынсем хӑйсене тапӑннӑ кӑмарисене ывӑҫ тупанӗпе ҫапса лапчӑтаҫҫӗ.

Илонӑн таса чӑмӑркка пичӗ урлӑ та пирлӗ хӗп-хӗрлӗн тӗрленсе пычӗ.

– Ай-яй, ҫисе яраҫҫӗ! - вӗткеленет чиперкке.

Ывӑҫ тупанӗпе ҫапкалани ниме те пӗлтермест. Ҫамка ҫинчи ӑнланма ҫук нӑй-нӑй шавлӑ вӗтӗ-вӗтӗ самурай – вӑрӑм тунасене пӗрине нимӗн юлми лапчӑтнӑ ҫӗре теприсем ҫивӗч сӑннисене сӑмса тӑррине тирӗнтереҫҫӗ.

– Ай, чӑтма пулмасть! – юлашки хут хыттӑн ҫатлаттарчӗ хӑйӗн питне сарӑ хӗр. Пуҫелӗкне аяккалла сирчӗ.

Тул енчен ҫемҫен шак-шак! тенӗ сасӑ илтӗнсен Онька пуҫне ҫӗклерӗ, кабина алӑкне уҫрӗ.

– Вӑрӑм тунасем... – урӑх пӗр сӑмха та калаймарӗ хӗр. Мӗн калас тени ахалех паллӑ.

Илона пӗр тӗттӗмрен тепӗр тӗттӗме васкавлӑн чӑмсанах пӗчӗк алӑк шӑппӑн хупӑнчӗ.

Хӗрпе каччӑ пӗр-пӗринпе туххӑмрах паллашрӗҫ. Тӗттӗмлӗх вӗсене пӗртте кансӗрлемерӗ. Шӑкӑлтатса калаҫма ҫепӗҫ сӑмахсем тупӑнсах пычӗҫ.

– Илона, эсӗ мӗншӗн хитрине эпӗ пӗлетӗп, калам-и? – терӗ Онька.

– Мӗншӗн? – кӑсӑкланчӗ хӗр.

– Мана ҫавӑрмашкӑн.

– Эсӗ кам вара эпӗ ҫав териех сана ҫавӑрасшӑн ҫунмашкӑн?

– Эпĕ – экстра-прима-люкс-шофер, хитре хĕрсен канăçне çухаттараканĕ.

– Каларăн та, кĕтсех тăр. Мускаврa пĕри хӳхĕм хĕрсен президенчĕ пуласшăн тет. Хăй лифчике труççирен уйăрма пĕлмест тет.

– А эпĕ лифчик айĕнче мĕн пуррине те пĕлетĕп.

– Тем... Хăвăн профильпе ыйту пама юрать-и? – çемçен кулса илчĕ Илона.

– Тархасшăн.

– Машина сиккипе пырать, пĕр кустăрми – кусмасть. Мĕншĕн?

Онька самантлăха шăпланса машина урапи кусманнин пĕтĕм кăлтăкĕсене аса илме тăрăшрĕ. Пĕррехинче хĕлле вăл хирĕç пыракан машинăн пĕр малти урапи йĕлтĕр пек шуса пынине курнăччĕ. Самантрах хавхаланчĕ:

– Сăлтавĕ тĕрлĕрен пулма пултарать. Малти кустăрман подшипникĕ тĕпрен вансан е тормоз колодкисем хирĕнсе ларсан...

– Çук, пĕлмерĕн.

– Ан култар-ха. Чи тĕрĕс хурав ку.

Чи тĕрĕс хуравне Илона каларĕ:

– Запас кустăрма вăл.

– О-ой, чăнах та!

Иккĕш те харăсах кулса ячĕç.

– Ну, мĕнле, экстра-прима-люкс-шофер? Сăмсуна шăлса илтĕм-и? – юриех йĕкĕлтенĕн пĕчĕк ачалла çемçен ихĕлтетрĕ Илона.

– Шăлса илтĕн. Маттур! Куншăн... – терĕ те Онька хĕре ăшшăн çупăрласа кабинăра тĕттĕм пулин те тем самантра ытла та черчен тутана шыраса тупрĕ.

Ларкăч хыçĕпе каччăн çирĕп кăкăрĕ хушшине хĕсĕннĕ Илона сисмерĕ те – вĕсем тăвăр çĕрте темиçе кукăр пулса диван хыçне

ӳкнӗ икӗ пукане пек хирӗнсе ларчӗҫ. Вӑйлӑн ҫатӑрласа тытнӑ экстра-прима ӑна сывлӑш ҫавӑрса илме памарӗ. Ӑҫта вӗреннӗ тулӗк кунашкал хӗрӳллӗ пулма? Алли... алли вара...

2

Пурнӑҫра ҫине-ҫинех пачах кӗтмен салхуллӑ самантсем пулса пынӑ хыҫҫӑн вӗсене хӑвӑрт манӑҫтаракан темӗнле питӗ ырӑ хирӗҫле вӑй пурри мӗнешкел лайӑх! Темиҫе кун каялла кӑна-ха Онькӑна тӗрлӗрен пӑтӑрмахсем ӑна юриех хыҫран йӗрлесе ҫӳренӗн туйӑнатчӗ. Ку эрне вӗҫӗнче ятарласа уншӑнах чӑн та темиҫе телейлӗ самант килсе тухрӗ. Пӗрремӗшӗ, Чулхулана командировкӑна лайӑх кайса килчӗ. Иккӗмӗшӗ – ӑна каллех шавлӑ цехсенче ӗҫлесе ырнӑ ҫынсене Атӑл леш енне ҫырлана илсе кайма ирӗк пачӗҫ. Тепри, пушшех ырӑрах! Ҫӳллӗ кузова сырса илнӗ хавхаллӑ ҫынсен хушшинче йӑлтӑр чакӑр куҫлӑ Илонӑна курсан тӗлӗнмелле ырӑ туйӑм вӑраннӑччӗ хитре хӗрсене ытараймасӑр юрατакан ҫамрӑк каччӑн ачаш чунӗнче. Ҫав питех те ӑшӑ туйӑма вӑрттӑн вӑратакан чиперкке халӗ хӑй алӑкран пырса шаккарӗ. Кун пек пуласса Онька кӗтме те шутламанччӗ. Телей ҫук теҫҫӗ те пурах пуль: хӑех пырса шаккарӗ, чӑп-чӑмӑр питлӗ сар пике часах асамлӑ тӗлӗкри пек хӗрӳллӗ ытама лекрӗ. Кунашкал самантра сӗркӗче сӗртӗннӗ шӑрпӑк евӗрлӗ туххӑмра хыпса илекен шухӑ чӗрене епле тытса сӑнчӑрлайӑн?

Онька пӳлӗннӗ сывлӑша йӑпӑрт ҫавӑрса илчӗ те хӗрӗн ҫӑварта ирӗлеккен карамель пек пылак тутине татах хыттӑн туртӑнтарчӗ. Алли, ачашшӑн сӗртӗнекен алли мӗн тӗрлӗ хускану тумарӗ-ши? Ҫепӗҫ кӑтӑклӑ ӑшӑ ывӑҫ тупанӗ малтан ҫамрӑк пикен ҫемҫе те яка пит ҫӑмартине ҫупӑрларӗ, унтан кӑнт карӑнса тӑракан кӑкӑрӗсене. Тепӗртакран... Илона сасартӑк туртӑнса илчӗ, хӑйма евӗрлӗ черченкӗ тути самантлӑха вӗри туртӑмран вӗҫерӗнчӗ.

– Ытлашши ан аскăн, – терĕ вăл каччăн пилĕк тăрăх майĕпен аялалла шăвакан аллине тытса чарса.

– Ытлашши мĕн вăл? – юриех пĕлмĕше печĕ Онька.

– Ытлашши вăл – ытлашши. Чи ырă ĕмĕтĕн те хăйĕн виçи, тивĕçлĕхĕ, хăйĕн шăпи пур. Эпир пĕр-пĕрне пачах пĕлместпĕр, эсĕ тӳрех...

– Эпĕ – çулăм, эсĕ те – çулăм. Иксĕмĕр те лăп та шăп пиçсе çитнĕрен вăл.

Каччă хĕр хирĕçленине сивлекен кăмăлĕ хăйне пăхăнасшăн пулманни çинчен каларĕ.

– Пĕлетĕн-и? – терĕ вăл. – Эпир мĕншĕн çуралнине, мĕншĕн таса сывлăша çăтса пурăннине тӳрре кăларакан пĕртен-пĕр симлĕ асалмăх пур çĕр çинче. Вăл – çавă. Чун ыйтать. Ăна шалча çапса кăкарма хĕн. Пĕлетĕп, санăн та чĕрӳ хĕрӳллĕ туйăмсăр мар. Хамăрăн кăмăл ыйтнине мĕншĕн хирĕçлемелле пирĕн?

– Чи ырă кăмăлăн та хăйĕн вăхăчĕ, хăйĕн чикки пур. Ун урлă каçма юрамасть. Этемĕн таса ăс-тăна пăхăнмалла, – терĕ хĕр. Мулкач тути халĕ кăна асăннă симлĕ асамлăх хăйĕн çамрăк чĕрине хурлăх çеç кӳнине палăртасшăн пулмарĕ. Çав ыратăва татах вăйлатасран та хăрарĕ ахăр. Пурнăçăн е тикĕс, е сакăлталлă йывăр çулĕ тăрăх ялан пĕрле утма хăйне пӳрнĕ мăшăра шыраса тупса тулли телейлĕ пулас килет унăн.

Онькăн пачах урăх шухăш: пурнăçра мĕн ырри пур, мĕн хитри пур, мĕн тутли пур – ăна халех, халех, çак самантрах алла илесси. Кайран хăть кирек мĕн пултăр. Каччăсем ун çинчен шухăшласа пуçа ватмаççĕ.

Каллех çăт çыпçăнчĕç пылак тутасем. Кăкăрпа кăкăр пĕрлешсен ирĕклĕн çаврăнма кансĕрлесе тăвăрланчĕ пĕчĕк кабина. Урана кирлĕ пек тӳррĕн тăсма çук. Вĕри ытамри кĕлеткесем сулăннăран хуçланчăк чĕркуççисем тĕттĕмре темĕнле хытă япаласене пырса перĕнеççĕ. Илона чĕрĕ пулă

тейӗн. Çавракан хулпуççи, тăн-тăн кӗрнеклӗ кӗлетке, чăп-чăмăр мăшăр кăкăрпа тулли пӗçӗсем... Çаксем пурте пурçăн пек çемçе те яка спорт тумӗ айӗнче. Ах, питӗ шел.

Чун туртнă çӗре ниепле те ирӗклӗн пыма май çукран Онька куçӗ умне тахçанах пулса иртнӗ пачах урăхла питӗ ăш-пиллӗ самант тухса тăчӗ.

Тăванӗсем патӗнче хваттерте пурăнакан пӗр хӗрӗхсенчен иртнӗ инке-арăма кивӗ çуртра уйрăм пӳлӗм панă. Вăл Онькăна хăйӗн пур-çук япалисене куçарса пама ыйтрӗ. Пӗччен хӗрарăм ытлашши ватăлсах кайман. Пичӗ-куçӗ те аптрамасть. Килӗшрӗ каччă, хаваспах хăваларӗ шупка кăвак хурçă утне пулăшу ыйтакан хӗрарăмăн килӗ еннелле.

Пӗччененӗн тупри мӗнех пултăр: çăмăл матрас та тӗрлӗрен ăпăр-тапăр. Малтанах хатӗрленӗ çыхăсене хăвăрт тиерӗç те кузова хупса машинăсем йышлăн çӳрекен шавлă урама тухрӗç.

– Куншăн эпӗ хама тытса чарасса шанмастăп... – терӗ çул çинче çамрăк водитель савăк сăнлă хӗрарăма куçӗнчен йăвашшăн пăхса илсе. Ку сăмаха вăл юриех калаçăва хавхаллăрах тăвас тесе никама кӳрентермен шӳт евӗрлӗн каларӗ. Ăна лешӗ чăн вырăнне йышăннă. Япаласене пӗрремӗш хутри пысăках мар пушă пӳлӗме йăтса пӗтерсен хайхи чипер хӗрарăм çавăрса çыхнă матраса хăвăрт салтрӗ те стена çумнерех урайне тăсса хурса кăлт кайса ӳкрӗ ун çине. Урисене хыпăнсах умлă-хыçлă çӗклесе илсе халат тӳмисене вӗçертрӗ.

– Кил, – куçне хӗсрӗ вăл вӗри чунлă шофера. Парăма çиӗнчех тӳлесе татас терӗ пуль.

Çурма çарамас хӗрарăм кӳлепи выçкăн хусаха самаях пăлхатрӗ. Анчах... пӳлӗмре çап-çутă, чӳрече каррисем çук, кантăк тулашӗнчи крыльца çинче темле арçынсем пирус туртса тăраççӗ. Çӗнӗ хваттере куçса каякансем алăк çăрине те кăларса кайнă. Çăмăллăн хупнă алăк хыçӗнчи вăрăм коридорта хӗрарăмсем калаçни илтӗнет. Вӗсенчен пӗри алăка шăппăн хупас умӗн çеç уçă хушăкран пуçне кăсăклăн

кăнтарса пăхнăччĕ. Кунашкал çĕрте... Сӳ-ӳ! турĕ каччăн чĕри. Ăшă кăмăллă инке-арăмăн йăлтăркка хура куçлă хусаха çав тери савăнтарас килни кăлăхах пулчĕ. Ытти чухне бетон стенана ӳпĕнтерме хатĕр каччă кăчăк туртнă çĕре пĕшкĕнме те шухăшламарĕ.

Халĕ Онька Илонăна çав инке-арăмпа танлаштарчĕ. Илемĕпе те, кăмăлĕпе те пĕр-пĕрне пачах хире-хирĕçле вĕсем, пачах ăрасна. Илона.. Ай, мăнтарăн! Мĕнешкел тăпăл-тăпăл пирчев вăл! Пичĕ, кăкăрĕсем, пилĕкĕ...

Онька Пятигорскра каннă чухне илтнĕ анекдота аса илчĕ.

Санаторире пĕр çамрăк арçын тин кăна паллашнă хитре майрапа ресторанран таврăннă. Вăл мĕншĕн укçа нумай тăкакланине хӳхĕм хĕрарăм питĕ лайăх пĕлнĕ. Парăмра юласшăн пулман. Палатăна кĕрсен пĕтĕмпех хывăннă та çемçе тӳшек çине сарăлса выртнă: «На, кăмăлу туличчен килен». Еркĕнĕ ăна: «Турткалаш-ха эсĕ, турткалаш! Кунашкал нимĕн чухлĕ те хирĕç тăманни манăн килте те пур», – тесе çурăмĕнчен çĕклесе лăсканă.

Çапла, хĕрарăма вăйпа тытни, вăл кĕç-вĕç, кĕç-вĕç парăнасла авкаланса турткалашни пылаккăн капланса килнĕ чăрсăр хĕрӳлĕхе пушшех вăйлатса ярать.

Каччă сывлăш çитменнипе çемçе тута хĕррине вĕçертсе каллех тарăннăн сывласа илчĕ.

– Илона, – терĕ вăл, – эсĕ мана вăйпа тыттăр тетĕн-им?

– Çук, – сывлăша самантрах туллин çăтрĕ хĕр. – Эсĕ паян лартнă çĕр улмине паянах кăларасшăн – çиес килет. Чăн пурнăçра апла мар, кĕтмелле, кĕтмелле... Вăт çапла, экстра-прима, манăн ырă-ырă йăваш тискер кайăкăм...

## 3

Илона хулари пĕр илелмĕ тӳлек урамра ашшĕ-амăшĕ патĕнче пурăнать. Хулара кил вырăнĕ пысăках мар. Пĕр хутлă йывăç çурт, лутра хуралтăсем, пĕчĕкçĕ пахча. Сылăш уçă кунта. Кил умĕнчи кăвак сăрăллă хӳме çумĕнче хурăн хăмаран тунă сак пур. Кӳршĕсен хуçалăхĕ те çавăн майлах.

Çырларан таврăннă кунах, каçхине, Илона пилĕк-ултă кил урлă пурăнакан кӳршĕ карчăкĕ патне кайрĕ. Вĕсем Онькăпа тепĕр кун каçала тĕлнелле курнăçма калаçса татăлнăччĕ. Онька ăна кил умне çитиччченех машинăпа леçсе ячĕ. «Ыранччен», – чакăр куçран йăлăнса пăхрĕ каччă уйрăлас умĕн. Сĕлĕх пек хăпма пĕлменскере епле хирĕçлейĕн? Çитменнине, сăмахĕсем ирĕксĕрех ĕненес килмелле ырă унăн. Чĕрери черченкĕ шанăçа вăратрĕç. Вăратма вăратрĕç-ха та, анчах ăна çирĕпрех вăй илме пĕр пĕчĕк кăлтăк кансĕрлеме пултарасси канăç памарĕ хĕре.

Сар пикене шăлсăр карчăк кăмăллăн йышăнчĕ. Хăйĕн вăрăм ĕмĕрĕнче таçта çĕтсе çӳрекен телее вăрттăн шыракансене чылай курнă вăл, сахал мар пулăшнă: çие юлнă хĕрсене никам сиссе юличчен килтех çăмăллантарнă, хĕрлĕхе çухатнисене хĕрлĕхлĕ тунă... Хур курнă хĕрсене савăнтарас тĕлĕшпе хăйне евĕрлĕ паха ăстаçă пулнă.

– Уках кинемей, пăсăлман хĕр пулас килет манăн. Пулăшсамăр? – терĕ Илона хăюсăр сасăпа, хăй пĕрлĕхен пек хĕрелсе кайрĕ.

– И-и, ара, хĕрĕмçĕм, ку темех мар. Курăн вăт. Нумай хĕрупраçа хĕпĕртеттернĕ эпĕ. Тав сăмахне кайран килсе калăн, – лăплантарчĕ ăна юмăç карчăк. Часах вăл кăштăр-кăштăр уттипе тепĕр пӳлĕме кĕрсе кайрĕ. Тепĕртакран унтан хăмăр шĕвеклĕ пĕчĕк кĕленче илсе тухса хĕре тыттарчĕ: «Акă ме». Унпа мĕнле сипленмеллине вĕрентрĕ.

Тепĕр кунне Шалимов-Мулкач тути Онькăна ача сачĕ валли сĕтел-пукан кӳрсе килме Атăл хĕррине вырнаçнă аякри пĕчĕк хулана ячĕç. Пурĕ виçĕ машина. Завхоз, вăтам çулсенчи тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ, кĕренрех çутă сăнлă хĕрарăм, – çамрăка асăрхарĕ-ши – Онька кабинине ларчĕ. Йышпа пĕрле инçе çула тухсан шупка сăрă тĕтĕм хӳрисене вылянтаракан хурçă урхамахсем пĕр-пĕринчен уйрăлмасăр умлăн-хыçлăн хула тулашнелле тапса сикрĕç. Онькăн шуранкăрах кăвак кĕр-кĕр

урхамахĕ варринче вĕçтерсе пырать. Ăна вăл ку хутĕнче хытах хăваламасть. Ларкăч сиктернĕ май юнашарти кĕске кĕпе арки яка пĕçĕ кăкĕсем патнерех пĕчĕккĕн шунине йăпăрт пăхса илме капла меллĕрех.

Эх, пулаççĕ-çке хитре арăмсем! Вĕсем тутапа мар, хирĕç пăхма иментерекен çăлтăр куçĕсемпе калаçаççĕ. Çав ачаш хĕмлĕ куççем пĕрре пăхнипех Онькăна: «Килĕшетĕн эсĕ мана», – тенĕн туйăнчĕç.

Çепĕç туйăм ăшшăн систерни тĕрĕсех пулнă-мĕн. Часах паллашрĕç вĕсем. Çăлтăр куç Надя ятлă, вăтăр пиллĕкре. «Лăп та шăп тутлăн-тутлăн вăлча сапмалли вăхăт», – шухăшларĕ Онька руле çăмăллăн çавăркаланă май.

– Упăшку пур-и? – ыйтрĕ вăл мĕн пĕлменнине пурне те пĕлесшĕн пулса.

– Пур та, çук та, – çӳлерех куçнă кĕпе аркине виçĕ пӳрне вĕçĕпе чĕркуççи еннелле ерипен туртрĕ Надя.

– Нимĕн те ăнланаймарăм. Тĕрĕсси хăшĕ?

– Историк вăл ман, тĕпчевçĕ. Наука ĕçĕсем çырать.

– Профессор арăмĕ апла? Ыталама та наука вĕрентнĕ пек ыталать пуль? Пĕр ăсчах чăх çăмарти миçе минутра пиçнине тĕпченĕ: сехетне вĕрекен шыва янă та ывăçри çăмарта çине сехет тесе пăхса тăнă. Эсир калани шăпах çав апăршана сăнарланăн сисĕнет.

– Ăнкару пур сирĕн, туйăму та вăйлă. Эсир авланман пуль-ха?

– Авланман.

– Шел.

– Кама шел?

– Хама.

– Мĕншĕн?

– Иртерех çуралнă...

Çак пĕчĕк ачанни пек йăваш куçлă хĕрарăмпа малашне пĕрле пулассине Онька сĕмленмерĕ те. Надьăн кĕске аркă хуплайман

çаврака чĕркуççийĕ, уçăрах çухави хĕрринчен кăшт çеç курăнакан кăкăрĕсем, калаçнă хушăрах çемçен кулса илни – çаксем пурте пĕрле пĕр пĕтĕм евĕклĕх пулса каччăн Илонăпа хăвăртрах тĕл пулас килнине вăйлатрĕç.

Кĕтнĕ вăхăт нихăçан та час çитмест. Çеккунтăн хăйĕн еккийĕ, минут - пушшех васкамасть. Инçетри рейсран таврăннă çĕре каç пулчĕ.

Каччă чĕри кăлăхах йăшканă. Палланă вырăна самаях кая юлса çитнĕшĕн тĕнче йăтăнса анмарĕ. Çав-çавах пурте асамлă юмахри пекех кунта. Тӳлек. Уçă сывлăш. Пĕтĕм тавралăх тĕксĕм сирень тĕтрипе витĕннĕ. Тӳпери лаптăк-лаптăк чăмăртаннă кăпăшка пĕлĕтсем вырăнтан хускалмаççĕ. Кӳлĕри шапа лĕкки пекех чĕмсĕр вĕсем, суккăр та. Пӳрне вĕççĕн алла-аллăн тытăннă Онькăпа Илона вутă сарайне асăрхануллăн йăпшăнса кĕнине пĕртен-пĕр çурла уйăх çеç курса юлчĕ. Алăка шал енчен çаклатрĕç.

– Ох, çак саманта кĕтсе илессĕн туйăнманччĕ! – пуçĕпе хыçалалла каçăрăлнă хĕрĕн янах айне ăшă сывлăшпа кăтăклантарчĕ каччă.

– Эпĕ вăл халех ан çиттĕрччĕ тесе хăраттăм.

– Мĕншĕн?

– Килтисем çывăрмаççĕ.

– Эппин вăрăсем эпир?

– Хальлĕхе çапла. Кайран пур-пĕрех пурте пĕр йыш пулатпăр. Эсĕ шантаратăн вĕт? – алăри апельсина вĕçертесрен шикленнĕ ачалла чĕвĕлтетрĕ Илона.

Онькăн мĕн темелле-ши? Чĕре çăвĕ ирĕлсе тумланă вăхăтра чĕлхе вĕçне чи çепĕç сăмахсем çеç килеççĕ. Вĕсене тытса чарма çук.

– Курăн ак... – хĕр пилĕкне тата хытăрах аврĕ каччă.

Хĕр пĕрчи пиçĕ пĕвĕпе çирĕп ытама ӳпĕнчĕ çеç – илĕнсе кравать çӳллĕш хухнă вут шаршанĕ икĕ кĕлетке йывăрăшĕ пусăрăнтарнипе кăштăрти сасă кăларса тикĕсленчĕ. Уçă çухаран кĕнĕ хыпăнчăк

пӳрнесем хыттӑн туртӑнса тӑракан лифчик тӑххисене вӗҫетрӗҫ. Каччӑ ҫамрӑк вутӑш пек пиҫӗскере тутинчен, яка мӑйӗнчен, хытӑ кӑкӑр вӗҫӗсенчен чуп турӗ, ӑна пичӗпе сӗртӗнсе ӑшшӑн сывласа илчӗ. Ырӑ! Тӗлӗнмелле ырӑ! Ҫапах та ку улӑхса ҫитнӗ хавха тӳпи мар-ха. Каччӑ алли ӗнер кӑна урлӑ каҫма юраман чикӗ еннелле шурӗ, вӗрсе карӑнтарнӑ пек яка пӗҫӗсем тӑрӑх пӗр чӑрмавсӑрах пилӗке ҫӑт тытса тӑракан вӗрене ҫулҫи евӗрлӗрех хуплав патне ҫитрӗ. О,кей! Вӗрене ҫулҫи ҫӑмӑллӑнах вырӑнтан куҫрӗ... Акӑ чӗрене самантлӑха тапма чарӑнтаракан вӗтлӗх. Ай куншӑн ҫунни!

Экстра-прима хыпӑсна ӳкрӗ. «Тинех! Тинех!» – вӗҫрӗ шухӑш ун пуҫӗнче. Вӗҫме вӗҫрӗ-ха та... Ытлашши васкарӗ-ши, майне пӗлеймерӗ-ши?.. Пиҫӗ темле, тӑкӑскӑ... Тертленет каччӑ, ӑшталанать. Ҫурӑмӗ йӗп-йӗпе, туйӑм тӗвви... тип-типех...

4

Преспа штамповка цехӗнче тӗрлӗ шӑв-шав. Маччаран та ҫӳллӗ патвар станоксем лӑш курмасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Илона чакӑр куҫӗпе кантӑк пек таса шӑвӑҫа тинкернӗ. Улӑпла пысӑк пресс эрешлӗ детальсем штамплать. Йӑлл! ҫемҫен кулса илчӗ ҫамрӑк хӗр. «Ай, темиҫе каҫа пычӗ! тесе савӑнса калаҫҫӗ мана кайран хӗрсем», – аса илчӗ вӑл шӑлсӑр карчӑк сӑмахне. Вӗрӳҫӗ кинемей нимӗн чухлӗ те суйман-тӗр. Хӗр пичӗ каллех савӑклӑн йӑлкӑшрӗ. Куҫ хупмасӑр ирттернӗ каҫ чеченлӗхӗпе сӗмленсе ӗҫлекенскер хыҫа такам пырса тӑнине те сисмерӗ. Ачаш пӳрнесем хул айӗнчен ҫемҫен сӗртӗнни шартах сиктерчӗ ӑна.

– Оня?!.

Онька хирӗҫ нимӗн те чӗнеймерӗ. Иккӗшӗ те пӗр йӑранри ҫырласем пек хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе кайрӗҫ. Каҫ тӗттӗмӗнче уйрӑлнӑранпа кун ҫутинче курнӑҫманччӗ вӗсем. «Мӗн шутларӗ-ши Илона? Ҫиҫтепей, кара ҫӑвар терӗ пуль», – ҫак шухӑша вуласшӑнччӗ Онька хӗр куҫӗнче, анчах икӗ хитре кӑвак шӑрҫара вӑтанӑҫ ҫиҫет, вулама май ҫук.

Çине-çинех шалтлатать йывăр пресс. Тĕрĕ пек хурçă эрешсем çемçен чăнклатса алюмини ещĕке чăмаççĕ. Шавлă ритм кĕвви янăрать хăлхара.

– Мĕнле майпа? – тĕлĕнчĕ хĕр. Вăл хăйне юратакан сар ачана кунашкал шавра курасса пачах та кĕтменччĕ.

– Металл кӳрсе килтĕм. Пушатнă хушăра сана курас килчĕ.

Йăлл! кулчĕ хĕр. Ку хутĕнче ытла та черченнĕн. Тем хушнăн, тем шăппăн ыйтассăн туйăнать вăл. Онькăн çак илемрен самантлăха та уйрăлас килмерĕ. Анчах хăватлă пресс хулăн шăвăça çиллессĕн çапса шăтарать. Онькăна Илона патне килнĕшĕн çав тери кĕвĕçет тейĕн. «Халех кай! Халех кай! Халех кай!» – тенĕн илтĕнет унăн тытăнчăклă сасси.

Каччăн та чĕри пăлхавлăн тапать. Хĕрĕн халь унпа калаçма вăхăт пĕртте çуккине пĕлет вăл. Кунта ют çынсене кĕме юраманнине те пĕлет. Хăçан, ах, хăçан çитет-ши никам кансĕрлемен тӳлек каçăн улах саманчĕ?

Онька каçхине Илона патне каяс умĕн хăйĕнпе мĕн илес тенине илме манмарĕ. Хура кушак васкаса ун çулне татни те тытса чараймĕ халь ăна, тарăн çырмари кĕпер ишĕлсен те каçма майне тупĕ.

Акă пĕр шавсăр урам, вутă сарайĕ, тикĕс пуленккесен шаршанĕ. Тĕттĕм. Пурте, пурте çав тĕнчех...

...Онька лăштăр-р! кайса тарлă пуçĕпе чăп-чăмăр кăкăр çумне лăпчăнчĕ. Çара кăкăр айĕнче кăлт! кăлт! кăлт! тапать хĕр чĕри. Каччă тинех çăмăллăн сывласа ячĕ. Маç тюбикне вăл Илона сисесрен çийĕнчех кĕсьене пытарчĕ. Хĕр пур-пĕрех сисрĕ ăна: хăй ăшĕнче сăпкари ачалла кăмăллăн кулса илчĕ. Ырă духи шăрши çапать хĕртен, чуна кăтăклать çамрăк ӳт шăрши, çемçе пӳрнесемлĕ черченкĕ ал лаппи çурăма çупăрланă.

Евĕклĕ. Вăхăт иртни сисĕнмест. Мĕншĕн çунни, мĕншĕн ăша вăркатни пĕтĕмпех санра халь. Урăх нимĕн те кирлĕ мар. Нимĕн те. Эсĕ, Оня, киленĕç тӳпине улăхса çитнĕ.

Онька çуллă тута хĕррисемпе çӳлелле кăнт карăнса тăракан кедр мăйăрĕ евĕрлĕ пĕчĕкçĕ мăкăле кальлĕ-мальлĕ сĕркелет. Мăкăль хытса-хытса якалса пырать, е вĕçĕпе, е кăкĕпе чĕлхе авăкне тĕршĕнет. Мĕнешкел ырă! Ăна çеç-и? Илона евĕклĕх таппине тӳсеймесĕр çемçен-çемçен йынăшса илет.

Шуçăм килеспе вĕсем пĕр-пĕринчен ниепле те уйрăласшăн пулмасăр çемçе аллисемпе вăрахчен ачашшăн туртăнса тăрса уйрăлчĕç. Савăккăн пăхакан куçĕсем иккĕшĕн те вăтанăçлăн ачаш хĕм сапаççĕ.

Пурнăçа кӳренме кирлĕ мар. Нимĕн тĕлсĕр салхуллăн иртекен кунсем унта нумай пулин те питĕ сайра пулакан пĕр пĕчĕкçĕ тĕлĕнмелле ырă самант çулталăк асап курнине пĕр касра хупласа илсе тĕппипех сирсе ярать. Ăна пулах Онька хăйне шыври пулă пекех яланах телейлĕ туять.

Онька завод территорийĕнче чиперех ĕçлетчĕ. Вĕсем чукун çул юппинчен склада оборудовани турттаратчĕç. Таçтан-муртан ăна телефон патне чĕнтерчĕç. Диспетчер иккен. Халех гаража пыма хушрĕ. Экстра-примăн маршрутне улăштарчĕ. Столовăй заведующийĕ пĕр совхозран çĕр улми кӳрсе килме калаçса татăлнă-мĕн. Çак самантрах машина кирлĕ ăна.

Онька заводран тухрĕ çеç – проходнойра умлăн-хыçлăн кĕпĕрленсе куçакан ушкăнра Илонăна курсан хурçă урхамахне тӳрех чарчĕ. Хĕр те асăрхарĕ ăна. Сарлака картлашкасем тăрăх çăмăллăн вĕлтĕртетсе анчĕ те ятарласа уншăн кăна уçăлнă кабина алăкĕ патнелле васкамасăр утрĕ. Шурă кĕпене пĕрсе пăчăртанă кĕске те çăтă кăвак юбка аркине тулли пĕçĕсем пĕр айккинчен тепĕр айккине илемлĕн карăнтараççĕ.

– Лар, кăштах ăсатса ярам, – сĕнчĕ йăлтăр кулăллă водитель.

Тăпăлкка кĕлетке йывăрăшĕпе ларкăч çемçен пусăрăнсан машина вырăнтан тапранчĕ. Онька пурăнакан общежити заводран инçех мар. Çиçĕмле вĕлтлетрĕ евĕклĕ шухăш каччă пуçĕнче. Хĕреслĕ урамра руль столовăй еннелле мар,

сулахаялла, общежити еннелле пăрăнчĕ. Магазин умĕнче ăша уçăлтаракан пылак çимĕçсем сутаççĕ. Васканă чухне кашни çеккунт шалккă. Машина чарнă самантрах Онька мороженăй туянчĕ, тулли стакана хĕре тыттарчĕ те стартер педальне пусрĕ: «Кĕр-кĕр-кĕр...» Ак тата! Чĕрĕлмест мотор. «Кĕр-кĕр-кĕр...» Çук, чĕрĕлмест. Кабинăран Онька тапрату авăрĕпе сирпĕнсе тухрĕ. «Вăр-вăр-вăр...» Çук, чĕрĕлмест каяннăй. «Вăр-вăр-вăр...» Ай, шуйтан! Мăш та тумасть. Каччă хăвăрттăн авăра анаран кăларса тепĕр майлă тытрĕ те чант! чант! тутарчĕ машина капотĕнчен, хăй кабинăна чăмрĕ, педале пусрĕ: «Кĕрр-р-р!» – кĕрлесе кайрĕ хăватлă сас. «Вăт çапла! Эп сана, – юнарĕ йĕкĕт мотора. – Вĕрентетĕп».

Столовăй заведующийĕ, йывăр виçеллĕ самăр хĕрарăм, вичкĕн чĕлхеллĕскер, сехет çине пăхса илсе çунса каясла вĕткеленет: машина çук та çук. Телефон провочĕсем хыпăнса чĕтренеççĕ, хыпăнса чĕтренет темиçе телефон. Заведующи транспорт цехĕн пуçлăхне пăсарлантарать, транспорт цехĕн пуçлăхĕ – диспетчера:

– Ăçта Шалимов?!

– Столовăйне кайрĕ.

– Унта вăл çук! Халех туп. Çирĕп выговор паратăп эп ăна!

Шалимов ăçта пултăр? Эсир хăть хыпса çунăр – вăл общежитири виçĕ кравательлĕ пĕчĕк пӳлĕмре. Çемçе вырăн хуçисем пурте ĕçре.

Онька алăка питĕрме ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрмен çăт çыпçăнчĕç вĕри тутасем. Çав хушăрах йĕкĕт аллисем икĕ çавра мăкăле çупăрларĕç.

– Тăранаймарăн-им? – пилĕкне хитрен тытса тăракан юбка тӳмисене вĕçертме пикенчĕ хĕр.

– Ай, хывăнса тăмастпăр! Вăхăт... – мăйне икĕ пӳрнипе сĕрсе илчĕ каччă.

– Урăхла мĕнле?

– Сĕтел питне ытала та...

5

Юрату ваййи... Çемçе тӳшек çинче-и, ура çинче-и – мĕн тери ырă! Уншăн ăнтăлма юрать. Выговор хаярри те, хаяр марри те милĕк çулçи мар, çурăм çумне çыпăçмасть, пĕрре пите пĕçертсе илет те урăх нимех те тумасть.

Пурнăç хăш чухне ырă кукамай пекех, сан хурлăхна сисет те пĕр-пĕр илемлĕ кун хăв кĕтменнинчен те ыррине кăштăрт кăна тыттарать. Çав асамçă пурнăç-кукамай пуçлăхран пĕçеркке туяннă Мулкач тутине хытах шеллерĕ ахăр. Кĕçнерни кун ăна завод территорине ешĕллентерекен цеха ячĕç. Хурçă урхамахне çул хĕррине тăратса хăварса каччă теплицăна кĕчĕ.

Речĕ-речĕпе сĕтел çӳллĕш парниксем. Капăр гладиолус йăранĕсен хушшинчен пĕр ça-амрăк хĕр тухрĕ.

– Ой! – тăп! чарăнса тăчĕ Онька. Кăмăл чăрсăрлăхĕ ун туххăмрах таçта кайса кĕчĕ. Тарăн çăтнă сывлăш та кăкăрĕнчен тухасшăн мар. Каччă хăйне хăй ĕненмерĕ: кунашкал илемлĕ хĕр вăл халиччен курман. Тĕлĕк ку! Çук, тĕлĕк мар, куç ултавĕ. Питех те евĕклĕ туйăм тем самантра юрă сăмахĕсене аса илтерчĕ:

> **Çак урампа иртмен пулсан,**
> **Çак алăкран кĕмен пулсан –**
> **Курман та пулăттăм сана...**

Чĕрене тивекен ăмсанчăк куçсене курсан хĕр те чарăнса тăчĕ:

– Сире кам кирлĕччĕ?

– Эсир... Пĕртен-пĕр эсир, урăх никам та мар.

Пичĕ кĕç-вĕç çурăлас паланла пиçнĕрен çамрăк чиперкке самантлăха çухалса кайрĕ:

– Кунта ют çынсене кĕме юрамасть.

– Кучер эпĕ... Сирĕн пата ĕçлеме ячĕç.

– Ах, водитель! Кайрăмăр эппин, – савăклăн сывласа илчĕ сар пике.

– Ăçта?

– Çерем тăпри турттарма, вăрмана...

Çамрăк чиперкке бригадир пулнă-мĕн. Вăл кĕтесри пысăках мар пӳлĕме кĕрсе хăй пекех çамрăк тăват-пилĕк хĕре ертсе тухрĕ. Кĕçех çутă кĕреçесем кузова чăмрĕç, ун хыççăн – чĕвĕл-чĕвĕл хĕр пĕрчисем. Чĕре айне вут хуракан пирĕшти кабина алăкне уçрĕ. «Кайрăмăр», – терĕ вăл типтерлĕн майланса ларса. Машина çемçен кĕрлесе вырăнтан тапранчĕ.

Кунĕ сап-сарă хĕвеллĕ. Вĕçсĕр хирĕç куçакан çатма евĕрлĕ такăр шоссе çулĕ катана таракан вĕçĕпе сенкер инçет хĕррине кĕрсе çухалать. Сылтăм енче вĕлтлетет ем-ешĕл вăрман, сулахайра хрусталь пек йăлтăртатса юхать çут тĕнче. Çак илĕртӳлĕх юххинче паллашрĕç вĕсем. Пĕрре пăхнипех чĕре çăвне ирĕлтерекен хӳхĕмккене Неля тесе чĕнеççĕ. Тин çеç вун саккăр картине кĕнĕ. Пĕчĕкçĕ хитре тута хĕррисенче амăшĕн сĕчĕ те типсех çитеймен-ха. Пичĕ халь кăна пиçекен хурăн çырли пек. Илемлĕ сăмси, кăн-кăвак куçĕсем... Ой! Вĕсене хăвăн куçупа курмалла, каласа е çырса кăтартма май çук. Онька хăй черченлĕхе туйма пуçланăран вара хитре Юля–Дуня–Маринăсене нумай курнă. Кун пеккине... тĕлĕкре те курман.

Мотор сехет пек тикĕс ĕçлет. Пĕрре патак çисе курнăскер кабинăна ытарма çук хӳхĕм хĕр ларсан хыттăн кĕрлеме те хăрать.

Мулкач тути калаçăва кăсăклăрах тума тăрăшрĕ.

– Куратăн-и, Неля, çĕр чăмăрĕ епле хăвăрт çаврăнса пирĕн ая чупса кĕрет. Пурнăç кĕнеки вăл маншăн. Вулатăп эп ăна, вулатăп. Кашни кун мĕн те пулин çĕнни пур унта, халиччен курманни, – терĕ вăл хĕрĕн черчен туйăмне вăратасшăн пулса. – Пĕррехинче пыратăп çапла вăрманта пĕр-пĕччен. Ик айккипе – чăтлăх, умра – тăвалла чăнкă çул. Тиев ытлашши йывăрах мар, çапах мотор кĕç-вĕç сӳнесле аран-аран туртать. Мĕн амакĕ? Кабина алăкне уçса каялла пăхрăм çеç – тĕлĕннипе шак хытрăм:

пĕр çĕмел пек пысăк упа хыçалти бортран ярса тытнă та кайри урисемпе тĕреленсе пырать! Машина тытса чарасшăн. Сехĕрленсе ÿкрĕм терĕн-и? Çук. Нимĕн чухлĕ те. Шĕвĕр пÿрнене çĕклерĕм те юнатăп: «Эй, эсĕ, Утаман пичче, кунашкал ан аташ! Эп сана тивместĕп, эсĕ те йăваш пул», – тетĕп. Итлерĕ çав вăрман патши. Борта вĕçертсе кулач çинĕ ача пек кăмăллăн пăхса тăрса юлчĕ. «Ку ырă пуçтаха тивес мар», – терĕ пулас. Эпĕ – экстра-прима-люкс-шофер-çке-ха. Тепри пулсан çав çырмарах юлатчĕ паллах.



– Хи-хик! Хи-хик! – ытарайми илемлĕ кулса ячĕ сар пике.

Хăйне килĕшнĕ çын кăмăлне каяс килекен туйăм лара-тăра пĕлмен ачана та йăвашлатать. Онька машинине вăтам хăвăртлăхпа тытса пычĕ. Евĕклĕ вăхăта ытларах тăсас тесе вăл татах вăраххăнрах кайма та хатĕрччĕ – кузоври хĕрсене кÿрентересрен шикленчĕ. Нельăшăн такăр çулпа çемçе ларкăч çинче тÿлеккĕн сиксе пыни пушшех лайăх. Хăйне вăл халь лăпкă кÿлĕре кимĕпе ярăннăн туять.

– Сирĕнпе кичем мар. Тата мĕн курма тÿр килнĕ сирĕн çак чи телейлĕ самантсене пĕр шелсĕр хыçа хăварса пыракан пурнăçра? – куç умне усăнса аннă çырă çÿç пайăкрине пÿрнипе каялла сирчĕ хĕр.

– Тата-и? Тата питĕ айван ача пулнă эпĕ. Ĕç хыççăн каççерен ÿнер студине вĕренме çÿреттĕм. Художник пулас килетчĕ. Вĕренÿ çулĕ вĕçленеспе пирĕн пĕр çамрăк натурщицăна ÿкермелле пулчĕ. Чиперскер, кĕрнеклĕскер. Эпир вăтăрăн.

Пĕлетĕн-и мĕн вăл? Шăпах пиҫсе ҫитнĕ ҫаппа-ҫарамас хĕр сан умăнта хăрах урине кăштах хуҫлатса хурăн вулли ҫумне илемлĕн сĕвĕнсе тăрать. Сан ăна грунтланă пир ҫине ӳкермелле. Эпĕ унччен хĕрĕн мăй айне те лайăххăн курман. Кунта – пĕтĕм пейзаж. Куҫ йăмăхать, ал чĕтрет. Эпĕ куҫа пир ҫинчен мар, хĕр ҫинчен ниепле те илеймestĕп. Юн тымарĕсенче мамăклă кăткăсем кĕшĕлтетеҫҫĕ.

– Ăм-м... – ҫемҫен йынăшса илчĕ Неля.

– Мĕн, капăр ӳкерчĕк турăм тетĕн-и? Вараланчăк кăна пулса тухрĕ, – ăна именчĕклĕн куҫран пăхрĕ те Онька сăмаха малалла тăсрĕ. – Эпĕ шăп хĕре хирĕҫ лараттăм. Вăл мана кăмăлласа пăрахнă. Заняти хыҫҫăн тумлансан ман пата пычĕ те: «Ăсатса ярăр», – тет. «Атьăр», – тетĕп. Студирен аякра пурăнать пулин те каҫхи урампа ҫуранах кайма шутларăмăр. Вăл ман хулран уртăнчĕ:

– Ну, калăр, килĕшрĕм-и эпĕ сире? – тет.

«Ытармалла мар», – темеллеччĕ ман, эпĕ, ухмах, ăна шеллесе: «Ҫак илеме сирĕн мĕншĕн ҫавăн чухлĕ ҫынна кăтартмаллаччĕ-ши?» – терĕм.

– Укҫа кирлĕ пулчĕ, – лăпкăн сывласа илчĕ вăл.

«Укҫаран татăк пулни кăна пирĕнтен кĕлмĕҫ тăвать ҫав», – шухăшларăм хам ăшăмра.

Кил умне ҫитсен чарăнтăмăр. Хĕре ал тытрăм: «Ырă каҫ пултăр!»

– Ҫакă ҫеҫ-и? – куҫ тĕкĕсене лăс! усăнтарса сӳрĕккĕн пăхрĕ вăл.

– Урăх мĕн?

– Эпĕ сире чун туйăмне витĕрех куракан ăста художник пулĕ тенĕччĕ...

Хамăн йăнăша кайрантан кайран тин тавҫăрса илтĕм. Ун чухне эпĕ ытлашши таса чĕреллĕ пулнă, симĕсрех пулнă. Чăн-чăн юрату мĕнне пачах пĕлмен.

– Халĕ пĕлетĕр-и? – евĕккĕн кăсăкланса ыйтрĕ Неля.

– Пĕлетĕп.

– Мĕн вăл?

– Чăн-чăн юрату вăл – çулăм, вăлах карапсене путаракан тинĕс тăвăлĕ. Пĕл, яланах асра тыт: таса юрату вăл – сассăр пăшал.

– Хăçан тата ăçта вĕрентĕр?

– Паян капăр гладиолуссен хушшинче сана курсан çеç туйса илтĕм эпĕ çакна.

Неля çĕр çырлинчен те хĕрлĕрех хĕрелсе кайрĕ.

Асфальт çул е айлăмалла анать, е тӳреме улăхать. Машина сиктернĕ май чăп-чăмăр чĕрккуççисене хуплайман вĕтĕ чечексемлĕ кĕпе арки пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн çӳлелле куçать. Вăл куçнăçемĕн шурăкĕрен пĕçĕсем сарăлса тата илемлĕрех тухса пыраççĕ. Çак илем санпа юнашар. Каччă хĕр аллине ывăçпа çепĕççĕн пăчăртарĕ: хуçланчăк çинçе пӳрнесемлĕ алă сап-сарă чĕпĕ пек ăшă, çемçе, вăйсăр туклă. Ăна Неля тартмарĕ, пытармарĕ. Унăн пиçсе хĕм сапакан пичĕн профилĕ кăна курăнать: кăн-кăвак куçĕ, хăрах пит çăмарти, пĕчĕк сĕвек авăклă хитре сăмси, пыл сĕрнĕн йăлкăшакан кăштах уçă тута хĕррисем кăтăк хумĕллĕ чуна илĕртсе ăсран кăлараççĕ.

Каччăн юн тымарĕсенче хăй калана пек мамăклă кăткăсем вырăнтан хускалчĕç. Вăл хăвăрт каялла-малалла пăхса илчĕ: çул ирĕклĕ, умра та, хыçра та машинăсем çук. Экстра-прима сулахай аллипе руле çирĕпрех тытрĕ, теприпе – Нельăн сылтăм хул пуççине. Хĕр пичĕпе ун еннелле çаврăннă-çаврăнман вăл самантлăха куçне хупрĕ. Магнитла туртăнса çăт перĕнчĕ пыллă тута хĕррине...

Çиçĕм çиçнĕлле самант çеçчĕ-çке. Каччă куçне уçсан шартах сикрĕ: машинăн хăрах кустăрми кювета тайăлнă, пуç хĕрлĕ çаврăнса ӳкме – çур çеккунт!

Вăрт! çавăрчĕ Онька руле. Машина тăруках сулахаялла пăрăнчĕ. Кузоври хĕрсем шари-и! çухăрса кабина çумне пырса

çапăнчĕç. Çăхана асăрханă шапасем пек чӳречерен шалалла пăхаççĕ. Куçĕсенче – сехре хăппи.

6

Онька шăматкуна шăпчăк çуллана кĕтнĕ пекех кĕтрĕ. Акă тинех çитрĕ çав йăлăнтармăш вăхăт. Тек каялла чакас çук ĕнтĕ вăл, аякран пăрăнса иртес çук. Каччă ирех тасатса-якатса хунă çи-пуçа тăхăнчĕ те общежити пӳлĕмне питĕрсе вĕтĕ картлашкасем тăрăх виççĕмĕш хутран сарă лĕпĕшле явăнса-вĕлтĕртетсе анчĕ, часах автобуссем чарăнакан вырăна çитрĕ. «Кăнтăрла иртсен атте-анне туя каять. Эпĕ кил хураллама юлатăп», – тенĕччĕ ăна Неля. Халĕ лăп та шăп кăнтăрла, эппин вăхăта урăх тăсма юрамасть.

Тепĕр çур сехетрен йăрă троллейбус Онькăна кирлĕ урама илсе çитерчĕ. Вун иккĕмĕш çурт, çиччĕмĕш хут, мрамор плита сарнă площадка.

Алăка Неля шăппăн уçрĕ, çавăн пекех шăппăн хупрĕ.

Пушмаксене алăк кукрине хăварса хĕрпе каччă зала иртрĕç. Юмахри пек хăтлă пӳлĕм. Чӳрече каррисем самаях хупăнса тăнăран пысăк пӳлĕмре те кăштах çурма тĕттĕм. Асамлă темле. Ырă духи шăрши, шăппăн-шăппăн илтĕнекен çепĕç кĕвĕ чуна тыткăнлать.

Неля çӳхе кĕпе вĕççĕн çеç, аркийĕ кĕске, пукане тейĕн.

– Лар, – хулпуççи таран çара аллине çемçе кресло еннелле тăсрĕ хĕр. – Килти пек пул, шикленме кирлĕ мар. Кунта чӳречерен пăхакансем çук. Эпир хĕвел çывăхнерех пурăнатпăр.

– Аван. Виççĕмĕш хутра, эпĕ пурăнакан çĕрте тата лайăхрах.

– Мĕншĕн?

– Чӳречерен сикме пулать.

Хĕр тин-тин-тин çепĕççĕн янăракан пĕчĕк шăнкăрав пек евĕклĕн кулса ячĕ.

– Эсĕ чӳречерен сиксе курнă-им?

– Пулнăччĕ пĕрре.

– Мĕнле?

– Пĕр каçхине тĕттĕмле ĕçрен таврăнатăп. Урам кĕтессинче курах кайрăм: ман туссем пĕр хĕршĕн виçĕ ачапа çапăçса кайнă. Ай тӳпелешеççĕ! Таçтан милици машини персе çитрĕ. Çутă погонлăскерсем машинине тротуар хĕррине лартса хăварса çапăçакансем патнелле ыткăнчĕç. Пуçларĕç туссен аллисене пăрма. Ман вĕсене çăлас килет. «УАЗ»ик кабинине чăмрăм. Зажигани уççи ман пур. Мотора чĕртрĕм те вăшт кăна тапса сикрĕм малалла. Кунашкал пуласса пачах кĕтмен милиционерсем хăйсен автомобильне вăрласа тарнине курсан хыçалалла пăрнă алăсене вĕçертнĕ-вĕçертменех иртсе пыракан «Волгăна» чарса кĕрсе ларчĕç те мана хăвалама тытăнчĕç. Хĕрсен общежитийĕ тĕлне çитсен кабинăран сирпĕнсе тухрăм та пуля пек вĕçрĕм иккĕмĕш хута. Унта пĕр паллана хĕр пурччĕ. Пӳлĕмре питĕрĕнсе лартăмăр. Унччен те пулмарĕ – тӳн-тӳн! тӳнлеттерчĕç алăкран. Мĕн тумалла? Чӳрече питĕркĕчне тытнине çеç ас тăватăп, тулалла вĕлтлетнине сиссе те юлаймарăм. Ай, кайран вара варсене тытсах култăмăр туссемпе!

Неля та урараn ӳкеслех авăнса кулса черчен аллипе варне ярса тытрĕ.

Стена çумĕнчи сехет кашни çеккунта шутлать. Телейлĕскерсем ăна асăрхамаççĕ. Ахалех савăклă. Вăхăт пĕр вырăнтах тăрать пек. Хăтлă пӳлĕмри шăплăх, тирпейлĕх, Нельăн йăл кулăллă ытарайми илемĕ, хăй кăшт кăна килĕшӳсĕр хускану тусанах çак илеме çухатасран шикленекен туйăм тĕрлĕрен шăвшавра ĕçлеме хăнăхнă каччă харсăрлăхне çемçен вăйсăрлатса пилĕк çулхи ачалла именчĕклĕ турĕ, шăплăха пăхăнуллă турĕ.

– Тытса пăхма юрать, – терĕ Неля пӳлĕмре мĕн пуррине хăюсăррăн сăнакан хăна куçĕсем пианино çӳлĕкĕнчи вĕр-çĕнĕ хитре йăлтăрти сувенир çине тĕлленсен. Кун пек паха сувенира Онька халиччен курман. Аллипе çӳл тӳперен ярса тытасла çӳлелле кармашса месерле выртакан чăп-чăмăркка кĕлеткеллĕ

çаппа-çарамас хĕр пĕвĕ çине çăткăннăн çăварне карнă ăмăрткайăк çунаттисене тем сарлакăш сарса çивĕч чĕрнеллĕ урисемпе улăхса ларнă. Хĕр сывлăшран та пулин ярса тытса унран хăтăласшăн. Тĕлĕнмелле шеллевлĕ ырă туйăма вăратать çак пысăк ăсталăхлă искусство шедеврĕ.

Онька хускалма та хăрарĕ.

– Килĕшет-и? – ыйтрĕ Неля.

– Ăравасăр. Мĕнешкел тасалăхпа хаярлăх! – хĕре хăй çумне çепĕççĕн пăчăртарĕ каччă.

Вĕсем çăттăн çыпçăнса пĕр вăхăт нимĕн хускалмасăр тăчĕç.

– Таса юрату – сассăр пăшал терĕн эсĕ иртнĕ тĕл пулура. Ăнланмастăп: мĕншĕн пăшал? Мĕншĕн сассăр? – шăплăха сирчĕ Неля.

– Ун чухне хăвах куртăн вĕт: чĕреçĕм йĕтре тивнĕн хыпса илчĕ. Вăт шухăшла – пăшал хĕлхемĕ мар-и вăл? Сасси пулчĕ-и?

– Таса тени мĕне пĕлтерет?

– Куна ăнлантарса пама çук. Вăл ĕмĕрлĕх тенине пĕлтерет. Таса юрату нихăçан та сӳнмест.

Неля ытамран вĕçерĕнсе стенка кантăкне уçрĕ.

– Пĕчĕккĕ чухне эпĕ мĕнле пулнине курас килет-и? – терĕ вăл пуканепе вылякан хĕрача пек йăвашшăн кулса. Каччă кăмăллăн çемçе кресло çине сĕвенсенех ăна хулăн альбом тыттарчĕ те, хăй пĕр урине теприн çине хурса хирĕçле кресло авăкне меллĕрех ларчĕ. Çӳхе кĕпе арки яка пĕçĕсем тăрăх майĕпен туртăнса тăвăррăн хутланнă тĕлелле шурĕ, унăн кашни сантиметр куçăмĕ ĕлккенрех те ĕлккенрех пулса пычĕ, чеченкĕ сĕвек вырăнсене хуплайми пулчĕ.

Онька та креслăра меллĕн вырнаçнă. Альбом хуплашкине уçнă хушăрах вăл хĕвелпе кăштах пиççе хăмăрланнă çара пĕçĕсем çине пăхса илчĕ. Икĕ çаврака чĕркуççирен пуçласа кĕске аркă ăшне кĕрсе пытанакан икĕ кĕрен çурта пек ытарайми илем туххăмрах вĕрилентерсе ячĕ ăна. Унăн альбомри хусканусăр

ӳкерчӗксем ҫине мар, куҫа туртса ӗмекен чӗрӗ, ҫутӑ, черчен пӗҫӗсем ҫине пӑхас килчӗ. Вӑл ачаш куҫсене урӑх ниҫталла та пӑрманран Неля пичӗ тата хитреленсе вӗтӗ-вӗтӗ тарпа витӗнчӗ, кресло хыҫӗ ҫумне сулӑннӑ тӑпӑлкка пӗвӗ тӑрӑх хавхаллӑ чун туртӑмӗн евӗклӗхӗ сӑрӑлтатса кайрӗ. Хулӑн карӑ витӗр чӳречерен сӑрхӑнса кӗрекен хӗвел ҫутипе кӗренленнӗ пӳлӗм хӑйӗн асамлӑ шӑплӑхӗпе чӗрери ҫепӗҫ туйӑма пушшех вӑйлатрӗ.

Онька альбома аяккалла хучӗ те кресло ҫинчен ҫӗкленсе икӗ утӑмпа хӗр умне ҫитрӗ. Хитре урасем хӗресленнӗ тӗле тӗсесе пӑхса нимӗн хускалми куҫ пӑвнӑн темиҫе ҫеккунт хытса тӑчӗ. Унтан хӑвӑрт кӑштах кукленсе хӗре хӗрӳллӗн ыталаса илчӗ. Ҫуллӑ тутасем чӑплатни ҫеҫ авӑккӑн-авӑккӑн илтӗнчӗ пӗр хушӑ. Каччӑ аллисем хыпӑнса кӗпе тӳмисене вӗҫертрӗҫ. Неля лифчиксӑрах иккен. Тӗлӗнмелле хитре икӗ ҫавра мӑкӑль! Хыттӑн ҫӗкленсе тӑракан хӑмӑркка ӗмкӗчсем куҫ умӗнче тем самантрах тулса пысӑкланчӗҫ. Кӑкӑрсенчен аяларах уҫӑлса пырса пӗчӗк хуплав айне кӗрсе ҫухалакан илем пылак хӗрӳлӗхпе пиҫекен ачана ӳсӗртсе ячӗ. Ӑна тытса чарма халь ӗнтӗ урӑх нимӗнле вӑй та ҫук.

Каччӑ хӗре пиҫӗ ҫурӑмпа пирчев пӗҫӗсем айӗпе ачашшӑн ҫӗклесе диван еннелле утрӗ. Пружинӑсем шӑппӑн сас парицченех хӑйма ҫилӗмле ҫыпҫӑнчӗҫ вӗри тутасем. Нельӑн юн тымарӗсем тӑрӑх палӑри-палӑрми вӗҫӗсемпе кӑтӑклӑн сӗртӗнсе, калама ҫук ҫемҫе мамӑксем чупса кайрӗҫ. Хӗр ҫав самантрах пуҫран хывса хунӑ пурҫӑн тутӑрла пӗр тытӑнкӑсӑр пулса диван ҫине лӑпчӑнчӗ. Пӗчӗк хуплав тем хушӑра чӗркуҫҫирен ҫакланса иртнине те сисмерӗ вӑл. Чӑп-чӑмӑр селӗм пӗҫӗсем алри вӗр-ҫӗнӗ кӗнеке ҫурмаран уҫӑлнӑ пек хӑйсем тӗлленех икӗ еннелле сулӑнчӗҫ. Ой, хӗп-хӗрлӗ! Йӑмӑхнӑ куҫне хупнӑ-хупман Онька пичӗпе хӗр пичӗ ҫумне ӳпӗнчӗ. Ҫуллӑ магнит пек сӗртӗнчӗҫ-туртӑнчӗҫ ҫемҫе пылак тутасем.

– Ӑ-ӑ, Оня... ӑсран кӑларатӑн... – сывлӑша аран ҫавӑрса илсе пӑчӑпа пӑшӑхнӑ хӗр пӗрчи евӗклӗн пусӑрӑннӑ кӗлетке йывӑрӑшӗпе хускалми пулчӗ... Ҫук, нумайлӑха мар. Хӑйсем икӗ

ирӗлекен услам ҫу пек пӗр пӗтӗм пулсанах чӗвӗлти хӗр пукане сасартӑк юшкӑнри пулӑ евӗр авӑнса илчӗ:

– Ай!.. тӑхта-ха... тӑхта пӑртак... – ҫемҫен йынӑшса черчен аллипе каччӑ пилӗкӗнчен каялла тӗртрӗ вӑл.

Сӗтеклӗ туйӑм ҫулӗ типсе ҫитеймен ҫилӗмрен ерипен уйрӑлнӑ пек тӑвӑррӑн уҫӑлса пынине туякан каччӑ пуҫӗпе хӗр кӑкӑрӗ ҫумне тӗршӗнчӗ. Неля мӗн хушнине пурне те ҫур сӑмахран итлет Оня. Тӑхтама пулать. Кун пек чухне васкама та, тӑхтама та, хускалми пулма та питӗ евӗклӗ.

7

Илона Онькӑна ҫур ҫӗрччен кӗтрӗ, кӗтсе илеймерӗ. Мӗнле-ха капла? Карта ҫумӗнчи пӗчӗк сак нихӑҫан та ҫамрӑк хӗр ку таранччен пӗччен тунсӑхласа ларнине курманччӗ. Онька килмерӗ. Вырсарни кун иккӗшӗ Атӑл леш енне пляжа каймa калаҫса татӑлнӑччӗ.

Пӗрле канма чӗнекен каччӑ ирхине те килмерӗ. Вунӑ сехет иртсен Илона хӑй ун патне общежитие кайрӗ.

– Онька кӗҫӗр килте ҫӗр каҫман, – терӗҫ ӑна палланӑ пӳлӗмри палламан йӗкӗтсем. Ӗмӗчӗ татӑлнине пӗлсен тӳперен карӑнса аннӑ парашют ҫӗр ҫумне перӗнсе ерипен лӑпчӑннӑ евӗрлех хуҫӑлса пусӑрӑнчӗ хӗр кӑмӑлӗ. Илона пӳлӗмрен йывӑр туйӑмпа тухрӗ.

Пурнӑҫ яланах ҫапла: малтан нумайранпа кӗтнӗ шанӑҫа тивӗҫтерес пек пулса сана чӗкеҫле ярӑнса вӗҫеслех савӑнтарать те кайран шӑп кӗтмен ҫӗртен кичем тунсӑхпа хуплать. «Каллех ултав серепине ҫакланмарӑм-ши?» – Онькӑпа ҫывӑхланнӑранла пӗрремӗш хут шиклӗ сӗм пырса ҫапрӗ хӗр чӗрине. Салху туйӑма сирес тесе вӑл сакӑр ҫухрӑмри тӑван ялне ҫӗр каҫма кайрӗ. Ыран ун каҫхи смена. Ҫакна Онька пӗлет.

Тунти кун Онька карьертан стадиона хӑйӑр турттарчӗ. Ӗҫре тӑватӑ машина. Пӗр машина йӑпӑртлӑха урӑх ҫӗре пӑрӑнни

нимĕн чухлĕ те паллă мар. Виçĕ рейс тунă хыççăн, кăнтăрлахи апат умĕн, Онька самантлăха Илона патне вĕçтерчĕ. Нельăна пула унпа курнăçма май килменни хĕре улталанă пек пулса тухрĕ. Çав лăш та канăç памасть-çке-ха шухă чĕреллĕскере.

Килтисем ăна Илона ĕнерех яла кайни çинчен пĕлтерчĕç.

– Хăш яла? – хыпăнса ыйтрĕ каччă.

– Хурăнвара.

Онька Илона килĕнче урăх пĕр çеккунт та тытăнса тăмарĕ. Сакăр çухрăм уншăн пĕрре куçа хупса илмелĕх кăна. Йăрă хурçă урхамах хула тулашнелле вĕçтерчĕ.

Çулĕ çатма пекехчĕ-ха, асфальт çулран пăрăнса çутă пĕве умне çитсен хайхи черчен ĕмĕтлĕ йĕкĕтĕн ирĕксĕрех ĕнсине хыçма тиврĕ: пĕркунхи вăйлă çумăрпа пĕве пуçне шыв çисе кайнă. Канавĕ пĕр хăлаç пек çеç пулин те каçма çук.

«Ай-яй! Мĕн тумалла? Илонăна курмасăрах каялла каймалла пулать-шим вара?»

Каччă вĕчĕрхеннипе укленсе ларчĕ, çийĕнчех тӳрленсе тăрса сылтăм аллипе çамкине ярса тытрĕ. «Чим!» – вĕлтлетсе илчĕ сасартăк çивĕч шухăш ун пуçĕнче. Çав самантрах вăл ларкăч айĕнчен гайка уççине илчĕ те хыпăнсах борт тăпсин болчĕсене кăларчĕ.

Икĕ борт – кĕпер пулчĕ те. Машина тарăн канава сиссе те юлмарĕ. «Маттур, Онька! Пуç ĕçлет сан», – хăйне хăй мухтарĕ экстра-прима-люкс-шофер.

Тин çеç кăмакаран кăларнă кукăль шăршиллĕ пӳлĕмре Илона шăпах хулана таврăнма хатĕрленет. Онька машини кил умнех çитсе тăни пурне те савăнтарчĕ.

Шарлак канав урлă каллех бортсене хывса каçнă хыççăн Онька асфальт çул çине тухма васкамарĕ, руле çывăхри çинçен тăсăлса выртакан ем-ешĕл посадка еннелле пăрчĕ. Машина йăвă-йăвă ларса тухнă йывăççен хӳттине чăмсанах мотор шăпланчĕ. Улах кунта. Хитре лĕпĕшсемпе хура кураксемсĕр

пуҫне урăх никам та ҫук. Питĕ асамлă. Чечек шăрши, тап-таса сывлăш, ҫăра ҫулҫăсен тĕксĕм кăвак шерепеллĕ сулхăнĕ. Ҫапах та руле вĕҫертсенех хул пуҫҫирен ҫупăрласшăн пулнă каччă аллине Илона ҫемҫен тытса чарчĕ:

– Тĕрĕссине кала-ха, виҫĕм кун каҫхине ăҫта пултăн?

Шикли шикленнĕ, кĕрĕк пĕркеннĕ. Кунашкал ыйту пуласса Онька малтанах пĕлнĕ. Илона ун патне общежитие пынине тусĕсем пĕлтерни ҫĕркаҫах ĕненмеллерех витĕмлĕ хурав тупма хистерĕ ăна.

– Студире пĕрле вĕреннĕ тусăмăн ывăл ача ҫуралнă. Ăна ҫурăмăр. Унтах ҫĕр выртмалла пулчĕ.

– Апла пулсан мĕншĕн пляжа чĕнтĕн?

– Ун чухне савăнăҫлă хыпара пĕлмен эпĕ. Тусăм кайран шăнкăравларĕ.

Кăштах шанăҫсăррăн пăхакан чакăр куҫсем сӳрĕкленчĕҫ. Илона хăйне ăнланма, часах суранланакан чĕри ахальтен мар ҫуннине туйма ыйтнăн тарăннăн сывласа илчĕ те кăпăшка ҫӳҫлĕ пуҫĕпе каччă кăкăрĕ ҫумне тĕршĕнчĕ:

– Темшĕн шанас килет ман сана. Тухатларăн пулĕ. Хама хирĕҫлейместĕп. Вĕҫĕмсĕр сана савăнтарас килет, йăваш куллуна ют куҫсенчен пытарас килет, – пĕчĕк хĕрачанни пек черчен сассипе чĕвĕлтетрĕ вăл.

Онька ăна ҫурăмĕнчен ҫупăрларĕ, пуҫĕпе кăтра ҫӳҫ пайăркисене сирсе хĕре пит ҫăмартинчен, тутинчен, янах айĕсенчен ҫемҫе-ҫемҫе ĕмкĕчсем лартма пуҫларĕ.

– Асту, ан кăвакарт, – пăшăлтатрĕ хĕр пĕрчи.

Каччă тутисем ҫутă, таса, яка ӳт тăрăх пĕчĕк хыпкăмсемпе кĕрен йĕрсем хăварса мамăк ҫăмлă кушак ҫури пек уҫă ҫухава ăшне шаларах та шаларах туртăнчĕҫ. Вĕри сывлăш, хĕрӳллĕ ытам, чун-чĕре ăшăрхавĕ... Ой, пурте пĕр вăхăтра! Хĕр ăшăпа ирĕлсе авăннă ҫурта евĕр ҫемĕҫсе пуҫĕпе ларкăч кĕтессине сулăнчĕ:

– Улталасан вара...

– Çук, улталамастăп.

– Юрататăн-и?

– Юрататăп.

Мĕнешкел сăмахсем! Мĕнешкел ырă самант! Çаттăн пăчăртаннă хитре пĕçĕсем черчен алăсем сĕртĕнсен хăйсен тытăнкине çухатса ларкăч хĕррипе усăнчĕç...

8

Кашни çнĕ кун мĕн те пулин çĕнни илсе килет. Пурнăçăн хăйĕн екки: сана савăнтарас тесен савăнтарать вăл, хурлантарас тесен хурлантарать. Пулса иртнĕ ырă самантсене сыхласа хăварма майĕ çук, кĕтетпĕр вара асамлă пуласлăх тата мĕн те пулин ыррине илсе килессе.

Пĕр йăлтăр хĕвеллĕ илемлĕ кун ĕç хыççăн заправкăран таврăннă чух Онька Надьăна курчĕ. Тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ хитре хĕрарăм, кальлĕ-мальлĕ куçакан çынсемлĕ тротуарпа пĕчченех иртсе пыраканскер, паллана грузовике асăрхасан чарăнса тăчĕ.

– Ăçталла çĕмĕрттеретĕн? – хирĕç пăхма иментерекен çăлтăр куçĕсемпе хĕм сапрĕ Надя кабина алăкĕ хăйĕн умнелле уçăлнă-уçăлман.

– Гаража. Ĕç пĕтерсен урăх ăçта каймалла? – вăтанăçлă ачалла йăл кулчĕ водитель.

– Апла питех васкамастăн пулсан киле çитерсе яр мана?

– Хаваспах.

Надя кĕпе арки лӳчĕркенесрен асăрханса майланса ларчĕ те, машина вырăнтан тапранчĕ.

– Ну, мĕнле, сĕтел-пукана вырнаçтарса пĕтертĕр-и? – çамрăк майрана куçран пăхрĕ Онька.

– Тепĕр куннех. Пулăшас кăмăлу пурччĕ-им?

– Чĕнмеллеччĕ.

– Чĕнни кăлăхах пулĕ терĕм.

– Мĕншĕн кăлăхах?

– Тĕрлĕ вăхăтра пиçнĕ çырласем эпир.

Йăрă грузовик вунă хутлă капăр çурт умĕнче чарăннă чухне калаçу вĕçленменччĕ, шăп кăсăклă тĕле çитнĕччĕ. Онькăн питĕ пĕлес килни пĕлмесĕрех юлнă пек.

– Акă пирĕн кил. Кĕрсе кур. Ытлашши çӳлте пурăнмастпăр эпир, – терĕ Надя кабина алăкне уçса.

– Хирĕç профессор пăшалпа тухсан...

Надя йĕс шăнкăрав пек янăратса çепĕççĕн кулса илчĕ:

– Мускавра вăл, наука ĕçĕ хӳтĕлет. Доктор пуласшăн.

– Вăт сӳтĕк. Эпĕ ун вырăнĕнче пулсан çакăн пек хитре арăм çумĕнчен тем тесен те уйрăлмастăп.

– Эсĕ – эсĕ вăл...

Тăваттăмĕш хутра лифтран тухсан Надя сумкăран уçă кăларса хура дерматин çапнă алăка уçрĕ те, Онька ырă кăмăллă кил хуçи хыççăн хваттере кĕчĕ. Пысăк зала сарлака чӳречерен хĕвел çути ӳкнĕ. Надя янкăр таса сарă пайăркасен ытамне путрĕ. Хăйĕн кĕрнеклĕ тăлпăвне уççăн палăртакан çуллахи шурă кĕпепе тĕлĕнмелле хитрен курăнать вăл. Хĕвел çутинче çӳхе шифон витĕр унăн çинçе пилĕкĕпе чăп-чăмăр çирĕп пĕççисем кĕрен мрамортан касса якатнăн туйăнаççĕ. Куça хăй патнелле евĕклĕн туртакан груша евĕрлĕрех çаврака купарчи ку хĕрарăм лăп та шăп юрату вăййишĕнех пиçсе çитнине систерет. Мĕнешкел кăкăрсем! Çӳхе шурă кĕпене хитрен çĕклесе икĕ чăмăркка кăшман пек шĕвĕррĕн çӳлелле кăнтарăннă.

Надя паха люстрăллă пӳлĕм варринче чарăнса тăчĕ.

– Питĕ хӳхĕм кунта! – çемçе кавир тăрăх маларах иртме именчĕ Онька.

– Килĕшет-и? Ой, каçар, эпĕ сана ларма та сĕнмерĕм-çке! Кофе ĕçетĕн-и?

Каччă кăмăллăн пуçне сĕлтсе илсенех кил хуçи кухньăна кĕрсе кайрĕ. Вăл тухнă çĕре Онька диван çине меллĕн сĕвенсе пĕчĕк минтере çавăркалатчĕ.

– Акă, – пăсланакан чей курки тыттарчĕ ăна Надя, хăй хыçлă пукан илсе хирĕç ларчĕ.

– Упăшку хăçан таврăнать вара? – вĕри чашăка вĕрсе кăсăклăн шăплăха сирчĕ каччă.

– Тепĕр эрнерен.

– Вăл килте сайра пулать-им?

– Сайра.

– Час-часах пĕччен юлатăн-и?

– Хăçан мĕнле.

Онька кофе ĕçрĕ. Надя вăхăт юхăмне хăйĕн ирĕкне пăхăнтарма тăрăшрĕ. Ун умĕнче вăл ĕмĕтре ĕмĕтленнĕ сар ача ларать. Вăл хăй те ăнланмасть: мĕншĕн шăпах ĕмĕтленнĕ ĕмĕтри? Аякри пĕчĕк хулана сĕтел-пукан патне кайса килнĕ хыççăн ырă-ырă тĕлĕкĕнче час-часах çак сăна курать вăл: йăлтăр хура куçсем, йăл кулăллă пĕчĕк тута. Çав йăл кулăллă йĕкĕт унпа юнашар халь. Вĕсем иккĕшĕ кăна, пӳлĕмре урăх пĕр чун та çук.

Онька чашăка журнал сĕтелĕ çине лартрĕ те Надя умне пычĕ. Нимĕн чĕнмесĕр пĕр-пĕрне йăпанса пăхрĕç.

– Эсĕ чăнах та васкамастăн-и? – çăра куç хăрпăкĕсене лăс! усăнтарса ыйтрĕ Надя.

Каччă пĕр самант хытса тăчĕ: «Хăваламастăн пулсан».

Надьăн пичĕ хĕм сапасла хĕрелсе кайрĕ. Вăтанăç питĕ килĕшет ăна. «Эсĕ мана ăнланма тивĕç... Эпĕ хĕрсенчен пĕртте кая мар... Эпĕ...» – саспа калайман сăмахсем вуланчĕç тап-таса хурлăхан пек йĕпкĕн хура куç ткĕсен айне пытанасшăн пулнă куçĕсенче.

– Эсĕ питĕ хитре хĕрарăм, – вĕçлерĕ унăн хăйса калайман черчен шухăшĕсене Онька.

– Ку пирӗн хушӑра ҫеҫ пултӑр, – татах хитрен хӗрелчӗ Надя.

– Эсӗ мана сӳпӗлти тетӗн-им?

Надя кӑпӑшка ҫӳҫлӗ пуҫӗпе каччӑ кӑкӑрӗ ҫумне тӗршӗнчӗ, ҫепӗҫ аласем ӑна пилӗкӗнчен ҫупӑрларӗҫ. Лӑпкӑн-лӑпкӑн шӑпланчӗ ҫутӑ пӳлӗм. Хӗвеллӗ пахчари пек тӳлек. Вӑхӑт пӗр вырӑнтах тӑрать тейӗн. Кӑмӑллӑ сывлани ҫеҫ илтӗнет пӳлӗмре.

Евӗклӗ. Надя хӑйӗн ҫурӑмӗ ҫине вӗтӗ-вӗтӗ тар пӗрчисем тапса тухнине туйрӗ. Чӗри йӑпанӑҫлӑн хӑпартланса тапни вӗрилентерчӗ ӑна. Каччӑн чӑрсӑррӑн нӑкӑланнӑ ӳчӗ пӗҫӗрен хыттӑн перӗнни пылак пӑлхавлӑха пушшех вӑйлатрӗ. Ҫакна палӑртасшӑн мар пек курӑнма тӑрӑшни те тытса чараймарӗ киленӗҫ таппи сарӑлса пынине. «Мӗншӗн пытарас? – шухӑшларӗ ҫав тери ҫепӗҫ ытама лекнӗскер. – Ку вӑл питӗ ырӑ-ҫке!»

Каччӑ хӑйне харсӑрланма хистекен туйӑм тӗмескине татах та хӑюллӑнрах тӗртӗнтерчӗ. Ку евӗклӗ сӗртӗнӳ ӑнсӑртран кӑна пулманнине Надя нимӗн чухлӗ те иккӗленмерӗ, каччӑ ирӗкне пӑхӑнса евӗклӗх перӗннӗ тӗлтен пӑрӑнмарӗ.

Онька профессор арӑмӗсемпе йӑпанса курманччӗ. Ҫавӑнпа кӗҫ-вӗҫ тем сиксе тухасран хӑйне шикленерех тытрӗ. Шикли шиклӗ те, шухӑ кӑмӑл ыйтни ӳкӗнсе асапланнинчен вӑйлӑрах ҫав, пирчеклӗ тӑпӑл-тӑпӑл кӗлетке хӗрӳллӗ ытама савӑлла тӑвӑррӑн пӑчӑртанчӗ. Каччӑ аллисем пиҫӗ пилӗке ҫамрӑк хӑвана авнӑ пек хыҫалалла ҫирӗппӗн авса ҫавра тӗмӗ тӳпинче чарӑнчӗҫ, ывӑҫа шӑнӑҫайман йӗкӗр ҫемҫе тӗмене хыттӑн чӑмӑртанине хирӗҫленине нимӗн чухлӗ те туймасӑр ҫӑмӑл кӗпене ҫӳлелле шутарчӗҫ. Вара ун айӗнчен тухнӑ ҫунатне сарнӑ тинӗс чарланӗ еврлӗ хуплав айне кӗрсе икӗ яка чӑмӑра хӑй ҫумне хӗрӳллӗн лӑпчӑтрӗҫ. Надя ку хутӗнче те хирӗҫлес вырӑнне хӑй пушшех евӗклӗнрех тӗршӗннӗн туйӑнчӗ. Каччӑ ӑна ҫӗклесе каялла сулӑнчӗ ҫеҫ – вӗсем иккӗшӗ те диван ҫине тӗшӗрӗлсе анчӗҫ.

– Эпӗ... эпӗ... Асту никама та... – хӑлхаран шӑппӑн пӑшӑлтатнине кӑна илтрӗ Онька. Мӗнешкел черчен йӑлӑну!

Надя кунашкал вăрттăн юратма юраман юратăва пула е малашне, е халех кĕтмен ҫĕртен сиксе тухма пултаракан кăткăслăха пурне те тӳсме хатĕрленсе тап-таса чĕреллĕн курăнма тăрăшрĕ. Хăйĕнчен вунă ҫул кĕҫĕн сар ачана мĕншĕн куҫ хывма хăйнине тĕрĕс ăнланма, уншăн ҫав чуна вут хыптармăш сар ача хăйне тем каласран хӳтĕленме витĕмлĕ сăмахсем шырарĕ. Халиччен упăшкине нихăҫан та улталаман тесшĕн вăл. Халĕ ак ăна ăсран тухасла юратнăран анчах ҫав ултав унпа кĕҫ-вĕҫ пулса тухассине палăртасшăн, куншăн пĕртте вăл мар, пĕтĕмпех юрату айăплă тесшĕн. «Ăҫтан тĕл пултăн эсĕ ман куҫ умне? Пĕтертĕн мана...» – ăшпиллĕн сывларĕ вăл.

– Эсĕ питĕ хитре! Эсĕ пĕтсен эпĕ те пĕтетĕп, – шăппăн калать Онька. Хăй евĕклĕн пăлханнăран пуҫне ҫара кăкăр ҫине хурса сылтăм аллипе питĕ сисĕмлĕ вырăнсене ҫемҫен-ҫемҫен лăпкарĕ.

– Ăх-х, Онечка, Онька, чăн, пĕтеретĕн! Мĕншĕн... мĕншĕн васкаса ҫуралнă-ши эпĕ?

Надя ку ытла та савăклă вăйă упăшкинчен вăрттăн выляма юраманран хăрушă пулнине лайăх ăнланать, анчах ҫамрăк каччă чĕре айне ăшă пыл сапнине епле те пулин астивсе пăхас килни ниме пăхмасăр хăвăрт ӳссе пычĕ, ачаш пӳрнесен сĕртĕнĕвĕ ырăран та ырă пулса пычĕ, унăн кĕрнеклĕ урисем хăйсем тĕллĕн тенĕ пек майĕпен пĕр-пĕринчен уйрăлчĕҫ. Малашне мĕн пулса тăкăнассине уҫăмлăн тавҫăрса илме вăл тата ытларах хĕрӳленчĕ. Ҫавна пулах кăмăла тĕпрен хускатнă каччă аллисем «тинĕс чарланне» вырăнтан хускатсан ăна ирĕклĕнрех куҫма пулăшнăн ҫемҫе дивана путăклăн пусăрăннă тĕлĕпе кăштах ҫӳлелле ҫĕкленчĕ.

Епле хӯхĕм выртать вăл! Хитре пĕҫĕсем, хирĕҫ пăхма иментерекен ҫăлтăр куҫсем, тути кăштах уҫă, шурă кĕпе чăп-чăмăр кăкăрсенчен ҫӳлерех капланнă, аялалла пурте ҫара. Тепĕр ҫеккунт та тытăнса тăма каччăн пĕр вăй та юлмарĕ. Шăп саслăн вĕҫерĕнчĕ пиҫиххи... Вĕри ытам, ачаш сĕртĕнӳ, ҫамрăк хĕрӳлĕх,

ăшшăн-ăшшăн сывлани... Ку вăл – пурнăç кĕвви, çак тĕнчере эсĕ пурри, эсĕ пурăнни. Ыттисем – ĕмĕт, шанăç, телее кĕтни – пурте иллюзи кăна. Кайран мĕн пулмалли пултăр, вăл – ыран, халĕ эсир иккĕн: пĕри – хавха хумĕсене касса пыракан кимĕ, тепри – рулевой, вăлах капитан. Кунтан симли, кунтан çепĕççи, кунтан пылакки çук.

Пӳлĕм – тинĕс, çутă кантăк – инçет, пĕр çил те çук. Кăкăр тулли таса сывлăш – вăл та çитмест. «А... о... ă-ă...» – чул айне хĕсĕннĕ çĕлен пулă пек авăнса çара çурăма çирĕппĕн çупăрларĕ çамрăк хĕрарăм...

## 9

Онька Илона умĕнче каллех айăпа кĕчĕ: машинине гаража лартса килсен вăл Надя патĕнче çĕр каçрĕ. Юрату ăслайĕсене кунашкал ăста пĕлекене Онька урăх нихăçан та курманччĕ. Эх, Надя! Питĕ тунсăхланă пулас. Мĕнле кăна йăпанмарĕç вĕсем! Çав каçхине Онька юрату çепĕçлĕхĕн çĕнĕ тĕнчине уçрĕ. Ку вăл – асамлă юмах. Ку вăл – ĕмĕтре те пулманнине пурнăçа кĕртни. Эх, ăшă килтен уйрăлнă мĕскĕн упăшкасем! Телейсĕр эсир! «Авлансан эпĕ кирек ăçта каяс пулсан та арăма хамран уйăрмастăп», – шухăшларĕ Онька çынсем сисесрен ирхине иртерех шăппăн тухса каяс тесе алăк умне пырсан. Надя алăк хăлăпне ярса тытнă каччă умне чĕркуçленчĕ. Çемçе пӳрнисем лĕпĕш пек вĕлтĕртетсе тӳмесене вĕçертрĕç...

Хур мамăкĕнчен те ăшăрах тутасем ачашшăн чăп-чăп: «Тата кил. Тата кил. Балконра кăвак алшăлли çакăнса тăнине курсанах чĕкеç пулса вĕçсе кил». Ой, мĕнешкел йыхрав! Лифтра Онька хăйне çӳл тӳперен парашютпа аннăн туйрĕ.

Хитре арăмсем, хĕрсем... Мĕн чухлĕ вĕсем! Кашни хăйне евĕрлĕ илем. Надя – груша, Илона – апельсин, Неля – тин çеç саралса-хĕрелсе çитнĕ персик. Ăна пĕрремĕш тытаканни – вăл, Онька. Эх, Неля!.. Кунтан хĕрӳллĕ пулма пултарайман юрату тӳпи вăл Онькăшăн. Çав хрусталь пек таса юратăва пĕр шелсĕр аркатакан вăй та пур-ши? Пурах пулсан ытла та тискер ку тĕнче!

Илона?.. Илона – такам тытса хăйĕн вырăннех хунă апельсин. Вăл та хитре, çемçе, ырă кăмăллă.

Илонăпа Онька каçхине тĕл пулчĕç. Хурăн сак савăккăн кĕтсе илчĕ вĕсене. Хӳме урлă пуçне тайнă сирень тарăн шухăша путнă. Тӳпе кăвакланхĕнче кĕмĕл çутă тăкать çурла уйăх.

Вăрахчен калаçса ларчĕç вĕсем. Илона куçĕсем кăштах салхуллăн курăнаççĕ. Хĕр хăйне тем пек çирĕп тытас тесен те кăмăлĕ хуçăлнине çапах пытараймарĕ.

– Оня, – терĕ вăл. – Сан чĕрӳнте эпĕ пĕлесрен шикленекен темĕнле вăрттăнлăх пур. Çапла вĕт?

– Çук-çук. Мĕншĕн капла ыйтатăн?

– Чĕрене улталаймăн. Сисетĕп: эсĕ алăри кăсăяна ярса тӳпери хур кайăка тытасшăн.

– Ытарлă сăмахсем.

– Улталамастăп тени ултав пулчĕ-им?

– Хам асăрхаман çитменлĕхсене манра эс куратăн, пурнăçра такăнасси пулатех ĕнтĕ.

– Эпĕ сана савăнтарасшăнччĕ...

– Сана катаран курсанах савăнатăп эпĕ. Халĕ ачаш чунупа савăнтар. Кĕтетĕп.

– Кĕçех пирĕн йыш хушăнать.

– Мĕ-ĕн?

– Манăн... çие юлнă. Килмерĕ...

– Епле питĕ хăвăрт?

– Вăл хăй... Эпĕ айăплă мар.

– Сыхланмаллаччĕ.

– Ăçтан сыхланса çитерĕн... Эсĕ вĕт...

Онька чĕнмерĕ. Кун пек пуласса вăл пачах та кĕтменччĕ.

– Мĕн, хĕпĕртеттереймерĕм-им? – каччă куçĕнчен шиклĕн пăхрĕ хĕр. – Ку лайăх вĕт.

– Лайăххи лайăх-ха, анчах шутламасăртарах пулчĕ.

– Кайăксем чĕпĕ кăлараççĕ – шутлаççĕ-им?

– Иртерех халь.

– Эсĕ шантартăн-çке. Сăмах патăн. Пĕрлешетпĕр терĕн.

– Ун чухне эпĕ... – Нельăна курман тесшĕнччĕ Онька, такăнчĕ, калаймарĕ, çемçерех сăмахсем шырарĕ, – пурнăç улшăнассине пĕлмен.

Хĕре тем самантра шиклĕ сĕм çапрĕ:

– Халĕ мана пăрахатăн-и? – хыпăнса ўкрĕ вăл, чĕри инкеке сисрĕ ахăр.

– Çук, телейĕм эсĕ ман, сўнми телейĕм, – ăна йăпатма пикенчĕ Онька, хăй Нельăна асран кăлармарĕ.

– Ан пăрах. Эсĕ ман хĕр ĕмĕрне татрăн. Пăрахатăн пулсан – пурăнмастăп, – сассине çемçетрĕ черченкĕ хĕр пĕрчи.

Онька Илонăна питĕ шеллесе уйрăлчĕ. Хăйне пĕтĕм чун ăшшине панăскере нимĕн чухлĕ те кўрентересшĕн марччĕ вăл. Халь мĕн тумалла ĕнтĕ? «Хĕр ĕмĕрне татрăн», – тенишĕн черченкĕ хĕре пушшех, чĕри ыратмаллах хĕрхенчĕ. Мĕнех калăн? Хĕр кирек мĕнле майпа та пулин, пулманнине пулнă тесе те пулин телейлĕ пуласшăн. Телее тивĕçлĕ вăл: хитре, ырă, чунĕ черчен... Çав черченлĕхпе мĕншĕн эпир хамăр усăшăн çунса ытлашши иртĕнетпĕр? Хамăр çинчен çеç шутлатпăр. Мĕншĕн?

Тепĕр кунне Онька ĕç хыççăн çăвăнса тасалса Неля патне кайрĕ. Шăнкăрав сассипе алăка Неля амăшĕ уçрĕ.

– Ырă кун пултăр! Неля килтехчĕ-ши? – самаях именсе ыйтрĕ каччă.

– Ырă кун! Килтех. Кĕрĕр...

Хĕрпе каччă лифтран тухнă чухне хĕвел çўллĕ çуртсен хыçне шуса анчĕ. «Хĕвел çывăхнерех пурăнатпăр», – тенĕччĕ Неля, халĕ шĕл кăвар çăмхи вĕсенчен тарса пытанасшăн. Канма каять.

Кунĕ ăшă. Сар ачапа сарă хĕр çўхе тумланнă: иккĕшĕ те кĕске çанăллă кĕпепе, иккĕшĕ те кĕлеткене тăп тўрĕ тытса тăракан брюкипе – каччăн – хура, хĕрĕн çутă хăмăр. Çак çутă хăмăр ĕлккен брюкие тулли пĕçĕсем аран шăнăçнă тейĕн – хирĕç пулакан ăмсануллă куçсене иртсе кайсан та ирĕксĕрех самантлăха каялла çавăраççĕ.

Сарлака урама тухсан катаран Надя пурăнакан çўллĕ çурт курăнчĕ. Тăваттăмĕш хутри шурă балконра кăвак алшăлли



***... хĕрпе каччă сарлака юман умĕнче чарăнчĕç...***

*Художник М.З. Мерчен*

вăштăр çилпе лăпкăн сулланать. «Кил», – тет. Вăл пуррине, вăл кама йыхравланине Неля нимĕн те пĕлмест. Онька вăрăммăн усăннă тĕклĕ алшăлли çине йăпăрт пăхса илчĕ те пуçне кăн-кăвак куçсем еннелле пăрчĕ. Неля... Кил темест вăл, ан пăрах темест – чĕре çумĕнчен ăна хирсе уйăраймăн. Эсĕ тепĕр хĕр ытамĕнче пулсан та сана ăшшăн та йăвашшăн хăй патне туртаççĕ ялтăркка кăвак куçсем, пĕтĕм тĕнчене мантарса, пĕр сассăр.

Шурă йăрă автобус вĕсене кĕçех хула çумĕнчи хутăш вăрман патне илсе çитерчĕ, такăр сукмак – ем-ешĕл чăтлăха.

Сар чечек татнă май тĕрлĕ-тĕрлĕ кукăр-макăр туса хĕрпе каччă сарлака юман умĕнче чарăнчĕç. Пысăк мар чечек çыххине кăкăр тĕлнерех тытнă хĕр кăтăрка вулă çумне сĕвенчĕ. Унăн тута хĕррине хитрен усăннă вăрăм çӳçне каччă аялалла сирчĕ. Унччен те пулмарĕ – пыл сĕрнĕ евĕрлĕ çилĕмлĕ тутасем хĕрӳллĕн пĕр-пĕрин çумне çыпçăнчĕç. Таврара шăп. Пĕр сасă илтĕнмест. Çил тĕлĕрет, тĕлĕрет вата юман. Çулçăсем хускалмаççĕ, туратсем сулланмаççĕ. Çывăхри шĕшкĕ тĕмисене шупка сирень тĕтрипе шăппăн-шăппăн витсе каç пулса килет. Лăпкă каç, ырă пуласлăха шантаракан телейлĕ каç.

**Шупашкар.**
**29 окт. 2003 ç.**

Çынсен чунне çемçен вăратрăм
Пăтранчăк, йывăр вăхăтра.
Этемлĕхе савса мухтарăм
Çак ăшшăн çырнă калавра.

Пуласлăхра тивлет куратăп, –
Ăшпил пурах çак çут тĕнчен.
Сире, туссем, телей сунатăп,
Вăл эпĕ – Михаил МЕРЧЕН.

## ТУПМАЛЛИ


Пĕр тумлам куççуль. *Роман.* ....................................6

Пĕчĕкрех хитре хĕрача. *Калав.* ................................156

Экстра-прима-люкс-шофер. *Калав.* ..........................169

Михаил МЕРЧЕН

КАПЕЛЬКА СЛЕЗЫ
Роман
На чувашском языке

Издается в авторской редакции
Оригинал-макет типографии «Новое Время»

Подписано в печать 20.05.2009.
Формат 60x84/16. Бумага офсетная.
Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Физ. печ. л. 5. Тираж 2000 экз. Заказ № 78.

Отпечатано в типографии «Новое Время»
428034, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, 50/1.
Тел., (8352) 41-27-98.

